К84.09(=Чув)
Ж73
Ч-41415



**Николай Жирнов**

# ÇИМĔК

Национальная библиотека ЧР
4-041415

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

**Николай Жирнов**

# Çимĕк

ДОСТОВЕРНЫЙ ЭКЗ.

ББК 86.37-52
УДК 264
Ж 73

**Жирнов Н.Т.**
Ж 73 Семик. Чебоксары: Изд-во «Новое время», 2005. 192 с.

ПРОВЕРЕНО
22.10

© Жирнов Н.Т., 2005



*Эх, тăванăм, эс, тăван,*
*Тăванна манса пыран.*

*Мĕншĕн-ши çапла тăван –*
*Хутшăнмасăр пурăнан?*

*Мĕншĕн эс ялан, пичче,*
*Пилсĕр халăх хушшинче?*

*Эс, тăванăм, ĕмĕре*
*Нимĕн уссăр irттерен.*

*Эс хăвна, тăван, кала,*
*Ай, хăçан илен алла?*

НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

Ч-41415

# КИРПĔЧСЕМ

Комбат çамрăк та тимлĕ çын пулнă, пур тивĕçне те хăйне май пурнăçлас тенĕ ку чаçре. Вăл кунта ватă подполковника улăштарнă. Лешĕ те батальонра хăйне май пурнăçласа пынă тивĕçне. Салтаксенчен пуçласа офицерсем таранах хисепленĕ халĕ ĕнтĕ пенсие тухнă комбата. Ăна улăштарнă çамрăк комбатăн та хисеплĕ офицер пулас килнĕ чаçре. Казармăпа штаб пĕр тĕлте вырнаçнă, автопарк – тепĕр вырăнта. Слесарь мастерскойĕпе запчаçсен склачĕ çумĕнче пĕр техчасть начальникĕн çумĕн çеç лайăх уйрăм пӳлĕм пулнă. Ку бокспа юнашар политзанятисем ирттермелли пĕр хутлă классем вырнаçнă. Кашни взводăн хăйсен пӳлĕмĕсем. Пехотăн та пулин чи кĕтесре хăйсен пӳлĕмĕсем пулнă. Автопарка пымассерен комбат тарăхуллăн шухăшланă: «Мĕншĕн манăн çук кунта кабинет?» Ĕнсине хыçкаласа тавралăха сăнанă. Епле илемлĕ вырăн автопарк çумĕнче! Çăра вăрман, симĕс лиственницăсем. Чуна савăнтаракан курăну пулнă автопарк хӳмин тепĕр енче. Пĕр вĕçĕм пăхса тăрса савăнма пулать ку вырăнта. Хăйĕн Елчĕкне аса илчĕ комбат. Ашшĕпе иккĕш вĕсем мунчапа вите лартас сăлтавпа Йĕпреç вăрманне йывăç патне кайнăччĕ. Йĕпреç вăрманĕнче унта çын пырса тивмен вырăнсем те пурччĕ, чылай çул ӳснĕ юмансем нумайччĕ. Хăрма пуçланă юмансене çеç кастаратчĕç. Вĕсем витен аялти речĕсене валли юрăхлăччĕ. Ытти валли çăка касаттăмăр. Вĕсем ун чухне тунă мунчапа вите халĕ те лараççĕ. Çакна аса илни Петĕр чунне çăмăллатрĕ.

Хăпартлануллă шухăшпа комбат штаба дивизи командирĕ патне кайрĕ. Хăйне мĕн пăшăрхантарнине тĕпĕ-йĕрĕпех каласа пачĕ вăл. Ăна итлесе пĕтернĕ хыççăн хăйĕн çамрăк çулĕсене пăхмасăр кăвакарнă çӳçлĕ ăслă генерал-майор шеллĕн каларĕ:

– Эпĕ хирĕç мар, анчах нимĕнпе те пулăшма пултараймастăп ку вăхăтра, ку тăкака тепĕр çулхи бюджета кĕртсен çеç.

– Ытла та чылай кĕтмелле-çке, султалăка яхăн.

– Финанс йĕркине çирĕп тытмалла, пуçу ĕçлет пулсан тата саккуна пăсмастăн пулсан, ту хăвăн ĕçне, ман енчен чару çук.

Комбат тăсăлса тăчĕ, честь пачĕ.

– Пĕтĕмпех ăнлантăм, генерал юлташ!

Вăл тухрĕ те ГАЗ-21 текен хура «Волгăна» ларса тӳрех Лыткаринора вырнаçнă кирпĕч заводне вĕçтерчĕ. Директор ăна пĕр сăмахсăрах йышăнчĕ. Комбат ăна мĕнле чăрмавпа килнине каласа пачĕ.

– Салтаксем пирĕн патра ĕçлессипе эпĕ килĕшетĕп, – тачка директор ура çине тăчĕ, тулли стакан газлă шыв ĕçрĕ. – Анчах асăрхаттаратăп, салтаксем завод территорине тирпее кĕртме пултараççĕ çеç, станоксем çывăхне пыма юрамасть, техника хăрушсăрлăхĕ хушмасть.

– Пĕтĕмпех ăнланмалла, миçе çын кирлĕ пулĕ-ши?

– Пилĕк çын çитет пулĕ тетĕп.

– Эппин çапла пултăр, машинăна пушшăн хăваличчен пĕтĕм взводах илсе килетĕп.

Çапла вара взвод завод территорийĕнче тăхăр кун ĕçлерĕ, ăна тап-таса турĕ, ниçта та кирпĕч ванчăкĕсем курăнмаççĕ, ниçта та пылчăк çук. Завод директорĕ салтаксене тав турĕ, кашни куншăн пиншер кирпĕч уйăрттартарчĕ. Ку вара çуртăн çуррине хăпартмаллăх çеç çитет. Комбатăн каллех ĕнсине хыçма тиврĕ.

– Ăçтан тупмалла-ши тепĕр çуррине?

Шухăша кайса, комбат дивизи территорийĕпе пыратчĕ. Ăна хирĕç типшĕм те тăсланкă офицер утать.

– Подполковник юлташ, хамăрăннисене манатăн пулмалла.

– Эсĕ-и, Василий?

– Паллах, эпĕ.

– Астăватăн-и, çамрăк чухне эпир хамăрăн училищĕрен хĕрсем патне чупаттăмăр?

– Чăнах та, питĕ аван вăхăтсемччĕ.

Пĕр-пĕрин çине пăхса, кулса ячĕç вĕсем.

– Эс мĕн, Василий, капитана кăна çитнĕ?

– Пехотăра пирĕн званипе ытлашши васкамаççĕ.

– Мана вăт ăнăçрĕ. Пĕрремĕш çулне взвод шанса пачĕç, эпĕ ăна кĕçех отличниксен шутне кăлартăм. Вара хăвăртланчĕ ман званисем илесси тата ӳсесси. Халĕ ак, академи пĕтернĕ хыççăн, батальон шанса пачĕç.

– Ăнланмалла, юхăма лекнĕ эппин.

– Ку енчен тĕрĕсех калатăн, Петĕр. Кала-ха, мĕнпĕн эсĕ пусăрăнчăк кăмăллă?
– Хам валли штаб лартасшăн, анчах кирпĕчĕ çитмест.
– Казармăра сирĕн ахаль те штаб пур-çке.
– Паллах, кирлĕ пекех.
– Иртĕхсе ашкăнатăн пулас эсĕ, Петĕр?
– Çавăнпа эпĕ те комбата çитрĕм.
– Ытлашши проблемусене пĕлместĕп, Петĕр, ку сана кирлĕ.
– Салтаксемпе тата офицерсемпе çывăхарах пуласшăн эпĕ, вĕсенчен инçетре штабра ларса йĕм çĕтесшĕн мар.
– Юрĕ-çке, Петĕр, ман сĕнӳ пур.
– Хăвăртрах кала, тем пек пĕлес килет, – Василий йăл! кулчĕ, лăпкăн пăхрĕ. – Кушака хӳререн ан турт.
– Пирĕн полкра салтаксем стена ватаççĕ те кирпĕчне турттарса тухаççĕ.
– Пĕлес килет, ăçтарах-ши?
– Полк командирĕпе офицерсем валли гаражсем тăваççĕ.
– Ăнланмалла, çапах та ăçта-ха çав вырăн?
– Кусковăра, çулпа юнашарах, чиркĕве хирĕç, кĕпер патĕнче, ун айĕпе чугун çул иртет.
– Халь ĕнтĕ ăнлантăм, тавах сана уншăн.
– Ĕç ăнăçлă тухсан, санран – пуян сĕтел.
– Сăмахламалли те çук ун пирки.
Пĕр-пĕринпе ал тытса уйрăлчĕç вĕсем.
Петĕр хăвăртрах хайĕн автопаркне васкарĕ, кама шанса памалла-ши ку кирлĕрен те кирлĕ ĕçе тесе шутларĕ, кам пурнăçлама пултарĕ-ши терĕ. Бокссем тăрăх иртрĕ, пурте хăйсен ĕçĕсене тăваççĕ. Ав, чăвашсем, унăн ентешĕсем, комбат вĕсен хучĕсемпе кăсăкланнăччĕ, пурте вĕсем хăйĕн пекех Елчĕк районĕнчен, Патреккел, Исемпел, Кавал, Çĕнĕ Пăва, Аслă Пăла Тимеш салисемпе ялĕсенчен. Микулай тавра пуçтараннă, вăл вĕсенчен чи вăйли, вĕсене ертсе пыраканĕ. Ĕçчен ачасем теççĕ вĕсем пирки офицерсем. Вăт çавсене хушам-ха ку ĕçе, вĕсем шанăçлă ентешсем, шухăшларĕ комбат. Вĕсем кĕçех киле каймалласкерсем, сăрт-тăва та çавăрса хума пултараççĕ.
– Мĕн тăватăр-ха, салтак юлташсем?
– Хуллен майĕпе демобилизацие хатĕрленетпĕр, хамăр машинăсене çамрăккисене патăмăр.

– Ан васкăр, демобилизаци пирки Оборона Министерствин приказĕ тухрĕ кăна-ха, пĕрремĕш ушкăна тепĕр уйăхран çеç киле яма пултараççĕ, – комбат ачасем çине тĕсесе пăхрĕ. – Юлашкисене – тепĕр икĕ уйăхран.

– Эпир шавсăр ĕçлетпĕр, никама чăрмантармастпăр, демобилизаци тĕлне хатĕрлесе çитерес тетпĕр.

– Эппин, сире демобилизацилле аккордлă ĕç шанса паратăп: стенаран ватнă кирпĕче турттарса килмелле.

– Мĕнпе хавхалантаратăр, подполковник юлташ?

– Кирпĕч турттарса килсенех пĕр сăмахсăрах тӳрех киле яратăп.

– Подполковник юлташ, кивĕ çуртсем питĕ çирĕп вĕсем, пулĕ-ши стенана сӳтме кирпĕчсене ватмасăр?

– Пиллĕксĕр те машинăна ларăр та кайса тĕрĕслĕр пулас ĕçе.

– Ăнлантăмăр, подполковник юлташ.

– Халлĕхе пĕр машинăпа кайăр, эпĕ хамăн «Волгăпа» пырăп.

ЗИЛ-157пе ытлашши хăвăрт каяймăн, нумайран та сехетре пĕр 70 çухрăм. Кĕçех вырăна çитрĕç. Йĕри-тавра никам та курăнмасть. Стенана пĕр енчен ватма çеç тытăннă-ха, унта никĕсĕ тăрса юлнă. Ниçта та пĕр кирпĕч ванчăкĕ те курăнмасть, машина йĕрĕсем çеç тăрса юлнă. Шалта Кусково паркĕ, урăхла каласан, Шереметьевск. Питĕ илемлĕ вырăн, пĕве, унăн тепĕр енче Шереметьев граф çурчĕсем.

– Вăт, салтаксем, сӳтĕр çак стенана, – Петĕр стена çумĕпе кăшт утса кайрĕ, унтан каялла таврăнчĕ. – Асли пулма Микулая хăваратăп, пурте йĕркеллĕ пуласса шанатăп, дисциплина кунта та пулмалла, иртĕхме кирлĕ мар.

– Тăрăшăпăр, шанăçа тӳрре кăларăпăр.

Комбат хăйĕн машинине кĕрсе ларчĕ те часть еннелле вĕçтерчĕ.

Пиллĕкĕн кивĕ хӳмене таккама пуçларĕç. Анчах ăна ниепле те йăвантарма май çук иккен. Пĕтĕм вăя хурса, пĕрер кирпĕч уйăра пуçларĕç. Стена янраса чĕтренсе тăрать, анчах ниепле те ванмасть.

– Вăт, тума пултарнă-çке ĕлĕк, миçе ĕмĕр иртнĕ, вăл çаплипех çирĕп.

– Мĕн тăвăпăр, Микулай?

– Шутласа пăхмалла, ачасем, ку кирпĕчсене мĕнле майпа чаҫе илсе ҫитермелли пирки.

Тăраҫҫĕ пĕр тĕлте салтаксем, нимĕн те ăслине шутласа кăлараймаҫҫĕ.

– Куратăр-и, мĕнле парăнасшăн мар пире ку стена, тен, тягач ярса пама ыйтмалла?

– Ку хўшĕ сахал мар пирĕн нервăсене лăскĕ-ха, сахал мар тар пăрса кăларĕ.

– Ун пекех ан кулянăр-ха, ачасем, тепĕр уйăхран ҫавах киле яраҫҫĕ пире, кунта Мускав, провинци мар, ирĕк памĕҫ салтаксене асаплантарма.

– Атьсем, ҫитĕ сире ҫавнашкал калаҫма, йĕрĕнмелле мар-и итлеме?

– Хам мĕн шутланине калатăп, кам чартăр мана?

– Комбат чаҫшĕн тăрăшать, вăл хăй каларĕ вĕт паян тĕрĕслесе пăхмалли кун тесе. Кун пек май ҫук тейĕпĕр ăна.

Ҫакăн пек калаҫса кăнтăрлаччен ҫур кузов ҫеҫ тиерĕҫ кирпĕч.

– Пăхăр-ха, пĕтĕм стена чĕтренет, тен, ўкет, вара ĕҫ каять пирĕн.

– Ку идея, ҫавăн пек шухăшсем памалла, ĕсĕклемелле мар, тен, стена чăнах йăванать, вара ĕҫ хăвăртланĕччĕ.

– Ав ҫавăнта, кĕмелли ҫĕрте, шăтăк тумалла, вара троспа туртмалла.

– Айтăр, эппин, хăвăртрах ĕҫе пуҫăнар.

Пиллĕкĕн харăс тытăнчĕҫ стенана тўнккеме. Тепĕр икĕ сехетрен шăтăк хатĕр пулчĕ. Тар тăкса ачасем йĕп-йĕпе пулчĕҫ, ҫавах та ĕҫе турĕҫ. Микулай машинăран трос илчĕ. Ачасем пĕрене татăкĕ тупрĕҫ, ăна троспа яврĕҫ, пĕренене трос ан хуҫтăр тесе шуҫ хучĕҫ. Машина туртма пуҫларĕ, трос хĕлĕх пек карăнчĕ, машина вырăнтан тапранаймарĕ, кустăрмисем ҫĕре чаврĕҫ ҫеҫ. Машинăна тем чухлĕ тапаҫлантарсан та, ĕҫ тухмарĕ, путăк ҫеҫ пулчĕ ҫав вырăнта. Микулай кабинăран тухрĕ, ҫамкине хыҫса илчĕ.

– Чăнах та, ĕҫ начар.

Аптăранипе вĕсем сĕвек вырăн суйласа илчĕҫ, машинăна унта куҫарчĕ Микулай, каллех турта пуҫларĕ, машинăна икĕ хутчен хăвăртлатсан та ĕҫ тухмарĕ, виҫҫĕмĕшĕ-

нче Микулай хӑвӑртлану тӑршшӗне кӑшт вӑрӑмлатрӗ вара стена тинех ӳкрӗ. Ачасем савӑнӑҫлӑн кӑшкӑрса ячӗҫ:

– Ура! пирӗн ҫӗнтерчӗ!

Анчах стена, монолит пек, пӗр купченре выртать, аялти вырӑнта ҫеҫ, нӳрӗк пулнӑ ҫӗрте, кирпӗчсем хӑйпӑнаҫҫӗ. Микулай лум илчӗ те ӑҫта хӑйпӑтма ҫӑмӑлтарах-ши тесе тӗрӗслеме кайрӗ. Ҫывхарнӑ чухне тем хӑйпӑнса ӳкнине асӑрхарӗ, пырса пӑхрӗ те стена ӑшне темӗнле япала чиксе хӑварнине курчӗ. Ак, апӑрша! Пӗчӗк тимӗр арча иккен. Апла пулин те йӑтма йывӑр. Ку арчана лумпа кӑна уҫма май килчӗ. Микулай ӑна уҫрӗ те тӗлӗнсех кайрӗ: унта хӗрарӑмсем валли тунӑ ылтӑн тата хаклӑ чуллӑ эрешсем, арча тӗпӗнче ылтӑн укҫасем тата ылтӑн муклашкасем. Ачасем чупса пычӗҫ, тӗлӗннипе хытса тӑчӗҫ.

– Вӑт, Микулай, ӑнать те сана.

Пурте ҫак илемлӗ япаласем ҫине киленсе пӑхрӗҫ.

– Мӗн тӑвӑпӑр ку хаклӑ пурлӑхпа?

– Чаҫе илсе каяр та унта патшалӑха пама пулать.

– Ухмах-им эсӗ, унта хӑшӗ-пӗрисем ҫыпҫӑнма пултараҫҫӗ, пӗрле тупнӑ тесе калама та намӑс пулмӗ, вара ҫур укҫи вӗсене тивӗ.

– Эс вара мӗн сӗнетӗн, энтеш?

– Ҫак пурлӑха эсӗ тупрӑн пулсан, Микулай, хӑвах пар патшалӑха.

– Эсир мӗн, атьсемри, эпир пӗрле тупнӑ кунта вӗсене.

– Аванах мар пулса тухать унашкал.

Ачасем арчаран пӑрӑнса ута пуҫларӗҫ.

– Совӗҫе ҫухатман-ха эпир, ку санӑн ӑнӑҫу, Микулай.

– Тулли телей пултӑр тесе эп сирӗнпе, Елчӗк энтешӗсемпе, пайласшӑн ӑна, – вӑл кашнин патне пырса ыталарӗ, ҫамкипе энтешӗн ҫамкине сӗртӗнчӗ. – Ан кӳрентер мана, энтеш, – терӗ.

– Эппин мӗн тӑратпӑр эпир кунта, айтӑр хӑвӑртрах банка вӗҫтерер.

Мӗшӗлти те чунсӑр чиновник-тҫресем нумай иккен кунта. Ҫапах та ҫавсене чӑтса-тӳссе, ҫине тӑрса кирлӗ ӗҫсене тутарчӗҫех вӗсем, пиллӗкӗш. Вӗсене чексем ҫырса пачӗҫ, ҫирӗм пилӗк процент шутӗнчен вӑтӑршар пин тухрӗ кашнине. Банкран ачасем кӑмӑллӑн тухрӗҫ, пичӗсем кулӑпа ҫиҫеҫҫӗ.

Хăйсен çавăншар чухлĕ укçа пулассине ĕненмеççĕ пек те вĕсем, чексем çине тĕлĕнсе пăхаççĕ.

– Атьăр, атьсем, кирпĕч валли пиншер тенкĕ уйăрар.

– Ытлашши мăнтăр пулмĕ-ши?

– Çапах комбат пирĕн ентеш, Елчĕкри ентешшĕн нимĕн те шел мар.

– Пире кунта илсе килнишĕн пирĕн тав тумалла ăна, эппин, унăн пайĕ те пур кунта.

– Тĕрĕс, мĕн каларĕ-ха вăл пире, пилĕк пин кирпĕч илсе килетĕр пулсан сирĕн дембель пулать терĕ, эпир вара ун вырăнне пилĕк пин тенкĕ тыттаратпăр.

– Ну пуç та сан, Микулай, Советсен Çурчĕ тейĕн.

Сберкассăран укçа илсен пилĕк пин тенкĕ тыттарчĕç вĕсем ентешне. Комбат кăмăллă юлчĕ, сăмах панине пурнăçларĕ, вĕсене вăхăтсăр киле ярас пирки ыйтма дивизи командирĕ патне кайрĕ, ăна пĕтĕмпех ăнлантарчĕ. Генерал пĕр сăмахсăрах приказа алă пусса пачĕ. Комбат хăпартлануллăн таврăнчĕ, ĕнтĕ вăл та ентешĕсен умĕнче парăмра юлмарĕ.

– Салтаксем, эсир чаçшĕн çав тери ырă ĕç турăр, ăна нихçан та манмăпăр.

Комбат сăнĕ кăмăллăн çиçрĕ, анчах ачасем вăл татах мĕн те пулин кăсăклине калĕ-ха тесе кĕтрĕç.

– Эп ыйтса пĕлтĕм, сирĕнтен кашниех ГАЗ-24 текен «Волга» туянма пултарать.

Ку сĕнӳпе пурте хаваспах килĕшрĕç, вĕсем вĕт пиллĕкĕш те шоферсем. тепĕр куннех вăрăм урапа туртса килчĕç, ун çинчен пилĕк «Волга» антарчĕç. Киле кашни хăйĕн машинипе тухса кайрĕ. Укçа вĕсен татах чылай юлчĕ, киле çитсен хăть çурт ларт е мĕнле те пулин урăхла усă кур.



## Намăс

Май уявĕпе халăх савăнăçĕ иртсе кайрĕ. Колхозра кулленхи кунсемпе ĕçсем пуçланчĕç. Йывăçсем çинче папкасем çурăлма тытăнчĕç, черчен çулçăсем тухрĕç. Анчах сывлăш ăшăнсах çитмен-ха, кăштах сивĕрех. Хĕвел шевлисем тăрăшсах ăшăтаççĕ ăна. Ерипен ăшă çĕнтерсех пычĕ, çынсем фуфайкисене хывса чăлансене çакрĕç, пиншаксем уртса ячĕç е свитерсем тăхăнчĕç. Ялта пĕтĕм халăх çĕр ĕçĕпе аппаланать. Кам колхоз уйăнче тырă акать, хĕрарăмсем вара кĕçех лартма çĕрулми хатĕрлеççĕ. Ватăраххисем мăнукĕсемпе иртен каçчен хăйсен килти пахчисенче тăрмашаççĕ.

Кĕркури ĕç хыççăн колхоз кĕлетĕнчен таврăнать. Паян кунĕпех суйласа илнĕ вăрă хатĕрлерĕç. Кил тĕлне çитсен, хапха юпи çине çакса янă почта ещĕкне тĕрĕслерĕ, унта

темĕнле хут выртать. Ăна кăларса вуларĕ, ку повестка иккен, ăна майăн вунтăххăрмĕшĕнче Елчĕкри военкомата чĕнеççĕ, тăхăр сехетре унта пулмалла. Тинех вăхăт çитрĕ-çке салтака кайма! Мĕн чухлĕ чăтăмсăррăн кĕтнĕ вăл çак куна, мĕншĕн тесен салтакран таврăнсан вăл ирĕклĕ кайăк. Салтака кайса килме ялта кашни çамрăк ĕмĕтленет, мĕншĕн тесен салтакран таврăннă çамрăк авланма та, тĕнче касса çӳреме те пултарать, вăл ирĕклĕ. Салтака кайиччен вара каччăн та, хĕрĕн те ашшĕ-амăшĕсем авлантарас та качча парассине хирĕç пулнă.

Пĕтĕм ял халăхĕ çавăн пек шухăшланă пулнă. Çавăнпа та ялта каччăсем хăвăртрах салтака каяс тенĕ. Салтакран таврăнсан малтанах клуба салтак тумĕпе çӳренĕ, тӳмесемпе пиçиххи çаклашки тата ытти тап-тасан йăлтăртатнă. Ялти хĕрсем вĕсем çине ытараймасăр пăхнă. Лешсем вара ял урамĕсем тăрăх сăмсисене каçăртса çӳренĕ, павлинсем пек, хăйсемпе хăйсем киленнĕ. Чунĕсене лăплантариччен çавăн пек çӳренĕ хыççăн тин хăйсене валли хĕр суйланă, авлансан мăшăр ĕмĕрлĕхе пултăр тенĕ.

Кĕркури, ирех тăрса, тăхăнма тытăнчĕ. Çипуçĕ тап-таса та яп-яка, çын умне тухма намăс мар, ара, хăйне чи лайăх енчен кăтартмалла-çке çынсем умĕнче, япăх ан шутлаччăр ун çинчен. Амăшĕ витерен сĕт суса кĕчĕ, ĕçе тăхăнакан халатне çенĕкре хывса çакрĕ, пӳрте кĕрсен сĕте марльăпа сĕрчĕ. Тулли курка сĕт ячĕ те çиеле çăкăр татăкĕ хучĕ, вара ывăлне тыттарчĕ. Унтан сĕтел çине пĕçернĕ çăмарта, килти чăкăт пырса хучĕ.

– Эс, Кĕркури, ир-ирех ăçтаваскатăн?

– Анне, повестка килчĕ, Елчĕке военкомата каймалла майăн 19-мĕшĕнче.

– Çавăн пекех хăвăрт-им?

– Канма виçĕ кун пачĕç.

– Эпĕ вĕт нимĕн те хатĕрлемен, çурхи ĕçсем вĕçленсен акатуй ирттеретпĕр тенĕччĕ, – амăшĕ тутăрне тӳрлетрĕ, çӳçĕсене майларĕ. Куçĕ салхуланчĕ. Пукан çине ларчĕ те аллисене чĕркуççи çине хучĕ. – Ай, мĕн ларатăп, ывăлăм, кăмака хутса ямалла вĕт, сăра вĕретмелле, кукăль валли чуста лартмалла, – вăл кăмака умĕнчи чăланта кăштăртатма тытăнчĕ.

– Анне, эпӗ правление каятӑп, председателе ирех вырӑнта курмасан, кайран тупаймастӑн ку хӗрӳ вӑхӑтра.

– Юрӗ, ывӑлӑм, паян эпӗ ӗҫе каймӑп, пускиле кайса калӑп, бригадиршӑна пӗлтертӗр эп ӗҫе тухайман пирки.

Кӗркури урампа утса кайрӗ. Ял халӑхӗ ӗҫ пирки хӗвӗшет. Хӑйне аван марла туйрӗ Кӗркури.

Председатель вырӑнтахчӗ. Унӑн такама ятлакан хулӑм сасси урамранах илтӗнет. Председатель асӑрхиччен Кӗркури бухгалтерие иртес терӗ. Председатель хӑй бухгалтерие тухрӗ, вара ун патне кӗме тиврӗ.

– Мӗншӗн ӗҫре мар? Ҫурхи кун ҫулталӑк тӑрантарать теҫҫӗ вӗт.

– Мана салтака илеҫҫӗ, – вӑл кӗсьерен кӑларса повестка кӑтартрӗ.

– Ҫар службинче тӑни ҫӗршыв умӗнчи тивӗҫ. Хӑҫан каймалла?

– Тепӗр виҫӗ кунтан.

– Апла чысласах ӑсатмалла салтака хамӑр ял йӗкӗчӗсене, – председатель аслӑ бухгалтершӑна чӗнсе илчӗ, татӑклӑн каларӗ – Йӗкӗте салтака ӑсатма укҫа уйӑрӑр.

– Пирӗн вӗт ҫурхи ака, укҫи те шыв пек юхать.

– Хыт-кукарла ан пулӑр, вӑл пирӗн пулас кадр, – председатель Кӗркурие ҫурӑмран лӑпкарӗ. – Вӗсемшӗн нимӗн те шеллеме кирлӗ мар, вӗсем салтака кайиччен колхоз ӗҫне хутшӑнаҫҫӗ.

Бухгалтерша халь те сӑмса айӗн мӑкӑртатрӗ.

– Паян парнесем туянмалла, колхозниксене пурне те пӗлтермелле, ыран клуба пуҫтарӑнччӗр ӗҫ хыҫҫӑн, чаплӑн ӑсатӑр салтак ачине.

– Тавах сире, председатель юлташ.

Бухгалтерире Кӗркури тулли расчет илчӗ. Вӑл кунта пӗччен пулмарӗ, ялти тата темиҫе ача расчет илчӗ. Вӗсем салтака каяс хыпар ялта хӑвӑрт сарӑлчӗ. Хулпуҫҫи урлӑ вӗҫӗсене тӗрленӗ илемлӗ алшӑллисем ҫакса, ҫамрӑксем тӑван-пӗлӗшсем тӑрӑх ҫӳрерӗҫ. Майӑн 19-мӗшӗнче ял халӑхӗ вӗсене урапа ҫине лартса Елчӗке ӑсатрӗ. Военкомата пуҫтарӑннӑ салтак ачисене военком помошникӗ автобуспа Канаша илсе кайрӗ. Ҫул тӑршшӗпе хуткупӑс вылярӗ, ҫамрӑксем чӑваш юррисене юрларӗҫ. Ҫакӑн пек кӑмӑлпа



Канаша çитрĕç. Автобусран тухса вĕсем пухăнмалли вырăна кайрĕç. Çул çинче килти сăра ĕçнĕрен, Кĕркурин çăмăлланас килчĕ. Унпа пĕрле Елчĕкрисемех тата иккĕн пычĕç. Ĕç тунă хыççăн пĕрле килнисене хăваласа çитес тесе вĕсем чупса кайрĕç.

– Эй, атьсемри, эсир ăçта çавăн пекех васкатăр?

Вĕсем çаврăнса пăхрĕç, хыçалта пиллĕкĕн тăраççĕ, вĕсем хула ачисем пулни курăнсах тăрать.

– Мĕн кирлĕ сире, атьсемри? – маларах тухрĕ Кĕркури.

– Пăхатăп та, ытла курсуй ку ял ачисем. Пире укçа кирлĕ, – вĕсенчен чи лутри чăрсăррăн пăхрĕ салтак ачисем çине, вăл ўсĕр пулни тўрех палăрать. – Ну-ка, тавăрăр кĕсйĕрсене.

– Нихçан та кĕтсе илеймĕр.

Пĕри Кĕркурие питĕнчен янклаттарчĕ, анчах Кĕркури ура çинчех тытăнса тăчĕ. Тепре чышасшăн пулчĕ лешĕ, анчах

Кĕркури пăрăнма ĕлкĕрчĕ. Çакăн хыççăн тĕркешӳ пуçланчĕ. Елчĕкрен килнĕ виçĕ ача парăнмарĕ, вĕсем çине тапăннă пилĕк ачана, вĕсем килнисене темĕн пек парăнтарас тесен те, анчах пухăнмалли вырăна кайма çул памарĕç. Салтак ачисене илсе килнĕ автобус шоферĕ, çакна курса ларнăскер, чăтаймарĕ, сĕнчĕ:

– Айтăр, атьсемри, ларăр автобуса, сире каялла илсе çитерĕп.

– Анчах пирĕн каялла таврăнма юрамасть вĕт, хамăра та аван мар, ял умĕнче те намăс.

– Эсир чăрсăрланни ниме те тăмасть, ку Улатăр ачисем сире чиксе пăрахма та пултарĕç.

Ачасем шарламасăр пĕр вырăнта тăчĕç.

– Куратăр-и, мĕнле хаяррăн пăхаççĕ сирĕн çине, эсир вырăнтан тапранасса çеç кĕтеççĕ.

Ачасем пĕр-пĕрин çине пăхса илчĕç, ăнланчĕç, çавсенчен хăтăлма урăхла нимĕнле май та çук, ирĕксĕрех автобуса кĕрсе ларма тиврĕ.

Вĕсене шеллесе, шофер укçа та илмерĕ...

Мĕнле куçпа таврăнăп-ха киле, шухăшларĕ Кĕркури. Пахча хыçĕсемпе таврăнас – çынсем уйра та, пахчасенче те ĕçлеççĕ. Чунĕнче йĕрĕнчĕк лĕклетнĕ, вĕт пĕтĕм ял халăхĕ чысласа ăсатнă вĕсене, мĕнле куçпа пăхĕ вăл çынсем çине? Мĕн калĕ вĕсене? Укăлчара ватă та лаштра çĕмĕрт ларатчĕ. Никам та ан куртăр тесе, Кĕркури ун çине хăпарса ларчĕ, çăра çулçăсем хушшинче пытанчĕ. Хĕвел ансан, килне таврăнчĕ, пӳрте кĕрсен, пĕр сăмах та шарламарĕ, нимĕн те ăнлантармарĕ амăшне, питĕ намăс пулчĕ ăна.

Ĕнер калаçса татăлнă майлă ирпе виççĕш те Елчĕкре тĕл пулчĕç, Канаша ларса кайрĕç. Пухăну вырăнне çитсен барака кĕчĕç те хăйсен ушкăнне шырама пуçларĕç. Вĕсене кĕтнĕ пекех, вĕсен çулне каллех ĕнерхи Улатăр ачисем пиллĕкĕн пӳлчĕç. Каллех тĕркешӳ пуçланчĕ вĕсем хушшинче. Вăйсем тан маррине кура, елчĕксем хăйсеннинчен пулăшу ыйтрĕç. Çакна курса, улатăрсем те тухрĕç. Тăрмашăва сăнакансенчен патăръелсем пулăшасшăнччĕ елчĕксене, анчах канашсем чарчĕç вĕсене.

– Ан тив, ку хăйсен ĕçĕ.

– Куратăр вĕт, вăйĕсем тан мар.

Патăръелсем итлесшĕн пулмарĕç канашсене, анчах лешсен шучĕ чылайрах пулăшас текеннисенчен. Ирĕксĕрех шăла шăтăртаттарса, чышкăсене чăмăртаса сăнаса тăма тиврĕ вĕсен. Курăнать: улатăрсен шучĕ ытларах, путлантарма пултараççĕ елчĕксене. Анчах кусем пăхăнасшăн пулмарĕç, стена пек тăчĕç лешсене хирĕç, çирĕп тытрĕç хăйсене. Улатăрсем уйрăм ушкăншарĕн пулнăран пулăшма тухмарĕç, вара елчĕксем çĕнтерчĕç-çĕнтерчĕçех, сăнакансем пурте ахлатса илчĕç, саламлама пуçларĕç çĕнтерӳçĕсене. Ак мĕне пĕлтерет йĕркеленӳллĕ пулни. Ку Кĕркурин пĕрремĕш çĕнтерĕвĕ пулчĕ Елчĕк тулашĕнче.

Унăн команди халлĕхе кайманччĕ-ха, вĕсене Мускава илсе кайрĕç. анчах кунта Кĕркури чылай тытăнса тăмарĕ, сержантсен шкулне вĕренме кайрĕ.

Кунта виçĕ лычка илсе, вĕренӳ полкне лекрĕ. Рота командирĕ ентешчĕ, вăл ăна çар училищине вĕренме кайма ӳкĕтлерĕ. Пĕтĕмпех ăнăçрĕ, ăна çар училищине илчĕç. Унтан лейтенант пулса тухрĕ Кĕркури, ăна çар хĕсметĕнче тăма Инçет Хĕвелтухăçне ячĕç. Кунта вăл капитана çитрĕ. Киле отпуска килнĕ чухне вăл Елчĕкре, кивĕ автовокзал умĕн иртсе, çĕнĕ вокзал еннелле утрĕ. Çавăн чухне хăйĕн çамрăклăхне аса илчĕ, ун чухне ăнланса илнĕччĕ вăл: пурнăçра нихçан та чакма кирлĕ мар.



## Авса хуçаймарӗ

Салтака илсен, Сотя Мускав çывӑхӗнче пехотӑра хӗсметре тӑчӗ. Чӑваш çӗршывӗнчен инçе те мар пек Мускав, çавах та çанталӑк темшӗн питӗ расна. Кунта кунсерен пӗрмай çумӑр çӑвать. Мӗнле çанталӑк вара кунта, тӗлӗнет Сотя. Лӑпкӑлӑх çук Сотя ӑшӗнче. Темшӗн-çке ӑмӑр çанталӑкра пӗр вӗçӗм çывӑрас килет, урӑх нимӗн те тӑвас килмест, ӑнланмасть хӑйне хӑй Сотя. Ун вырӑнне вара Тюрин приказӗсене пурнӑçла. Мӗшӗлти çын Тюрин, айккинчен пӑхсан, арлана асилтерет вӑл, пит çӑмартисем тулли те çавра, пӗр вӗçӗм нӑйкӑшать.

Мӗн чухлӗ пӗлет ӑна Сотя, Тюрин яланах кӑмӑлсӑр пурнӑçпа. Салтаксем калана тӑрӑх, вӑл пуян çемьерен.

Хӗсметӗн пӗрремӗш кунӗсенчех сержант Тюрин, взвод командирӗн çумӗ, темшӗн Сотьӑна кӑмӑлламарӗ. Сотя

чăваш çĕршывĕнчен, вырăсла япăхрах калаçать, чăваш чĕлхи çемçе пулнăран хăшпĕр сасăсем вырăсла калаçнă чухне семĕн тухаççĕ. Паян Сотя амăшĕнчен çыру илчĕ. Çырăва чăвашла чунран тухакан ăшă сăмахсемпе çырнă, вĕсем салтакăн чунне ăшăтаççĕ. Çырăва вуласа тухсан, Сотя ăна кăкăр умĕнчи кĕсйине чикрĕ, чĕре çумĕнче пултăр терĕ. Халь ăна нимĕн те хăрушă мар.

Ӳт-пӳрен сывлăхлă та çирĕп пулман пулсан, Тюрин ăна тахçанах пусăртса лартмалла. Çавăн пек йĕкĕт вăл Елчĕк районĕнчи ял ачи. Мĕн ачаран вăл кил хуçалăхĕнче ĕçлеме хăнăхнă. Çавăнпах пулĕ вăл çирĕп ӳт-пӳллĕ ӳснĕ, мăнтăрккарах тата. Стройра вăл малтисенчен пиллĕкмĕш пулнă, взвод стройĕнче мар, рота стройĕнче. Хăйĕн йывăрăшĕпе вара пуринчен те иртнĕ.

Тюрин сержантăн ăна авса хуçса хăйĕн айне тăвас килнĕ, анчах ниепле те ĕç тухман унăн. Темĕн те шутласа кăларнă вăл Сотьăна хирĕç, анчах салтак парăнман, çирĕп тытнă хăйне, сержантăн пур приказне те пурнăçланă, шăла çыртса та чунне хытарса. Çапла вара Тюрин авса хуçма пултарайман ăна, салтак чунĕнче курайманлăх çеç çуратнă тулккăсăр сержант.

Пĕррехинче Сотя дежурствăран хăйĕн казармине таврăнчĕ, хăйсен ротин хутне хăпарчĕ, дневальнăйпа дежурнăй умĕн иртрĕ, вĕсене чыс пачĕ. Дневальнăй ăна асăрхамарĕ те, куçĕпе тепĕр еннелле пăхнă. Унтан шавлă сасăсем илтĕнеççĕ.

– Атя, Витя, тӳнкке ăна, кăтарт хăвăн вăйна.

Казармăн пĕр вĕçĕнче икĕ рота салтакĕсем пухăннă та пысăк ункă тунă, варринче Тула ачи Витя такампа боксла çапăçать. Ыттисем пек икĕ çул мар, пĕр çул çеç пулать хĕсметре, мĕншĕн тесен аслă пĕлӳ илнĕ. Офицер пулнă пулсан, икĕ çулах тăнă пулĕччĕ хĕсметре. Физкультура институтне пĕтернĕскер, боксра вăйлă вăл, салтаксене умлă-хыçлă çапса ӳкерет, никам та нумай вăхăт çапăçаймасть унпа.

Хăйсен ротинчи салтаксем Витьăна саламлаççĕ, шавлаççĕ, алă çупаççĕ. Сотя ротинчен халлĕхе пĕр салтак та çĕнтереймен-ха ăна, çавăнпа Сотя ротинче конкурент çук Витьăн.

НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

Сотя хăйĕн койки патне çывхарчĕ. Вырăн çинче паллалă почеркпа çырнă амăшĕн çырăвне асăрхарĕ, савăннипе çавăнтах вуласа тухрĕ, вара хăйне вăй кĕрсе кайнăн туйрĕ. Унтан вăл гимнастеркине хыврĕ те çухавине шурă пир çĕлеме ларчĕ, ырана хăварас темерĕ, каçхи апатчен кирлĕ ĕçĕсене вĕçлес терĕ, кайран ирĕклĕ пулать вăл.

Тюрин ăна аякранах асăрхарĕ, ун патне койка тепĕр енчен пырса тăчĕ. Сотя ăна асăрхамарĕ те, хăйĕн ĕçне малалла турĕ, Ку хутĕнче Тюрин унран кулас терĕ, паян та пулин авса хуçасах терĕ салтака, мăшкăл куртăр терĕ ĕнтĕ пĕтĕм рота умĕнче.

– Атя, Сотя, пирĕн ротăшăн çапăç.

Хăй ăшĕнче савăнса кулчĕ Тюрин, пĕр вырăнта сиксе илме те хатĕр, юлашкинчен авса хуçатех вăл курайман салтака. Куçĕсем çуталчĕç унăн çак самантра.

– Куратăн вĕт, дежурствă хыççăн çын ывăннă, канма ирĕк пур манăн, тархасшăн, ан çыпçăн ман çума ун пек ухмах сĕнӳсемпе.

Тюрин йĕрĕнчĕклĕн шăл йĕрчĕ, тутине тăсрĕ, пит çăмартисене татах та чăмăрлантарчĕ.

– Хавшак пулни тӳрех курăнать, сăмахпа çех маттур эсĕ, Сотя.

Сотя ура çине тăчĕ, йĕри-тавра пăхрĕ, рота салтакĕсем вĕсен калаçăвне илтнĕ.

Тюрин ун çине шăтарасла пăхать.

– Мĕншĕн эс, Тюрин, хăв çапăçмастăн?

– Хи-хи, манăн сывлăх начартарах.

– Аплах-ши, сăнран ун пек калаймăн, ав мĕнле хĕпхĕрлĕ сăн-питлĕ, юн вĕресе тăрать.

Ура çине тăнă салтаксем Сотьăпа килĕшсе пуçĕсене сĕлтрĕç.

– Хăраса ӳкрĕм, ха-ха, алфавитри юлашки саспалли мар-ха халлĕхе.

Тюрин пăрăнса утрĕ, салтаксем хыçне пытанчĕ.

Кун пек намăса Сотя чăтма пултараймарĕ. Питне юн хĕретрĕ, куçĕ çуталчĕ:

– Астуса юл, Тюрин, чăвашсем нихçан та хăравçăсем пулман, вырăнта вилнĕ те каялла чакман.

Ăша çилĕ тулчĕ. Чышкисене чăмăртаса вăл ункăна кĕчĕ.
– Ăçта сирĕн боксер перчеткисем?
– Ак, кунтах выртаççĕ.

Сотя çаврăнса пăхма ĕлкĕреймерĕ – аллисене перчеткесем тăхăнтарчĕç те. Каллех салтаксенчен ункă пулчĕ. Ăна çурăмран тĕртрĕç.
– Атя, пуçлăр – кăшкăрчĕç салтаксем.

Витя тӳрех атакăна кĕчĕ, Сотьăна янлаттарса аптăраттарасшăн пулчĕ, ытти салтаксене тӳрех çапса ӳкернĕ пек тăвасшăнччĕ, инициативăна хăй енне илчĕ. Сотя Елчĕкри хăйĕн физкультура учителĕн сăмахĕсене манман-ха:
– Сотя, эсĕ яланах, чышкуна чăмăртанă пек, пĕтĕм кĕлеткӳпе чăмăртан, хăвна сыхлама тăрăш, хăвна хирĕç тăракан пĕр тапăнăвĕ те сана ан лектĕр, унăн хăмсарăвĕсене сăна, унăн хавшак енне тупма тăрăш.

Мĕнле вырăнлă пулчĕç халĕ çав сăмахсем. Сотя хăйне учитель вĕрентнĕ пек тытрĕ. Салтаксем хавхануллăн шавларĕç.
– Атя, Витя, хĕне ăна, вĕрент Сотьăна, пирĕн ротăна хирĕç тăма никам та ан хăйтăр.

Сотя роти шăп тăчĕ, мĕн пулса тухасса кĕтсе шарламарĕ. Сотьăра çапмалли мишене çеç курчĕç. Анчах Сотя кашни сулса янă перчеткерен пăрăнма ĕлкĕрчĕ. Айккинче тăракан Тюрин хăйĕн шухăшĕ пурнăçланнăшăн чунран савăнчĕ, кулли татах та ытларах арлана аса илтерчĕ. Вăт, Сотьăна çапса ӳкерет Витя, вара вăл ирĕксĕрех хуçăлать, пылаккăн шухăшларĕ Тюрин, вара эп унтан çĕнтерейменшĕн мăшкăллама тытăнăп. Сотя выляса ярас пирки пĕртте иккĕленмерĕ сержант. Анчах иртерех савăнчĕ вăл. Витя сулăмĕсене пĕлсе çитнĕ хыççăн Сотя хăй атакăна кĕчĕ. Кĕçех унăн пĕр сулăмĕ тĕле тиврĕ, вара кайрĕ, кашни сулăмĕ тĕле тиве пуçларĕ. Сасартăк вăл Витя сăмахĕсене илтрĕ:
– Çитет, çитет, Сотя, парăнатăп, – куçĕнче куççулĕ тăчĕ унăн, хăй сулăнса кайрĕ, салтаксем çине пырса тĕрĕнчĕ.
– Ура! Атьсемри, пирĕн çĕнтерчĕ, пирĕн ротăра та тивĕçлĕ çынсем пур иккен, курнăçланма пултаратпăр ĕнтĕ.

Салтаксем Сотьăна çавăрса илчĕç, ыталама пуçларĕç.
– Эсĕ вара ăçта çапăçма вĕреннĕ?

– Пирĕн шкулта пĕр мăшăр перчетке пурччĕ, хĕлле пысăк переменăсенче вăхăт ирттермелле аппаланаттăмăр.

Хăшĕ-пĕрисем теннисла вылятчĕç. Çулла вара физкультура урокĕсенче футболла выляттăмăр.

– Çавах та маттур эсĕ, Сотя, махă памарăн, – кашни салтак ăна хулпуççирен лăпкама тăрăшрĕ.

– Мĕншĕн эсĕ çав териех сăпайланнă, Сотя?

– Эпир, чăвашсем, мухтанма юратмастпăр, хамăра ытлашши кăтартма хăнăхман, питĕ асăрхануллă эпир ку енчен.

Салтаксем ăна алă çине йăтса маччаналла ывăта пуçларĕç, савăк кăмăлĕсен вĕçĕ-хĕрри те çук вĕсен. Айккинче тăракан Тюрин тарăхнипе урайне сурчĕ. Вăл шухăшланă пек пулса тухманшăн çиллине лăплантараймарĕ, вĕт çын аллипе те пулин салтака авса хуçаймарĕ вăл. Тюрин ăшран лайăхмарланчĕ, салтаксен савăк хĕвĕшĕвне курас мар тесе, вăл туалета кĕрсе çухалчĕ.

# ÇИМĚК

*Повесть*



Акă ĕнтĕ çуркунне вĕçĕ те çитсе иртрĕ. Йывăççем çулçă кăларса сарма ĕлкĕрнĕ, курăк тавраш ĕ çăран шăтса тухнă, чечексем çурăлнă. Пахчапа уй ĕçĕсем вĕçленнĕ, çынсем мĕн кирлине пурне те лартса е акса пĕтернĕ. Пĕр кана ӳтпе те, чунпа та канмалли çеç юлнă. Сăлтавĕ те пур: кĕçех Çимĕк кунĕ çитмелле, вырăссем ăна Троица уявĕ теççĕ. Чăвашсем те, вырăссем те ку уява асла хурса кĕтсе илеççĕ, çемйи-çемйипе çăва çине каяççĕ, çут тĕнчерен яланлăхах уйрăлса кайнă тăван-пĕтенĕсене, çывăх пулнă çыннисене хисеплесе асăнаççĕ, сывă тăван-пĕтенĕсемпе, юлташ-тантăшĕсемпе тĕл пулса хутшăнаççĕ, вĕсемпе чунтан-вартан калаçса, ăшĕсене кантараççĕ. Хăшĕсем пĕр-пĕринпе çулталăк хушши те курнăçман пулĕ, кунта вара пĕр-пĕринпе тĕл пулса тăраниччен калаçас майĕ-шывĕ хăех тупăнать.

Микулай чӳрече умĕнче урамалла пăхса тăрать. Урамĕ пĕр ретлĕ çуртсемлĕ пулнăран, урам тепĕр енче çуртсем çук, унта тахçан çăра вăрман кашланă пулнă. Микулайшăн ниепле те ăнланмалла мар, мĕншĕн касса пĕтермелле пулнă никама чăрмантарман чипер ӳсекен йывăççене? Шултра йывăççене касмасăр хăварнă пысăках мар лаптăка çынсем парк теççĕ, унта уçăлма тата канма çӳреççĕ. Тавралăх илемлĕн ешерет, уçланкăра чечексем куçа илĕртеççĕ, уйрăмах сап-сарă кукша пуççем, хăш-пĕр енчи чăвашсем вĕсене хăлха çакки курăкĕ теççĕ. Ку чечексене çав териех илемлĕ теме çук пулин те, вĕсем уçланкăна утиялпа витнĕ пек хупланăран савăнтараççĕ, чуна хăпартлантараççĕ. Çут çанталăк улшăнăвĕсемпе киленнĕ май Микулайăн кăмăлĕ çĕкленчĕ, ӳт-пĕвĕ çăмăлланчĕ, чунĕ таçта çӳлелле вĕçсе хăпарнăн туйăнчĕ.

Чӳрече умĕнче çавăн пек чун-чĕрипе хавхаланса тăнă май вăл пĕлтĕр Çимĕкре Исемпел ялне каяймасăр юлнине аса илчĕ. Çав вăхăтра вăл килте пулман, Мускава тухса кайнă пулнă. Унта вăл Володьăпа Çимĕкре йыснăшĕн Суня ятлă асламăшĕн вилтăпри çинче пулнă. Ăна Ваганьково çăви çинче Андреев Борис артистăн вилтăприпе юнашар пытарнă. Ун чухне Микулай ниепле те Çимĕке яла каймa пултарайман.

Хăйĕнче Микулай асăрхаман: мĕнле майпа вăл юлашки вăхăтра ялтан уйрăлса кая пуçларĕ. Ку вăл ăшĕпе

шухӑшӗнче Санька шӑллӗ сарӑмсӑр вилнӗ хыҫҫӑн пуҫланчӗ. Ҫулӗсемпе вӑл ҫирӗм саккӑра ҫеҫ ҫитнӗччӗ. Ытла ир кайрӗ яланлӑха уйрӑлса ҫут тӗнчепе, пурӑнмалла та пурӑнмаллаччӗ унӑн ҫӗр ҫинче, ҫамрӑкскерӗн. Тӑванӗсемпе сывӑх ҫыннисем каласа панӑ тӑрӑх, вӑл ҫав кун Шӑмӑршӑ районӗнчи вӑрмана вутӑ патне кайнӑ пулнӑ. Унта ҫитсессӗн, вӑл машина кузовӗ ҫине вӑрӑм татӑклӑ вутӑсем тиеме пуҫланӑ. Йывӑр татӑксене мекӗрлене-мекӗрлене тиесе, вӑл ӑшчикне тапратать те кукленсе ларать, ӗҫлейми пулать, юлашкинчен тӑнне ҫухатса ҫӗр ҫине хӑяккӑн кайса ӳкет. Пӗтӗм тиев ӗҫне пӑрахса, юлташӗсем ӑна машинӑна лартаҫҫӗ те пульницана васкаҫҫӗ, анчах сыввӑн илсе ҫитерейменҫҫӗ, ҫул ҫинче унӑн чӗри тапма чарӑнать, вӑл вара яланлӑхах куҫне хупать. Йывӑр йӑтнипе чӗри икӗ хут пысӑкланнӑ пулнӑ. Ҫакна каласа панине итлеме Микулая, паллах, питӗ йывӑр пулнӑ, шӑллӗне питӗ шелленӗ вӑл. Сывӑх тӑванне ҫухатнӑшӑн Микулай хуйхӑрмаллипех хуйхӑрнӑ. Халӗ вара вӑл Ҫимӗке Исемпеле каяс пирки мӑшӑрӗпе Гальӑпа каласма шут тытрӗ.

Галя ӗҫрен таврӑнчӗ. Сӑн-питрен, хӑйне тыткаланинчен питӗ ывӑннӑн курӑнать. Микулай ун ҫине тимлесе пӑхрӗ те унпа Ҫимӗк пирки каласма ҫав самантра иртерех-ха тесе шутларӗ. Мӑшӑрӗ ваннӑйне кӗрсе ҫӑвӑнса тухрӗ, кухньӑра тем вӑхӑт пулчӗ, унтан аслӑ пӳлӗме тухрӗ те ҫемҫе кресло ӑшне вырнаҫрӗ. Сӑн-питрен пачах улшӑннӑ, хавассӑн та кӑмӑллӑн курӑнать. Вӑл телевизора ячӗ те хӑйӗн юратнӑ «Принцип домино» передачине пӑха пуҫларӗ. передачӑна икӗ хӗрарӑм, Лена ятлӑскерсем, ертсе пыраҫҫӗ. Телевизорпа реклама пама тытӑнсан, вӑт ӗнтӗ шӑпах мӑшӑрӗпе каласма вӑхӑт тесе шутларӗ Микулай.

– Галюнчик, Исемпеле Ҫимӗке иккӗн пӗрле каяс пирки мӗнле шутлатӑн?

– Ниепле те килӗшместӗп санпа, мӑнтӑрпа иртӗхсе аташма кирлӗ мар пире. – Хӑй куҫӗсене кӗҫ-вӗҫ сиксе тухасла чарса пӑрахрӗ, креслӑра ҫӗкленсе илчӗ. Кӑштахран хӑйне алла илчӗ пулмалла. – Мӗн эс, Коленька, кӗҫех пирӗн хӗрӗн туй пулмалла, – сӑн-пичӗпе те кӗлеткипе те туртӑнса илчӗ Галя, вара шухӑшлӑн сӑмахне малалла тӑсрӗ. – Кашни пуса перекетлетпӗр, пухса пыратпӑр.

Мăшăрне Микулай лăпкăн итлерĕ.

– Хăв вара тепĕр чухне шухăшсăр-мĕнсĕр кирлĕ мар çĕрте тăкаклатăн укçана, – чăтаймарĕ вăл Галя сăмахĕсем хыççăн. – Вăт хĕрарăмсен психологийĕ, хăйсене кирлĕ чухне тăкаксене пачах асăрхамаççĕ.

– Мĕн каласшăн эс кунта?

– Нумаях пулмасть сан çуралнă кунна палăртрăмăр.

– Мĕнех вара?

– Калаçса татăлтăмăр вĕт, эп сана чечек парнелĕп те иккĕнех сĕтел хушшинче ларăпăр тесе. Чăннипе мĕн пулса тухрĕ?

– Чаплă лартăмăр ушкăнпа пуян сĕтел хушшинче.

– Сан ятупа укçа тăкакланăшăн эпĕ пĕртте хирĕç мар, Галя, эп пĕр сăмах та каламан тесе шутла. – Чарăнаймашăн хăйне-хăй ÿпкелерĕ Микулай. – Эп нимех те калама ĕлкĕреймерĕм, эс мана ÿпкелесшĕн, çавах та ыйтăва татса памалла-çке.

Кăмăлсăр сăнпа Микулай чÿрече патне пырса тăчĕ, кантăк витĕр пăха пуçларĕ. Аялта машинăсем мĕлтлетсе иртеççĕ, çуран утмалли çулпа çынсем çÿреççĕ, вĕсем те унăн куçĕ умĕнче мĕлтлетнĕн туйăнаççĕ. Пуçра та тĕрлĕ шухăшсем мĕлтлетрĕç. Вара вăл пуçри шухăшсене пĕрле пухса лăпкăн каларĕ:

– Эс мана тĕрĕс ăнлан, Галя, хăвах аван пĕлетĕн, тымарсем пирĕн унтан вĕт. Тăванăмăрсем патне кайса çÿремесен, вĕсем йывăççем пекех хăрма пултараççĕ, ун чухне пирĕн пурнăç тĕлсĕре тăрса юлать. – Кăштах чарăнса тăрса, Микулай сывлăш çитмен пек тарăннăн сывласа илчĕ. – Тăванăмăрсене ниепле те кÿрентерме юрамасть. Укçа çынран йышăнатăп-та, ку хутĕнче çавах та кайса килетĕпех Исемпеле.

Ун хыçне Галя пырса тăчĕ те аллине ун çурăмĕ çине хурса лăпкăн каларĕ:

– Мĕнех ĕнтĕ, Коленька, шут тытрăн пулсан, кайса килех, савнă мăшăрăм. – Каллех кĕске шăплăх, унтан вăл каллех лăпкăн каларĕ: – Анчах темшĕн-çке эпĕ шикленетĕп, укçа çитмесен туй халăхĕ умĕнче намăс курас марччĕ.

– Эс, Галюнчик, ан хуйхăр, çавах та çичĕ уйăх каялла питĕ тухăçлă шабашка тупрăм, вара Володя ывăлăмăрăн туйне аванах ирттертĕмĕр.

– Вăл вăхăтра, Коленька, сана турă хăй панă пулĕ укçаллă ĕç.

– Ир пуçласа каçчен тăрмашнă ывăлăмăршăн. Çынсем умĕнче намăс курас мар тесе хĕрĕмĕршĕн те мĕн кирлине пурне те тăвăп.

Галя ăна ăшшăн ыталаса илчĕ те кресло патне илсе кайрĕ, унта лартрĕ, хăй унăн чĕркуççийĕсем çине вырнаçрĕ, куçĕнчен ачашшăн пăхрĕ.

– Туман ĕçшĕнех халех ан кулян, Коленька, вăл пархатарлă ĕç тупăнĕ-ха саншăн, çавăнпа Исемпеле лăпкă чунпах кайса кил. – Галя кăштах кулса илчĕ, ăна чуптурĕ, пĕр хушă шухăшларĕ. – Тӳррипе каласан, манăн та Исемпеле каяс килет, Коленька, анчах хăв куратăн, пирĕн тем те пĕр çитмест, тата туйĕ те сăмса вĕçĕнчех.

Микулай йывăррăн сывласа илчĕ, пĕр сăмах та шарламарĕ.

– Эп астăвасса иртнинче, сан шăллу Санька пурăннă чухне, сĕтел варринче шăрттан пурччĕ, Суня кăкшăм тулли сăра ăсса кĕчĕ нӳхрепрен, пысăк черккесене янă чухне вăл кăпăкланатчĕ, çĕнĕ сăра пулни тӳрех курăнатчĕ.

– Чăвашсем сăра тума пултараççĕ, кашни килтех вĕретеççĕ ăна.

– Сĕтелĕн пĕр енче ăшаланă сысна ашĕ, юнашарах ĕне ашĕ, тăварланă кăвакал, хур... Мĕн кăна кăларман пулĕ кăмакаран. – Галя тутине ăмсануллăн çулласа илчĕ. – Ун чухлĕ какай пурнăçра çисе курманччĕ, ав мĕнле хăналанаççĕ чăвашсем. Мĕн чухлĕ яла кайман пулĕ, пирĕн, вырăссен, ун пекки çук вара.

Иккĕшĕ, çакăн пек калаçса, каçкӳлĕме кĕскетсе ларчĕç. Вĕсем икĕ пӳлĕмлĕ хваттерте пурăнаççĕ. Ачисем тĕрлĕ еннелле вĕçсе тухса кайнă. Хĕрĕ Тольяттие кайрĕ, унта Йĕпреç йĕкĕчĕ ĕçлесе пурăнать. Унпа хĕрĕ асламăшĕ патне Йĕпреçе кайсан паллашнă. Халь хĕрĕ отпуск илнĕ те каччи патне кайнă. Ывăлĕ вара иртнĕ çулхи кĕркунне чӳк уйăхĕн вĕçĕнче авланчĕ. Акă вĕсем иккĕшех тунсăхласа лараççĕ,. Паллах, кичем вĕсене. Тарăн шăплăх тăрать, уйрăмах ачасен пӳлĕмĕнче. Пурнăç хăйне май ерипен шăвать, вĕсем иккĕш çеç тăрса юлнине куллен кун хăнăхса пыраççĕ. Ачисемшĕн чунĕсем йывăрланса çитсен, вĕсем ачисемпе телефон урлă çыхăнаççĕ.

Ывăлĕ ку хуларах, кăнтăр-хĕвелтухăç районĕнче, пурăнать. Акă вăл, ывăлĕ Володя, килсе те çитрĕ, вĕсен пурнăçĕпе сывлăхĕсем çинчен ыйтса пĕлчĕ, ку вăл ĕнтĕ яланхи йăлана кĕнĕ пулăм. Пĕр тăхтамасăр ăна кухньăна илсе кĕчĕç, кукăлĕн чи тутлă касăкĕпе хăналама пикенчĕç, умне пĕр тулли ваза канфет, тепĕр тулли савăт печени лартса пачĕç. Ывăлĕ кинĕсен хваттерĕнче пурăнать. Хваттершĕн уйăхсерен тӳлемелли хака кăна тӳлесе пурăнаççĕ мăшăрĕпе иккĕш.

Çынсем тĕрĕс калаççĕ: ачи-пăчин çемйи ашшĕ-амăшĕпе пĕрле е çывăхра пурăннă чухне ашшĕ-амăшĕпе хирĕçеççĕ, ятлаçаççĕ, мĕншĕн тесен çĕнĕрен çуралнă çемьесен хăйсен интересĕсем. Инçетре пурăннă чухне вара вĕсем килсе çӳрени пысăк савăнăç. Ывăлĕ пылак çисе тăранса аслă пӳлĕме тухрĕ. Ашшĕ телевизор пăхса ларатчĕ.

– Атте, мĕнле пыраççĕ сан ĕçсем?

– Пурте йĕркеллех, сана та çавнах сĕнетĕп ку пурнăçра.

– Тавтапуç сана, атте, ырă сăмахшăн.

– Пирĕн вара пурнăçа телевизор умĕнче кĕскетесси çеç юлчĕ. – Микулай кулам пекки турĕ, аллипе кĕтеселле сулчĕ. – Ĕлĕксенче вăхăта ытларах урамра ирттернĕ. – Вăл ывăлĕ çине пăхса илчĕ те унран ыйтрĕ: – Так, ывăлăм, пыратăни манпа çăва çине аслаçусемпе асланнӳсем выртнă çĕре?

– Çук, атте. – Володя ашшĕ çине çамрăк сăн-питпе уççăн пăхрĕ. – Пĕрремĕшĕнчен, эпĕ вăл кун ĕçлетĕп, иккĕмĕшĕнчен, мăшăрăм манăн пульницăра выртать, – сăлтавĕсене лăпкăн пĕлтерме тăрăшрĕ вăл. – Çак кунсенче кĕç-вĕç çуратмалла.

– Сирĕн çине пăхатăп та куратăп: сирĕнпе пĕр хуранта пătă пĕçерме пулмасть.

– Тӳрех çавнашкал ырă марла ан шутла, атте. Паллах, манăн та питĕ кайса курас килет Исемпеле, – ашшĕн хулпуççийĕ çине аллине хурса лăпкăн каларĕ ывăлĕ. – Астăватăп, Санька тете сывă чухне Исемпеле кайнăччĕ.

– Япăх пулнă-им вара?

– Паллах, çук, ун патне Китиковсемпе юнашарти мастерскойне кайнăччĕ.

– А-а, кĕрĕк çĕлеттернĕ çĕре-и?

– Ăхă, ăна кĕтнĕ вăхăтра Санька мана вунпилĕк ми-

нут хушшинче сурăх тирĕнчен çĕлĕк çĕлесе пачĕ, питĕ ăшă та çăмăл пулса тухрĕ вăл.

– Нимĕн те калаймăн, шăллăмăн аллисем ылттăнччĕ те.

– Питĕ япăх, паллах, çав ылханлă эрех пăсать çынсене, çавăнпа унран аякрарах пулма тăрăшатăп. Тавах Турра, ĕçместĕп çав йĕрĕнчĕклĕ шĕвеке.

– Вăт маттур, ывăлăм, кăмăллă илтме ку сăмахсене санран, – Микулай ура çине тăчĕ, урай паласĕ тăрăх темиçе хут унталла-кунталла утрĕ. – Юрĕ, пĕчченех кайса килĕп.

Исемпеле Çимĕке каяс пирки çакăнпа калаçу вĕçленчĕ. Çавах та Микулайăн чунĕ лăпланса çитеймерĕ-ха. Вара вăл Йĕпреçе амăшĕ патне телефонпа шăнкăравлама шут тытрĕ. Çапла турĕ те, каç енне поселокăн ятарлă йышăннă номерĕпе килти телефон номерне çавăрчĕ, хурав кĕтрĕ. Çыхăну провочĕн тепĕр вĕçĕнче Аля ятлă чи кĕçĕн йăмăкĕн сасси илтĕнчĕ:

– Алло, кам калаçать?

– Эпĕ-ха ку, – васкавлăн пĕлтерчĕ Микулай.

– Куля, эсĕ-и ку?

– Ăхă, йăмăкăм, аннерен ыйт-ха, Исемпеле Çимĕке каятьи вăл? Эпĕ ăна Канаш автовокзалĕнче кĕтĕп, калатăр миçере кĕтмеллине.

– Кĕт кăштах, пичче, халех ыйтса пĕлетĕп. – Тепĕр минутран трубкăра чăклатни илтĕнчĕ. – Хм, йывăр мана, тет, çитменнине, пуç çаврăнать, тет.

– Мĕн калăн, вăл ĕнтĕ сакăрвун çиччĕре вĕт.

– Эпир пурăнса çитĕпĕр-ши çав çулсене, Куля?

– Пĕлместĕп, Турă мĕн чухлĕ парĕ. Пирĕн вăхăтра пурнăçĕ ытла та йывăр та. Çăвийĕ çинче пăхатăн та, йĕрки-йĕркипе çамрăксем выртаççĕ, ваттисем сахал. Çăви те ытла хăвăрт ӳссе сарăлать, кивĕ çăви ун пек хăвăрт тулманччĕ.

– Мĕн тăвăн ĕнтĕ, çӳлтисем ахаль çынсене çаратаççĕ, ним вырăнне те хумаççĕ, вĕсемшĕн хăйсен кĕсйисене укçапа чыхса тултарса пултăр, ниме те уямасăр.

– Юрĕ-çке, нимĕн те тăваймăн.

Çакăнпа вĕсен калаçăвĕ вĕçленчĕ. Йĕпреçе такси тытса каймалла мар-ши тесе шутларĕ Микулай. Унта амăшĕпе аппăшне Манькана лартса Исемпеле илсе кайма пу-

лать. Манька аппăшĕн урисем ыратаççĕ, туяпа çӳрет. Çак шухăшпа вăл таксистсенчен çул хакне ыйтса пĕлме тухса утрĕ. Вĕсем ыйтнă укçашăн Микулайăн çур уйăх хушши тар тăкса ĕçлеме тивет имĕш. Паллах, питĕ шел, Микулай хăйне май кулянчĕ çакăншăн. Вара вăл Санька ятлă тетĕш патне шăнкăравлама шут тытрĕ: тен, вăл та Исемпеле кайĕ. Унччен миçе хутчен сĕннĕ вăл ăна хăйĕн УАЗикĕпе лартса кайма. Санька тетĕшĕ тахçан председатель пулнă, ун вăхăтĕнче «Победа» колхоз пĕтĕм Чăваш çĕршывĕнче, Совет Союзĕнче янăранă. Ăна Ĕç Геройĕ ята пама хутсем хатĕрленĕ пулнă. Хăйĕн тӳрĕлĕхĕшĕн шар курчĕ, ăна ĕçрен хăтарчĕç, чутах тĕрмене лартмарĕç. Санька тетĕшне ахаль халăх шелленĕ. Ун хыççăн колхозра япăх пурăнма тытăнчĕç çынсем. Санькка тетĕшĕ хăй, председательте вунпĕр çул ĕçленĕскер, пурĕ те УАЗик автомашина кăна туянма пултарчĕ, мăшăрĕн хваттерĕнче пурăнать. Ачисем Шупашкарти общежитисенче пурăнаççĕ. Кайран унăн тӳрĕ ятне тавăрса пачĕç, анчах унăн сывлăхĕ палăрмаллипех хавшарĕ.

Микулай ăна яланах хăйĕн черетлĕ çĕнĕ кĕнекин презентацине, хăйĕн юбилейне чĕнет. Лешĕ хисеплесе кашнинчех пыратчĕ. Микулай телефонпа унăн номерне çавăрчĕ, трубкăра хĕрарăм сасси илтĕнчĕ.

– Санька тетене чĕнме юрать-ши?

– Куля шăнкăравлать пулмалла, сассунтанах палларăм.

– Тĕрĕс чухласа илтĕр, манман-ха апла.

– Эс пире иртерех шутран кăларасшăн-им, э-э, татах пурăнăпăр-ха.

Микулай кулса илчĕ, пурнăçра тем килсе тухас пулсан та ватăскерсем шанăçа çухатманшăн питĕ кăмăллă юлчĕ вăл. Тетĕшĕн, Саньканăн, яланах лăпкă та дипломатла виçеллĕ сасă.

– Итлетĕп, Куля.

– Эп сирĕнтен ак мĕн ыйтасшăн, Санька тете. Кăçал Çимĕке Исемпеле каятăр-и машинăпа?

– Э çук, Куля, эп çитмĕлтен иртнĕ ĕнтĕ, мана йывăр руль тытса пыма. Тĕрĕссипе каласан, канас, çывăх çынсемпе килти сĕтел хушшинчех ларас килет. Çитменнине, бензинĕ те хаклă.

– Бензинĕшĕнех укçа панă пулăттăм.

– Çук, тăванăм, эс маршруткăна лар та, вăл сана Исемпелех илсе çитерет.

– Юрĕ-çке, эппин çавăн пек пултăр, çавах та Исемпелте тĕл пулăпăр.

Çакăнпа калаçу вĕçленчĕ. Урăх Микулай никам патне те шăнкăравламарĕ, никама та пĕрле пыма чĕнмерĕ, пĕчченех кайса килме шут тытрĕ, ытлашши проблемăсем те пулмĕç. Вара вăл иртерех, юнкунах, автовокзала тухса утрĕ, кĕçнерникуна шăп та лăп маршруткăпа ларса кайма билет туянчĕ. Каялла панă вак укçана шутларĕ те сахал пек туйăнчĕ. Вăл çавăнтах билет хакне пăхрĕ, кирлинчен сакăр тенкĕ хаклăрах имĕш.

– Кассирша, Елчĕке çити мĕншĕн билет хакланнă?

– Ку вĕт Туçана каякан маршрутка.

– Вара мĕн, эпĕ вĕçне çити каймастăп-çке.

Кăмăлсăр пулнă кассирша сăмса айĕн мăкăртатрĕ:

– Çӳреççĕ кунта билет патне, хăйсем пĕлмеççĕ те хăйсене мĕн кирлине.

– Эпĕ ансат чĕлхепе калатăп: мана билет Елчĕке çити кирлĕччĕ.

Кассирша сăнран шуралса кайрĕ, чарса пăрахнăран куçĕсем çиллессĕн йăлтăртатрĕç.

Ку хĕрарăмăн ырă мар япала сиксе тухнă пулмалла, шутларĕ Микулай.

– Тур çырлахтăр сана, сакăр тенкĕ темех мар, тавлашмаллăх çук.

Пăсăлнă кăмăлран хăтăлас тесе Микулай урăххи çинчен шухăшларĕ. Вăл манман-ха, икĕ эрне каялла Туля йтлă йыснăшне пытарма кайнăччĕ. Патăрьел витĕр кайнă пулин те маршрутка çак хакпах Туçи урамĕпе Беззубовсен килĕ тĕлнех çитернĕччĕ. Ун чухне виле пытарма пĕтĕм ачипăчи пухăннăччĕ, унăн иккĕмĕш сыпăкри шăллĕсемпе йăмăкĕсем. Вĕсенчен чи асли, Иркка ятлă йăмăкĕ, унпа пĕр çулта та пĕр уйăхрах çуралнă. Микулай унран кăшт аслăрах. Иркка хыççăн Олег, Пурис, Юркка, Валеркка тата кĕçĕн йăмăкĕсем пыраççĕ. Спорта юрататакан çемье, пурте вĕсем спортпа интересленнĕ, çавăнпа сывă та патвар. Вăл кун Исемпелтен Натюк ятлă аппăшĕпе унăн шăллĕ, Ми-

кулайшăн Автюк ятлă кукка, пынă. Вĕсем – Микулай амăшĕн йăмăкĕпе шăллĕ. Унăн амăшĕ хăй сакăрвун çиччĕре, çемьере виççĕмĕшĕ. Халĕ ĕнтĕ чи асли – Униççе. Мускавран Куля ятлă кукка килеймен. Çемьери тăхăр ачаран вĕсем çеç тăрса юлнă. Ытти тăванĕсем те пынă Исемпелтен, йăмăкĕ тата пиччĕшĕн Ванькка кинĕ. Кунтах иккĕмĕш сыпăкри йăмăкĕ Веркка хăйĕн упăшкипе Микулайпа, унăн вăл кĕрӳ пулать. Вĕсем кунта юнашарах пурăнаççĕ. Ирина ятлă йăмăкĕ те пур. Тахçанах курнăçманччĕ вĕсемпе, виле пытарнă чухне çеç тĕл пулма тӳр килчĕ..

Туля çитмĕл иккĕре вилчĕ. Çамрăк чухне вăл тракторпа ĕçленĕ. Хастар ĕçленĕшĕн ăна Мускава ВДНХана янă. Ăна унта чаплă парнепе хуткупăс панă. Çав сигаретсемпе махорка туртман пулсан, пурăнмаллаччĕ татах, çавсем урлах ватлăхра ракпа чирлерĕ. Пĕлтĕр ăна Шупашкарти пульницара операци тунăччĕ. Ун хыççăн вăл акă çулталăк çеç пурăнчĕ. Микулая Туля тетĕшĕ ывăлĕ выраннех хуратчĕ. Салтака каяс умĕн Микулай Туçана кайнăччĕ. Çавăн чухне Туля тетĕшĕ ăна тăванĕсем тăрăх илсе çӳренĕччĕ, каç пуласпа вара клуба ташлама илсе кайнăччĕ. Çавăн чухне Микулай ăна Йĕпреçе хăйне салтака ăсатма чĕнчĕ. Туляпа унăн мăшăрĕ Натюк иккĕшĕ пычĕç ăна салтака ăсатма. Салтакран килсен Микулай авланчĕ, туйра та пулчĕ Туля тете. Вăт çавăн цек сынччĕ вăл. Ун çинчен лайăххине çеç пĕлет Микулай.

Олег, Юркка, Валеркка шăллĕсем унпа пĕр хуларах тата пĕр районтах инçех мар пурăнаççĕ. Анчах пĕрле пухăнса тĕл пулма виçĕ çул хушшинче пĕрре кăна тӳр килчĕ. Валеркка хăйĕн çуралнă кунне Кăкшăм çырмин тепĕр енчи вăрманта кăвайт умĕнче шашлыкпа хăналаса ирттерчĕ. Пурис тата Иркка тухманччĕ унта – унăн упăшки вара пынăччĕ. Çавăн хыççăн вĕсем Микулай патне пĕртте хăнана пыман, темшĕн-çке тĕл пуласшăн мар. Пĕррехинче вăл вĕсене хулара тĕл пулчĕ те ыйтрĕ:

– Мĕншĕн пымарăр манăн юбилее?

– Тĕрĕссипе каласан, пĕрмай укçа çитмест.

– Маншăн эсир манпа юнашар ларни паха, нимĕнле парне те кирлĕ марччĕ, эсир хăвăр маншăн парне.

Пуçсене сĕлтсе уйрăлчĕç вĕсем унран. Виççĕмĕш сыпăк-

рисем вара пуян пурӑнаҫҫӗ пулин те темшӗн пӑрӑнаҫҫӗ тӑванӗсенчен. Ак мӗнле манерсӗр пурнӑҫ кайрӗ хальхи саманара.

Акӑ кӗҫнерникун ҫитрӗ. Микулай ирех автовокзала кайрӗ. Аллинче сетка, унта пӗр кӗленче эрехпе пылак ҫимӗҫ – печенисемпе канфетсем. Вокзалта Елчӗке каякан маршруткӑсем ҫителӗклех, кашнинчех пушӑ вырӑнсем пур. Шоферӗсем кӑшкӑра-кӑшкӑра, чӗне-чӗне пассажирсене пухаҫҫӗ те ҫула тухаҫҫӗ. Микулай хӑйне кирлӗ маршруткӑна кӗтнӗ хушӑра Елчӗке виҫӗ маршрутка кайрӗ. Исемпеле тахҫантанпах кайман хушӑра кунта пӗтӗмпех улшӑнса пӗтнӗ; паллах, лайӑххи еннелле. Унччен автобуспа ҫӳремеллеччӗ, билечӗ вара яланах ҫитместчӗ, каясса та пулӑ пичкинчи пек чыхӑнса каймаллаччӗ. Халӗ ав маршруткӑсем умлӑхыҫлӑ чупаҫҫӗ, ирӗклӗн ларса кай, ан ӳркен ҫеҫ.

Кӗҫех Газель ҫитрӗ. Микулай ытти пассажирсемпе пӗрле кӗрсе вырнаҫса ларчӗ, унӑн Елчӗке ҫитмелле. Иккен маршрутка хӑвӑрт вӗҫтерет, Канаш автовокзалне те кӗмерӗ, тӳрремӗн кайрӗ. Ку Микулая килӗшрӗ. Елчӗкре Газель автовокзала ҫитерчӗ. Микулай чӳречерен пӑхрӗ те урам пӑрӑннӑ тӗлте хӑйӗн аппӑшне Наҫтаҫа асӑрхарӗ, вара чунӗ унӑн ҫӑмӑллансах кайрӗ. Унӑн Елчӗкри кунӗ аван паллӑпа пуҫланчӗ. Вӑл транспортран тухрӗ те Патӑръел маршручӗн расписанине пӗлме автовокзала кӗчӗ, мӗншӗн тесен унта каякан автобус Исемпел ҫумӗпе иртет. Тӗп алӑкра ремонт пырать, ҫавӑнпа айккинчи алӑкпа кӗме тиврӗ. Ҫывӑх маршрутри автобус тата ун хыҫҫӑнхи хӑҫан каясса, унсӑр пуҫне, лерен юлашки автобус хӑҫан тухасса тӗплӗн тӗпчерӗ вӑл, аса илсе юлчӗ. Халлӗхе пушӑ вӑхӑчӗ пур-ха унӑн, икӗ сехете яхӑн. Ҫавӑнпа вӑл ҫӑмӑллӑн сывласа ячӗ те ҫуртран урама тухрӗ. Пӑла шывӗ енчен хӗвел куҫа йӑмӑхтарать. Хула шавӗ хыҫҫӑн кунта лӑпкӑ. Уҫӑ сывлӑшпа сывлама кӑмӑллӑ. Кунта хура тӑпра, вӑл асфальтран та хурарах. Микулай хӑйӗн аппӑшне Наҫтаҫа асӑрханине аса илчӗ, вара ҫав еннелле утрӗ. Инҫех мар ҫӗнӗрен туса лартнӑ магазин курӑнать. Ҫав вӑхӑтра унтан Наҫтаҫ тухрӗ, икӗ аллинче те тулли сумкӑсем. Микулай ӑна хирӗҫ васкарӗ.

– Эй тата, ӑҫтан сиксе тухрӑн эсӗ, Куля? – ыйтрӗ вӑл

ылттăн шăлĕсене çутатса. Вĕсене Микулай ку таранччен асăрхаманччĕ-ха.

– Ав çав маршруткăран, кунталла çывхарнă чухнех сана чÿречерен асăрхарăм.

Наçтаç ăна ыталаса илме те хатĕрччĕ те, анчах аллисенчи йывăр сумкисем май памаççĕ.

– Тĕл пулни питĕ аван, айта, Куля, пирĕн пата хăнана.

– Мĕнле те пулин тепринче, Наçтаç аппа, – Микулай çул çине пăхрĕ. – Вăхăт пур чухне хăш-пĕр çĕре кайса килмелле.

– Юрĕ ĕнтĕ, кайса килмелли пур пулсан, хăв çулупах ут эппин. – Вăл сумкисене алăран алла улăштарчĕ.

– Тен, сумкăсене кил тĕлне йăтса çитерме пулăшмалла, Наçтаç аппа?

– Кирлĕ мар, эпир, ял çыннисем, хăнăхнă йывăра.

– Аплах-ши, ав епле интеллигентлăн, тирпейлĕн, тасан курăнатăн.

– Хамăр маркăна тытмаллах, миçе çул тата миçе ача вĕрентетĕп шкулта.

Микулай каллех сумкăсем çине пăхса илчĕ.

– Исемпеле эпир çавах пĕрле каятпăр.

– Эпĕ тĕпренех килĕшетĕп, Наçтаç аппа.

– Эпĕ те директортан унта кайма ыйтрăм, çавах уроксем çук манăн.

– Мĕн, машинăсăрах-им, ăçта Карсак?

– Унăн машини ваннă-ха, халĕ ăна юсать.

– Апла пĕтĕмпех ăнланмалла.

Наçтаç кăмăллăн кулса илчĕ те килĕ еннелле утса кайрĕ. Малтан вĕсем автовокзал çывăхĕнчех, урам урлă ларакан икĕ хутлă çуртăн пĕр хваттерĕнче пурăнатчĕç. Халĕ çĕнĕ урама куçнă, унта ретĕн лартса тухнă çуртсенчен хăйсене валли ятарлă лартнă пĕр çуртĕнче пурăнаççĕ.

Кĕпер урлă каçса, Микулай сала варрипе районăн администраци çурчĕ патнелле тĕп урамалла утрĕ. Вăл администраци пуçлăхĕпе Миллинпа курса калаçасшăн. Елчĕк урамĕсем хăйсене май илемлĕ, пур çĕрте те канлĕх туйăнать. Сала варринче чиркÿ мăнаçлăн ларать, пĕр тăрăллă, Иерусалимри Çÿлти Турăн храмĕ. Ку чиркÿ район халăхне

канăçлăх панăн туйăнать. Ăна Петĕр атте тăрăшнипе туса лартнă. Халĕ вăл Йĕпреçе куçнă, унта кĕлĕсем ирттерет. Йĕпреçре те пĕр тăраллă чиркӳ, анчах кунтинчен раснарах. Пырать Микулай урамăн пĕр енчи кивĕ çуртсем умĕпе, урамăн тепĕр енĕнче Пăла Атăла юхса выртать. Микулайăн пуçне темĕнле май асламăшĕн йăмăкĕ, хăйĕн ватă кинемĕшĕ, тахçан каласа пани аса килчĕ. Вăл кунта Елчĕкре пурăнать, пенсие тухнă пулин те, ача садĕнче заведующщире ĕçлет. Вăт вăл калатчĕ:

– Санăн Микулай кукаçу хăйĕн йăм-хура ăйăрне тăрантасне кӳлсе яратчĕ те Елчĕк урамĕсемпе ĕрĕхтерсе çӳретчĕ.

– Мĕн интересĕ пулнă кукаçин ун пек хăтланма?

– Мĕн каламаллине те пĕлместĕп, анчах хĕрсем куç илместчĕç ун çинчен.

– Хĕрсен пуçĕсене çавăрма пултаратчĕ-и вара?

– Пултармасăр, хĕрсем чупатчĕç ун хыççăн.

– Анчах ун чухне хĕрсем çавăн пек хăтланни килĕшместчĕ вĕт.

– Паллах, килĕшетĕп санпа, çапах та кунти пирĕн хĕрсем майне тупатчĕç. – Вăл Микулай çине тимлесерех пăхрĕ. – Эсĕ сăнупа та, кĕлеткӳпе те Микулай кукаçу пекех, çӳçсем çеç расна сирĕн.

Ун чухне вĕсем Шупашкарта Микулай хваттерĕнче ларатчĕç. Вăл вăхăтра ывăлĕ патне амăшĕ, Унисе, килнĕччĕ Йĕпреçрен хăнана. Ăнсăртран алăк тăрринчи шăнкăрав сасси илтĕнчĕ. Микулай алăка пырса уçрĕ. Коридорта унăн икĕ аппăшĕ тăра параççĕ, пĕри Нина Абрамова, тепри асламăшĕн йăмăкĕ.

– Мĕнле майпа килме пĕлтĕр хăнана иксĕр пĕр вăхăтра, хаклă аппасем?

– Тăванла чунсем илсе килме пултарчĕç пулмалла иксĕмĕре пĕр вăхăтрах.

– Апла пулсан кĕрсе вырнаçăр, килти пек пулăр.

Вара виçĕ ватă хĕрарăм сĕтел хушшинче шăкăл-шăкăл калаçса ларчĕ. Хăйсен ачалăхне, çамрăклăхне чылайччен аса илчĕç вĕсем, хăйсем çуралса ӳснĕ Патреккел салине те манса хăвармарĕç аппăшĕсем. Амăшĕ вара Исемпелте иртнĕ çамрăклăхне, ĕмĕрлĕхе пĕрремĕш пулса юлнă юратăвне аса илчĕ. Çав кун Микулай плита çине темиçе хут чейникпе шыв

вĕретме лартрĕ. Кайран ватăсем чăвашсен авалхи хуйăхлă юррисене тăсса ячĕç, куççуль юхтара-юхтара юрларĕç, хăйсем çамрăкла юрланă юрăсене аса илсе ĕнерчĕç. Вĕсем çине пăхса ларса Микулайăн та куççулĕ тухрĕ, темиçе пĕрчĕ сĕтел çине ÿкрĕ. Çакна карчăксем ан асăрхаччăр тесе вăл ваннăйне кайрĕ, питне сивĕ шывпа сăтăрса алшăллипе типĕтрĕ. Аран-аран уйăрăлчĕç аппăшĕсем унăн амăшĕпе.

– Тен, юлатăр, аппасем?

– Çук, çук, пире унта хамăра хăнасем кĕтеççĕ.

– Тытса тăмастăп, хăвăрăнне хăвăр пĕлĕр.

– Пуриншĕн те тав сана, Микулай.

Аппăшĕсем Униçене умлăн-хыçлăн ыталарĕç, савăнăçлă юрă шăрантарчĕç, пичĕсем кулăпа çиçрĕç. Хăйсен чунĕсене, тен, кушаксем чавалаççĕ-и.

Хăйĕнчен сулахай енче ларакан столовăй умĕпе иртсе пырать Микулай. Иртнинче унта район юбилейне палăртнине аса илчĕ вăл. Банкет ирттерчĕç, сĕтел паха та хаклă апатçимĕçпе, сăра-эрехпе тата тĕрлĕ тĕслĕ тутлă шывпа пуян пулчĕ. Çав уява Микулая та чĕннĕччĕ. Çынсем нумай пулман, пуçлăхсен пĕчĕк ушкăнĕ çеç: Михайловский, Сапожников, Дергачев тата ыттисем; вĕсемсĕр пуçне, çывăхри районсемпе Шупашкартан чĕннĕ хăнасем. Çавăн чухне Борисовпа Клементьев «Илемсĕр хĕрарăмсем пулмаççĕ» ятлă юрăна юрласа пани уйрăмах килĕшрĕ. Иккĕшĕ те вĕсем Патреккелтен. Клубра хĕрарăмсен хорĕ концерт кăтартрĕ. Концерт чаплă пулчĕ, пурне те килĕшрĕ.

Урамсем хĕресленнĕ тĕлте Микулай сулахаялла, район администрацийĕн çурчĕ еннелле пăрăнчĕ. Ку урамра пĕтĕмпех тенĕ пек улшăннă, лайăхланнă. Тăршшĕпех илемлĕ чĕнтĕрлĕ карта тытнă, выльăх-чĕрлĕхрен сыхланса пулĕ ĕнтĕ. Унта йĕркипех чечек йăранĕсем, тĕрлĕ сăрăпа ÿкернĕ йăлтăркка плакатсем.

Микулай тĕп крыльца пусмисем тăрăх чупса хăпарчĕ, шала кĕчĕ. Алăк çывăхĕнче дежурнăя асăрхарĕ, сăн-питрен Егоров пекех.

– Эсир кам патне?

– Администраци пуçлăхĕ патне. – Микулай ун еннелле çаврăнчĕ. – Эсир ăнсăртран Егоров историк-писателĕн пиччĕшĕ мар-и?

– Çавă, эсир хăвăр кам пулатăр?
– Жирнов, эпĕ те чăваш çыравçи.
– Ăнсăртран Исемпелтен мар-и?
– Мĕнле май чухласа илтĕр кун пирки?
– Жирновсем пирĕн аякран тивекен тăвансем.
– Тăвансем çакăн пек тĕл пулни аван вăл.

Вĕсем пĕр-пĕрне пĕтĕм кăмăлран ăшшăн алă пачĕç. Иккĕмĕш хута Микулай хăпартланнă кăмăлпа хăпарчĕ. Йышăнмалли пӳлĕмре ăна çамрăк хĕр-секретарь кĕтсе илчĕ, кăмăллăн кулса лăпкăн ыйтрĕ:

– Мĕнле ыйтупаччĕ эсир, арçын?

– Хамăн ĕçпе, тархасшăн, манăн хушамата пĕлтерĕр ăна, Жирнов эпĕ.

– Вăл сире аван пĕлет, сатту вăл питĕ ерçӳсĕр.

– Паллах, атту кунта мĕншĕн ахалех çӳремелле?

– Сире аван ăнлантăм. – Вăл пуçлăх пӳлĕмĕнче çухалчĕ, чылай кĕттермерĕ Микулая, мĕнле кĕнĕ, çавăн пекех хăвăрт тухрĕ. – Кĕрĕр, вăл сире кĕтет.

Хăй вăл алăка хупмарĕ, айккинелле пăрăнса, кĕтсе тăракан çынна çул пачĕ. Микулай васкамасăр кабинета кĕчĕ. Вăрăм сĕтел хушшинче Миллин ларать, сывлăх сунчĕ те сĕтелĕн тепĕр енне ăна хирĕç ларчĕ.

– Район юбилейĕнче мана çав тери тараватйышăннăшăн сире тав тума килтĕм, Николай Петрович.

– Сире хăвăра тав тумалла, Жирнов тусăм, хисеплесе пирĕн уява килнĕшĕн. – Ăшĕнче усранине аса илчĕ те васкасах каларĕ: – Тавах сире парнесемшĕн, кĕнекесемпе журналсемшĕн.

– Хальхи саманара эпир, çыравçăсем, çавсене çеç парнелеме пултаратпăр.

Николай Петровичăн унччен тĕксĕм пулнă сăн-пичĕ çуталчĕ, сӳннĕ куçĕсем чĕрĕлчĕç, çамки çинчи картламсем çухалчĕç. Унăн çакăн пек сăнне яланах асра тытать Микулай.

– Вăт кун пек сăн-пите эпĕ пĕлетĕп, савăнăçлă та çĕкленчĕклĕскере, – тутине аллипе хупласа, темиçе хутчен ӳсĕрсе илчĕ вăл. – Мĕн çав териех пусăрăнчăк кăмăллăччĕ?

– Республика уявне тума ăçтан укçа тупмалла-ши тесе шутлатăп, кăçал ăна пирĕн районта ирттермелле-çке.

– Мĕн шутласа кăларма пултаратăн ку енĕпе?

– Спонсорсене шыраса тупма, вĕсенчен укçа тархасласа ыйтма питех те йывăр. – Кăштах шăпланса чӳречерен пăхрĕ. – Чĕрисене хытарса, çавах та уйăраççĕ, анчах сахал. – Вăл умĕнчи кнопка çине пусрĕ те, пӳлĕме секретарĕ кĕчĕ. – Пире валли чей хатĕрлеччĕ, тархасшăн.

Хĕрача килĕшсе пуçне сĕлтрĕ, йышăнмалли пӳлĕме шăппăн тухрĕ. Чей илсе килнĕ хыççăн вĕсем кăмăллăн калаçса ларчĕç сĕтел хушшинче.

– Халĕ ăçта кайма çула тухнă?

– Исемпеле çăва çине кукаçипе кукамая, Ванька пиччеме, паллах, ытти тăвансене те асăнса пуç тайма.

– Пирĕн Патреккелте те паян Çимĕк уявне ирттереççĕ, кĕçех эпĕ те çăва çине тухса каятăп.

– Сăмах май каласан, манăн кукамай Мария Добронравовна та сирĕн ялтан, вăл унта çуралнă.

– Ку питĕ аван, эпĕ пĕлменччĕ ун çинчен. Анчах хăш урамран вĕсем, халĕ кам пурăнать унта?

– Володя Добронравов пурăнатчĕ, анчах çуртне сутрĕç те вĕсем халĕ амăшĕпе Шупашкарта пурăнаççĕ.

– Мĕнле пĕлместĕп вара, аванах астăватăп, отставкăна тухнă подполковник, телевиденире ĕçлет.

– Вăл манăн виççĕмĕш сыпăкри пичче пулать.

– Ав мĕнле тăвăр тĕнче, Жирнов тусăм.

– Тĕрĕссине калатăр эсир, эп сирĕнпе тĕпренех килĕшетĕп. Микулай сехечĕ çине пăхса илчĕ, автобусран юлас марччĕ тесе шутларĕ, вара тăчĕ те кабинет хуçине алă парса алăк еннелле утрĕ.

– Республика уявне кил Елчĕке, халăх чылай пулать, Мускавран та правительствăран хисеплĕ хăнасем килмелле.

– Эп хаваспах килнĕ пулăттăм, хамăн тусăма, кире пуканне йăтмалли спортăн экс-президентне Сидорова та илсе килĕттĕм, вăл кунта çав спортпа судья та пулĕччĕ, – куляннуллăрах каларĕ Микулай. – Кĕçех хĕрĕмĕн туй пулмалла.

– Апла пулсан, хăçан та пулин тепринче. Кунта килестăвас пулсан, ман пата кĕмесĕр ан кай.

– Çут тĕнчере пĕрре пурăнатпăр, çапах та ĕлĕкхи пек пĕр-пĕринпе хутшăнсах каймастпăр, тăвансемпе аслă сĕтел хушшинче лармастпăр. – Микулай хĕрсе кайрĕ. – Патрек-

келте çуралнă Марье кукамай патĕнче эпĕ пĕртте пулман.

– Эсир хула çыннисем пулса тăтăр та тăванăрсем патне сайра çӳретĕр.

– Пурнăç йывăрлансах пырать, пус укçасемпе тухсах çӳреймĕн çав, – ассăн сывласа илчĕ Микулай. – Ĕлĕкрех ун пек марччĕ.

Н.П.Миллин кулса илчĕ, пуçĕпе сĕлтрĕ. Микулай пĕр чарăнусăр каласрĕ.

– Вăхăт çитĕ, турă пулăшсан Патреккеле çитсе килĕпха, халĕ вара манăн автобуса васкамалла.

– Мĕн, машина çук-и хăвăрăн? – тĕлĕнерех ыйтрĕ Миллин.

– Хальхи саманара писательсем йывăрлăхра пурăнаççĕ.

– Эпĕ урăхла шутланăччĕ.

Çак сăмахсем хыççăн Микулай Миллинпа сывпуллашрĕ.

– Турă пуринче те ăнăçу патăр.

Администраци çуртĕнчен тухса, Микулай Пăла хĕрнелле утрĕ. Анаталла анма çăмăл. Миллинпа калаçнă хыççăн чунĕ ырă кăмăлпа тулчĕ. Çула май вăл ыттисенчен раснарах çурта асăрхарĕ. Ун патне çывăхарах пычĕ те стени çинчи табличкăна вуларĕ, унта краеведени музейĕ тесе çырса хунă. Те пĕлес килни туртрĕ ăна, вăл пĕр тăхтамасăр музея кĕчĕ. Стенасем çине йĕркипе картинăсем çакса тухнă, тĕрлĕ экспонатсем чылай. Паçăр кăна калаçнă дежурнăй Гена Егоровăн шăллĕн кĕнекисене асăрхарĕ, темшĕн вара икĕ кĕнеки кăна кунта. Çав вăхăтра тепĕр пӳлĕмрен хура костюм тăхăннă çӳллĕ хĕрарăм тухрĕ.

– Гена Егоровăн пилĕк кĕнеке тухнă, кунта вара иккĕшĕ çеç.

– Мĕн тăваяс тетĕн, çуккă пирĕн ыттисем. Куратăр пулсан, калăр ăна, тархасшăн, тепĕр виçĕ кĕнекине кĕртсе патăр.

– Шупашкара çитсенех ун патне шăнкăравлатăп, телефон номерĕ пур манăн.

– Вăт тавтапуç сире, – хĕрарăм Микулай çине тимлесерех пăхрĕ. – Эсир хăвăр кам пулатăр?

– Манăн хушамат Жирнов, эпĕ те чăваш писателĕ.

– О-о-о, пирĕн енче ку паллă хушамат, тымарĕсем анлă вĕсен, аван çынсем, – хĕрарăм ун çине ыйтуллăн пăхрĕ. – Ма çук вара эсир çак папкăсенчен пĕринче? – ыйтрĕ вăл

сентре ҫине ретӗн хурса тухнӑ сарӑ папкӑсем ҫине аллипе кӑтартса.

– Эпӗ Йӗпреҫре ҫуралнӑ ҫав, ҫавӑнпа мана аванах мар пулӗ тетӗп.

– Сирӗн мӑн кукаҫусем кунтан вӗт, ку вара чи кирли, тӗпрен пӑхас пулать, – вӑл сӗтелтен хутпа ручка кӑларчӗ. – Хӑвӑр биографие ҫырса памасӑр сире кунтан кӑларса ямастӑп.

– Манӑн юлашкинчен тухнӑ кӗнекене илсен аванрах пулать, унта пӗтӗмпех тӗплӗн ҫырса кӑтартнӑ.

– Тавах пӗлтернӗшӗн.

Микулай сехечӗ ҫине пӑхса илчӗ, унӑн кирлӗ вӑхӑчӗ ҫывхарса пырать.

– Каҫарӑр та, манӑн автобуса васкамалла.

– Маттур, хӑть пирӗн музее кӗрсе куртӑр.

Хӗрарӑм Микулая алӑк патне ҫитиех ӑсатрӗ. Елчӗкре пулса, Микулай чӑваш сывлӑшне туйса илчӗ, пур ҫӗрте те ҫынсем чӑвашла калаҫаҫҫӗ; чӑваш чӗлхи вӑл хӑлхана кӗвӗ пек илтӗнсе кӗрет. Пӗр-пӗринпе калаҫнӑ чухне кашнин сӑн-питӗнче ӑшӑ кулӑ вылять, куҫӗсем лӑпкӑ, ырӑ сунмалла ялтӑраҫҫӗ. Кӑмӑлӗсемпе чӑвашсем пӗр-пӗринпе хутшӑннӑ чухне ырӑ ҫынсем пулни палӑрсах тӑрать. Пирӗн халӑх ҫут ҫанталӑкпа сывӑх пулнӑран ӗнтӗ ҫавӑн пек таратлӑ ҫынсем. Ҫакӑн пек шухӑшсене путса Микулай вокзала ҫитрӗ, шалта билет туянса каялла урама тухрӗ. Ахалех васканӑ имӗш вӑл, автобус тапраниччен сапасра вӑхӑт татах пур-ха. Микулай умӗн вӗт-шакӑр ача-пӑча вӑлта хуллисене сулласа чупса иртрӗҫ, Пӑла ҫыранне пулӑ тытма анчӗҫ. Вӑхӑт пур чухне Микулай вӗсем хыҫҫӑн анма шутларӗ. Ҫыранта вырӑнӗ-вырӑнӗпе хӑва тӗмисем ӳсеҫҫӗ, улӑхра уяв тӗлне пур чечек те ҫурӑлма ӗлкӗрнӗ, симӗс йывӑҫсемпе тӗрлӗ тӗслӗ илемлӗ чечексем куҫа илӗртеҫҫӗ, чуна ҫӗклеҫҫӗ, мӑн асаттесем мӗн авалран тытса пынӑ Ҫимӗк уявӗн кунӗ аван иртессе систереҫҫӗ. Мӗн тери ырӑ кунта тӑма, уҫӑ сывлӑшпа киленме, чечексен тутлӑ шӑршине туйма. Чылайччен тӑрас килет Елчӗк ҫӗрӗн ҫак илемлӗ вырӑнӗпе киленсе. Ирӗксӗрех Манькка аппа тахҫан каланӑ сӑмахӗсем аса килчӗҫ Микулая.

– Ачаранах астӑватӑп, ҫуркунне ҫитсен санӑн аннӳ, манӑн

аппа Унисе ёнтё, уҫҫа яратчӗ те чӳречесене е ҫуртра тирпей тӑватчӗ, е кантӑксене ҫӑватчӗ, ёҫленё хушӑрах юрласа яратчӗ, ӑна итленё май чёре тапма чарӑннӑн туйӑнатчӗ.

Киленёҫлё Микулай. Ҫакна аса илсе, вӑхӑт иртни те сисёнмест. Автовокзала таврӑнма вӑхӑт ҫитнё ав. Кунта автобус пырса та тӑнӑ ёнтё, унпа юнашар Наҫтаҫ аппа тӑрать. Микулай автобус патне ҫывхарма ёлкёрчё ҫеҫ, ятарласа тенё пек малти алӑк уҫӑлса кайрё. Халӑх, пёчёкки те, пысӑкки те, кёпёрленсе-чыхӑнса автобуса хирёнсе кёме пуҫларё, нихӑшё те ыттисене уямасть, хӑйён хӑвӑртрах кёрсе вырнаҫса пултӑр. Микулай автобуса тёркёшмесёр-хёвёшмесёр кёчё. Те автобусӑн ӑшё пысӑкран, ун валли те пёр вырӑн юлнӑ, вӑл унта хӑйён сумкине лартрё. Автобуса Наҫтаҫ аппа кёрсен, вӑл ӑна хӑй йышӑннӑ вырӑна лартрё, лешё питё кӑмӑллӑ юлчё. Автобус халӑхпа лӑках тулчё, ун пек чухне панулмие ӳкме вырӑн ҫук теҫҫё. Билет туяннӑ чухне Микулай кассир сётелё ҫинче ведомость асӑрхарё, унта пёр вунпилёк билет сутнине ҫеҫ палӑртнӑ. Кунта вара алӑк таранах лӑк тулли, ҫынсем пёрпёринпе тачӑ хирёнсе тӑраҫҫё, ҫавӑнпа салонра пӑчӑ та сывлама йывӑр, ку вара кӑмӑла пӑсать. Микулай астӑвасса, ку маршрутри автобуса ҫынсем паянхи пекех лӑк туллин чыхӑнаҫҫё. Ҫынсен чыслӑхёсене шанса, билетсене тёрёслемеҫҫё. Ку чӑнах та ҫавнашкал ёнтё, ку енчи халӑх яланах тӳрё кӑмӑллӑ, нихҫан та чыслӑхне ҫухатмасть. Ватӑ ҫынсен, вӑрҫӑпа ёҫ ветеранёсен вӑрҫа хутшӑннисемпе танлаштарнӑ тыл ҫыннисен, пёрремёш-иккёмёш категорири инвалидсен ҫӑмӑллӑх пур, вёсем тӳлевсёр ҫӳреҫҫё.

Юлашкинчен, автобус чётренсе илсе вырӑнтан тапранчӗ, автовокзал лаптӑкёнчен тухрӗ. Микулай кӑштах ҫӑмӑллӑнрах сывласа ячӗ, чӳрече еннелле мӑйне тӑсрӗ. Автобус тӳрё ҫул ҫине тухма ёлкёрчӗ кӑна, ун умне пёр хёрарӑм чупса тухрӗ, шофер умёнчи кантӑк патне ҫывхарчӗ.

– Тархасшӑн, чарӑр автобуса.

– Мён кирлё, эсир чипер хёрарӑмах-и? – шофер тимсёррён пуҫне каҫӑртрӗ. – Ну, пӑрӑн ҫул ҫинчен!

– Тӑхтӑр-ха, итлесе пётерёр мана.

Ахаль те ерипен пыракан автобус юлашкинчен чарӑнчӗ.

– Вăт шкул ачисемпе Елчěке килнě куçса çӳрекен зоопаркри тискер кайăксене курма килтěмěр.

– Шкулта занятисем тахçанах вěçленнě вěт.

– Ачасем хăйсем тархасларěç, эпě вара вěсен ыйтăвне тивěçтерес терěм.

– Ăнланатăр-и, хěрарăм, автобус ахаль те лăк тулли.

– Пире ачасемпе çакăнта тăратса хăварма совěç çитет-и сирěн?

– Совěçе ан тěкěнěр, çул çинче мěн те пулин сиксе тухас пулсан, манăн явап тытма тивет сирěншěн, эсир вара айккинче тăрса юлатăр.

– Тепěр автобуса ытла чылай кěтме тивет, – хěрарăм хăйěн сехечě çине тěллесе кăтартрě. – Хăвăрах пěлетěр ăна.

– Чухлăр-ха, инструкципе ытлашши çын лартма юрамасть манăн, çынла шутласан, эп сире пурне те ăнланатăп.

Вăл ачасем çине пăхрě, лешсем çул айккинче айăпсăррăн пăхса тăраççě. Таса та типтерлě ачасене курса чунě чăтаймарě шоферăн.

– Юрě-çке эппин, сирěнпе пăсăп чарусене, пěтмелле-тěк музыкăпах пěтес, сире ырă туманшăн кайран асапланмалла ан пултăр.

Вăл кирлě кнопкăна пусрě те, алăк ярах уçăлчě. Ачасен çулě çинче çынсем тăраççě, пěрисем çул параççě вěсене, теприсем кăмăлсăр мăкăртатаççě.

– Мěн урасем тăрăх утатăр, асăрхануллăрах пулмалла мар-ши?

– Каçарăр ěнтě, ниепле те иртме çук та кунта.

– Кунта, чарлан пек, хăть пěр ура çинче тăр.

Теприсем Наçтаç аппа евěрлě ырă кăмăллă.

– Килěр кунта, чěркуççи çине ларăр, – сěнеççě вěсем ачасене. – Эсир вěт пирěн савăнăç, шанăç, пуласлăх.

Наçтаç аппапа юнашар икě ача вырнаçса тăчěç, пěри арçын ача, тепри хěрача. Автобус урăх пěр çын та кěмелле мар чыхăнса тулса ларчě. Темиçе ача шоферăн сылтăм енчи двигателěн хуплашки çине ларчě. Вырăнтан пěр шит те куçма çук. Микулай пěр аллипе çӳлти карлăкран усăнчě, тепěр аллипе тулли сумкăна тытса пычě.

Автобус ытлашши васкамасăр малалла кусрě. Салон-

ра питӗ пăчă, ҫитменнине салон тăррине хӗвел хӗртет, унăн пайăркисем чӳречерен кӗрсе куҫа йăмăхтараҫҫӗ. Ҫул ытла та вăрăма тăсăлнăн туйăнать, Микулай пичӗ тăрăх тар юхрӗ, чарăнма та пӗлмерӗ. Автобусра вентиляци ҫук. Водитель автобуса ятарласахваскатмарӗ, ăнсăртран мӗн те пулин сиксе тухасран шикленчӗ. Микулай йӗри-тавралла пăхса илчӗ, унпа юнашар пӗр хӗрарăм сумкăсемпе тăнине асăрхарӗ.

– Эсир те Исемпеле каятăр пулмалла, ман шутпа, Жирновсем патне?

– Мӗнле майпа чухласа илтӗр ҫакна?

– Сире темиҫе хутчен те курма тӳр килнӗ, эсир паллă ҫын.

– Хăвăр камсенчен пулатăр?

– Федоровсем эпир.

– Федоровсем пурте сарă ҫӳҫлӗ, сирӗн вара хура вăл. Хӗрарăм кулса ячӗ, пӗр сăмах та шарламарӗ.

– Мана килӗшет сирӗн ҫемье, уйрăмах аслă ачи Валеркка.

– Мӗнпе-ши, пӗлесчӗ?

– Эпир унпа кооперативлă ҫуртра пӗр подъездра пурăннă.

– Ку питех те аван.

– Валеркка малтан хăй кӗчӗ ҫав хваттере, кайран Саньккана илсе пычӗ, унтан Светлана ятлă йăмăкӗ пычӗ.

– Астăватăп, вӗсем мана пӗлтернӗччӗ ун ҫинчен.

– Валеркка маттур ача пулса тухать ҫакăн хыҫҫăн, чăн чăвашла тытать хăйне.

– Мӗн енчен?

– Хăйӗн хваттерне шăллӗпе йăмăкне хăварчӗ, хăй урăх ҫӗрте хваттер илчӗ. Санька авланчӗ те арăмӗ патне пурăнма куҫрӗ. Хваттерте йăмăкӗ юлчӗ.

– Ку аван япала, аван ӗҫ-пуҫ.

– Халӗ унта Улине ятлă кӗҫӗн йăмăкӗ пынă, упăшкипе пурăнаҫҫӗ, вӗсен ачасем ҫуралчӗҫ.

Кӗтмен ҫӗртен Микулай ҫаннинчен Наҫтаҫ аппа туртрӗ, Федоровапа калаҫса пӗтерме памарӗ.

– Тен, сумккуна ман чӗркуҫҫи ҫине лартатăн?

– Чăрмантарас мар пулӗ, хамах тытса пыратăп.

Калаҫу малалла тăсăлаймарӗ, чӗмсӗррӗн тăрса пычӗҫ

вĕсем. Автобус Кавала çитрĕ. Халăх йăшаланма пуçларĕ, темиçе çынпа пĕрле учительницăпа ачасем те тухрĕç, автобусра ирĕклĕрех пулчĕ, сывлама çăмăлланчĕ. Микулай аллисене ылмаштарчĕ. Анчах автобуса каллех çынсем чыхăнса тулчĕç, каллех тăрса пыма тăвăрланчĕ, каллех сывлама йывăрланчĕ. Пурте кĕреймерĕç салона, темиçе çын чарăнурах тăрса юлчĕ, тĕрлĕрен усал сăмахсемпе ятлаçса, хăш-пĕр чăтăмсăррисем автобус хыçĕнчен çуранах аллисене кăмăлсăррăн сулса утрĕç.

– Кунта пирĕн Носов хушаматлă тăвансем пурăнаççĕ, – терĕ Настаç аппа Микулая.

– Манман-ха эпĕ, аннепе иксĕмĕр Елчĕке килсен, кунта çити çуран утаттăмăр, тăвансем патне кĕрсе тухаттăмăр. – Микулай аллипе урам тăрăх тăвалла сулахай енчи çуртсем çине кăтартрĕ. – Унта пире аннепе иксĕмĕре Пăлаки аппа яланах хапăл туса кĕтсе илетчĕ.

– Вĕсем çынĕсем çавăн пеккисем.

– Апат çисе тăраннă хыççăн манăн кашнинчех выртса канас килетчĕ, Елчĕкрен çуран килнĕ-çке эпир кунта Кавала çитиччен. Вырăн çине выртаттăм та тĕлĕрсех каяттăм. Аннепе Пăлаки аппа вара калаçса пĕтерейми шăкăлтатса ларатчĕç.

– Апла астăватăн-ха, Микулай, ку питех те аван, тăвансене нихăçан та манма кирлĕ мар.

– Урăхла пулма та пултараймасть. Ку хутĕнче аран-аран вăхăт тупма пултартăм мăн асаттесен çĕрĕ çине килсе курма.

– Ку йывăр саманари пурнăçра хăшĕ-пĕрисем тăванĕсенчен те ютшăна пуçларĕç, ĕлĕксем кун пекки пулманччĕ.

Пĕррехинче Микулай мăшăрĕпе килнĕччĕ Кавала, Çимĕке çăва çинчен ирттернĕ хыççăн канатчĕç вĕсем тетĕшĕн килĕнче. Сасартăк Санькка шăллĕ васкасах трико тăхăнса ячĕ.

– Ăçта кайма пуçтарăнан, Санькка?

– Карсаковсем килнĕ хăнана, унта вара Настаç аппапа унăн упăшки çĕрулми лартма пуçтарăннă, çавсене пулăшмалла.

– Эпĕ те пыратăп санпа, шăллăм.

– Çук, кирлĕ мар, эсĕ ман патра хăнара вĕт.

– Çук, çук, ун пек каймасть, тупса пар мана трико.

Санькка хӑйӗн шкафне уҫса пӑхрӗ, унтан Суняна тем каларӗ.

– Ҫук сана юракан пысӑк виҫелли.

Микулай шурӑ костюмӗн пиншакне хывса ҫакрӗ те шӑлаварӗн пӗҫҫисене кӑштах тавӑрчӗ, вара шӑллӗ хыҫҫӑн хаваспах тухса утрӗ ҫӗрулми лартма. Мӗн тери аван туслӑ ушкӑнра пӗр-пӗринпе ӑмӑртуллӑ ӗҫлеме!..

Микулайпа Наҫтаҫ аппан автобусри калаҫӑвӗ малалла тӑсӑлчӗ.

– Пӗр вӗҫӗм укҫа ҫитменрен япӑх пурӑна пуҫларӑмӑр хальхи саманара.

– Юрӗ-ҫке укҫа ҫитменни пирки калаҫма, хӑвна яланах этемле тытма тӑрӑшмалла ҫут тӗнчере.

Калаҫу мӗнле кӗтмен ҫӗртен пуҫланчӗ, ҫавӑн пекех сасартӑк вӗҫленчӗ. Вӗсем Кавал ялӗ патне ҫывхарса пычӗҫ. Ӑҫта ҫитнине пӗлес тесе, Микулай чӳрече еннелле тайӑлчӗ.

– Наҫтаҫ аппа, тен, урам пуҫламӑшӗнче анса юлӑпӑр?

– Эсӗ мӗн, Микулай, ун пирки ан та шутла, халӗ шоферсем чарӑнура ҫеҫ антарса хӑвараҫҫӗ, ҫирӗп йӗрке вӗсен.

– Нимӗн те тӑваймӑн, каялла хамӑрӑн урасемпе таврӑнма тивет ӗнтӗ.

Чунне лӑплантарса, Микулай малалла пӗр сӑмах шарламасӑр пычӗ. Пӗр кана кайсан, автобус кирлӗ вырӑнта чарӑнчӗ. Салонри халӑх кӗпӗрленсе туха пуҫларӗ. Чылайӑшӗ Кавала Ҫимӗк уявне килеҫҫӗ имӗш. Автобус пушаннӑ пекех пулчӗ, унта халӑх сахал юлчӗ. Автобусран анса юлнисем тӗрлӗ урамсемпе тӑван-пӗтӗнӗсем патне саланчӗҫ, вӗсем пысӑк аслашшӗсемпе пысӑк асламӑшӗсен ҫӗрӗ ҫине ҫут тӗнчерен уйрӑлнӑ тӑванӗсене асӑнма килнӗ Ҫимӗк уявне.

Автобусран тухсан, Микулай ҫӑмӑллӑн та тарӑннӑн сывласа ячӗ, чунӗ-чӗррийӗ каниччен кӑмӑллӑн та тулли туйӑмпа сывларӗ вӑл тӑван ен сывлӑшӗпе. Савӑннипе юнӗ вӗресе кайрӗ, пуҫне минретрӗ. Хӑй кунта мар, Йӗпреҫре ҫуралса ӳснӗ пулин те, хӑйне савӑклӑ туйрӗ вӑл. Микулай астӑвасса, хӑй вӑл кунта пилӗк ҫул каялла килнӗччӗ, ӑна амӑшӗ кӗтсе илчӗ. Ӑшӑ кулӑпа унӑн пит ҫӑмартийӗсем илемлӗн путӑкланчӗҫ. Вӑл ӑна хӑй ача чухне вылянӑ вырӑнсемпе, уйрӑмах юратнӑ кӗтессемпе, улӑх-ҫарансемпе паллаштарчӗ.

– Çакӑнта уйрӑмах Клавье аппапа тата Никантӑр шӑллӑмпа çӳреме юратнӑ.

– Никантӑр куккана аван астӑватӑп, вӑл Мускавра Коломенское ятлӑ метро станцийӗнчен инçех мар Начатинское урамӗнче пурӑнать. Вӗсен виçӗ ача: Натюк, Верук тата Володь.

Амӑшӗ кӑмӑллӑн кулса ячӗ, сӑнӗ сапӑрланчӗ, черченленчӗ, хӑй сакӑрвун иккӗре пулин те, çав самантра ӑна çавӑн чухлӗ çул ниепле те параймӑн.

– Вӑт санӑн аппуна Клавьене астумастӑп.

– Вӑл пирӗн çемьере чи илемличчӗ, Çӗнӗ Пӑвана качча тухрӗ, ир вилчӗ, Микулай ятлӑ ывӑлне тӑлӑха хӑварчӗ.

Амӑшӗ кӑштах салхуланччӗ.

– А, лайӑх пӗлетӗп ӑна, утмӑл çулне паллӑ тума кайнӑччӗ.

Амӑшӗ хӑйӗн сӑмахне малалла тӑсрӗ:

– Чи çивӗч хӗр кӑвак куçлӑ Натюкчӗ пирӗн çемьере, Патӑръел районӗнчи Туçана качча тухрӗ, пуринчен нумай ача çуратрӗ. Натюкпа Автюк ӑмӑртрӗ, анчах темшӗн унӑн хӗрсем çуралчӗç, пиллӗкмӗш ачи кӑна ывӑл пулчӗ, çиччӗмӗшӗ – каллех хӗр, вара вӑл тек çуратма пӑрахрӗ.

Микулайпа амӑшӗ малалла утрӗç. Сасартӑк амӑшӗ чарӑнса тӑчӗ те Пӑла шывӗн тепӗр çыранӗ еннелле тинкерчӗ.

– Ав çавӑнта тутар ялӗ, Микулай атте унта çӳретчӗ. Аса илсен, паян кун та тем лӗкӗленет ӑшра.

– Мӗншӗн, анне?

– Пирӗн çемьере тӑхӑр ача пулнӑ, килти хуçалӑх пысӑкчӗ, ӗç пурин валли те çитнӗ, уйрӑмах пире тӑрантарса пурӑннӑ ӗнене пӑхма юрататтӑмӑр. – Амӑшӗ ассӑн сывласа илчӗ, питӗнчен савӑнӑçлӑ кулли çухалчӗ, çамки хуткупӑс пӗрми пек пӗркеленчӗ. – Пӗр каçхине килкартинчен пирӗн ӗне çухалчӗ. – Ку хутӗнче кӑвак куçӗсем хушшинчи сӑмса кӑкӗ пӗркеленчӗ. – Ӗнесӗр вара эх мӗнле йывӑрччӗ, эсӗ ӑна пӗлместӗн çав.

– Ӑçтан пурне те пӗлем-ши, эпир вӗт нихӑçан ӗне усраман.

– Ун чухне самани пӑтравлӑччӗ, пурӑнма çав тери йывӑр пулнӑ. Атте ирхине ӗне йӗрӗпе кайрӗ, йӗрӗ япӑх палӑратчӗ, вӑррисем унӑн урисене алсасем тӑхӑнтартнӑ пулмалла.

– Мĕн, тупса килчĕ-и вара?

– Эс малалла итле. Вăт вĕсем, çамрăксем, яланах чăтăмсăр. Йĕрсем аттене юнашарти тутар ялне илсе çитереççĕ, анчах ял урамне кĕрсен вĕсем çухалаççĕ. Атте аптăраса ӳкет, мĕн тумаллине хăй те пĕлмест, юлашкинчен çапах та ăнкарса илет те ĕнене ятран чĕнме тытăнать. Палланă сасса илтсе, лешĕ му-у тесе ĕнĕрсе ярать, атте вара сасă илтĕннĕ килкартине кĕрет те тӳрех вите еннелле утать. Унта вĕренпе кăварнă мĕскĕн янавар тăра парать. – Амăшĕн сăнĕ çиллесленчĕ, сасси вăйланчĕ. – Улттăмĕш туйăм пулнă пулмалла аттен, вăл теме сисе вăрт! çаврăнать каялла, çурăмĕ хыçĕнче сенĕк тытнă тутар ун çине ăнтăлать имĕш. Атте ярт! пăрăнать айкинелле, сенĕк пĕрене тăрăнать.

– Вăт маттур, вăр-вар пулнă кукаçи.

– Атте вăйлăччĕ пирĕн, тутара пĕрре çапсах çĕр çине ӳкерет.

– Вĕлерсех пăрахать-им?

– Çук, вăл тутара сенĕкпе тирсе пăрахас тесе шутлать, анчах çав вăхăтра пӳртрен кил хуçи арăмĕпе ачисем чупса тухаççĕ, кил хуçине ан тĕкĕн тесе тархаслаççĕ, унсăрăн эпир пĕтетпĕр теççĕ.

– Малалла мĕн пулса тухнă вара, анне?

– Аттен çиллес кăмăлĕ сĕвĕрĕлнĕ, хĕрхенӳ туйăмĕ çуралнă, уйрăмах ачасене шел пулнă.

– Вăт мĕнле маттур пулнă манăн кукаçи, ăна хисеплесе те ĕнтĕ пире чылайăшне Микулай ят панă...

Настаç аппа Микулая темиçе хутчен çаннинчен туртрĕ.

– Эсĕ мĕн, Куля, илтместĕн-им мана?

– Çук, Настаç аппа, эсир хăвăр ял çурчĕсене сăнанă май шухăша путрăм-ха.

– Пирĕн урамра нимех те улшăнман юлашки вăхăтра, – пăшăрхануллăн сывласа илчĕ Настаç аппа. – Ыйтас-ха санран, мĕн пирки тарăн шухăша путнăччĕ?

– Кукаçипе кукамая тата Исемпелти аннене аса илтĕм.

– Сан кукаçу Микулай ман аттен пиччĕшĕ пулнă, унсăр пуçне тата икĕ пиччĕшĕ пурччĕ, Санькапа Ваççа, анчах вĕсем вилнĕ ĕнтĕ, ачисем кунта Исемпелте пурăнаççĕ. Пурлăхлă çынсемччĕ, Елчĕк районĕнчи чи пуян çынсенчен

пĕрисемччĕ; чи кирли, пĕр канмасăр ĕçлетчĕç, çавăнпа çителĕклĕ пурăнăçлă пулнă.

– Мĕнле çын пулнă манăн Микулай кукаçи пурнăçра, Наçтаç аппа? Питĕ пĕлес килет.

– Вăйпитти арçынччĕ, илĕртӳллĕ мăйăхчĕ унăн, манăн Никодим ятлă атте пекех чиперччĕ сăнран. Чăннипе, эпĕ вĕсене курман, сăнӳкерчĕксенчен çеç пĕлетĕп тата анне каласа паратчĕ, вĕсем пĕр сăнлă пулнă, – ăшшăн калаçать Наçтаç аппа, куçĕсем унăн çунса тăраççĕ. – Анне сăмахĕ тăрăх, ман атте унпа хăйне сыпăçуллă та сăпайлă тытнă.

– Пирĕн кукаçисем маттур çынсем пулнă пулмалла.

– Ун пек калани çителĕксĕр, унăн хура ăйăр пулнă, анне каласа паратчĕ: кӳлетчĕ тет те ăйăра тăрантаса, çӳретчĕ тет Елчĕк урамĕсемпе ярăнтарса-вĕçтерсе, çынсем тĕлĕнсе пăхса юлатчĕç тет, пуçĕсене пăркалатчĕç тет, чĕлхисемпе чаклаттаратчĕç тет.

– Ав мĕнле кĕрнеклĕ пулнă манăн кукаçи.

Сад пахчиллĕ çурт патне çитрĕç вĕсем, улмуççисем хушшинче виçĕ вĕлле ларать.

– Пирĕн кил-çурт та ишĕлсе пырать. Анне пурăннă чухне йĕри-тавра ешеретчĕ кунта, куçа илĕртетчĕ, эпир, ачалла, савăнăçлăн чупаттăмăр урамра, килкартинче выляттăмăр, – хăпартлануллăн калаçрĕ Наçтаç аппа. Микулай темиçе сăмах хушса хума ĕлкĕрчĕ:

– Иккĕмĕш сыпăкри кукамая эпĕ аван астăватăп, вăл мана пылпа хăналатчĕ, илсе тухатчĕ те чашăкпа çи ăшу каниччен тетчĕ.

Питне пĕркелентерсе, Наçтаç аппа сăмахне хавхаланулланăн малалла тăсрĕ:

– Вăт, пирĕн çемьере пĕртен-пĕр пиччемĕр пурччĕ, ăна пурăнма çак кил-çурта хăварчĕç, Ваççа вара мĕн турĕ тетĕн, пурăнмарĕ вăл ку çуртра, хăйĕн варлийĕ пулнă акушерка патне Çĕмĕрлене юхтарчĕ.

– Юрату пурнăçра темĕн те хăтлантарать, Наçтаç аппа.

– Вăт çавăн хыççăн пĕчченех пурăнать пирĕн инке, вăл пĕр Ваççана кăна юратнă.

– Мĕн тăвăн ĕнтĕ, пурнăç çавăн пек килсе тухрĕ пулсан.

– Тытса чармаллаччӗ унӑн хӑйӗн кӑмӑл еккине, кунтах пурӑнмаллаччӗ, Жирновсен несӗлне тӑсмаллаччӗ.

– Нимӗн те тӑваймӑн, чӗрене ӑна хушма ҫук вӗт.

– Эсир, арҫынсем, пурте пӗр пекех, тетӳне хӳтӗлетӗн тата.

– Мӗнех вара, ҫӗр ҫинче пӗрре кӑна пурӑнатпӑр. Эп Ҫӗмӗрлере командировкӑра пултӑм, вӗсем патне хӑнана кӗрсе тухрӑм, – Микулай та хӑпартланчӗ, хӗрӳллӗн калаҫрӗ. – Иккӗшӗ те кӑмӑллӑ юлчӗҫ, тете каланӑ тӑрӑх, вӑл ДРСУра пуҫлӑх пулса ӗҫлет, унӑн тепӗр ҫурри вара – акушеркӑра.

– Ну, мӗнле йышӑнчӗҫ сана вӗсем, Куля?

– Эпӗ хампа пӗрле кучченеҫсемпе вырӑнти хӗрлӗ эрехе илсе пынӑччӗ, вӑл вара тӗкӗнмерӗ те вӗсене, сервантӗнчен хӑйӗнне туртса кӑларчӗ.

– Ӑхӑ, ӑхӑ, пур эппин унӑн лайӑх манер, нимӗн те каламӑп.

– Коньякпа хӑналарӗ, юлашкинчен, ӑсатса янӑ чухне, шӑккӑлатпа хӗрлӗ эрехе каялла тыттарчӗ, ку йӗрӗнчӗк шӗвеке ҫав-ҫавах никам та ӗҫес ҫук кунта терӗ.

Наҫтаҫ аппа ҫӳҫне майласа илчӗ, унӑн ҫиллес кӑмӑлӗ сӗвӗрӗлчӗ, вӑл шӑппӑнрах сасӑпа ӳкӗнӳллӗн каларӗ:

– Халӗ ӗнтӗ Ваҫҫа пичче Ҫӗмӗрле ҫӑвинче выртать, тепӗр икӗ ҫултан инке те вилчӗ, ачи-пӑчи пулмарӗ вӗсен, хваттерне хӗрарӑмӑн тӑван пиччӗшӗн, е тӑван аппӑшӗн ывӑлӗсене е хӗрӗсене панӑ, ҫавна тӗрӗсех пӗлсе каймастӑп вара.

Кӑштах пӗр шарламасӑр малалла пӑхса пырса утрӗҫ. Сасартӑк Микулай тем аса илчӗ те хӑвӑрттӑн калаҫа пуҫларӗ:

– Пуҫра ку шухӑш тахҫанах явӑнать, темиҫе хут та каласа парас тенӗччӗ ӑна.

Чунӗпе канӑҫланнӑ Наҫтаҫ аппа ун ҫине мӗн пулнӑ-ши тесе тӗлӗнерех пӑхрӗ.

– Вӑт, Манькка аппу кӳренет сана, эпир унпа час-часах телефонпа калаҫатпӑр.

– Питӗ шел вӑл кунта килсе ҫӳреме пӑрахнишӗн, ури ыратать унӑн. Мана та ӳпкелешсе каласа пачӗ сире кӳреннине, хӗрӗ патне Шупашкара килсе ҫӳрет, ман пата вара пӗртте кӗрсе тухмасть тет.

– Автобусра ларса пынӑ чухне кашнинчех ку хутӗнче кӗрсе тухатӑпах аппа патне тесе шутлатӑп, ҫитсен вара

тĕрлĕ вак-тĕвек ĕç-пуçа путатăп, ачамăрсене унпа-кунпа пулăшатăп, мăнукăмсемпе савăнатăп, çавна май вăхăт хăвăрт иртет, часрах каялла Елчĕке васкатăп вара.

– Тем калăн та, çирĕп шут тытсан яланах вăхăт тупма пулать.

– Тепринче кĕрсе тухатăпах ун патне.

– Шупашкара çитсенех ку сăмахсене Манькка аппана пĕлтерĕп.

Наçтаç аппа Микулай çине пăхса илчĕ те пуçĕпе йăх йăви еннелле сĕлтрĕ.

– Пулма пултараймасть, çавах та аппа-йăмăксен ачисенчен хăшĕ те пулин тупăнатех çакăнта килсе тĕпленме килĕшекен, вара пурнăç кунта тахçанхи карта ларать, ачапăчан савăнăçлă сасси илтĕне пуçлать.

Хаваслăн та тăн-тăн утса кайрĕ Наçтаç аппа хăйсен калинкки патнелле. Микулай вара тăван пиччĕшĕсен ку çурта хирĕç урам урлă ларакан çурчĕ еннелле утса кайрĕ. Вăл кукашшĕпе кукамăшĕн çурчĕ, вĕсен тăван килĕ. Вăл хăй патне пĕтĕм чун-чĕрене туртать, ăша канăçсăрлатса савăнтарать. Микулай аякранах хăйĕн тетĕшне Автюка асăрхарĕ, лешĕ почта ещĕкне тĕрĕслет иккен, ăна вĕсем хăйсен хӳми çине çакса хунă.

– Сывлăх сунатăп, Автюк тете! – çывхарчĕ Микулай ун патне, аллине çĕклесе илсе. Лешĕ вара пуçĕпе çеç сĕлтсе илсе хăйĕн ĕçне малалла турĕ.

– Вăхăтра çитрĕн эс, шăллăм, ну-ка, тытса тăр-ха çак ещĕке, – кӳреннĕ сăнлăскер, вăл хулпуççи урлă айккинелле темиçе хутчен сурса илчĕ. – Ӳке пуçларĕ, манка çинче тытăнса тăрать, почтăран çамрăкскерсем килчĕç те ӳрĕккĕнсӳрĕккĕн ĕçлесе çакса хăварчĕç.

– Халех, Автюк тете, минутлăха тăхта-ха, сумкăна сак çине лартам.

Микулая тĕлĕнтерсе, Автюк тетĕшĕ çамрăкла хăвăрт пĕшкĕнсе илчĕ. Микулай астăвасса, вăл яланах мĕшĕлти çынччĕ, халь вара йăрăланнă. Вăл тачка пралук илсе ещĕк тавра çавăрчĕ, вĕçĕсене пăрса çирĕплетрĕ, шанăçлăрах пултăр тесе монташкăпа туртса лартрĕ, аллипе силлесе пăхрĕ.

– Вăт ĕнтĕ çирĕп те шанăçлă çакăнса тăрать, ниçта та каяс çук, атту чалăш-чĕлĕш çакăнса тăрса йăлăхтарса çитерчĕ.

Хайĕн ĕçĕпе кăмăллă юлнăскер, тетĕшĕ Автюк сак çине ларчĕ, хайĕн «Примине» туртса ячĕ. Унăн Никантăрпа Микулай ятлă пиччĕшĕсем Мускавра пурăннă. Вĕсем пирус е сигарет туртнине Микулай нихăçан та курман. Тетĕшĕ Автюк çĕрелле пăхса ларчĕ, пĕр сăмах та шарламарĕ, куç хăрпăкĕсене çĕклемесĕр хайĕн шухăшĕсене путрĕ. Аякра Веркка йăмăкĕпе Микулай кĕрӳшĕ курăнчĕç, вĕсем Патăрьелтен Елчĕке çӳрекен автобусран аннă пулмалла. Сывхарсан кĕрӳшĕ вĕсем еннелле аллипе сулчĕ, кăмăллă кулăпа сиçрĕ.

– Кĕтсе илĕр пире, эпир Çимĕке килтĕмĕр.

– Мĕн кĕтсе илмелли пур, санăн хăвăн кунта маларах пулмаллаччĕ.

Кĕрӳшĕ Микулай Микулайпа юнашар пырса ларчĕ, çăмăллăн сывласа ячĕ. Йăмăкĕ Веркка сывлăх сунса пуçĕпе сĕлтрĕ те вĕсемпе юнашар сак вĕçне хапха енчен пырса вырнаçрĕ.

– Ну, мĕнле çитрĕн, пичче, пирĕн пата?

– Халь транспортра пачах урăх йĕрке, автобуссем вăхăтра та аван çӳреççĕ, çитменнине маршруткăсем умлăнхыçлăн чупаççĕ. – Анчах вăл Елчĕкрен Исемпеле халăхпа лăк тулса ларнă автобусра çак шăрăхра мĕнле тертленсе килнине пĕлтермерĕ, Çимĕк кунĕнче вĕсен кăмăлĕсене пăсас мар терĕ. – Нимĕнле проблема та çук, укçа пултăр кăна кĕсьере.

– Анчах укçине ниçта та çителĕклĕ тӳлемеççĕ, колхоз пирки вара каламалли те çук, укçасăр тенĕ пек ĕçлетпĕр.

– Çавнашкалах темелле пирĕн хулара та, рабочи класа мĕнле усламалла-ши тесе çеç шутлаççĕ, - кăмăлсăррăн аллине сулчĕ Микулай, малалла агрессивлăрах калаçрĕ. – Пуçлăхсем нимĕнле намăс-симĕсе те пĕлмеççĕ, вăрлама çеç пултараççĕ, çӳлтисем çине пăхса, хăйсен халăхне сĕмсĕррĕн улталаççĕ, вĕсенчен вырăнти тӳресем тĕслĕх илеççĕ.

Калаçăва Автюк та хутшăнчĕ. Çав вăхăтра вĕсем патне инкĕшĕ Елюк тухрĕ, кĕрӳшĕ ун çине ӳпкевлĕн пăхрĕ.

– Эсир халĕ те пуçтарăнаймастăр-им, мĕн килти çипуçпах çӳретĕр? – Микулай кĕрӳшĕ ун çине йĕрĕнчĕклĕн пăхрĕ, пуçне хурласа пăркаларĕ. – Эсир ятарласа çакăн пек хăтланатăр пулмалла, паян Çимĕк кунĕ пулнине лайăх пĕлетĕр вĕт.

Веркка çавăнтах сак çинчен тăчĕ, амăшне хапха еннелле çавăтса кайрĕ.

– Айта кĕрер, тен, мĕнпе те пулин пулăшмалла сана, анне.

Вĕсем килкартине кĕрсе çухалчĕç. Хыçăнчен хапха шанлаттарса хупăнчĕ. Çавăн хыççăн çеç сăмах пуçларĕ Автюк.

– Çав пуçлăхсемпе тӳресене пĕтĕмпех Горбачев иртĕхтерчĕ хăйĕн çĕнйеркелĕхĕпе, унччен аташ-ха хальхи пек, хăвăрт ĕçрен тухса ӳкетĕн, халĕ вара ниме те уямаççĕ, каласса пĕр майлă калаççĕ, ĕçне вара пачах тепĕр майлă тăваççĕ, çынсене сăтăр кăтартаççĕ.

– Уйрăмах Ельцин вăхăтĕнче çĕршыва ишĕлтерчĕç, халăх патшалăх хуçалăхне вуншар çулсем хушшинче ура çине тăратрĕ, вĕсем вара, халăха ним ырăнне те хумарĕç, хăвăрт çаратса пĕтерчĕç, – шавласа кайрĕç вĕсем çумне пырса ларнă ял çыннисем. Ытларах Микулайăн Автюк тетĕшĕ калаçрĕ.

– Уйрăмах пире, ял халăхне, ытларах тивет пĕтĕм măкăлĕ, – терĕ Автюк васкавлăн. – Нихçан та пурнăçа ытла хăвăрт çĕнетсе улăштарма кирлĕ мар, хăйĕн еккипе аталанса пытăр вăл, унсăрăн чылайăшне кӳрентерме пулать, уйрăмах – ĕçхалăхне, – тунсăхлăн каларĕ вăл. – Атте пурăннă чухне ăна çул памастчĕç. – Сăнĕпе тĕксĕмленчĕ Автюк, вара сассине хăпартрĕ. – Атте никамран та нимĕн те ыйтман, пĕтĕмпех хăй аллипе тунă, хăйĕн курпунне măкăртнă хуçалăха çирĕп ура çине тăратас тесе, ăна манăн пиччесемпе аппасем пулăшса пынă, – темиçе хутчен ӳсĕрсе илчĕ Автюк, ăна калаçма çăмăл мар пулчĕ пулмалла. Уçă сывлăша темиçе хутчен çăтнă хыççăн çеç çăмăлланнă пек пулчĕ. – Ялти çирĕп хуçалăхсене раскулачить тума пуçларĕç, выльăх-чĕрлĕхе илсе тухса кайма тытăнчĕç. Хăйĕн хура йĕйăрĕшĕн çав тери кулянатчĕ атте, вăл вĕт унăн мăнаçлăхĕпе савăнăçĕ пулнă. – Автюк кăмăлсăррăн аллине сулчĕ. – Йăра колхоз витине илсе кайрĕç, ун патне атте кашни кун çӳретчĕ, пăхатчĕ ăна, тасататчĕ. – Вăл тӳпене пăхса илчĕ, сăмахне малалла тăсрĕ: – Пĕррехинче атте питĕ пусăрăнчăк таврăнчĕ, сăн-пичĕ тĕксĕмленнĕ. «Мĕн пулнă сана, Микулай?» – ыйтрĕ унран анне. «Марье, тĕп турĕç

пирĕн йăйăра, Канаша кайнă та ытлашши хăваласа ураран ӳкернĕ», – хуравлать атте. Иродсем мар-и вĕсем çакăн хыççăн. Мĕнпе айăплă пулнă-ши вĕсем умĕнче мĕскĕн янавар? Такама килĕшсех кайман пулмалла, усал çынсем яланах тупăнаççĕ, йӳçĕ ват шĕвекĕ юхать пулĕ вĕсен юн тымарĕсенче.

Каллех шăплăх тăрать арçынсем хушшинче, машинăсем çеç хушăран тусан çĕклесе кĕрлеттерсе иртсе каяççĕ. Тетĕшĕ Автюк шăппăнрах калаçа пуçларĕ:

– Атте вырăнпа выртмаллах хавшарĕ, урăх тек тăраймарĕ вырăн çинчен, вăхăтсăр вилсе кайрĕ, унăн пурăнмалла та пурăнмаллаччĕ çут тĕнчере, арăмĕпе ачисене савăнтармаллаччĕ, – макăрасла тăсрĕ сăмахне Автюк. – Тепĕр çултан анне пусма çинчен ӳксе вилчĕ, – тартрĕ вăл хуйăхпа тулнă куçне. – Вăт çавăн пек тăлăха тăрса юлтăмăр эпир.

Пĕр хушă шăп ларчĕç вĕсем. Шăплăха Автюк хăй пăсрĕ:

– Клавье аппа Çĕнĕ Пăвана качча тухрĕ. Хамăн пĕрремĕш хĕрĕме ун ятне патăм. Никантăр пиччем вĕренме кайрĕ. Кайран Никантăр таврăнчĕ. Вĕсем санăн аннӳпе ЗИЛ заводра пĕрле ĕçленĕ пулнă, пĕр баракрах пурăннă. Халĕ çав вырăнта АЗЛК завод ларать. – Сăмах ваклама юратман Автюкшăн çăмăлах мар пулчĕ пулмалла калаçма. – Пирĕнпе пирĕн чи аслă аппа Нинук юлчĕ, вăл пирĕншĕн анне вырăннех шутланнă. Пире пăхса ӳстернĕ. Ăна Натюк аппа пулăшатчĕ. Пирĕнтен чи кĕçĕнни Куля пĕрмай йĕретчĕ.

– Атте-аннесĕр тăрса юлсан, мĕнле урăхла пултăр вара, – калаçăва хутшăнчĕ кĕрӳшĕ Микулай. Анчах Автюк ăна калаçма памарĕ, хăйĕн сăмахне малалла тăсрĕ:

– Пирĕн вара мĕнле те пулин майне-шывне тупса пурăнма тиврĕ, – унăн кăмăлĕ пачах хуçăлчĕ, сăмахĕсем аран-аран тухрĕç. – Микулайпа Санькка пиччемĕрсем Тăван Çĕршывăн Аслă вăрçинче пуçĕсене хучĕç, пĕр хыпарсăр çухалчĕç.

Микулай тĕлĕнсех кайрĕ, нихăçан та калаçма юратман Автюкăн чĕлхи паян уçăлса кайрĕ. Тен, Çимĕке пула-и? Çулран ют çĕршывра туса кăларнă кĕмĕл тĕслĕ машина пăрăнчĕ те вĕсен хапхи умĕнче чарăнчĕ. Машинăран арç-

ынпа хĕрарăм, вĕсем хыççăн арçын ачапа хĕрача тухрĕç те сак çинче ларакансем патне çывхарчĕç.

– Миçе çу, миçе хĕл курман сана, Куля!

– Суймасăр калаçан, пĕр вунă çул пулĕ.

– Пар-ха, пиччем, сана тăванла ыталам. – Йăмăкĕ ăна ыталаса чуптуса илчĕ. Унтан, хăяккăн тăрса, инçех мар тăракан арçын çине кăтартрĕ. – Вăт, паллаш, ку манăн упăшка Вова.

Айккинче кĕтсе тăракан арçын Микулайăн кĕрӳшĕн çӳлĕсенчех, анчах унран куçлăхĕсемпе уйрăлса тăрать.

– Мана Вова тесе чĕнеççĕ, – алă парса тухрĕ вăл сак çинче ларакансене, вара хăй те вĕсемпе юнашар вырнаçрĕ. Ачисем шавлăн пӳрте чупса кĕрсе кайрĕç, кунта аслисем çеç тăрса юлчĕç.

– Куратăп, эсир япăх мар пурăнатăр, ку мана савăнтарать.

– Çурçĕрте ĕçлеме тӳр килнĕшĕн Турра тав тăватпăр. Ав, хаклă машина туянма хал çитертĕмĕр.

– Ăçта ĕçлесе пурăнатăр вара?

– Нижневартовскра, çамрăк çыннăм.

– Эпĕ унта тахçан пулнăччĕ, хулапа юнашар пĕр хваттерлĕ çуртсем лартнăччĕ нефтяниксем валли.

– Халĕ вăл хулана паллама та çук, çĕнелсе самаях улшăнчĕ вăл.

– Мĕн калăн ĕнтĕ, унтан валютăлла нефть уçлаççĕ пулсан.

– Ялта кунтах ĕçлесе пурăнас-тăк, ал-ура хăмписемсĕр пуçне нимĕн те ĕçлесе илеймĕн, – йăмăкĕ карта çине сĕвенчĕ, аллине кăмăлсăррăн сулса илчĕ. – Укçа пулсан ку самана та аван.

Микулай кĕрӳшĕ кулса илчĕ те шӳтленĕ май каларĕ:

– Эппин Лекçей пуçана пирĕншĕн паян спонсор пулать.

– Ан та шутла, пăх-ха ăна, çăварне карма та ĕлкĕрнĕ, – Рита упăшкине çаннинчен туртрĕ.

– Пирĕн хушăри шӳт çеç вĕт ку.

– Пĕлетпĕр сире, арçынсене, сăлтав çеç пултăр лăпăртатма.

– Ан кӳрентер пире, Рита, эпир виçерен тухмастпăр.

– Сирĕнпе, арçынсемпе, урăхла калаçма ниепле те май çук.

Çав самантра алăкра Верук курăнса кайрĕ, аллипе кăмăллăн сулчĕ:

– Мĕн эсĕ арçынсем хушшинче пĕччен ларатăн, Рита, хутшăн хĕрарăмсем патне.

Рита арçынсенчен кăмăлсăррăн уйрăлчĕ, сак çинче арçынсем çеç юлчĕç.

– Аслă Пăла Тимеше кайрăмăр. Пĕр тăван та юлман имĕш унта.

– Кил-çурчĕ, япали-мĕнĕ ырăнтах-и?

– Паллах, ырăнтах, кам тĕкĕнет ялта ют япалана, ĕлĕк çуртсем пачах çăрасăр ларнă.

– Хулара ав хăтăлу та çук, дачăсенче çурт тăррисене сӳтеççĕ.

– Тăнран тухнă çынсем çӳреççĕ пулĕ сирĕн унта.

– Ĕç çуккă хулара, вăт çӳреççĕ çамрăксем çапкаланса, эрех ĕçме таçтан тупмалла вĕт вĕсен укçа.

– Вăт, вăт, аташса кайрĕç хула ачисем. Вĕсене кунта яла ĕçлеме илсе килесчĕ, хăвăрт лăпланĕччĕç.

Сак çинче калаçса ларакан арçынсем патне Верук тухрĕ, питĕнче унăн кулă çиçет.

– Айтăр, мужиксем, кĕрер пӳрте, пĕтĕмпех хатĕрленĕ унта.

Арçынсем тепре чĕнессе кĕтмесĕр ҫарăссăн тăчĕç те çенĕкре пушмакĕсене хывса пӳрте кĕчĕç, сĕтел хушшине ларчĕç. Мĕн çук-ши сĕтел çинче?! Шăрттан, ăшаланă хур ашĕ, сыснапа ĕне ашĕ, тата тем те пĕр хатĕрленĕ хĕрарăмсем. Сĕтел варринче сăра кăкшăмĕ ларать, тин çеç нӳхрепрен ăсса кĕнĕ пулмалла.

Çав вăхăтра тепĕр пӳлĕмрен чи кĕçĕн хĕрĕ Ирина упăшкипе Коляпа тата ачипе тухрĕç, вĕсем савăнăçлăн çиçеççĕ.

– Вăт эпир те вăхăтра çипуçа улăштарма ĕлкĕртĕмĕр.

Микулайăн кĕрӳшĕ Микулай вĕсем çине кулса пăхрĕ.

– Мĕн эсир сĕтел çав тери ерипен хатĕрлетĕр?

Пурте сĕтел хушшине вырнаçса ларсан, Вова хăйĕн сумкинчен шурă эрех туртса кăларчĕ, кĕленчи пысăк, хăлăплă.

– Нижневартовскран килнĕ чухне çав кĕленчене çула май куртăмăр та пире килĕшрĕ вăл, вара илсе ятăмăр.

Тепĕр кĕрӳшĕ, Микулай ĕнтĕ, ура çине тăчĕ те интересленчĕ:

– Пӗлес килет, хӑш хулара илтӗр-ши?

– Эс ӑна аванах пӗлетӗн.

– Эпӗ астумастӑп ӗнтӗ, каҫчӗ ун чухне.

– Тӗрӗссипе каласан, Уралӑн тепӗр енче. – Пурте куҫӗсене чарса пӑрахрӗҫ тӗлӗннипе. Кӗрӳшӗ кӗленчине сӗтел ҫине лартрӗ, анчах ӑна ниепле те кӗленче теме ҫук, графин вӗт вӑл. Арҫынсем пӗр-пӗрин ҫине пӑхса илчӗҫ, нихӑшӗ те пӗр сӑмах та шарламарӗ. Микулай ура ҫине тӑчӗ.

– Ку ҫуртра хуҫа ҫук пулмалла, хамӑнах хуҫаланма тивет. – Вӑл кӗленчене уҫрӗ, кашнине тулли черкке ярса пачӗ. – Айтӑр, тӗл пулнӑ ятпа ӗҫер, сайра пуҫтарӑнатпӑр ку сӗтел хушшинче.

– Вӑхӑчӗ ҫавӑн пек пирӗн саманара, яланах укҫа ҫитмест.

– Пӗтӗмпех укҫа ҫитменнине айӑплама кирлӗ мар, хамӑр та тепӗр чухне вӑр-вар мар пулӗ. Паян Ҫимӗк кунӗ, айтӑр-ха лайӑххи ҫинчен калаҫар.

Пурте тӑчӗҫ, черккисене шаклаттарчӗҫ, арҫынсем тӗппине ӗҫсе ячӗҫ, хӗрарӑмсем вара тутанса ҫеҫ пӑхрӗҫ, кӑмӑл тунӑ пек ӗнтӗ. Микулай хӑй юрататакан салата асӑрхарӗ, вара ҫавӑнтах кашӑкӗпе помидор татӑкне ӑсса илчӗ. Хур какайӗ те тутлӑ пулчӗ, ӑна Микулай нӑтӑрт-нӑтӑрт тутарса кӑмӑллӑнах кӑшларӗ, кӑмӑла кайрӗ ӑна хӑмӑрланиччен ӑшаланӑ кайӑк. Анчах амӑшӗ юнашар ҫуккишӗн кулянчӗ вӑл хӑйӗн тӑван килӗнче. Пӗррехинче амӑшӗ ун патне Шупашкара пынине аса илчӗ, вӑл яланхилле хӑйӗн иккӗмӗш сыпӑкри Манькка ятлӑ аппӑшӗ патне кӗрсе тухмасӑр Шупашкартан каймасть. Микулай ӑна пӗррехинче Шупашкарта йӗркеленӗ Елчӗк районӗн ентешлӗхӗ ҫинчен каласа пачӗ, ӑна вӗсем паллакан Петр Петрович чӗннине пӗлтерчӗ. Вӗсем вара Викторов пӳлӗмӗнче пуҫтарӑнчӗҫ, оргкомитет йӗркелерӗҫ. Унта Христофоров та пурччӗ. Музыка итлесех сывпуллашрӗҫ вӗсем ун чухне.

Тепринче Елчӗк ентешлӗхӗ университет залӗнче пухӑнчӗ. Ҫавӑн чухне Микулай хӑйӗн виҫҫӗмӗш сыпӑкри тӑванне, Володя Добронравова, тӗл пулчӗ, ун ҫинчен кайран амӑшне каласа пачӗ. Ҫакна илтсен, амӑшӗн куҫӗсем ҫуталчӗҫ.

– Айта, ывӑлӑм, Добронравовсем патне хӑнана каяр.

– Анне, малтан шăнкăравласа пĕлмелле, тен, килте çук вĕсем.

– Эппин мĕн çăварна карса тăратăн, шăнкăравла хăвăртрах.

Çавăн чухне Микулайăн хваттерте телефон çуккăччĕ, вăл пускилти Микулай Баринов патне кĕчĕ, вăл та Елчĕк районĕнченех, Кушкă ялĕнчен. Микулайăн йăмăкĕпе Верккапа пĕр парта хушшинче ларнă, Аслă Пăла Тимешре вĕреннĕ. Унпа Микулай туслă пурăннă, çавăнпа Баринов ăна пĕр сăмахсăрах кĕртрĕ. Микулай вара шăнкăравларĕ.

– Алло, итлетĕп.

– Ку эпĕ-ха, Куля. Ак мĕн пирки шăнкăравлатăп: ман пата анне хăнана килнĕ.

– Эппин пирĕн пата та кĕрсе тухатăр çула май.

– Эс аннŭнтен ыйтса пĕл ун пирки.

– Ан та калаç ун пирки, вăл савăнĕ кăна.

Вĕсем хăвăрт тумланчĕç. Анчах Микулайăн мăшăрĕ Галя темшĕн пырасшăн пулмарĕ, вара вĕсем виççĕнех тухса утрĕç: амăшĕ, вăл хăй тата ывăлĕ Володя. Çула май магазина кĕчĕç вĕсем, пысăк торт тата хаклă эрех илчĕç. Пиччĕшĕ унăн Кăнтăр-Хĕвеланăç районĕнче пурăнать, юнашарах чиркŭ ларать, унпа юнашарах – икĕ кирпĕч çурт. Вĕсене подъезд алăкĕ умĕнче Туня кинĕпе Володь хăй кĕтсе илчĕç.

Тĕл пулу пысăк савăнăçа куçрĕ, хĕрарăмсен вĕçĕ-хĕррисĕр калаçу пуçланчĕ. Калаçу хушшинче хăна сĕтелне те йĕркелерĕç вĕсем. Шăкăл-шăкăл калаçса эрех ĕçсе ларнă май кăштах хĕрĕнкеленчĕç арçынсем, Володь хуткупăс тытрĕ аллине, чăваш çеммине тăсса ячĕ. Икĕ карчăк юрă ĕнĕрлеме пуçларĕç, çамрăклăхне аса илчĕç вĕсем, юрлаççĕ те йĕреççĕ хăйсем.

– Çитет сире хуйăхлă юрăсем юрлама, мĕн те пулин савăнăçли çук-им вара?

Карчăксем савăк юрăсем тăсса ячĕç. Аран-аран уйăрăлчĕç вĕт пĕр-пĕринчен. Çул çине тесе, кĕрŭшĕ черккесене тултарчĕ.

– Айтăр ваттисене аса илер, пирĕнтен иртерех кайнă çамрăксене те манар мар.

Пиччĕшĕпе аппăшĕн – Автюкпа Елюкăн – куçĕсем шывланчĕç.

– Шел, пěртен-пěр ывăлăма упраймарăм, çирěм саккăртах çěре кěчě, – хěрелнě куçěсене сăтăрса илчě Автюк. Верук ашшěне лăплантарма пикенчě.

– Атте, эпир миçе хутчен асăрхаттарнă ăна ан ěç тесе, вăл вěт итлемерě пире, хăйěннех турě. Çынсене кӳрентерес темерě те пěрмай кěрěк çěлерě, лешсем ăна хăналасах ячěç, шеллемерěç усал шěвекне, е лавкка эрехне, е килти сăмакунне йăтрěç ун патне. Этемěн чěрине вара тимěртен туман вěт, ăçтан чăттăр вăл çавăн чухлě шěвеке?

Микулай ыттисем курмалла мар Верук аллине сěртěнсе илчě, лешě ăна ăнланчě те шăпланчě. Арçынсем черккесене пушатса сěтел çине лартрěç, хěрарăмсем тутананçи çеç турěç. Верук аллинчи сехечě çине пăхса илчě те чӳречерен тинкерчě.

– Вуникě сехет, тухма вăхăт, ав, çынсем утма та пуçларěç масара.

– Тěрěссине калатăн, Верук аппа, айтăр эпир те пуçтарăнар.

Пурте ура çине тăчěç, кашниех хăйěн вырăнěнче пулчě, çăва çине кайма хатěрленě япалисене алла илчěç. Акă, Микулай та хăйěн сумкинчен çичçěр грамлă хěрлě эрех кěленчине кăларчě.

– Куля, куратăн-и, сана валли усранă ку кěленчене. Çимěкре пěрле ěçетпěр терěм мар-и?

– Хăвăн сăмахна тытрăн, эппин.

– Сан ун чухне ěçме юраман вěт, кěрӳ.

– Ăхă, эпě ун чухне руль тытнă çав, Туçаран тухаттăмăр.

Йěпреç сăрăçисем парнеленěччě ун чухне хăйсен ӳкерчěкěсене, Федоровпа Ларионов. Микулай çав куна аван астăвать, вěсем патне Терентьева, Сурикова, Краснова артисткăсем пынăччě, юрăсем юрларěç, Микулай çавăншăн питě кăмăллă юлчě ун чухне. Ун патне, вěсемсěр пуçне, хула хуçи пулнă Евдокимов тата Анисимов академик пынăччě, чылай тăвансем пулнăччě. Патăръел Туçирен Верукпа Куля пынăччě. Унтан – Сидоров Петр Петрович хăйěн арăмěпе, каçа Сидоров ертсе пыратчě. Унччен колхоз председателě пулнă Евтихеев та пурччě каçра. Вăт вěсем те ěнтě чаплă банкет туса пачěç çавăн чухне.

Кĕтесре Автюк ларнине асăрхарĕ Микулай, шăппăн ларать, пĕр хускану та тумасть.

– Автюк тете, мĕн эсир, айтăр пирĕнпе.

– Эп унта çÿреместĕп.

– Мĕн çынсенчен пăрăнатăн, тата мĕншĕн, пĕлесчĕ манăн?

Хыçалтан Верук çывхарчĕ те шăппăн пăшăлтатрĕ:

– Атте юратмасть унта çÿреме, çĕрĕ ытла ир илчĕ ашшĕпе амăшне, вăн, нумаях пулмасть пĕртен пĕр шăллăм уйрăлса кайрĕ пирĕнтен.

Автюк тете хăйĕн кăмăлне пăсасшăн мар пулмалла, шухăшларĕ Микулай. Вара вăл алăк патнелле утрĕ, çенĕкре туфлине тăхăнчĕ, хăйĕн хура сумкине илчĕ, пуринпе пĕрле урама тухрĕ. Вова хапха умĕнче тăрать, пÿрни çинче машина çăра уççине çавăрса тăрать, вĕсене чĕнет:

– Айтăр, пуçанасем тата пирĕн хăна Куля, пирĕн хаклă хĕрарăмсем, сире çăва çине машинăпа илсе каям.

Ун патне кĕрÿшĕ Микулай пычĕ, аллине унăн хулпуççийĕ çине хучĕ те каларĕ:

– Эпир çуранах утăпăр, пĕр-пĕринпе калаçса пырăпăр, ку канăççăр пурнăçра хăçан тĕл пулăпăр тата?

– Манăн сире сĕнсе пултăр, килĕшесси е килĕшес марри хăвăртан килет.

– Эс, Вова, луччĕ аннепе ачасене илсе кай.

Лекçей кăмăллăн хуравларĕ:

– Эп сире пурне те илсе кайăттăм.

Вара машинăна Ритăпа ачисем тата амăшĕ вырнаçса ларчĕç те тăвалла вĕçтерчĕç.

Верук хăйĕн аслă пиччĕшĕ еннелле çавăрăнчĕ те ăна хакланăн пăхрĕ.

– Сана, Куля, йывăр мар-и çавăн пек хырăмпа çÿреме?

– Нимĕн чухлĕ те, пĕр грамм та, – вăл кача пÿрнин вĕçне кăтартрĕ. – Шăп та лăп арçына кĕрнеклĕ курăнма.

– Мĕн калама пултарăп-ши ун пирки?

– Иртнинче килсен, тахçанах ку пулнăччĕ, санăн Клавье тата Улькка аппусемпе тĕл пулнăччĕ те вĕсем манăн мăнтăр хырăмран кулнăччĕ, хăйсен хырăмĕсем маннинчен те мăкăрăлчăкрахчĕ.

Кĕрÿшĕн Микулайăн тăрăхласарах каланă сасси илтĕнчĕ:

– Хăшĕ-пĕрисем çын умĕнче выртакан турпаса та асăрхаççĕ, хăйсем умĕнче выртакан пĕренене курмаççĕ те вара.

Пурте харăссăн кулса ячĕç, кăштах лăпланчĕç, çулпа пĕр чарăнмасăр утрĕç.

– Ыйтас тенĕччĕ-ха санран, Верук, аппусем мĕнле пурăнаççĕ?

– Ульха тахçачах килсе курман, Волгоградра пурăнатчĕç, кайран кăнтăр çывăхнерех, Краснодар крайне, куçса кайрĕ.

– Кун çинчен пĕлменччĕ эпĕ.

– Клавьен 1-ГПЗ текен шарикоподшипниксем тăвакан завода хирĕç лартнă коммуналлă хваттерсемлĕ çуртне пăснă, ăна Кăнтăр Бутовăра çĕнĕ хваттер панă.

– Шĕкĕр Турра, аван пурăнма пулăшнăшăн вĕсене.

– Куля, эсĕ вĕт Клавьепе пĕр общежитире пурăннă.

– Пулнă ун пекки, Верук, эс ун çинчен аван пĕлетĕн.

– Мĕн чарчĕ сана çав пуян хулара юлма, унта вĕт пĕтĕм çĕршыв тенĕ пек Мускавшăн ĕçлесе пурăнать.

– Манăн пулас арăмăм килĕшмерĕ ун чухне, Йĕпреçре унăн амăшĕ тата йăмăкĕпе пиччĕшĕ пурăнатчĕç, вĕсенчен уйрăласшăн пулмарĕ вăл.

– Ӳкĕте кĕртмелле пулнă ăна, эпир, хĕрарăмсем, тархасланине кĕтетпĕр арçынран.

– Ĕç тухаймарĕ çав ун чухне, тен, çамрăкрах та ухмахрах пулнă.

– Пуйăс тапранса кайса куçран çухалсан, ун хыçĕнчен чупмаççĕ çав.

– Вăл вăхăтра Клавье коммуналкăрах юлчĕ, эпĕ вара пурăнма Йĕпреçе килтĕм.

– Халь ӳкĕнетĕн-и, Куля?

– Çук, тен, тĕрĕс тунă та-и, пĕтĕмпех Турă ирĕкĕнчен килет, вунă миллион çынлă хулара эп çухалса палăрман пулăттăм, кунта вара пурин куçĕ умĕнче, республикăна усă кӳрсе пурăнатăп.

– Тен, тĕрĕс тунă-и эсĕ, Куля.

– Анне те Мускавра баракра пурăннă, халĕ ав бараксем вырăнĕнче АЗЛК завод, унăн та Мускавра юлма тӳр килмен, Йĕпреç ытларах килĕшнĕ ăна.

– Никантăр пичче вара унтах юлчĕ, виçĕ пӳлĕмлĕ хваттер илчĕ, унăн виçĕ ача.

Çакăн пек шăкăл-шăкăл калаçса, вĕсем Исемпеле тĕп çулпа утрĕç. Исемпелте икĕ урам – пĕри, сылтăм енчи урамĕ, кăшт тăвалларах. Çул çинче чылай паллана сына тĕл пулчĕç, вĕсем хушшинче аякри тăванĕсем те пур. Кашнинех пуçĕсене сĕлтсе те сылтăм аллисемпе сулса сывлăх сунчĕç. Кашнинчен пĕр ыйту пулчĕ:

– Пурнăç мĕнле, еплерех сывлăх?

Васкамасăр утрĕç вĕсем çакăн пек малалла. Хăшĕсем килĕсенчен тухаççĕ анчах-ха. Пурте çăва еннелле утаççĕ. Хĕрарăмсем уйрăмах капăр тумпа. Алăпа тĕрленĕ кĕпесемпе. Илемлех çав чăваш тĕрри, çипписем йăлтăркка, куçа савăнтараççĕ хĕрарăмсен тумĕсем, кăкăрĕсем тĕлĕнче чĕнтĕр. Марье ятлă асламăшĕ те (е кукамăшĕ) çавăн пек тумпа çӳретчĕ, аслă ăрурисем пурте çавнашкал тум тăхăнатчĕç.

Çăва çине кĕнĕ чухне Микулай пĕринчен ыйтрĕ:

– Малта унта пысăк лаптăка мĕн карти тытса çавăрнă?

– Ку вăл çĕнĕ çăва, унта икĕ çынна пытарма ĕлкĕрнĕ те ĕнтĕ, пĕри – паллă комбайнер.

– Пурнăç улшăнсах пырать çав.

Çăва çинче паллана çынсем чылай. Вăн, Микулай хăйĕн Сотей ятлă тетĕшне асăрхарĕ, вăл вăр-варскер, яланах шӳтлеме юрататъ, интереслĕ историсем каласа паратъ, анекдотсемпе култаратъ. Микулай астăвасса, Сотей тавра пĕрмай çынсем хĕвĕшеççĕ, ăна çăварĕсене карсах итлеççĕ. Халĕ пĕчченех, пĕртен-пĕр ывăлĕн вилтпрййĕ умĕнче тăлăххăн тăратъ, çӳçĕ кăн-кăвак. Микулай Сотей тетĕшĕ çине сăнасарах пăхрĕ, куçĕсем сӳннĕ, ĕлĕкхилле ашкăнчăклăн ялкăшмаççĕ. Микулай ăна тӳлеккĕн сывлăх сунчĕ.

– А, Куля, эсĕ килнĕ-çке, – вăл каллех ывăннăн пуçне усрĕ, ывăлĕн сăнӳкерчĕкĕ çине тинкерчĕ.

Шупашкарта Микулайпа пĕр подъездра пурăнакан Федоровăн ашшĕ-амăшĕн вилтăприйĕсемпе юнашар никам та курăнмасть, килсе çитме ĕлкĕреймен пулмалла. Евтихеева ашшĕ-амăшĕн вилтăприйĕсем патĕнче асăрхарĕ, кунта арçынсем çеç тăраççĕ.

– А, Куля, юбилейна ЧЗПТ ДКинче ирттернĕ хыççăн курманччĕ-ха сана.

– Ун вырăнне Исемпелте тĕл пултăмăр.

– Çавăнпа кашни çулах килетĕп кунта тăван-пĕлĕшпе, çывăх çынсемпе тĕл пулса чуна йăпатма.

Урăх ăна хăйĕн ыйтăвĕсемпе чăрмантармасăр, Микулай хăйĕн Ванькка пиччĕшĕн вилтăприйĕ патне иртрĕ. Ун картийĕ самаях кивелнĕ, мрамор ваккисенчен тунă палăк тĕксĕмленнĕ. Сăнўкерчĕкри сарă çўçлĕ те кăвак куçлă пиччĕшĕ ун çине пăхать. Ун хыççăн Галя аппăшĕ пулнă, вăл Мускавра Марьинăра пурăннă. Микулай виççĕмĕш ача пулнă çемьере, хăйĕн çĕнĕ çемйипе Шупашкарта пурăнать. Микулайран кĕçĕнрехххи, Валя ятлă йăмăкĕ, кĕлеткипе те, сăн-пичĕпе те каснă-лартнă Микулай пекех, вĕсене йĕкĕрешсем теме те пулать. Вăл Мускавра Галя аппăшĕнчен инçех мар Марьино районĕнче пурăнать. Валяна ăнать Галя аппăшĕпе, лешĕ йăмăкне пулăшсах тăрать. Чи кĕçĕнни, Аля ятли, Йĕпреçре амăшĕпе пурăнать. Пиччĕшĕн сăнўкерчĕкĕ çине пăхса, лешĕ çут тĕнчерен ытла ир, çирĕм пилĕк çултах, кайнишĕн кўреннипе Микулайăн йĕрес килчĕ çак самантра.

Çынсем каласа панипе тата фактсем тăрăх тăванĕсем çакна пĕлчĕç. Çав кун Ванькка арăмĕпе Лизăпа пумилккерен таврăннă пулнă. Упăшки Лисука хăйсен килĕ умне илсе çитерет те хăй лаша тăварма лаша витине каять. Ял вĕçĕнче ăна хирĕç ЗИЛ-157 тĕл пулать. Ялта, паллă ĕнтĕ, хĕлсенче пĕр йĕр çеç. Çул тăрăх ЭСТ-100 трактор хăйĕн çĕççипе пĕр хутчен çеç тухнă, çула сарлакалатман. Машина кузовĕнчен пĕр арçын кăшкăрать:

– Эс мĕн çул варринче тăратăн лашупа, пире малалла кайма чăрмантаратăн!?

– Кăшкăриччен пулăшасчĕ çунана çул айккине тĕртсе хăпартма, куратăн вĕт, çулĕ айккисенчи юртан тарăнрах, лаша хăй туртса хăпартайрас çук çунана!

– Ăхă, эс манпа тупăшасшăн тата! – Вăл монтажкка илсе кузовран сиксе аннă та Ванькана тапăннă. – Эс çавăн пеки? Ак сана! – Ваньккана монтажккăпа ăçтан килнĕ унтан çапма пуçланă, ытларах çĕлĕкĕ хывăнса ўкнĕ пуçне лекнĕ.

Ванькка хирĕç тăрасшăн пулнă, анчах вăйсăрлансах пынă, лешĕ шелсĕр, çиллессĕн хĕненĕ ăна. Кабинăра темиçен сăмакун ĕçсе ларнă, савăнăçлăн ахăрашнă. Кузовран сиксе аннă ўсĕр арçын Ванккана монтажкипе тăраниччен хĕненĕ

те ним пĕлми çынна ял картишĕ çумне юр ăшне пăрахнă, вара вĕсем хăйсен çулĕпе малалла кайнă. Лаша хăйех çитнĕ витене. Çиллес конюх Ванькакана ятла-ятла тăварнă ăна. Ванькапа кун пекки нихçан та пулманччĕ тесе шутланă хăй. Ирпе ирех фермăна ĕне сума каякан дояркăсем асăрханă юр ăшăнче выртакан Ванькакана. Ăна çавăнтах пульницана илсе кайнă. Унта вăл тăна кĕмесĕр эрнерен Мускавран килнĕ Куля тетĕшĕн аллинче тенĕ пек вилет. Лешĕ, аякран килнĕскер, Ваньккан пульницари вырăнĕ çумне пырса ларнă та ăна аллинчен тытнă.

–Мĕн пулнă сана, Ванькка?

Хурав вырăнне хăрăлти сасă çеç тухнă. Чирлĕ çын Куля тетĕшĕ еннелле пуçне пăрнă та, ăна кĕтнĕ тенĕ пек, вилнĕ. Вилене каснă хыççăн тухтăрсем каланă:

– Пуçне тĕпренех ватса пĕтернĕ, чĕри çирĕп пулнăран кăна ку таранччен пурăнма пултарнă вăл.

Çав вăхăтра Микулай шăпах Йĕпреçрен яла пынă пулнă. Амăшĕпе Куля тетĕшĕ йĕрсе ларнă. Микулай та чăтайман, вăл та куççульне тăка пуçланă. Ваньккан арăмĕ Лисук вара шурса кайса тăнран кайса ÿкнĕ. Леш арçынне кайран вунпилĕк çуллăха тĕрмене лартнă. Вăл, шăнкăравран шăнкăрава çити тенĕ пек, пĕтĕм срокне ларса тухнă, типĕтнĕ вуллă пек имшер пулнă, çур çултан хăй те вилнĕ, совесть асаплантарнă ĕнтĕ ăна.

Лисук çире пур хĕрарăм пулнă. Роза ятлă хĕрĕ те алăран анман-ха, вăл ак кĕçех ывăл çуратса парать, ăна ашшĕ ятне параççĕ. Ашшĕ пекех çивĕч ача, икĕ шыв тумламĕ пекех пĕр сăнлă. Лисук иккĕшне те хăех пăхса ÿстерчĕ, ура çине тăратрĕ. Чыс та мухтав ăна уншăн.

Вăт çавăн пек кун-çул килсе тухрĕ пиччĕшĕн, аса илме те йывăр. Микулайăн чĕри чиксе ыратрĕ. Виле тăпри патне урăх никам та пымарĕ. Вăл пĕчченех пуçне усса тăчĕ Ваньккан вилтăприйĕ умĕнче.

Йĕри-тавралла пăхкаласа, ерипен, васкамасăр Наçтаç аппа пычĕ, унпа юнашар тетĕшĕн, Ваççан, пĕрремĕш арăмĕ, аллинче шурă пирпе усă курнă çыхă. Вĕсен тăванĕн вил тăприйĕ юнашар, картисем те, мрамор тĕпренчĕкĕсенчен тунă палăкĕсем те пĕрешкелех. Анчах вĕсен палăкĕ çинче виçĕ сăнÿкерчĕк. Иккĕмĕш сыпăкри кукашшĕ вăрçа кайнă,

унтан вилнĕ хутне ярса параççĕ, Смоленск çывăхĕнче вилнĕ тесе çырнă унта. Нумаях пулмасть аппăшĕсем хăйсен ашшĕн Никотимăн вил тăприйĕ патне кайса килчĕç, унтан пĕр ывăç çĕр илсе таврăнчĕç.

Никотима Смоленскпа Калуга облаçĕсен чиккинче пытарнă имĕш. Иккĕмĕш сăнўкерчĕкĕ, иккĕмĕш сыпăкри асламăшĕн, вăл ытларах пурăнчĕ. Микулай ăна аван астăвать, вăл питĕ ырă кăмăллăччĕ, яланах мĕнпе те пулин тутлипе хăналама тăрăшатчĕ. Вăл хăйĕн ачисене ура çине тăратрĕ, вĕсене пĕлў илме пулăшрĕ, халĕ вĕсем чăваш интеллигенчĕсем. Виççĕмĕш сăнўкерчĕкĕ тетĕшĕн Павăлăн, вăл Санькка шăллĕпе пĕр сăнлă, уйрăмах Павăл Демидовпа йĕкĕрешсем пекех. Павăл тетĕшĕ Пăлара шыва кĕнĕ пулнă, ăнсăртран ăна авăр туртса кĕртет те çавăрма пуçлать. Вăл хăранипе сахал мар шыв çăтнă. Ăна пиччĕшĕсем çырана туртса кăларнă. Вара вăл чылай вăхăт вырăн çинчен тăраймасăр вилет. Кунта вĕсен тăванĕсенчен вилнисем пурте выртаççĕ; паллах, инçетри Смоленск патĕнче выртакан Никотимсăр пуçне, унта вăл фашистсемпе çапăçса, Тăван çĕршывне хўтĕлесе паттăррăн пуçне хунă.

Çăва çинчи пĕтĕм халăх пĕр тĕлте кĕпĕрленсе тăрать, пачăшкăна кĕтет. Кĕçех вăл машинăран тухса çăва варринелле утрĕ, унта пысăк хĕрес умĕнче чарăнчĕ, хăйне мĕн кирлине курăк çине кăларса хучĕ. Микулай, Наçтаç аппа, тата Ваççа тетĕшĕн арăмĕ пĕр вырăнтах тăчĕç, ниçта та утмалла мар вĕсен, çаврăнса тăмалла çеç, вара пачăшкă вĕсен умĕнчех пулать. Лешĕ тўрех кĕлĕ вулама тытăнчĕ, кайран хыттăн юрласа ячĕ. Халăх унпа пĕрле юрларĕ, çăва çийĕн чун канăçлăхĕшĕн юрă юхрĕ. Унтан пачăшкă кадилăпа тĕтĕрсе çаврăнчĕ, тутлă шăршă сарчĕ. Кĕлĕ вĕçленсен, халăх тăванĕсен вилтăприйĕсем тăрăх саланчĕ. Пирĕн Жирновсем аслашшĕсемпе асламăшĕсен, кукашшĕсемпе кукамăшĕсен тăприсем патĕнче пухăнчĕç. Кунтах пиччĕшĕсем: Микулайпа мăшăрĕ Марье, Ваççапа мăшăрĕ тата Петĕр выртаççĕ. Хĕресĕсем çĕрсе пĕтнĕ ĕнтĕ, кунта уçланкă пулса тăнă. Ĕлĕксене кунта çĕр е ытларах тăван пухăннă. Халĕ, ав, вăтăр çынна яхăн çеç, ăна та пулин аран-аран пухăнчĕç паянхи куна. Чылайăшĕ сўрĕкленчĕ, уйрăмах

çамрăксем, вĕсемшĕн тăванла чунсем темех мар пек туйăнаççĕ, кунта вăл пĕрре пăхсах курăнать.

Шупашкартан хăйпе пĕрле илсе килнĕ печенисене, канфетсене, пылак шыва кăларчĕ Микулай сумкинчен. Эрех кĕленчине кăларса лартма тăхтарĕ вăл, мĕншĕн тесен ватăрах тăванĕсем кашнинчех ятлаççĕ ăна уншăн. Иртнинче те çавнашкалах пулчĕ. Вăл халĕ аптăрса тăчĕ. Çавах та Микулай эрех кĕленчине кăларса лартрех. Инкĕшĕсем çавăнтах кăмăлсăррăн мăкăртатма пикенчĕç. Микулай арçынсенчен кунта чи асли пулнă, тетĕшĕ Сотей çине ыйтуллăн пăхрĕ. Лешĕ куçне хĕссе илчĕ, пуçĕпе сĕлтрĕ, хăвăн ĕçне тăвах терĕ ĕнтĕ. Микулай кĕленчине уçрĕ, эрехе черккене яра-яра хĕвеле хирĕç çаврăна пуçларĕ. Тăванĕсенчен йĕркеленнĕ çавра варринче сарса хунă пир çинче тĕрлĕ апат-çимĕç, хула кучченеçĕсем, кашнинех алли çитмелле тутанса пăхма. Карчăксем аллисене сула-сула эрехрен пуçĕсене пăраççĕ, куçĕсене тартаççĕ, курайманççĕ вĕсем çав усал шĕвеке. Çамрăкрах хĕрарăмсем çапах та тытса параççĕ черккене, тутисемпе чăпăрт! туса тутанса пăхаççĕ пĕрер сыпкăм, вара каялла тыттараççĕ Микулая. Арçынсем вара тĕппипех ĕçеççĕ. Микулай иккĕмĕш çаврăм тума шутларĕ. Ку хутĕнче арçынсем те ĕçме килĕшмерĕç, черккене аллисемпе каялла тĕкрĕç.

– Пĕр хут хисеплерĕн, çитет те пулĕ ĕçсе, – пуçĕсене пăрчĕç вĕсем те.

Эрехĕ вара çур кĕленчерен кăшт ытларах юлчĕ. Микулай çухалса кайрĕ, унпа мĕн тумаллине пĕлмерĕ, илсе каймастăн вĕт каялла киле. Ку вара халăхри питĕ япăх тĕшмĕшле паллă. Хăйсен йăхĕн тĕп тымарĕсем патĕнче, Микулайăн кукамăшĕн Марьен, кукашшĕн Микулайăн тата пиччĕшсен Васлейĕн, Петĕрĕн вилтăприйĕсем умĕнче, асăну йăлине ирттерсен, хăйсен çывăхрах тăванĕсен тăприсем патнелле саланчĕç, вĕсене асăнса хисеплес терĕç. Микулай хăйĕн Ванькка пиччĕшĕ патне тавăрăнчĕ. Пĕчченех пулчĕ вăл кунта, палăкăн сентре пекки çине темиçе канфет хучĕ. Пĕр черкке эрех ĕçем-и терĕ, анчах пĕччене аван мар пек туйăнчĕ. Пиччĕшĕн сăнӳкурчĕкĕ çине пăхса илчĕ, вара черккене эрех ячĕ те Ваньккан тăпри çине тăкрĕ. Çав вăхăтра иккĕмĕш сыпăкри аслашшĕн Васлейĕн пĕр хушаматлă тăванĕ иртсе пыратчĕ. Микулай ăна чĕнсе илчĕ.

– Асăн манпа пиччеме, – черкке тултарса лешне тыттарчĕ.

– Пирĕн те, Микулай, кунта тăванăмăрсем Жирновсем пухăнаççĕ, – çур черкке сыпса парса вăл юнашарти вилтăприн картийĕ патне васкарĕ.

Микулай черккене тултарчĕ те, пиччĕшĕпе ĕçнĕ пек, черккене ун еннелле тăсса кăтартрĕ, вара тĕппипех ĕçсе ячĕ.

Сылтăм енчен иккĕмĕш сыпăкри тетĕшĕпе инкĕшĕн вилтăприйĕсем тĕлĕнчен, сасăсем илтĕнеççĕ. Хĕрĕсемпе кинĕ илсе килнĕ апат-çимĕçне вилтăпри купи çине хунă, ун тавра лараççĕ. Вĕсем çумне вĕсен аслă аппăшĕ Еланьхутшăнчĕ. Унăн ывăлĕ Микулай Шупашкарта Микулайпа пĕр районтах пурăнать. Сăнĕпе вăл амăшĕ пекех, икĕ шыв тумламĕ евĕрлĕ. Микулайăн виççĕмĕш сыпăкри пиччĕшĕ, хулара унăн хăйĕн пĕчĕк фирма. Еланĕн тепĕр ывăлĕ Павăл Микулайăн çĕре кĕнĕ Павăл тетĕшĕ сăнлă. Вăл Çĕнĕ Шупашкарти макарон фабрикин генеральнăй директорĕ. Еланĕн виççĕмĕш ывăлĕ Славик кунтах, «Победа» колхозăн председателĕ. Анчах темшĕн-çке вĕсенчен пĕри те кунта çук, çителĕклĕ пурăнăçпа пурăнаççĕ пулин те. Çитменнине, службăри машинăсемпе «Волгасемпе» пулма пултараççĕ-çке.

Юнашарта пуçтарăннисенчен Микулая пĕр карта çеç уйăрать. Вăл вĕсем патне куçрĕ. Микулай пăхнине туйса пулĕ Наçтаç аппа пуçне çĕклерĕ, куçĕсем лăпкăн пăхаççĕ.

– Ирт, Микулай, пирĕн пылак шыва тутанса пăх, акă конфетсемпе печенисем, пылпа икерчĕ, асăн ман аннепе Павăл пиччеме, аттене Никодима та ан ман, вăл кунта выртмасть пулин те, эпир ăна кунтах тесе шутлатпăр.

Наçтаç аппа кучченеçсем тытнă икĕ аллине те Микулай еннелле тăсрĕ. Вăл икĕ конфетпа икĕ печени тата пыл сĕрнĕ икерчĕ илчĕ, вĕсене çавăнтах çисе ячĕ те пĕр стакан пылак шыв ĕçрĕ. Вара хăйĕн кучченеçне кăларчĕ те черккене яма пикенчĕ.

– Ан та сĕн ку йĕрĕнчĕке, пирĕн анне ĕçмен ăна.

Хĕрарăмсем пуçĕсене çиллессĕн каçăртрĕç. Микулай хăвăртрах каялла сумкине чикрĕ кĕленчене. Виçĕ хĕрарăм, икĕ аппăшĕ тата инкĕшĕ, каллех лăпланчĕç. Шăппăн калаçăвне малалла тăсрĕç вĕсем, пурнăçра пулнă лайăххисене, иртнĕ кунĕсене аса илсе ларчĕç.

Микулай каллех хӑйӗн аслӑ пиччӗшне Ваньккана аса илчӗ. Исемпелте вӗсен туйӗ пулнӑ чухне пӗтӗм ял хӑналанчӗ, малтан вӗсен килӗнче, кайран ялти кашни тӑванӗн килӗнче, ҫавӑн пек йӑла ӗнтӗ чӑваш ялӗсенче, кашни тӑванӗ хӑнана чӗнсе кӗртме тӑрӑшать. Вӗт мӗнле тӑванла ҫыхӑнусем пулнӑ ӗлӗкрех чӑваш ялӗсенче. Халӗ сахал тӗл пулатӑн пулӗ ун пеккине. Микулай тепӗр хут пӑхса илчӗ пиччӗшӗн сӑнӳкерчӗкӗ ҫине, вара сумкине илчӗ те картаран тухса калинккене хупрӗ. Ҫав вӑхӑтра шутларӗ: укҫа тупӑнсан картана ҫӗнетмелле, пачах йӑшӑннӑ, ниме юрӑхсӑра тухнӑ. Микулай черетпе малалла утрӗ. Вӑл йывӑҫ хӗрес патне ҫывхарчӗ, ун ҫинче хушаматпа ҫуралнӑ-вилнӗ вӑхӑт ҫеҫ пулнӑ. Кунта Нинук аппа, амӑшӗн йӑмӑкӗ, выртать. Вӑл качча тухмасӑрах, пӗчченех пурӑнчӗ ҫӗр ҫинче. Ун вырӑнне тетӗшне Куляна, ҫемьери чи кӗҫӗннине, ура ҫине тӑратрӗ. Халӗ тетӗшӗ Куля Мускавра пурӑнать, унӑн арӑмӗ, Рита инке, сахал килсе ҫӳрет, ӗлӗксене упӑшкипчен час-часрах килсе ҫӳрекенччӗ. Микулай кунта Ҫимӗке юлашки хут килсен, инкӗшӗ Рита та пулчӗ, питӗ кӑмӑллӑ хӗрарӑм. Нинук аппа шӑллӗн Автюкӑн ачисене пӑхса ӳстерчӗ. Юлашки хут Нинук аппана Микулай Исемпеле килсен курнӑччӗ.

– Вӑт, Куля пурнӑҫа пурӑнса ирттертӗм, хӑть пӗр ача та пулин ҫуратмалла пулнӑ.

– Эсир мӗн, Нинук аппа, мӗн чухлӗ ача пӑхса ӳстертӗр.

Ун чухне кӑштах тунсӑха путрӗ аппа, чун ыратӑвӗпе калаҫрӗ.

– Тӑван чуна туяс килет, хамӑн вартан тухнӑ ачама ачашласа ыталас килет, вӑт ку манӑн юн пулнипе савӑнас килет. – Чунне ҫын туймаллах ыраттарса калаҫрӗ Нинук аппа. – Хама кӑмӑла кайнӑ арҫынпа вӑрттӑн та пулин ҫыхӑнмаллах пулнӑ.

Нинук аппана нимӗн каласа та лӑплантарма пултарайманшӑн питӗ кулянчӗ Микулай, ӑна чунӗ-чӗрипе шеллерӗ. Чун кӑшкӑрӑвӗ пулнӑ пулмалла ун чухне инкӗшӗн. Мӗнпе те пулин лӑплантарас шутпа Микулай аллине унӑн ҫурӑмӗ ҫине хучӗ те куҫӗнчен ӑшшӑн пӑхрӗ, вара лӑпкӑн каларӗ:

– Мӗн тӑвӑн ӗнтӗ текех, Нинук аппа, шӑпи ҫавнашкал килсе тухрӗ пулсан.

Аппа пĕр чĕнмесĕр куç хăрпăкĕсене антарчĕ.

– Нина аппа, эсĕ пурпĕрех паллă йĕр хăварнă, çурт пуçĕнче, ав, сан ятупа хăма çакнă, тыл ĕçченĕ, хисеплĕ колхозница тенĕ унта.

Аппа татах та тунсăхлăрах, сÿрĕккĕн каларĕ:

– Çапах та ку урăххи, эп ĕмĕтленни пурнăçланмарĕ ман кун-çулта.

Нинук аппа шăппăн куççулĕ юхтарса ларнă веранда кĕтесĕнче. Кунта вăл çуллахи кунсенче апат хатĕрленĕ газ плити çинче, хăй апатланнă. Çавăн хыççăн Микулай тек ăна курман. Тăванĕсенчен илтнĕ тăрăх, инкĕшĕ Нинук хăнана кайнă пулнă, унта такамсем ăна вăйлă хăратнă. Çавăн хыççăн ун чĕри хавшама пуçланă, вара вăл кĕçех ялан-лăхах куçне хупать.

Нинук аппăшĕн вилтăприйĕ умĕнче кăштах тănă хушăра вăл ăна лайăх енчен çеç аса илме пултарчĕ. Микулай хĕрес çине темиçе печенипе конфетсем хучĕ. Ку ретре Жирновсен чи çывăх тăванĕсем выртаççĕ. Юнашарах пĕчĕк хĕрес ларать. Ку – Люда йăмăкĕн тăпри. Микулай астăвать-ха шăллĕпе Сашукпа Пăлара пулă тытнине. Сĕреке вырăнне вĕсен тюльрен тунă чÿрече карриччĕ. Ăна ăçтан тупнине вĕсем хăйсем те астумастчĕç. Шывран сĕрсе кăларнă пулăсене Люда пуçтаратчĕ, витрене яратчĕ. Хăрах алли чирлĕ пулнине уяса тăмастчĕ. Вăл ачаллах чирлесе вилчĕ. Унăн айăпсăр сăнне аса илсен, Микулайăн ирĕксĕрех куççулĕсем юхса анчĕç, вăл вĕсене хăвăртрах тутăрпа шăлса илчĕ, çынсем асăрхасран шикленчĕ пулас. Люда тăприн купи çÿллĕ те мар, вăрăм та мар.

Юнашарах кăшт аяларах шăллĕн Санькккан вилтăприйĕ. Ун тавра иккĕмĕш сыпăкри виçĕ йăмăкĕ, вĕсен упăшкисем тата инкĕшĕ Елюк лараççĕ. Кĕрÿшĕ Микулай пысăк кĕленчерен ыттисене эрех ĕçтерет. Микулайăн сăнÿкерчĕкĕ айĕнче тутăхман шуç тимĕр çине «Водка Жирнов» тесе çырнă. Ăна алă çулхи юбилейĕнче тусĕсем, Йĕпреçри ÿнерçĕсем, Игорь Ларионовпа Валентин Федоров парнеленĕччĕ. Ун чухне кĕрÿшĕ Микулай ĕçмен, руль умĕнче пулнă, вĕсен машинăпа каялла Патăрьел районĕнчи Туçана таврăнмалла пулнă.

– Эп сана districtларăм вĕт кĕленчене Çимĕк валли усрăп тесе.

Вăл вĕсен ушкăнĕ патне пынă Микулая черкке эрех ярса пачĕ. Микулай та хăйĕн юлнă эрехне кăларчĕ. Кунта пуçтарăннисене хăналаса, вăл аран-аран «Акатуй» кĕленчине пушатрĕ, ĕçтерсе çаврăннă чухне кашнине сывлăх сунчĕ. Ăна та хăналарĕç, вăл кашнинчех кăштахшарăн çеç сыпса пачĕ. Кайран кунта пуçтараннă пĕтĕм ратне-тăвансемпе шăкăл-шăкăл калаçса хутшăнасси, пĕр-пĕрне хăналасси çăва хапхи патĕнче тăсăлчĕ.

Ерипен çынсем çемйи-çемйипе килĕсене саланма пуçларĕç. Хăшĕсен урăх çĕре каймалли те пулчĕ. Инкĕшĕ Елюк мăнукĕсемпе машинăна ларчĕç, вĕсемпе кĕрӳшĕ Коля та ларчĕ. Унăн арăмĕ, Микулайăн йăмăкĕ, пĕр класра вĕреннисем патне тĕлпулăва кайрĕ. Вĕсем кашни çул Çимĕк кунĕнче пĕр вырăнта тĕл пулма калаçса татăлнă. Икĕ Микулай тата Веркка сĕвек çулпа çуранах утрĕç. Хирĕç тĕл пулакансене пурне те сывлăх сунса, пĕр-ик сăмахпа та пулин калаçса илчĕç вĕсем. Хĕрарăмсем пурте, уйрăмах аслăраххисем, капăр тумсемпе, чăваш тĕрри куçа илĕртет, кашнин кĕпи хăйне май çĕленĕскер, ĕлĕкхи майлăскер, кашнинех ку искусство, чăваш ăсталăхĕ теме пулать. Урăх тĕнчене лекнĕн туятăн хăвна, ун пеккине урăх ниçта та тупаймăн.

Хирĕç шурă тĕслĕ улттăмĕш «Жигули» килет, капочĕ вара темшĕн хура. Вĕсен тĕлĕнче вăл чарăнчĕ, тусан çĕкленчĕ.

– Фу, ку çитмерĕ тата.

Пурте пуçĕсене çулăн тепĕр еннелле пăрчĕç. Машинăран пиччĕшĕн хĕрĕпе Розăпа пиччĕшĕн арăмĕ тухрĕç.

– Ой, сывлăх сунатăп, Куля тете, – кулса ячĕ айăпсăр сăнлă Роза.

– Мĕншĕн вăхăтра пулмарăр çăва çинче?

Куçне çĕрелле тĕллесе, Роза васкавлăн каларĕ:

– Пире каçарăр ĕнтĕ, Куля тете, – вăл Микулай кĕрӳшĕпе Веркка еннелле çаврăнчĕ. – Эсир те пире каçарăр çакăн пек килсе тухнăшăн. – Роза Долгов хушаматлă упăшки çине пăхса илчĕ. Лешĕ ним шарламасăр руль умĕнче ларать. – Пĕтĕм айăпĕ манра, Елчĕкре ĕç вырăнĕнче хама хушнине вăхăтра тăваймарăм.

Малалла Микулай кĕрӳшĕ тухрĕ.

– Эппин сывпуллашмастпăр сирĕнпе, эпир сире кĕтетпĕр,

ҫăва ҫинче пулнă хыҫҫăн тем пулсан та пырăр-пырăр пирĕн пата.

– Юрĕ, ăнлантăмăр сире, атте патĕнче пулнă хыҫҫăн пыратпăр.

Вĕсем икĕ еннелле уйрăлса кайрĕҫ.

Иртнĕ хутĕнче кунта килсессĕн Микулай пиччĕшĕн ывăлне Ванькканa курнăччĕ.

– Юл пирĕн патра ҫĕр каҫма, аттен шăллĕ юлмасть-ши вара?

– Кăмăлăм пулсан та юлаймастăп, ĕҫрен пĕр кунлăха кăна ыйтса килнĕ.

– Санăн яланах ҫавăн пек, Куля тете, кунта килес-тăвас пулсан, икĕ-виҫĕ кунлăха ыйтмалла пек.

– Тепринче шута илĕп, Ванькка.

Хăй вара кашнинчех пĕр кунлăха ҫеҫ килет. Акă ҫитрĕҫ те киле, халĕ вăл тетĕшĕн Автюкăн шутланать. Кил картишĕнче кĕрӳшĕ Коля тимĕр кăмака чĕртсе янă.

– Урамра шăрăх, эсир вара мĕн тума шутланă?

– Ирпе пĕлтертĕм-ҫке пурне те, хăшĕ-пĕришĕн тепĕр хут калам эппин.

– Ăҫтан пĕтĕмпех астуса юлăн, тем ҫинчен те калаҫнă та.

– Эппин итле, шашлык ăшалатăп качака путекĕн какайĕнчен.

Кĕрӳшĕ Микулай кăмăллă юлчĕ ку хыпарпа, тутине хăлхисем таран сарса кулса ячĕ.

– Эппин манм'ан иртнинче сана мĕн каланине.

Микулай тĕлĕннипе пуҫне сулчĕ.

– Эпĕ вара пĕрремĕш хут илтетĕп, ҫитменнине, хамăн пурнăҫра нихҫан та тутанса курман качака путеккин какайĕнчен хатĕрленĕ шашлыка.

– Ак курăн-ха, ӳкĕнмĕн ун пирки.

Микулай айккинелле пăрăнчĕ те кăмака мăрйи ҫине пăхрĕ.

– Эс мĕн, Коля, куратăн вĕт, мăрье вите ҫийĕпе юнашарах?

– Аванах куратăп.

– Ăнсăртран хĕлхем вĕҫсе тухсан, мĕн пуласса пĕлетĕн-и?

Коля вара таçталла аяккалла пăхса тăрать.

– Эсир мĕн, çăмăлттайсем, иккĕмĕш хут пушар кăларасшăн-им?

Кĕрӳшĕ Коля сӳрĕккĕн хулпуççийĕсене вылятса илчĕ.

Пушарĕ Санькка вилнĕ хыççăн тухнăччĕ, халăхра калана пек, инкек пĕччен çӳремест. Унăн ывăлĕ, пилĕк çулхи Петюк, шăрпăкпа выляна пулнă. Утă пулнă сарайĕнче шăрпăк чĕртет те урайне пăрахать, утă патрон тарĕ пек çавăнтах хыпса илет, пушар пуçланать.

Кăнтăр апачĕ пулнăран, килтисем пурте каннă. Çемье çыннисем хăйсем çеç тухма ĕлкĕреççĕ, кил-çурт пĕтĕмпех çунса каять. Тĕппипех çуннă теççĕ ун пек чухне. Сунькка кинĕ куçса кайнă кунтан икĕ ачипе. Мĕнле кăмăллă та ырă хĕрарăмччĕ Сунькка. Микулай кунта килсен Санькkапа сĕтел хушшинче ларнă чухне Сунькка пыратчĕ те вĕсем патне вашаватлăн ыйтатчĕ:

– Мĕн лартса парас тата сире, Куля тете?

– Мĕн кирли пурте пур пек сĕтел çинче.

Тăпăрчăпа та симĕс суханпа тунă хуран кукли пырса лартатчĕ, питĕ тутлăччĕ вăл, ăçтан килĕшмĕн çиме. Ăçта пурăнать-ши халĕ Сунькка тесе шутлатчĕ Микулай. Паян тин пĕлчĕ çавна. Вăл, имĕш, Канашра пурăнать, унта иккĕмĕш хут качча тухнă. Ун пек хĕрарăм нихçан та пĕтес çук: ăслă, ĕçчен. Санькkапа Сунькка кинĕ пилĕкĕсене тӳрлетмесĕр чĕркуççи çинче ĕçлесе сухан ӳстеретчĕç пахчара.

– Кун пек чухне тăнлă-пуçлă пулмалла, айтăр кăмакана айккинерех илсе лартар.

Кăмакара вутă çунатчĕ, унран хĕрӳ паратчĕ. Ун айĕн лум чиксе, икĕ Микулай йăтма пикенчĕç. Мăрйи вăрăм пулнăран унталла-кунталла сулланать кăмака мăрьепе пĕрле.

– Коля, эс тыт хăть мăрйине!

Лешĕ йĕри-тавралла чупкаларĕ, пĕлмерĕ вĕри мăрьене мĕнле тытмаллине.

– Пӳртрен илсе тух алса тулĕ, мĕн кунта пустуй кускалатăн?! – Кĕрӳшĕ Микулай ятлаçса илчĕ, айккинелле сурчĕ. – Мĕнле пурăнаççĕ кăна, пурне те вĕрентес пулать, пĕчĕк ачасем тейĕн.

Микулай шухăшласа тавçăрса илчĕ: кусем ÿсĕртерех-сем, кăмакана чиперрĕн тытаймасан, хăшĕ те пулин пиç-се кайма пултарать. Çав вăхăтра Коля алса тулĕ илсе тухрĕ.

– Атьсемри, айтăр паян хускатар мар кăмакана, тем туса хурăпăр тата.

Çакăнпа Микулай канăçланнă пек пулчĕ, Коляпа кĕрÿшĕ Микулай унпа хапăлласах килĕшрĕç. Микулай Коля ен-нелле çаврăнчĕ те çирĕппĕн каларĕ:

– Сăмах паратăн-и, Коля, эпир кайсан, теprинче ку кă-макана çивĕтрен аяккарах куçарса лартатăн тесе?

– Паллах, ăнлантăм ĕнтĕ, тăрăшăп эс сĕннине пурнăç-лама, – килĕшсе пуçне сĕлтрĕ, айккинерех куçса тăчĕ. – Паян çил çук, саккас панă пекех, лăпкă çанталăк тăрать.

Йăмăкĕсем кил хушшине сĕтел йăтса тухса лартрĕç, апат-çимĕç хатĕрлерĕç. Сĕтел хушшинчен арçынсем мĕнпе ап-паланнине сăнарĕç.

– Килĕр, арçынсем, пирĕн сĕтел хушшине, мĕн айкки-нелле-майккинелле пăрăнатăр, ниепле те ăнланма май çук, мĕн сиксе тухнă сирĕн унта?!

Кĕрÿшĕ Микулай кăмăлсăррăн аллине сулчĕ çеç вĕсем еннелле.

– Малтан ĕçне тумалла, кайран канлĕн ларма та юрать, – вăл Коля еннелле çаврăнчĕ. – Ăçта санăн какаю, Коля?

– Пысăк кастрюльте юрма таврашĕпе хутăш.

– Тавай илсе кил хăвăртрах, мĕн хăвăн килÿнте хăна пек тăратăн?

Коля çуллахи кухньăна васкарĕ, унтан пысăк кастрю-ле мекĕрленсе аран-аран йăтса тухрĕ, хăй йывăр йăтнă-ран курпунланнă. Кастрюль хуппине уçса пăхса кĕрÿшĕ Ми-кулай сăнран улшăнчĕ:

– Кун пек каймасть, Коля, ритуал ирттернĕ пек тумал-ла ку ĕçе, тĕплĕн те кирлĕ пек.

– Мĕн килĕшмĕрĕ тата, пуçана, пурне те кирлĕ пек турăм, юрмапа хутăштартăм?

– Качака путеккин какайĕ çемçе, ăна пачах урăхла ха-тĕрлемелле.

– Шашлык валли какая мĕнле хатĕрлеççĕ, çавнашка-лах турăм.

– Килте майонез пур-и, Туля?

– Халех холодильнике пăхатăп, – вăл хăвăрт алăкран кĕрсе çухалчĕ.

Микулай патне Вова кăсăкланса пычĕ.

– Ăнланмастăп сана, пуçана, мĕн тума кирлĕ майонез?

– Вăл какая татах та çемçетет.

Çав вăхăтра Коля пÿртрен пысăк банкăпа майонез йăтса тухрĕ, тăхăрçĕр грамм туртать пулĕ, Шупашкарта туса кăларакан «Цимус» майонез пулчĕ ку.

Кĕрÿшĕ Микулай мойонеза тĕппипех кастрюле силлерĕ, аллисемпе какая пăтратма пуçларĕ, темиçе хутчен чĕлхи çине хурса тутанса пăхрĕ, юлашкинчен ĕçне кăмăллăн вĕçлерĕ.

– Шампурсем ăçта, Коля?

– Кунта пускилĕн пур вĕсем, эп халех.

Чăнах та, чылай кĕттермерĕ хăйне Коля, чипер майласа çыхнă пĕр çупкăм шампур илсе килчĕ.

– Пускиле кăштах ярса памалла пулĕ, унсăрăн аван мар пулса тухать.

– Сăмах та çук.

Тулли стакан эрех йăтса Коля урама тухрĕ, тепĕр пилĕк минутран таврăнчĕ, лăпкăн айккинерех кайса тăчĕ, ыттисем мĕн тунине сăнарĕ. Микулай ун патне пычĕ те ыйтрĕ:

– Мĕн вут-хĕмĕ сан унта, ытла начар вăл ку çапăпа, кăмакана чĕртме çеç вăл, пире вара хĕрÿ тума чылай кăвар кирлĕ.

– Мĕн тума пултарайăп-ши? – хулпуççине темиçе хут хускатса шăппăн каларĕ вăл.

– Вутă сыпписем пур-и сан?

– Газ кĕртессе шанса, кăçал хатĕрлемен, пĕлтĕрхи пулмалла.

– Ăçта выртаççĕ?

– Лупас айĕнче, шаршанта.

– Тавай илсе кил типĕреххисене, суйлама ан ÿркен.

Коля хăвăрт пĕр çĕклем хурăн вутти илсе тухрĕ. Кăмака хуппине уçса, вăл унта икĕ сыпăк пăрахрĕ те каялла хупса хучĕ.

– Э –э, кĕрÿш, ун пек ĕç каймасть.

– Мĕн килĕшмест, ăнланма çук сире.

– Кун пек эпир кунĕпе та шашлык ăшалаймăпăр.

– Килĕшмест пулсан, хăвăр майлăр.

Микулай кăмака хуппине айккинелле илсе хучĕ, вутă сыпăкĕсем хушшинче сывлăш туртăмĕ вăйлăрах пултăр тесе, сыпăксене тачă вырттармасăр, вĕсене пĕр кăмака тултарчĕ, кăмака хуппине витмерĕ, тĕтĕмĕ кунтан та тухтăр терĕ, унсăрăн мăрье ытла та ансăр.

– Ма ун пек тăватăн, Куля?

– Вутă хăвăртрах çунса пĕттĕр те шĕл кăварĕ чылайтарах пултăр.

– Халĕ ĕнтĕ ăнланмалла, ик хут иккĕ тенĕ пекех, – çамкине шăлса илсе лăпкăн сывласа ячĕ Коля.

– Хм, хм, хм, – ÿсĕрсе илчĕ Вова, ăна ыттисем тимлеччĕр тесе, вара ăшă кулăпа аллисене сĕтел еннелле тăсрĕ. – Ĕнтĕ, арçынсем, вутă çунса пĕтиччен сĕтел хушшине те ларма юрать.

Чи хисеплĕ вырăнта, сĕтел варринче, Елюк инкепе Автюк тете ларăççĕ, вĕсем тавра хĕрсем. Хăйĕн çăмăл аллипе Вова черккесене тултарчĕ. Арçынсем ĕçрĕç, пирĕнтен уйрăлса кайнă ырă çынсем çинчен калаçу пуçланчĕ вĕсем хушшинче. Хĕрарăмсен вĕсен хăйсен интересĕ: ăçта мĕн-мĕн хак тăрать? Микулай пĕр вырăнта лăпкăн ларма пĕлмерĕ, пĕрре кăмакари çулăм çине пăхрĕ, тепре – какай çине. Çакна кĕрÿшĕ Микулай асăрхарĕ, çаннинчен туртрĕ.

– Лăплан, аташăм, пурне те ĕлкĕрĕпĕр, ав мĕн чухлĕ халăх кунта, вăхăчĕ те тĕрĕсех килсе çитĕ.

Микулай ун çине пиччĕшĕ çине пăхнă пек пăхса илчĕ.

– Айтăр луччĕ кăмăла хăпартассишĕн ĕçер.

– Эпĕ санпа килĕшме хатĕр.

Çав самантра хĕрарăмсем сасă пачĕç:

– Тен, сире пулăшмалла, арçынсем?

– Шашлык хатĕрлесси арçын ĕçĕ, хĕрарăм аллине килĕштермест, – каларĕ тахăшĕ мăнкăмăллăн.

– Курăпăр-ха, мĕн пулса тухĕ сирĕнтен.

– Пурте йĕркеллех пулать, пÿрне ĕмме тивет ак шашлык хыççăн.

Çакăн хыççăн арçынсем çине пăхмасăр хăйсен калаçăвне тăсрĕç хĕрарăмсем. Ку вăхăталла хĕвел те çурт хыçĕнче курăнми пулчĕ, кăнтăрлахи шăрăх чакрĕ. Кăмакари çулăм та сÿне пуçларĕ.

– Хамăр ĕçе тытăнма та вăхăт ĕнтĕ, Микулай.

Микулай сĕтел хушшинчен тухрĕ, ун кĕрӳшĕсем Микулайпа Коля тухрĕç, вĕсенчен Вова та юласшăн пулмарĕ.

– Эс ăçта тата, Вова, лар вырăнна.

– Эпĕ те сире пулăшасшăн.

– Эсĕ паян пирĕн эрехпе хăналакан, вăт çав ĕçе хушăхушăран ан ман.

Вова кĕрӳшĕ Микулай çине кăмăлсăррăн пăхрĕ.

– Тархасшăн пирĕнпе аллуна ан варала, урăх ĕçре вĕсем санăн вăр-вар.

Виççĕн пĕр-пĕринпе тупăшса тенĕ пек какай татăкĕсене шампурсем çине тирме пуçларĕç, ĕçе хăвăрт вĕçлерĕç. Çав вăхăта вутă сыпăкĕсем те шĕл кăвар пулчĕç. Микулай кăвара турчкапа тӳрремĕн туса майларĕ, çиелтен темиçе шампур хучĕ. Какай чашкăра пуçларĕ, Микулай пĕр вĕçĕм шампурсене çаврăнса тăчĕ. Хĕрлĕ какай хăвăрт тĕксĕмленчĕ. Микулай ун çине кăштаххăн-кăштаххăн хĕрлĕ эрех сапса тăчĕ. Пичĕ хăйĕн ăшăран хĕрелчĕ. Пĕрремĕш хатĕрлеве Микулай сĕтел çине пырса хучĕ.

– Эсир, хĕрарăмсем, шашлык тутанатăр-и?

– Фу тата, качака путеккин какайне çиме, унсăрах çыртмалли çителĕклĕ сĕтел çинче, – хĕрарăмсем кăмăлсăррăн тутисене мăкăртрĕç, пуçĕсене пăрчĕç çисе курман какайран.

– Кун пек пулсан, урăх ăшаламастпăр шашлыка, пире эрехпе ку та çитет. – Микулай Коля еннелле çаврăнчĕ. – Пирĕн дамăсем тутисене пăчăртарĕç пулсан, ытти какайне, Коля, эпир кайсан, ху ăшаласа çи.

Хăйĕн ăшăнче Коля кулса çеç илчĕ, вара сасăпах каларĕ пуçне килнĕ шухăшне:

– Юрĕ эппин, маншăн ку япăх мар, рехетленĕп-çке пĕрре.

Вăл кастрюле хупрĕ те çуллахи кухньăна, чăвашла каласан, лаçа, илсе кĕртсе лартрĕ.

– Пире, арçынсене, ку та çителĕклĕ, шампурсене тирсе лартнисем те пур-ха халлĕхе.

– Айтăр шашлыкшăн ĕçер, – сĕнчĕ Вова кăмăллă пичĕ çинчи ыра кулліпе.

Шаклатрĕç черккесемпе, сыпса ячĕç эрехне, вара шашлык çиме пуçларĕç арçынсем. Питĕ тутлă тата кăштах çунса хăмăрланнă какай, юрма тавращĕ ăна татах та çемçетсе

тутлăлантарать, çаварта ирĕлеççĕ тейĕн какай татăкĕсем. Куçĕсене хупсах рехетленеççĕ арçынсем. Хĕрарăмсем вĕсем çине ăмсанса пăхса ларчĕç, сĕлекисене çăта-çăта пĕр-пĕрин çине пăхса илчĕç вĕсем.

– Арçынсем, парăр-ха пире те тутанса пăхмалăх, пăхатпăр та сирĕн çине, ытла та тутлăн туйăнать какай.

Хĕарăмсем пўрне вĕçĕпе йĕрĕнчĕклĕн пĕрер татăк илсе тутанса пăхрĕç. Вĕсен куçĕсем ялкăшса кайрĕç.

– Пар-ха пире те пĕр турилкке шашлык.

Хĕрарăмсем те кăмăллăн çирĕç качака путеккин какайне. Кĕçех вăл сĕтел çинче пĕте пуçларĕ.

– Коля, илсе тух-ха кастрюле каялла.

– Эп туйнă, пĕлсех тăнă ку какай пурне те килĕшессе.

Халĕ ĕнтĕ Микулай ĕлкĕрсе пычĕ кăна какая ăшалама та турилккесем çине кăларса хума. Какай татăкĕсене шампура тирме ăна ыттисем пулăшрĕç. Çапла пысăк кастрюле пушатрĕç вĕсем. Тетĕшĕ Автюк хăйĕн арăмĕпе шăппăн савăнса ларчĕç ачисемпе сĕтел хушшинче, куçĕсем ялкăшрĕç, çамрăкланса кайнă тейĕн вĕсене. Хушăран иккĕш те ўсĕрсе илеççĕ. Ерипен вĕçленсе пычĕ савăнăçлă хăналану тараватлă сĕтел хушшинче. Сĕтеле пăхса çаврăнса, Микулай тем аса илчĕ те ыйтрĕ:

– Ăçта вара Роза, ман тете хĕрĕ?

– Пĕлместĕп, тем, ку хутĕнче килмерĕç, – куçĕпе çĕрелле пăхса ўкĕнўллĕн каларĕ Веркка.

Микулай сехечĕ çине пăхса илчĕ те канăçсăррăн сĕтел хушшинчен тухрĕ.

– Манăн Шупашкара пуçтарăнма вăхăт, хаклă тăванăмăрсем.

– Мĕн çавăн пекех ир, Куля?

– Куратăр вĕт, каç çывхарса килет, манăн вара ыран ĕçе каймалла, çитменнине, ирех, пилĕк сехетрех, тăмалла.

Кĕрўшĕ Микулай ун патне çывхарса куçĕнчен пăхрĕ.

– Юл, Куля, ыран така пусăпăр, каллех шашлык тăвăпăр, ку хутĕнче юрма таврашне урăхла хатĕрлĕпĕр.

– Шел те, ĕçри телефон номерне хампа пĕрле илмен, унсăрăн пĕр-ик кунлăха отгул ыйтса илме пулатчĕ.

– Проблема çук, халех ăçта кирлĕ унта шăнкăравлатпăр.

– Ку пуш сăмах çеç, çавах вĕт ĕçри телефон номерĕ çук.
– Хăвăн телефон номерне асра тытаймастăн-и вара?
– Ăна пĕлетĕп-ха, пуçлăхсенне астумастăп, ĕçе нумаях пулмасть кăна вырнаçнă.
– Шел, паллах, çакăн пек пулса тухнăшăн.
– Юрĕ-çке, мĕнле те пулин тепринче.
– Вăт, çакăн пек, яланах пуласлăх валли хăваратпăр, – кĕрӳшĕ Микулай кăмăлсăррăн аллине сулчĕ.
– Тепĕр çулта темиçе кунлăха ыйтса килĕп.
Микулай ватăсемпе сывпуллашрĕ, вĕсем малтанхи пекех шăппăн ларатчĕç. Ăна ăсатма икĕ аппăшĕпе вĕсен упăшкисем тухрĕç. Коля юнтарса йĕрекен ачипе юлчĕ. Лешĕ çывăрасшăн пулмалла та, ăна çывăратма йăтса кĕчĕ Коля. Ушкăнпа хапхаран Исемпел урамне тухрĕç.
– Çапах та ман пĕлес килет, мĕншĕн Роза килмен?
– Васкавлă ĕç тупăнчĕ пулĕ, хăйĕн Елчĕкне тухса кайрĕ.
Анчах Микулай ниепле те лăпланаймарĕ.
– Айтăр чуна лăплантарма пиччĕшĕн çуртне кайса пăхар.
Вĕсем урампа темиçе çурт умĕн иртрĕç. Тавралăх ешерет, сад пахчисенчен чечексен тутлă шăрши сарăлать. Исемпел ялĕ лăпкăлăха путнă. Микулай пысăк çурт çине пăхрĕ, ăна вĕсем хăйсем туса лартнă. Çул хĕрринче улттăмĕш номерлĕ шурă тĕслĕ машина ларать.
– Пăхăр-ха, вĕсен техники вырăнтах, эппин вĕсем каймa ĕлкĕреймен.
Микулай савăнăçлăн хăпартланчĕ, уттине хăвăртлатрĕ. Пиллĕкĕн пӳрте кĕрсе тăчĕç вĕсем, пӳрт ăшĕ анлă, тултан ун пекех курăнмасть. Кунта хуçисем тухма пуçтарăннă пулмалла, кашнин аллинче сумка.
– Мĕн эсир, тăванăмăрсем, шашлык çиме пымарăр, эпир сире питĕ кĕтнĕччĕ?
– Вăхăт тупаймарăмăр çав, аннепе тăраниччен калаçас терĕмĕр.
– Ку мĕне пĕлтерет, Роза? Аннӳ патне пĕрмаях килсе çӳремелле, тăван киле манмалла мар.
Иккĕш те çухалса кайрĕç, ним калама пĕлмерĕç, айăплăн пуçĕсене усрĕç.
– Эс мĕн, Микулай, тӳрккессĕн персе ярса тӳрех çын-

сен пичĕсене хĕретен? – Кĕрӳшĕ Микулай вĕсем патне пырса тăчĕ, хăй айăплă пек, кăмăлсăррăн аллипе сулчĕ. – Мĕн туни пурте авана, эсир ан хумханăр, хĕрсем.

Роза амăшĕ çине пăхса илчĕ те шăппăн каларĕ:

– Анне, айта мĕн те пулин хатĕрлер сĕтел çине, тархасшăн, хаклă аннеçĕм.

– Пире нимĕн те кирлĕ мар, эпир сĕтел хушшинчен тухрăмăр çеç.

Микулай ăна аллинчен тытрĕ, ĕçе тытăнасран чарас терĕ.

– Килнĕ çынна хăналамасăр кăларса ярас йăла çук пирĕн.

– Карăнса кайичченех шашлык çисе тăрантăмăр, чĕлхе çинчен тути кайса пĕтмен-ха.

– Куля тете, эсир пирĕн патра сайра пулатăр, ирĕк парăрччĕ сире кăштах та пулин хăналама, тархасшăн.

– Пурнăçĕ йывăрлансах пырать, çавăнпа ытлашшиех тухса çӳреймĕн хăнана.

Кĕрӳшĕ Микулай айккинче кулса тăрать.

– Туятăп, пулать тивĕçлипе, ан чăрмантар хĕрарăмсене, мĕн тума шутланă, çавна тăваççех вĕсем.

Хĕрарăмсем васкавлăн сĕтел хатĕрлеме пикенчĕç. Кĕçех пуян сĕтел хатĕр те пулчĕ. Кинĕ, вĕсем патне пырса, аллисене сĕтел еннелле тăсса кăтартрĕ:

– Ларăр, тархасшăн, пирĕн сĕтел хушшине, мĕнпе пуян, пурте сĕтел çинче, айăп ан тăвăр пире.

– Ытлашши ан сăпайланăр, питĕ чаплă сăй.

Микулай çумне Роза сăпайлăн вырнаçса ларчĕ.

– Мĕн, ку хутĕнче асанне килеймерĕ-им?

– Эс ăнлан, Роза, миçе çулта вăл.

– Эп шутласа пăхнă тăрăх, сакăрвунсаккăра пусрĕ пулмалла.

– Вăт, куратăн-и, ун чухлĕ çул кам пурăнать хальхи саманара, çамрăксем те ав пĕрин хыççăн тепри ăсанаççĕ леш тĕнчене, çав ылханлă эрехех илет çынсен пурнăçне. Калаçăва инкĕшĕ хутшăнчĕ.

– Эп астăвасса, ĕлĕксенче пирĕн Аслă Пăла Тимешре сăра кăна ĕçетчĕç, ăна та пулин уявсенче кăначчĕ, Исемпелсем Кушкăна Акатуя çӳретчĕç, ушкăнĕ-ушкăнĕпе çамрăксем пухăнатчĕç, халĕ вара сахал çын пухăнать.

– Пурнăç чăнах та япăх еннелле сулăнчĕ, ĕненме те çук.

– Пирĕн «Победа» колхоз пĕтĕм Союзпа янăратчĕ, халĕ вара пачах урăхла.

– Айтăр-ха паянхи кун та пулин виçерен тухни пирки калаçар мар.

– Чун ыратать пулсан, тата кама каласа памалла ун пирки?

– Тем чухлĕ калаçсан та хамăр хушăра, нимĕн те улшăнас çук пирĕн пурнăçра, çӳлтисем çавах ăнланас çук халăх хуйхи-суйхине.

Кĕрӳшĕ Микулай сĕтел хушшинче ура çине тăчĕ, пурне те пăхса çаврăнчĕ.

– Айтăр-ха çак çурт хуçине Ванькка тетене асăнар, çавах та ăна пытарни вăтăр виçĕ çул çитрĕ.

Асăну черккине ĕçнĕ хыççăн килнисем кайма пуçтарăнчĕç, килтисен те çула тухмалла.

– Куля тете, эпир сана Елчĕке çити хамăр машинăпа илсе кайма пултаратпăр.

– Эпĕ хаваспах килĕшетĕп, сахалтарах шутлама тивет.

Пурте тулалла туха пуçларĕç. Микулай хăйĕн сумкине тытрĕ. Вăл тем йывăртараххăн туйăнчĕ.

Сумкине уçрĕ те унта тулли банка услам çу курчĕ.

– Тавтапуçах сана, Роза, кучченеçшĕн.

– Ку инкен çăвĕ.

– Ăна та тавтапуç эппин, айтăр-ха сире ыталаса илем çул çине тухиччен. – Лешсем именчĕклĕн пуçĕсене усрĕç. Микулай вĕсене тăванла ыталаса пичĕсенчен чуптурĕ.

– Каллех ыйтма маннă, ăçта пиччен ывăлĕ Ванькка?

– Вăл Мускава тухса кайрĕ.

– Ăна та питĕ курас килетчĕ.

– Ан кулян ытлашши, тепринче курнăçăр-ха.

Савăк кăмăлпа пурте урама тухрĕç. Машинăна ларас умĕн Микулай хулăм сасăпа пурне те пĕлтерчĕ:

– Пурне те сире хĕрĕмĕн туйне кĕтетĕп, вĕсем Шупашкартах çырăнаççĕ.

– Сĕтелне ăçта йĕркелетĕр?

– Машинăсемпе Шупашкар тавра çаврăнсан Йĕпреçе «Чĕкеç» ресторана килетпĕр.

– Пыма тăрăшăпăр, – хуравларĕç çамрăксем, йăмăкĕсемпе кĕрӳшĕсем.

– Сирĕн пымаллах унта, çамрăксемпе паллашатăр хăть, тăванăрсемпе курса калаçатăр.

– Тĕрĕссине калатăн, Куля тете.

– Ывăлăмăрăн туйне пымарăр иртнĕ çулта. Мускавран Рита инке килнĕччĕ ун чухне, маттур хĕрарăм вăл.

– Вăл пирĕн яланах çамрăк. Сире вара, Куля тете, яланах йывăр лекет: туй, çуралнă кун, каллех туй...

Руль умĕнче ларакан Розăн упăшки чăтаймарĕ:

– Эп шутланă тăрăх, эсир мансăр вĕçне-хĕрне çитейместĕр, – вăл машинине чĕртрĕ.

Машинăна ларакансем Исемпелпе сывпуллашрĕç, вĕсем кунтан тем пек каяс килменни сăнĕсенченех курăнать. Çавах та ĕç-пуç вĕсене юталлах туртать.

Иртнинче Микулай амăшĕпе тĕл пулнăччĕ. Вăл Йĕпреçрен килнĕччĕ. Ывăлне курсан, амăшĕ питĕ савăннăччĕ, çамрăкланнă пек туйăннăччĕ. Темшĕн-çке Пăла хĕрне илсе аннăччĕ.

– Вăт çакăнта хĕр-тантăшсемпе чупса çӳренĕ эпĕ, пĕрле ӳснĕ.

Амăшĕ ун чухне ывăлне çывăхри сăрт çине илсе хăпартнăччĕ.

– Çакăнтан кунсерен хурсене шыва хăваланă эпĕ, – терĕ вăл ун чухне.

Кăштах тунсăхласа чăваш юррине юрласа ячĕ, чуна илекен юрăсем пулчĕç вĕсем...

Анне ĕнĕрлени чуна тасатрĕ пулмалла, хама çăмăллăн туятăп, Турă умĕнче эпĕ таса...

# Çăмăлттай



Юлашки вăхăтра Сетнерĕн пуçĕнче пĕр шухăш явăнать: мĕнле ирттермелле çуралнă куна? Мĕн кала та, эрнекун вăл вăтăра кĕрет. Хăй пирки те, хăйĕн пурнăçĕнчи телейĕ пирки те шухăшлать Сетнер. Шутласан, пурте пур унăн: хваттерĕ виçĕ пӳлĕмлĕ, çĕнĕ маркăллă «Жигули» – девятка теççĕ. Хваттерĕнче мĕн кирли пурте пур: сĕтелĕ, пуканĕ, шкапĕ; çара урай курăнмасть – пур çĕрте те палас та кавир. Стенасем çинче те кавирсем. Пурнăç тĕлĕ çеç пулман Сетнерĕн: çемьесĕр пĕччен пурăннă вăл, чунĕ пушă пулнă унăн, вăхăтăн-вăхăтăн пурăнас та килмен.

Çавах та май пур чухне пĕр хĕрарăма та ирттерсе ямасть хăйĕн умĕнчен. Ку тарана çити миçе хĕрарăмпа пулнă-ши вăл – шутне те пĕлмест. Анчах пĕрне те юратман вăл, выльăхла хăйне çеç килентернĕ. Юлашки вăхăтра ун патне Наташа ятлă хĕр çӳре пуçларĕ. Шупашкарти пĕр пысăк производство директорĕн хĕрĕ. Анчах та Сетнерĕн чунĕ пĕртте туртăнман ун патне. Хĕрĕ хитре ĕнтĕ, пукане пекех, тумĕ те пуян. Пуçĕ вара пушă пулнă, ăна тумтир тавраш̆е те илемлĕ япаласем çеç кирлĕ пулнă. Сетнер унпа пĕччен̆ле кичемлĕхрен кăна вăхăта ирттернĕ.

Çуралнă куна çывăх çынсене çеç чĕнме шутларĕ Сетнер: Шупашкарта пурăнакан пиччĕшĕсене, чи аслине Юмана тата ытти пиччĕшĕсене Юхмана, Агивере, Сементере. Пиччĕшĕсем пĕр вырăнта, Новоюжнăй районĕнче, пурăнаççĕ. Вĕсен арăмĕсем иртерех пычĕç, тӳрех кухньăра аппаланма пуçларĕç, тĕрлĕ салатсем хатĕрлеме тытăнчĕç. Кăлпаса, сыр, консерва тата тĕрлĕ çырла тавраш̆не Сетнер маларах хăех хатĕрлесе хунă ĕнтĕ.

Акă тахçантанпах кĕтнĕ эрнекун каçĕ çитрĕ те. Çичĕ сехете хăнасем пуçтарăна пуçларĕç, кашниех пушă алăпа мар. Ырă кулăпа парнесем пачĕç. Сĕтел пуян, хура вăлчапа хĕрлĕ вăлча та пур. Пĕр харăссăн сĕтел хушшине ларчĕç, ăшă сăмахсем калама пуçларĕç, малтан пиччĕшĕсем, унтан инкĕшсем, салам сăмахĕсем чунран тухни туйăнса тăрать. Кĕçех пурте ӳсĕрĕле пуçларĕç, кунта ĕçре ывăнни хăйĕнне тăвать пулĕ. Тĕтреллĕ пуçпа ăса вĕрентме тытăнчĕç. Чи аслă пиччĕшĕ Юман ура çине тăчĕ.

– Эс пирĕн чи кĕçĕнни, сан çулта манăн икĕ ача пулнă, шкула çӳренĕ.

– Мĕнех вара, пичче?
– Мĕншĕн паянхи куна та арăм çуккă санăн? – Вăл пўрнипе маччана тĕллесе кăтартрĕ. – Ку йĕркеллĕ мар, пирĕн йăхра ун пекки пулман.
– Халĕ ирĕклĕн пурăнаççĕ çамрăксем.
– Куратпăр-ха эс пĕччен пулнине. – Юман ун еннелле çаврăнчĕ. – Кала пире, хăçан авланатăн эс, шăллăм?
– Пичче, тен, тепринче калаçăпăр?
– Çук, пур пиччўсем те халĕ кунта.
– Мĕн, вĕрентме право пур тетĕр-им?
– Эс пирĕнтен ан вăтан, эпир сана ырă сунасшăн кăна.
Юман сăмахĕсем хыççăн пуçланчĕ вĕрентў, унта Юхма та, Агивер те, Сементер те хăтшăнчĕç, мĕн кăна каламаççĕ, кўрентерўллĕ сăмахсем те калаççĕ хушăран. Чунне хытарса, чăтать Сетнер, хĕп-хĕрлĕ ларать сĕтел хушшинче. Чи аслă пиччĕшĕ Юман каллех ура çине тăчĕ.
– Санăн арăм çукки, Сетнер, лайăх мар пулăм пурнăçунта. – Вăл шăллĕсем çине пăхса илчĕ. Лешсем унпа килĕшсе пуçĕсене сĕлтрĕç. – Ку курăнсах тăрать, паян вăн пĕчченех тертленнĕ.
– Пурте йĕркеллĕ, эсир маншăн ан кулянăр, пиччемĕрсем.
– Эс пире тўрремĕн кала, çăмăлттай.
– Тен, тепринче ăса вĕрентме ятарлă килĕр?
– Çук, çук, эпир халь пурте пĕрле пухăннă.
Текех чăтма пултараймарĕ Сетнер, «Атăл» тесе çырнă этикеткăллă кĕленчене тытрĕ те тулли стакан эрех ярса пĕр сывламасăр ĕçрĕ. Хаяр шĕвек пуça пырса çапрĕ, вăл хăюлланчĕ.
– Так, çуралнă куна паллă тăвăпăр-и, е пĕр мана ăс паратăр?
– Пăхăр-ха ăна, пире, аслă пиччĕшĕсене, итлесшĕн те мар.
Инкĕшĕсем сĕтел хушшинче чăмлама пăрахрĕç, мĕншĕн тесен Юман хыттăн калаçа пуçларĕ.
– Эп çемьере чи асли, аçу вырăннех пулатăп.
– Ăна эпĕ ăнланатăп, ун пирки никам та тавлашмасть.
– Сана йывăр чухне кам сана хваттер илме пулăшнă?
– Эсир, пиччемĕрсем, ун пирки сăмах çук, эсир пĕрле

пухса патăр укçа, хваттер туянма тӳрех çитрĕ.

– Куратăн вĕт, мĕнле аван пулса тухрĕ.

– Эп сире кайран тавăрса панă вĕт укçисене.

– Ĕçĕ унта мар, панă-и е паман-и, чи кирли коллективлăхра, – Юман пуçне каçăртрĕ. – Тăван пиччӳн чавси юнашар пулсан, нимĕн те хăрушă мар. – Юман кăшт чакса тинкererех пăхрĕ Сетнер çине. – Эс тăр-пĕччен пулнă пулсан, паян кун та общежитире пурăнмаллаччĕ.

– Кирлĕ мар мана уншăн ӳпкелеме, тен, эсир, тăватă пичче, мана машина илме пулăшни пирки те сăмах пуçарăр?

– Çук, пирĕн сана ытти арçынсем пек арăмупа та ачусемпе курас килет, хамăр йăха эсĕ те тăстăр тетпĕр-çке, ахаль пурăнса ан ирттертĕр пурнăçа тетпĕр.

– Мĕн тума кирлĕ мана çемье, пĕри хваттере тирпейлесе тăрать, тепри кĕпе-йĕм çуса парать, ыттисем ахаль килсе çӳреççĕ, хăйсемех кравать çине выртаççĕ. – Сетнер хăйпе кăмăллăн кулса ячĕ. – Мĕн кирлĕ тата мана ку пурнăçра, кала, тархасшăн, пичче, мана авланмасăрах лайăх пурăнма, эп чĕнмесĕрех, хăйсемех килсе кĕрсе выртаççĕ вырăн ăшне.

– Куратăп-ха, эсĕ ытлашши иртĕхсе кайнă ку йĕркесĕр авăрта çав аскăнчăк хĕрарăмсемпе.

Те ытлашши çилленнипе, те ĕçнĕ эрехе пула, Сетнер тек чăтса лараймарĕ, ура çине сиксе тăчĕ те хаяррăн кăшкăрсах пăрахрĕ:

– Ăнланманскерсене тепĕр хут калатăп, савăнма килнĕ пулсан – савăнăр, нимĕнле чару та çук!

Пурте ун çине тĕлĕнсе пăхрĕç, анчах вăл хăйĕн сăмахне малалла тăсрĕ:

– Тархасшăн, ыйтатăп, хăвăр вĕрентĕвĕре тепринче малалла тăсăр, – Сетнер пурин çине те пăхса илчĕ, Шупашкарта кăларакан минераллă шыва икĕ сыпкăм турĕ, вара кăкăрне çапсах каларĕ: – Паян чуна уяв кирлĕ, манăн çуралнă кун вĕт, вăл вара çулталăкра пĕрре кăна пулать. – Вăл каллех пурне те пăхса çаврăнчĕ, сăнĕ лайăхмарланчĕ, сăмахĕсем йĕплĕн тухрĕç. – Кама килĕшмест, ав алăк урати, никам та тытса чарас çук.

Сетнер çавăн пек хаяррăн каласа хунишĕн кӳренсе, пĕрин

хыççăн тепри сĕтел хушшинчен тухса алăк еннелле утрĕ. Юлашкинчен вăл пĕччен тăрса юлчĕ, ăна кичем пулса кайрĕ, чунĕ пушанса юлчĕ. Çуралнă кунпа савăнас вырăнне ак мĕнле пулса тухрĕ, çывăх тăванĕсем ăна пăрахса кайрĕç. Хăйĕн те чăтăм çитмерĕ çав. Хăйне лăплантарас шутпа вăл чăваш юррисене ячĕ, чуна пырса тивекен кĕвĕллĕ юрăсем. Сетнерĕн кăмăлĕ татах та пăсăлчĕ. Мĕн туса хутăм эпĕ, шухăшларĕ вăл хăйĕн ăшĕнче, хăйне хăй ятларĕ, каçару пулас çук тесе шутларĕ. Сĕтел хушшинче вăл чылайччен пĕр вырăнтан тапранмасăр ларчĕ, ку хутĕнче «Акатуй» ятлă эрехе ĕçрĕ, шыв ĕçнĕ пекех, ним туймасăр ĕçрĕ. Эрехĕ тата темшĕн пуçа каймасть. Пиччĕшĕсем умĕнче кăтартнă намăса ниçта чикме пĕлмерĕ вăл. Юлашкинчен сĕтел хушшинчен тухрĕ те вырăн ăшне кĕрсе выртрĕ, вара çавăнтах çывăрса кайрĕ, хывăнма та вăй çитмерĕ унăн, чипер тумпах выртрĕ.

Кĕркунне кăçал нумая тăсăлчĕ, хĕвеллĕ те типĕ çанталăк тăчĕ. Уйсемпе пахчасем тахçанах пушаннă ĕнтĕ. Суйласа илнĕ уйсенче кĕрхи çĕртме сухи пырать. Хуласенче туйсене çулталăкĕпех тăваççĕ пулсан, ялсенче ытларах кĕркунне пуçланаççĕ вĕсем, умлăн-хыçлăн пулаççĕ. Кĕркунне сĕтел çине кăларса лартма тĕрлĕ апат-çимĕç çителĕклĕ. Ĕç те уйсенче пурне валли çук. Кĕлетсем кăçал аван пулнă тухăçпа тулнă. Хĕвеллĕ çанталăк тăнипе кĕрхи каçсем те ăшă. Çил çукран кайăксемпе чĕрчунсем кăна мар, çынсем те савăк. Çынсем савăнса ытараймаççĕ, пичĕсем çинчен кулă каймасть, пурте пĕр-пĕрне ырă тăвас кăмăллă. Тавралăх илемленчĕ, йывăççем сап-сарă та тĕрлĕ хитре тĕслĕ.

Сетнерĕн вара пĕтĕмпех урăхла çăмăлттайла пурнăçĕнче. Мĕншĕн тăван пиччĕшĕсем ăнланасшăн мар ăна? Акă вăл вăранса кайрĕ, пичĕ çине хĕвел шевли ӳкет. Ĕнер вăл çывăрмалли пӳлĕмре чӳрече каррине карма маннă. Савăнмалла ĕнтĕ пуринпе пĕрле кун пек кĕркуннепе. Пурте ниме юрăхсăр Сетнерĕн çăмăлттайла пурнăçĕнче. Хăйĕн ĕнерхи çуралнă кунне аса илчĕ те лайăхмарланчĕ Сетнер, чунне кушаксем чаваларĕç. Çапла шухăшласа выртнă май пуçне çакăнас шухăш пырса кĕчĕ, çакăн та – пĕтĕм ĕç вĕçленет, пиччĕшĕсем умĕнче курнă намăс та пĕтет. Хăйсен кĕçĕн шăллĕне тĕп тунăшăн хăйсене намăс асаплантартăр. Ăс-

пуçĕ урăхла та шутлаттарать Сетнере. «Мĕн патне çитме пулать капла, ухмаха тухман вĕт. Ĕнер ĕçнĕ эрех шухăшлаттарать пулĕ ун пек. Ай-ай, урăх ĕçес марччĕ пĕр харăсах ун чухлĕ. Çакнашкал усал шухăш нихçан та кĕменччĕ пуçа. Сыхла, Турă, ăстăн пăтранса кайрĕ ку ĕçкĕпе». Вăл тăрса турăшсем умĕнче пуççапрĕ. Чунĕ çавах пăтранчĕ, хăйне вăл япăх туйрĕ, çăварĕнчи сĕлеки йĕрĕнчĕклĕ. Сетнер холодильникрен «Букет Чувашии» ятлă сăра кăларчĕ, ăна хăвăрт ĕçсе ячĕ, вăл питĕ тутлă пек туйăнчĕ, пĕтĕм ÿт-пÿ тăрăх саланчĕ. Пуçĕ çăмăлланчĕ, анчах чĕри канăçа пĕлмерĕ, ĕнер пиччĕшĕсемпе çавăн пек пулни канăç памарĕ чĕрине, пĕр вĕçĕм хумхантарчĕ.

Аптăранă енне Сетнер Елчĕке кайма шутларĕ. Унта аслашшĕпе асламăшĕн, ашшĕпе амăшĕн йăх йăви, кивĕ çурт. Ăна тахçанах лартнă пулнă. Унтанпа ĕмĕр иртнĕ пулин те, вăл халĕ те çирĕп. Хыр пĕренесене сăмала юхтарман Йĕпреç вăрманĕнчен турттарса килнĕ. Çурт янăрать, сăмали халь те типсе çитмен, теççĕ çынсем.

– Тăван кил!

Ашшĕпе амăшĕ иккĕшех пурăнаççĕ çуртра. Пилĕк ывăлтан пĕри те юлман килте, пурте Шупашкарта. Пенсие тухсан таврăнатпăр киле, шÿтлеççĕ вĕсем, ватлăх кунĕсене çĕр çинче ĕçлесе ирттерĕпĕр теççĕ, тăван кил пушă тăмĕ ун чухне текелеççĕ. Йывăртарах кунсенче амăшĕпе ашшăне, тăван килне аса илеççĕ. Ачалăха иртгернĕ вырăн чунĕсене ăшăтать. Вара темиçе çул çамрăкланнăн туяççĕ вĕсем хăйсене тăван сывлăшпа сывласа, тăван çĕр çинче утса çÿресе, ашшĕпе амăшĕн юратăвне туйса.

Сетнер холодильникне уçрĕ, унта туллиех тĕрлĕрен апатçимĕç. Вăл пиччĕшĕсемпе виçĕ кун уявласшăнччĕ çуралнă кунне. Намăс курас мар тесе çителĕклех хатĕрленĕ çимеллине. Сумкăна ашшăпе амăшне килĕшекен тутлă та тутлăхлă апат-çимĕç хучĕ. Тумбочка çинчен машина уççисемпе кирлĕ документсем илчĕ, тем шухăша кайса пĕр вырăнта хытса тăчĕ. Çук, кунашкал юрамасть, çитменнине, руль умĕнче, кăштах лăпланмалла. Вăл уççисемпе документсене каялла хучĕ, тарăннăн сывласа канса илчĕ. Унтан сумкине хулпуççирен туртрĕ, ключсемпе документсене илчĕ те тухса утрĕ, урамра гаража çул тытрĕ. «Мĕн пулчĕ паян:

шухăшлатăп пĕр майлă, ĕçне тăватăп урăхла», – тĕлĕнчĕ вăл, вара çаврăнчĕ те троллейбус чарăннă тĕлелле утрĕ. Кунта халăх нумаях марччĕ. Троллейбус çитсе чарăнсан, вăл пуринпе пĕрле шала кĕчĕ, хыçалти чӳрече патне тăчĕ, кунта сумкăна хума меллĕ. Тепĕр чарăнура çынсем татах кĕчĕç, Сетнере те сырса илчĕç. Кондуктор çынсене сирсе хыçалалла хĕсĕнсе пычĕ, çула май билетсем сутрĕ. Сетнер нимĕн те асăрхамарĕ, хыçалта пĕр хускалмасăр лăпкăн тăчĕ. Хăнăхнă вăл çывăхри лавккана та хăйĕн машинипе çӳреме. Хăйĕн транспорчĕсĕр ниçта та пĕр утăм та туман. Хăнăхнă хамăн машинăна, каланă вăл çынсене.

– Машина, хĕрарăм пекех, ачашланине те пăхнине юрататть.

Çавăнпа унăн машини яланах кăлтăксăр пулнă.

Кондуктор хыçала хĕсĕнсе çитрĕ.

– Çул çӳремелли билет кăтарт е тӳле.

– Ку троллейбусра мĕн чухлĕ тӳлемелле?

– Эс мĕн, çамрăк çын, уйăх çинчен ӳкмен пулĕ те? – Хĕрарăм кулса ячĕ, ăна урарaн пуçĕ таранах сăнаса пăхрĕ. – Иртенпе хак ӳсменччĕ-ха, эп сменăна кĕнĕ чухне виçĕ тенкĕ тăратчĕ.

Сетнер пăртманине кĕсйинчен кăларчĕ те унтан вунă тенкĕ кăларса кондуктора тыттарчĕ.

– Ăнланмастăп эпĕ ку тулккăсăр çынсене.

– Кӳрентермесĕр ĕçне ту, унсăрах пуç ыратать.

Кондуктор билетпа каялла памалли укçана Сетнер ывăçĕ çине печĕ, пĕр вак укçи чутах ӳкмерĕ, вăл ăна аран тытса ĕлкĕрчĕ. Кондуктор тепĕр арçын патне пычĕ, каллех çавна майлă ыйтрĕ:

– Ну, кăтарт çул çӳремелли билетна, мĕн тунката пек тăратăн?

– Минутлăха тăхтăр-ха, сумкăна урайне лартам, куратăр вĕт, ниçта та пушă вырăн çук ăна лартма.

– Хăвăртрахларт, кунта сан пеккисем нумай. – Вăл сĕмсĕррĕн пăхрĕ арçын çине.

– Сире вĕрентмен-и вара çынсемпе чипер калаçма?

– Кашнин умĕнче çавăн чухлĕ тăмалла-и манăн? – Вăл аллипе пассажирсем çине кăтартрĕ. – Вăн эсир миçен, кашнинех тĕрĕслемелле кунта.

– Пурне те тĕрĕслерĕр пек, урăх тĕрĕслемелли никам та юлмарĕ, лăпланăр, тархасшăн.

– Манăн мĕн тумаллине мана вĕренте пуçларăр мар-и?

– Эсир пуринчен те тӳрех сăптăрасшăн. Ман шутпа, троллейбуссенче чи чухăн халăх ларса çӳрет.

– Эп хамăн плана пурнăçлатăп, унсăрăн мана преми памаççĕ.

– Темĕнле лару-тăрура та яланах çынлăха упрама пĕлес пулать.

Кондуктор кăмăлсăр сăн-питпе хăйĕн вырăнне кайса ларчĕ.

Троллейбус чарăнчĕ те, алăк хăвăрт уçăлчĕ. Автовокзала çитнĕ те иккен. Сетнер урам урлă каçрĕ. Кунта, автовокзала кĕнĕ çĕрте, таксистсем тĕрлĕ сасăпа кăшкăраççĕ.

– Кама такси, кама такси?!

– Камăн Канаша каймалла?!

– Çĕмĕрлене кайма вырăн пур! – кăшкăрать виççĕмĕшĕ.

Сетнер вĕсенчен пĕри патне пырса тăчĕ.

– Мĕн чухлĕ ыйтатăр Елчĕке çитме?

– Ултçĕр тенкĕ, ку вăл унталла та кунталла, мĕншĕн тесен каялла пассажир тупăнмасан та пултарать, çитменнине, паян шăматкун.

– Ытла та хакла ларать, йӳнĕрехпе юрамасть-и?

– Çук, аллă тенкĕ çеç йӳнетме пултаратăп.

– Капла каймасть, манăн та васкамалли çук, кăнтăрлаччен пĕрех киле çитетĕп.

Сетнер вокзала кĕчĕ, расписанипе кăсăкланчĕ, тепĕр пилĕк минутран автобус тапранса каймалла. Елчĕкех илсе çитерет. Вăл хĕрринчи касса патне кайрĕ, унта халăх сахалччĕ.

– Каçарăр, тархасшăн, кĕçех ман автобус тапранса каять.

Никам та пĕр сăмах та хирĕç калакан пулмарĕ, хăшĕ-пĕрисем кăмăлсăрланни çеç палăрчĕ. Сетнер пĕчĕк чӳречене пĕшкĕнчĕ.

– Хĕрача, Елчĕке çити пĕр билет парăр-ха?

– Шел пулин те, пĕр билет та çук, çамрăк çын.

– Мĕншĕн-ши?

– Паян шăматкун, пурте яла васкаççĕ, кам канма, тăванĕсене курма, кам ашшĕ-амăшне пулăшма, çитменнине, ирхи рейс яланах тулли.

– Ай-ай, пĕрремĕш хут автобуса тухрăм тăван киле каяс тесе. – Вăл кассăран уйрăлса утрĕ. – Пит аван хăвăн мишинупа çӳреме, нимĕнле проблема та çук.

Сетнер пуçне пăркаласа илчĕ, автобуспа яла çӳреме маннă вăл, çамрăк чухне кашни эрне вĕçĕнче çӳренĕ теме пулать Елчĕке. Паянхи кун укçа кăна тăкакла. Кирек епле турткалансан та, вăхăт çитмест, канмалли кунсене хĕрсемпе те ирттермелле. Çавнашкалах вăхăт иртсе каять, ашшĕпе амăшĕ кашни канмалли кун пăхаççĕ пулĕ кантăкран, кĕтеççĕ пулĕ ывăлĕсене. Сетнер тĕп алăкпа тула тухрĕ, платформăра тăракан автобус патне пычĕ. Шофер кабинăра ларать, темĕнле хут вулать, тен, ведомость пулĕ, миçе билет сутнине тĕрĕслет ĕнтĕ. Алăк кантăкне антарнă.

– Шеф, вĕçне çити пĕр çынна илсемччĕ?

– Пултараймастăп, пĕр вырăн та пушă мар, хамăн НЗна та йышăннă, çук вырăн.

– Ĕлĕксене илекенччĕ, халĕ вара мĕншĕн илместĕр?

– Тăвай çывăхĕнче авари пулнă хыççăн тăрса пырас текенсене илме чарнă.

– Тен, илетĕр, мĕнле те пулин иртсе кайăпăр?

– Татăклăн калатăп, çук. Контролерсем вокзалтан тухнă çĕрте, Кукеçре, Çĕрпӳре, Комсомольски умĕнче тĕрĕслеççĕ.

– Ĕçсем япăх иккен, ку авари хыççăнах пулĕ, кайран манăçа тухĕ вăл, ĕçсем малтанхи пекех кайĕç, транспорт çитмест пулсан.

– Куна тĕрĕс калатăн, çамрăк çыннăм.

Кăмăлĕ хуçăлчĕ Сетнерĕн, ĕнер ĕçни те пуçне ыраттарать. Вăл пĕр тĕллевсĕр малалла утрĕ, урисем хăйсем ярса пусрĕç. Вăл каллех автовокзал умне çывхарчĕ. Алăк умĕнче пĕр çын кăшкăрать:

– Камăн Канаша каймалла, «Газельте» пĕр вырăн пур.

– Малтанах ăнланмарĕ Сетнер, кăштахран тин ăнкарса илчĕ те çав арçын патне пычĕ.

– Арçын, ăçта санăн «ГАЗЕЛЬ»?

– Билет туян та кайăпăр, ав кунтах, урамрах, сутаççĕ билетне васкакансене.

Билет туяннă чухне Сетнер чухласа илчĕ те кассиртан ыйтрĕ:

– Хĕрача, Елчĕке маршрутка çӳрет-и?

– Çук, ку халлĕхе экспериментла рейс, Канаша çеç çӳреççĕ маршруткăсем.

– Питĕ шел, хĕрача.

Билет туяннă пулин те унăн хĕнĕ вĕçленнине ĕненсех каймарĕ-ха вăл. Чи хыçалти вырăн лекрĕ ăна. Ларма питĕ кансĕр, йĕри-тавра сумкăсем. Ытлашши çаврăнкалаймăн. Аран-аран çавах та вырнаçса ларчĕ вăл, сумкине чĕркуççи çине лартрĕ. Юлашкинчен «Газель» вырăнтан тапранчĕ, такăр мар вырăнсенче сиктере-сиктере илчĕ. Машина хăвăрт вĕçтерсе пырать, ку Сетнере килĕшрĕ. Хăйĕн «девяткипе» çӳреме хăнăхнăскер, «Газельте» ларнине туймарĕ те вăл. Кĕçех Канаша çитрĕç. Кунта Елчĕке каякан вырăнти автобус тăрать. Вăл шофер патне пычĕ.

– Вырăн пур-и?

– Пур, виççĕ те.

– Питĕ аван.

– Чуп хăвăртрах кассăна, черетсĕр туян билетне.

– Тархасшăн, мансăр тапранса ан кай.

Сетнер тӳрех касса чӳречине укçа чикрĕ, унтан ун аллине билет тыттарчĕç. автобуса вăхăтра çитрĕ вăл, контролер шофера ведомость тыттарчĕ, пассажирсен билечĕсене тĕрĕслерĕ.

– Çамрăк çын, сан билетна палăртман, пар-ха ăна кунта, – вăл ведомость вĕçĕнче билет номерне çырса хучĕ.

– Тинех каятпăр, – çăмăлăн сывласа ячĕ Сетнер хăйĕн вырăнĕнче, тарланă çамкине тутăрпа шăлса илчĕ те тутăрне кĕсйине чикрĕ.

– Хамăн машинăпа кун пек кăткăслăхсем пулас çукчĕ.

Юнашар ларакан карчăк ун çине пăхса илчĕ те питĕ хăвăрт хуравларĕ, сăн-питрен ун пек вăр-вар теес çук:

– Эпир пĕрмай пĕрремĕш автобуспа килетпĕр, эпĕ вĕт тăпăрчă, çу илсе килсе сутатăп. – Хăйĕн пысăк хура сумкине уçса кăтартрĕ, вăл пушă ĕнтĕ.

– Мĕн чухлĕ укçа тухса каять килсе кайма?

– Эпĕ ĕç ветеранĕ, тӳлевсĕр çӳретĕп, мĕн ачаран колхозра ĕçленĕ, пăхăр-ха манăн алăсене.

Вĕсем имшер те шăнăрлă, юн тымарĕсем курăнса тăраççĕ, пӳрнисем кушăрхаса çурăлса пĕтнĕ.

– Паян хăвăрт сутса пĕтертĕм, эпĕ хăш вăхăтра килессе пĕлеççĕ илекенсем, – карчăк мăнаçлăн пуçне каçăртрĕ. – Манăн аван юр-вар, чи пахи – çуллă, нимĕнпе те хутшăнтарман, пĕтĕмпех таса, Елчĕк районĕнче тӳпене мăкăрлантаракан пĕр завод та çук, сывлăш таса.

Карчăк мăнкăмăллăн ларать, акă вăл тутăрне майларĕ. Темĕнле йывăр пулсан та, çакăн пек вăр-вар карчăксем пирĕн пурнăçа тытса тăраççĕ. Юлашкинчен автобус вырăнтан тапранчĕ, тикĕс мар çулпа хуллен пычĕ «ПАЗик». Тĕп çул çине тухсан, хирĕç Елчĕке каякан Шупашкар автобусĕ пулчĕ. Хăвăрт çитрĕмĕр имĕш ку «ГАЗельпе», шухăшларĕ Сетнер. Комсомольски тĕлĕнчен иртсен, автобус сулахаялла Елчĕк çулĕ çине пăрăнчĕ. Кашни чарăнура тăрата пуçларĕ шофер, пассаржирсене антара-антара хăварчĕ. Шупашкар автобусĕ «Икарус» çил вĕçтерсе иртсе кайрĕ. Чарăнусенче автобуса ларакан çынсем те пулчĕç, çавах та тăрса пыракан çын пулмарĕ. Кĕтмен çĕртен автобус сасартăк чарăнчĕ. Пурте малалла сĕвĕнчĕç, хăшĕсем вырăнтан сирпĕнчĕç.

– Мĕнле киревсĕрлĕх ку, эсĕ мĕн, вутă турттармастăн пулĕ те? – кăшкăрчĕç çынсем. Вырăнĕсенчен сирпĕнсе тухнă хĕрсем пĕр-пĕрин урисене шпилькăллă пушмаксемпе пусапуса илчĕç.

– Ай, ыратать вĕт, ан пус ура çине ĕне пек! – шавларĕç вĕсем, çуйхашрĕç.

– Лăпланăр, хĕрсем, эп юри мар вĕт.

Хĕрсем хăйсен вырăнĕсене ларчĕç. Машина умĕнче халăх пухăннă, çул урлă шурă «Волга» тăрать, автобус çулне пӳлнĕ вăл. Шофер автобус алăкне уçрĕ. Салона пĕр йĕкĕт чупса кĕчĕ.

– Тархасшăн каçарăр, хĕр туянма каятпăр, анчах пирĕнтен никам та галстук çыхма пĕлмест.

Шофер ӳпкевлĕн каларĕ:

– Мĕнле пулса тухать вара, каччăн пурне те тума пĕлмелле.

– Пире ялта кирлĕ те мар галстук çыхса çӳреме. Шупашкара концерта е спектакле каяс-тăвас пулсан кăна галстук çыхма тивет.

– Йĕкĕт тĕрĕсне калать.

– Сирĕн хушăра галстук çыхма пĕлекен пур-и?

Салонра хĕрарăмсем çеç пулчĕç, вĕсем пуçĕсене айккинелле пăрчĕç.

– Мĕн, Шупашкар «Икарусĕ» чарăнмарĕ-им? – ыйтрĕ Сетнер.

– Вăл сигнал парса вашлатса иртсе кайрĕ.

– Апла пулсан, пулăшмах тивет çынна, ăçта сирĕн кĕрӳ каччи?

– Ав «Волгăра» кулянса ларать.

– Машинăран тухма хушăр ăна.

– Унтах çыхма çук-им?

– Машинăра мана мелсĕр çыхма, тата каччăна ура çинче тăнă чухне пăхса илес пулать, пурте юрăхлă-и.

– Ăнлантăм сире, çынĕ ку ĕçе пĕлни тӳрех курăнать.

«Волга» капочĕ çинче виçĕ галстук выртать: пĕри ылтăнла йăлтăркка, тепри кăвак, виççĕмĕшĕ хура.

– Хура костюма хăйĕн тĕсĕ вырăнлă, – Сетнер хура галстука шурă кĕпе çумне тытса пăхрĕ, пурте чипер пек, анчах темĕн çитмест, хăй те пĕлмерĕ мĕн çименнине. Галстука капот çине хурса, йăлтăрккине илчĕ, кĕпе çумне тытрĕ. Ку чухах пулчĕ, мĕншĕн тесен каччăн çӳçĕ сутă сарă, ылтăнларах тĕслĕ, галстукпа пĕр килет. Каччи импертерех, яштака, куçĕ ачанни пек унăн. Галстука пысăк тĕвĕпе çыхрĕ Сетнер, анчах килĕшсех каймарĕ ку ăна, вара пĕчĕк тĕвĕпе çыхрĕ, ку вара шăп та лăп вырнаçуллă пулчĕ. Свидетелĕ ун пекех çамрăк, анчах хура çӳçлĕ. Ăна Сетнер пĕчĕк тĕвĕпех хура гулстук çыхса ячĕ. Виççĕмĕшĕ кăвак костюмпаччĕ, ăна кăвак галстук вырнаçуллă пулчĕ. Пурте Сетнер хусканăвĕсене сăнаса пăхрĕç, уйрăмах автобусри хĕрарăмсем. Хумханнипе тата тăрăшнипе Сетнер тарларĕ, аллисем чĕтрерĕç. Çавах та вăл хăйне хытарма вăй тупрĕ, пурне те йĕркеллĕ турĕ.

– Эпир хамăр çыхма пикентĕмĕр, пирĕн нимĕн те пулса тухмарĕ.

– Куратăр пулĕ, пурте йĕркеллĕ.

– Паллах, эсир ку ĕçе аван пĕлнине куртăмăр, – кĕрӳ каччи пĕчĕк тĕкĕр çине пăхса илчĕ. – Тавтапуç сана, йĕкĕт, эс пире çăлтăн.

– Нимĕнле проблема та çук кунта, мана хама кăсăклă пулчĕ сире пулăшма.

– Çавах та кала-ха пире, ăçта вĕреннĕ эсĕ ку ĕçе тума?
– Елчĕк шкулĕнче вĕреннĕ, искусство е ăсталăх ятлă предмет пурччĕ.
– Ăнланмалла, сире ăннă тесе шутлăр, ак мĕнле кирлĕ пулчĕ вăл пурнăçра.
Кĕрӳ каччи Сетнерĕн тарланă питне асăрхарĕ.
– Килте тунă чăваш сăрине ĕçетĕн-и?
– Паллах, сăмах та пулма пултараймасть, кам ан килĕштĕр хамăрăн килти сăрана ĕçме?
Туй каччисем машининчен пĕр икĕ витре кĕрекен йывăç пичке кăларчĕç, çӳлте вăл авăрлă, авăр тĕлĕнче пăкă, пичкен пĕр пуçĕнче кран пур. Сетнере тулли курка кăпăклă сăра ярса пачĕç, вăл сăрана кăмăлпах ĕçсе ячĕ. Сăри уçă, хăмла тутиллĕ. Иртенпе мухмăр аптăратни сăрапа иртсе кайрĕ.
– Тен, пирĕнпе пырăн, татах кама та пулин кирлĕ пулăн?
– Калама та пĕлместĕп мĕн тумаллине, атьсемри, çапла пĕртте шухăшламасăр хуравлама пултараймастăп. – Сетнер пĕр вырăнта шухăша путса тăчĕ.
– Тен, сана пирĕн енче пĕр-пĕр хĕр кĕтет?
– Çук халлĕхе, аннесĕр пуçне, никам та кĕтекен çук мана кунта.
– Эппин мĕн шухăшламалли пур, каяр пирĕн ушкăнпа.
Сетнер патне свидетелĕ пычĕ, хулпуççийĕнчен хуллен çапса илчĕ.
– Хамăр Елчĕк йĕкĕчĕ пулни тӳрех курăнать.
Ăна машинăна вăйпах тенĕ пек туртса кĕртсе лартрĕç.
– Тăхтăр-ха, атьсемри, хамăн сумкăна илем.
Автобусри хĕрарăмсем хăйсемех илсе тухса пачĕç сумкине. Кĕрӳ каччи автобуса сиксе кĕчĕ, пурне те пуç тайрĕ.
– Ырă çынсем, каçарăр пире, тархасшăн, сире тытса чарнăшăн.
Хĕрарăмсен пичĕсенче кулă çиçрĕ, вĕсем харăссăн тенĕ пек kаларĕç:
– Пурте йĕркеллех, кĕсел пек çемçешке хĕрарăмсем мар эпир.
Пĕр вăр-вартарах хĕрарăмĕ автобус varrine тухрĕ.
– Темех мар, каччă, пурнăçра темĕн те сиксе тухать, пурте йĕркеллĕ пултăр çеç санăн.

Автобус алăкĕ хупăнчĕ, вăл вырăнтан тапранса Елчĕкелле вĕçтерчĕ.

Темиçе машина умлăн-хыçлăн тĕп çултан пăрăнса пĕр яла кĕчĕ. Ялĕнче ытларах çуртсем чаплă, çĕнĕ, кирпĕчрен, икĕ хутлă. Кил картишĕсем анлă, витесемлĕ те лаçлă. Урама тухакан хапхисем сарлака. Е чӳрече хашакисем эрешлĕ пысăк йывăç çуртсем лараççĕ. Вĕсен те кил картишĕсем анлă, хапхисем сарлака, кил хуçалăхĕнче мĕн кирли пурте пур. Ку пуян ял пулни куçпа пĕрре пăхсанах курăнать. Нишлĕ çуртсем çукпа пĕрех, пăт-пат çеç курăнкалаççĕ. Паллах, вĕсем ял сăнне пăсаççĕ. Вĕсенче пĕччен юлнă ватăсем пурăнаççĕ пулмалла. Кашни çурт умĕнче йăмра ӳсет, уйрăмах вĕсем пĕве çыранĕсенче чылай. Вĕсем чăваш ялне илем кӳреççĕ.

Пĕрремĕш урамрах тĕрлĕ тĕслĕ хăюсемпе те шарсемпе илемлетнĕ темиçе «Жигули» те «УАЗик» лараççĕ. Унта ял халăхĕ хĕвĕшет. Уйрăмах çамрăксем чылай. Кĕрӳ каччи енчен килнĕ çамрăксем çураçнă хĕр патне çывхарасшăн, анчах ăна хĕр тантăшĕсем çирĕпункăпа çавăрса илнĕ, хулăм укçи ыйтаççĕ. Свидетель йĕри-тавра вак укçа сирпĕтрĕ, анчах ункă вырăнтан тапранмарĕ. Свидетель хут укçа сапалама пуçласан çеç хĕрсем укçа пуçтарма пикенчĕç, вара кĕрӳ каччи çураçнă хĕр патне çывхарма пултарчĕ, ăна аллинчен тытрĕ. Пурте савăклăн алă çупрĕç, хĕрсем килти сăра ĕçтерсе çаврăна пуçларĕç, туй халăхĕ çемçе сăрана кăмăлласах ĕçрĕ.

Хуткупăссă ташă кĕввине шăрантарчĕ, параппанçă тӳнклеттере пуçларĕ, шăхличçĕ шăхăртса ячĕ. Туй халăхĕ пысăк ункă туса чăваш ташшине çапрĕ, малтан кил картишĕнче ташларĕç, унтан урама карталанса тухрĕç, каллех кил картишне кĕчĕç. Ташласа ывăнсан хĕрсемпе хĕрарăмсем туй юррисене юрлама пуçларĕç, вĕсем çумне каччăсемпе арçынсем те хутшăнчĕç. Хĕрсем каллех сăра ĕçтерсе çӳрерĕç, туй халăхне те, туй курма пынисене те сăйларĕç.

Хĕрсем хушшинче Сетнер уйрăмах пĕрне асăрхарĕ. Ăна вăл темшĕн-çке килĕшрĕ, хăйĕн идеалĕ тесе шутларĕ вăл хĕр пирки, вара унран куçне вĕçертмерĕ, ку манăн пулмалла терĕ. Хĕр ăна амăшне аса илтерчĕ. Çамрăк чухне Сетнер амăшĕ çавнашкал сăнлах пулнă.

Туй халăхĕ машинăсене кĕрсе ларса кĕрӳ каччин ялне, е ял советне кайрĕç. Кĕрӳ каччипе çураçнă хĕр уйрăм машинăна ларчĕç. Вĕсемпе свидетель пулчĕ. Сетнер сăнанă тăрăх, вăл асăрханă хĕр ыттисемпе каймарĕ, ырана валли апат-çимĕç хатĕрлеме юлчĕ. Вара Сетнер те юлма шутларĕ, сăлтав тупса, яшсемпе каймарĕ. Кĕçех хĕр пысăк чашăк йăтса чăлана тухрĕ, юр-вар илсе кĕресшĕн ĕнтĕ. Сетнер тăхтаса тăмасăр унталла талпăнчĕ, алăкра унăн çулне пӳлчĕ.

– Пăрăн çул çинчен, ирттерсе яр, – хĕр каччă çине юнавлăн пăхрĕ. – Мĕн юпа пек тăратăн, кама калаççĕ?

– Эп мĕн, мĕн эп -м -м -м...

– Эс мĕн, чĕлхесĕр-им, ăçтан тупăнтăн кун пекскер?

Сетнер пĕтĕм хăюлăхне пухса хăйне алла илчĕ.

– Çук, кун пекки пĕрремĕш хут ман пурнăçра, – хăй именчĕклĕн пăхрĕ хĕр çине. – Сан умăнта шикленсе ӳкрĕм, ытла та чипер хĕр эсĕ, пĕлĕтрен аннă тейĕн.

– Кунтисем эпĕ, çак урамра ӳснĕ, çураçнă хĕрпе пĕр класра вĕреннĕ. – Питĕ кăмăллă та ырă кулă хĕрĕн, пит çăмартийĕсем çинче пĕчĕк путăксем тухрĕç, татах та хитреленчĕ вăл. – Калаçма тытăнни аван, эп вара урăхла шутланăччĕ. – Ырă кулă каймарĕ питĕнчен, куçĕсем кăштах хĕсĕнчĕç.

Сетнер хăюланчĕ, чăрсăрланчĕ теме те пулать, ку таранччен нумай хĕрпе хĕрарăм курнăран, вăл куç умĕнчех улшăнчĕ.

– Сире мĕнле чĕнеççĕ, черченкĕ хĕрĕм?

– Нимĕнле те, мĕн каласшăн кунпа, çамрăк çын? – Вăл куç харшисене хăпартрĕ, вĕсем пĕркеленчĕç, куçĕсем çирĕппĕн пăхрĕç. – Астуса юл. Манăн хамăн каччă пур ялта, ахалех вăхăт ан ирттер манпа.

– Кун пек эсир мана ытларах та килĕшетĕр, сăмахăм çук унтан ытларах калама, хĕвел шевлипе юр ирĕлнĕ пек ирĕлетĕп сирĕн умăрта.

Хĕр çухалса кайнипе куçĕсемпе мăчлаттарчĕ. Лаçран темле хĕрарăмăн çиллес сасси илтĕнчĕ:

– Ăçта çухалтăн эс, Чечек, мĕн чылай аппаланатăн унта, кил хăвăртрах!?

Чечек ассăн сывласа шăппăн пăшăлтатрĕ:

– Куратăн пулĕ, мана чĕнеççĕ, сирĕнпе намăсланса пĕтме пулать, чăланта пач палламан çынпа тĕл пулать тейĕç.

– Пире никам та курмасть иккĕне.

– Аплах-ши, хĕрарăмсем вĕсем пĕлесшĕн çунакан çынсем, чĕлхисем вăрăм вĕсен.

Чечек чашăкне илчĕ те лаççа васкасах чупса кайрĕ. Чăлан алăкĕ умĕнче Сетнер пĕчченех тăрса юлчĕ. Ун умĕнчен пĕр арçын иртсе пырать, вăл Сетнер çине тĕлĕнерех пăхрĕ, пуçĕпе сĕлтрĕ.

– Итле-ха, йĕкĕт, мĕн çухатнă эсĕ ют чăланра?

– Хам та ăнланмастăп, мĕн тăватăп эпĕ ку пурнăçра.

– Ытлашши ĕçнĕ пулĕ паян иртенпе, – арçын пиçĕ-куçĕ айăпсăр кулăпа çуталчĕ. – Мĕн тăратăн, айта пирĕнпе арçынсен ушкăнне.

Вĕсем иккĕш урама тухрĕç, çурт умĕнче çĕнĕ хăмаран тунă вăрăм сак вырнаçтарнă, çипуç ан варалантăр тесе ун çине тĕртнĕ дорожка сарнă. Шăкăрттин ват çынсем ларса тухнă, кашниех икĕ аллипе туя çине тĕрĕннĕ, шурă сухаллă янаххисем – аллисем çинче. Вĕсене çамрăксем çавăрса илнĕ, вĕсен калаçăвне итлеççĕ. Лешсем çамрăк чухнехи вăхăтсене аса илеççĕ, хушăран кулни илтĕнет, ун пек чухне сăмса кăкĕнче пĕркеленчĕксем пухăнаççĕ.

– Ас тăватăн-и, Унтри, юнашар яла Нарспи патне чупнине?

– Ас тумасăр, эсĕ вĕт ман сăмса умĕнчен илсе кайрăн çав чиперккене.

– Мĕншĕн тесен эс юнашар яла кайма тухнине эп сăнаса тăнă, пахча хыçĕсемпе санран маларах çитнĕ ун патне, укăлчана уçăлса çÿреме илсе кайнă.

– Эс, Хумкка, ĕмĕрне те çавнашкалах ирттертĕн: çынсенчен аякран иртсе кайма тăрăшса, хыçал енсемпе çÿресе, вăрттăн алăксенчен кĕрсе.

– Санпа, вăкăр пекскерпе, тÿремĕн утса пăх-ха, Унтри, такамăн ĕнсине те пăрса лартатăн.

– Çавах та шăпа мана кÿрентермерĕ, ман пурнăçра Сарпи тупăнчĕ, пĕртте шеллеместĕп уншăн.

– Тĕрĕсне калатăн, Унтри, виçĕ ывăл та икĕ хĕр санăн, пурте ăслă вĕсем, пĕтĕм ял мухтанать вĕсемпе.

Унтри Хумкка ҫине пăхрĕ те упанни пек ал лапписене ҫĕклерĕ.

– Эс ун чухне мĕн хăтланнине пĕлнĕ пулсан, ытлашши аташса кайнă ачана вĕрентнĕ пек, ҫемҫе вырăнна вĕлтренпе вĕтелемеллеччĕ те.

– Апла пулин те, хора пĕрле ҫӳренĕ-ҫке, чăваш юррисене хăшĕ ытларах пĕлни пирки тавлашса юрланă-ҫке.

– Пулнă ун пекки пирĕн вăхăтра, – Унтри илемлĕн кулчĕ, урам тăрăх пăхрĕ.

Арҫынсем вĕсем ҫине пăха-пăха илеҫҫĕ, ҫак икĕ ватă ĕмĕрĕсене шыв сапса уйăрми пĕрле ирттернĕ.

Ятарлă автобус килчĕ, туя хутшăнас текенсене вăл кĕрӳ каччин ялне илсе каймалла. Ҫынсем кĕпĕрленсе кĕрсе ларчĕҫ автобуса, вĕсем хушшинче Сетнер те пулчĕ. Кĕрӳ каччин ҫурчĕ икĕ хутлă, пысăк, аслă. Чӳрече хашакĕсем эрешлĕ. Мунчине те тетте пек эрешлетнĕ. Урама тухакан хапха ҫӳллĕ, сарлака, ăна яриех уҫса янă, халăх ирĕклĕн кĕрсе тухмалла. Ҫĕнĕ мăшăр ял Советĕнчен килессе кĕтеҫҫĕ. Ҫав вăхăтра Сетнер кил хуҫалăхне пăхса ҫаврăнчĕ, тĕлĕннипе пуҫне пăркаларĕ. Пултараҫҫĕ вĕт пирĕн ентеш чăвашсем илемлĕ те ҫирĕп ҫуртсем лартма, ҫителĕклĕ пурнăҫпа пурăнма. Кун пек ҫуртсемпе кил таврашĕсем темиҫе ĕмĕре те ҫитĕҫ, темиҫе несĕлшĕн те юрăхлă пулĕҫ.

Туй хĕрарăмĕсенчен ытларахăшĕсен ҫипуҫĕсем асламăшĕсенчен, амăшĕсенчен юлнăскерсем. Кĕписем йĕтĕн ҫиппинчен килте тĕртсе тунă шурă пиртен ҫĕленĕскерсем, вĕсене чăваш тĕррипе илемлетнĕ, тĕрĕ ҫипписем хĕрлĕ тĕслĕ. Ҫамкисем ҫинче масмаксемпе алкасем, кăкăрĕсем ҫинче кĕмĕл тенкĕсемпе илемлетнĕ шӳлкемесем. Пилĕкĕсенче ҫум ҫаккисемпе хӳресем. Кăкăрĕсем ҫинче тата пуҫ урлă тăхăнса măйран ҫакнă кĕмĕл тенкĕллĕ амасем. Хăшĕ-пĕрисем хулпуҫҫи урлă тевет те ҫакнă, пилĕкĕсене сарă ҫыхнисем те пур. Арҫынсем те тĕрленĕ шурă кĕпесемпе, вĕсене те йĕтĕн ҫиппинчен килте тĕртнĕ шурă пиртен ҫĕленĕ, вĕсем чĕркуҫҫие ҫитиех вăрăм, пилĕкĕсенче тĕрленĕ хăюллă пиҫиххисем. Ҫамрăксенчен ытларахăшĕ паян модăна кĕнĕ ҫи-пуҫпа, тĕрленĕ кĕпе тăхăннисем те курăнкалаҫҫĕ.

Ку ҫи-пуҫсене Сетнер мĕн ачаран астăвать. Вĕсене ашшĕамăшĕсем туя, Акатуя, тĕрлĕ уявсене кайма тăхăнатчĕҫ.

Хулара пуранса, ун пек тумпа çӳренине никама та курман. Хула кунӗнче çеç фольклор ансамблӗ çавӑн пек çипуçпа пулнине курнӑ. Хулана пурӑнма куçнӑ чӑвашсем ял йӑлисене çухатса пыраççӗ, уйрӑмах уяв тумӗсем енчен. Çипуçӗсем пӗрпекленеççӗ, çынӗсем тӗссӗрленеççӗ, темиçе утӑмран пӗрне теприччен уйӑрса илме йывӑр, хӑйнеевӗрлӗх палӑрмасть вӗсенче. Кашнин çинче ытларах хура тум. Чунӗсемпе те вӗсем хытса пыраççӗ, укçа кӑна пултӑр кашнинех. Ак кунта та, ав, хуларан туй курма килнӗ пысӑках мар ушкӑн пӗр тӗслӗ те пӗр евӗрлӗ тумпа.

Кӗçех тата тепӗр автобус çитрӗ. Унтан тухнисем маларах килнисемпе хутшӑнса кайрӗç. Ёнтӗ пӗлме те çук, хӑшӗсем кӗрӳ каччи енчен, хӑшӗсем хӗрӗ енчен. Пур те чӑвашла калаçаççӗ, ку чуна илӗртет, сӑпкара сиктернӗ пек сиктерет, кӑмӑла ырӑлать. Ку чӗлхене Сетнер сӑпкарах, амӑшӗ юрласа çывратнӑ чухнех илтнӗ, çавӑнпа хаклӑ та вӑл уншӑн.

Аякран машинӑсем тӗрлӗ сасӑпа кӑшкӑртни илтӗнсе кайрӗ. Ку ёнтӗ çӗнӗ çынсем Елчӗкрен çыранса та венчетре тӑрса килнине пӗлтерет. Кӗç машинӑсем çитрӗç те, малти машининчен капӑр тумлӑ та çиçекен сӑн-питлӗ мӑшӑр тухрӗ. Чи малтан каччӑпа хӗр умлӑн-хыçлӑн турӑша чуптурӗç, унтан чӗптӗм çӑкӑра тӑвар çине пуçса тутанчӗç. Каччӑн ашшӗ пӗр утӑм маларах тухрӗ.

– Ырӑ сунса кӗтсе илетпӗр сире, ачамӑрсем, паян кунран эсир упӑшкипе арӑмӗ, яланах килӗштерсе пурӑнӑр, пӗрпӗрипе нихçан та ан хирӗçӗр, çемьере ӑнсӑртран мӗн те пулин сиксе тухас пулсан, ял çине ан кӑларӑр. Чи кирли – сак тулли ача-пӑча çуратӑр, ывӑлӗ те, хӗрӗ те пултӑр. Пире, ваттисене, хисеплӗр, нимӗнпе те ан кӳрентерӗр. Турӑ пулӑшса пытӑр сире. – Вӑл кинӗ çине пӑхрӗ, лешӗ хӗрелсе кайрӗ, пуçне пӗкрӗ, куç хӑрпӑкӗсене антарчӗ.

Унтан каччӑн амӑшӗ кӗскен каларӗ:

– Пирӗншӗн чи пахи – эсир яланах туслӑ, савӑк, телейлӗ пулса пире савӑнтарни, мӑнуксем парнелени, – хумханнипе те савӑннипе унӑн куçӗнчен куççуль юхса анчӗ. Хӗрарӑм хӗрарӑмах ёнтӗ, унӑн куççулӗ çывӑхрах, хуйӑх та, савӑк та хӑвӑрт йӗртет ӑна.

Сетнер йӑри-тавра пӑхрӗ, Чечеке шырарӗ. Ав вӑл, инçех мар, тӗрленӗ капӑр тумпа хӗр-тантӑшӗсем хушшинче

тăрать. Саппунĕ çут-симĕс йăлтăркка атласран. Хулпуççийĕсем çине тутăр уртса янă, тутăр вĕçĕсенче вĕтĕ шăрçасем. Чечек питĕ илемлĕн курăнать, куçа илме май çук. Уйрăмах янкăр тӳпе пек сенкер куçĕсем илĕртеççĕ. Сетнер ун çине шăтарасла пăхнине Чечек туйрĕ, анчах çакна палăртмарĕ, курмăш пулчĕ. Сетнерĕн каллех шанăç юлмарĕ.

Хăнасене пӳрте чĕнчĕç, кунта П саспаллиллĕ туса сĕтелсем вырнаçтарнă. Çынсем кĕнĕ-кĕменех сĕтел хушшине ларма тытăнса тăчĕç, пĕр-пĕрне тĕрткелесе пĕр вырăнта тапăртатса тăчĕç, калаçу пуçарчĕç.

– Пăх-ха, кунта икĕ пысăк пӳлĕмччĕ.

– Астăватăп-ха, ку анлă пӳлĕме вагонка текен чус хăмапа пӳлсе уйăрнăччĕ.

Калаçăва виççĕмĕш хĕрарăм хутшăнчĕ.

– Пӳлĕм хăмисене каччи туй умĕн сӳтнĕ, тула илсе тухса сарайĕнче купаласа хунă.

– Маттур йĕкĕт çав вăл, ав мĕнле анлăлатнă пӳлĕме туй халăхĕ валли.

Пăшăл-пăшăл пăшăлтатса, пӳрте кĕнĕ халăх ерипен сĕтелсем хушшине вырнаçрĕ, пурин валли те вырăн çитрĕ. Кĕçех çĕнĕ çынсене саламлама пуçларĕç, парнесем пама тытăнчĕç. Сетнерĕн те укçа кăларма тиврĕ, кĕсьере пин тенкĕ пурччĕ унăн, икĕ пилĕкçĕршер хут укçа. Юнашар ларан хĕр шăпах конверта укçа чикет.

– Тен, сирĕн татах тупăнать?

– Халех пăхатăп, – хĕр хăйĕн сумкинчен татах конверт кăларчĕ. – Пур иккен, кирлĕ пулĕ тесе запас илсе тухнăччĕ.

– Вăт куншăн сана çĕнĕ мăшăр тав тăвĕ, лайăх каччă тĕлне пулма Турă пулăштăр, мĕн ĕмĕтленни пурнăçланса пытăр.

Ку сăмахсем хыççăн хĕр çухалсах кайрĕ, шăппăн пăшăлтатрĕ:

– Тавтапуç ырă сăмахусемшĕн.

Черет ун патне çитсен, Сетнер конверта пилĕкçĕр тенкĕ хучĕ те çĕнĕ çынсене тыттарчĕ.

Сĕтелсем хушшинче халăх нумай пулнăран хăналану чылая пычĕ, юлашкинчен вăл вĕçленчĕ, ташă-такмак пуçланчĕ, пӳлĕм тăвăрланчĕ, çавăнпа çамрăксем тула тухма шутларĕç, хăйсемпе пĕрле тĕрлĕ лампочкăсемпе мĕлтлетекен музыка

центрне илсе тухрĕç. Кĕçех унта чăваш юррисем янăра пуçларĕç, вĕсене хăйсен ентешĕсем юрларĕç: Иванпа Вячеслав Христофоровсем, Сергей Павлов, Горшкова, Борисова, Адюков, Шадриков тата ыттисемпе те. Хăш-пĕр юррисене çамрăксем вĕсем хыççăн юрларĕç, çав хушăрах ташларĕç. Кил хушшине бетон сарнă, йĕри-тавра кирпĕчрен купаланă хуралтăсем, мунчи çеç йывăç пĕренесенчен.

Юлашкинчен сиксе ывăнчĕç пулмалла та мăшăрăн-мăшăрăн вальссем ташлама пуçларĕç. Çакна кĕтнĕ Сетнер Чечек патне васкарĕ, ăна ташша чĕнчĕ. Тĕлĕнмелли енне, лешĕ килĕшрĕ, унпа пĕрле кил хушши варрине тухрĕ, ташлама пуçласан хăлхаран пăшăлтатрĕ:

– Эпир пĕр-пĕрне паян çеç курнă, эс вара хăвна сĕмсĕррĕн тытатăн, манăн каччă мар вĕт эсĕ çавнашкал хăюланма, – вăл сывлăш çавăрса илчĕ. – Куçа чарса пăрахсах пăхатăн ман еннелле, ниепле те пăрăнаймăн.

– Эс мана килĕшетĕн пулсан, мĕнех вара, Чечек?

– Хăв шутла-ха, мана çынсем умĕнче аван мар, – тата шăппăнрах пăшăлтатрĕ вăл. – Пите хĕрететĕн вĕт.

– Каçар мана, Чечек, нимĕн те тăваймастăп хампа, хаклăскерĕм.

Сетнер Чечеке хăй çумнерех хĕстере пуçларĕ, унăн вĕри ӳтне туяс килчĕ унăн.

– Ку вара ытлашши, мĕн калĕç çынсем ман çинчен? – Чечек ăна кăкăрĕнчен тĕртсе хăй çумĕнчен уйăрчĕ те çурт çумĕнче тăракан тантăшĕсем патнелле çаврăнса утрĕ.

– Чечек, кам вăл, сана кăмăлласа пăрахнăскер, ытла та çыпăçуллă пек курăнать? – пĕлесшĕн пулчĕ пĕри.

– Камне пĕлместĕп, Шупашкартан килнĕскер, хăйне ытлашшипех ирĕке ярать.

– Хуларисем пурте çавнашкалскерсем вĕсем, аппа патне хулана кайсан дискотекăра пулнăччĕ пĕррехинче, мĕн кăна курса пĕтмерĕм-ши, – тантăшĕ пӳрнипе мăйне сĕрсе кăтартрĕ, хăй шанмасăртарах пăхрĕ. – Асту, Атнер иксĕрĕнне те пуçсене пăрса хурать ак.

– Ун маншăн мĕн пăшăрханмалли пур, эп текех ӳссе çитнĕ хĕр, хамăн хака пĕлетĕп.

Хăш-пĕр хĕрсем ташласа ывăннипе пӳрт стени çине сĕвеннĕ, ыттисем тӳрремĕнех тăраççĕ, шӳтлеççĕ. Ку халĕ

питĕ вырăнлă, чылайăшĕ ташласа хăшкăлнă, тути-çăварĕсем типсе ларнă. Лаç çывăхĕнче сĕтелсем лартнă, вĕсем çинче ун пек чухне мĕн кирли пурте пур. Вĕсем патне пырса кама мĕн килĕшет, çавна илсе çиет. Килте пĕçернĕ кăлпаса, рулет, шăрттан тата ытти апат-çимĕç пур унта. Пÿрне çăтса ямалла техĕмлĕ хатĕрленĕ вĕсене.

Каллех ташă пуçланчĕ. Сетнер пĕр иккĕленÿсĕр Чечек умне пырса тăчĕ.

– Сире ташша чĕнме юрать-и?

Ăна асăрхаман пек, Чечек ун еннелле çурăмĕпе çаврăнса тăчĕ. Сетнер тепĕр хут ыйтрĕ. Анчах Чечек илтмĕш пулчĕ, хĕр-тантăшĕсемпе калаçрĕ. Тулли кăмăллă Атнер Чечек çумнех пычĕ, аллинчен тытса ташша илсе тухрĕ, хăй шурă шăлĕсене кăтартса йĕлпĕрчĕ. Ташă вĕçленсен, Атнер хăйсен ял каччисем патне пычĕ, тем каларĕ вĕсене. Лешсем çавăнтах Сетнере хупăрласа илчĕç.

– Айта-ха айккинерех, чувак, калаçмалли пур.

– Эп сире пĕлместĕп, мĕн çинчен калаçмала вара пирĕн?

– Эс калаç-ха, халех хăвна валли тупатăн.

Икĕ каччă икĕ енчен тытса ăна вутă сарайĕ патне илсе кайрĕç. Кунта темиçе рет йĕркеллĕн хурăн вутти купаланă. Пĕр речĕ çине чавсипе сĕвенчĕ Сетнер, ăна ял каччисем сырса илчĕç.

– Эс мĕн, хула фраерĕ, ман хĕр çумне çыпçăнатăн?

Сетнер хăйне лăпкă тытрĕ, пичĕ çинче пĕр нерва тымарĕ те туртăнмарĕ.

– Эп сирĕнтен пытармастăп, ачасем, вăл мана питĕ килĕшет.

– Сан туту ухмах мар иккен.

– Мĕн куратăп та мĕн туятăп, çавна пĕр пытармасăр, таçтала пăрăнмасăр калатăп.

– Ытла та пурсуй иккен ку мужик, тен, лăплантарма тÿнккесе илмелле сана?

Сетнер вутă шаршанĕ çумне лăпчăнчĕ, хĕнеме тытăнаççĕ пулсан, вутă пуленкисемпе пеме тытăнăп, вĕсене те лекĕ, шухăшларĕ вăл. Каччăсенчен аслăраххи каларĕ:

– Чăвашсен хăнасене хĕнес йăла çук, çавăншăн Турра тав ту.

Сетнер тарăннăн сывласа илчĕ, лăпкăн тытма тăрăшрĕ хăйне.

– Уншăн тавтапуç сире, ачасем.

– Эпир сана асăрхаттартăмăр, йĕкĕт, тепре лекетĕн пулсан, хăвна айăпла.

Сетнертен пăрăнса утса каллех ташлама тухрĕç каччăсем, Сетнер çук та тейĕн вĕсемшĕн, ытла та лăпкă тытаççĕ хăйсене. Кӳреннипе Сетнерĕн ăшĕ çунчĕ, кун пекки нихçан та пулманччĕ ун пурнăçĕнче. Вăл сĕтел патне пычĕ те пĕр стакан сăмакун ячĕ, эрехĕ хаяр, анчах ĕçме çемçе, çăкăртан икĕ хут юхтарса тунă пулмалла. Вăл ăша хĕрте пуçларĕ. Сетнер вара çăкăрсăрах шăрттан татăкĕ çыртрĕ, укроппа тата хурлăхан çулçипе юрмаланăран тутлă шăршă кĕрекен хăяра кăчăртаттарса çирĕ, рехетлĕ пулчĕ ку уншăн, вара унăн кăмăлĕ çĕкленчĕ, чунĕ савăкланчĕ. Вăхăта сая ярас мар тесе, ташлама шутларĕ, кампа ташламаллине шырарĕ. Хапха патĕнче хĕрсен ушкăнĕ тăрать. Сетнер вĕсем патне пычĕ те ним суйласа тăмасăрах пĕрремĕш хĕрне чĕнсе кăларчĕ. Мĕн çурçĕрчченех ташларĕç вĕсем иккĕш, мĕн туй вĕçлениччченех. Хĕрĕ сӳпĕлти чĕлхеллĕскер пулчĕ, çитменнине, Чечексен ялĕнчен. Каç хушшинче Чечек çинчен тĕпĕ-йĕрĕпе каласа пачĕ, аслашшĕпе асламăшне те манса хăвармарĕ. Сетнер çаксене пĕтĕмпех асне хывса хăварчĕ. Юнашарах Атнерпа Чечек ташларĕç, каччă хĕре çирĕппĕн ыталаса тытнă. Никам та ан асăрхатăр тесе çавна Сетнер вăрттăн сăнарĕ. Атнерĕн хусканăвĕсем Сетнере тарăхтарчĕç. Атнер патвар каччă, пичĕ сарлака та пысăк. Арланăнни пек чăмăр та кăпăш питçăмартийĕсем куçĕсене хупласçĕ теме пулать, шалтан куç шăрçисем çеç курăнаççĕ. Кирлех-ши, çакнашкал сысна аçине ăнать, юмахри пек чипер хĕрпе çӳрет. «Ку хĕрĕн кăмăлне мĕнле çавăрма май пур-ши?» – явăнчĕç Сетнер пуçĕнче шухăшсем. Çĕр процентран пĕр процентчĕ те пулин шанăç парать пулсан, вăл унпа усă курма тăрăшĕ. Вăл сӳпĕлти хĕре вĕсен хапхи патне çитиех ăсатрĕ. Хĕр ыталаттарасшăнччĕ хăйне, анчах Сетнер ăна питçăмартийĕнчен сăпайлăн чуптурĕ те сывпуллашса уйрăлчĕ, вара Чечексен çурчĕ еннелле сарлака утăмсемпе васкавлăн кайрĕ. Чечек килĕ умне çитес тĕлте вăл виçĕ каччăна тĕл пулчĕ, вĕсенчен пĕри Атнер иккен.

– Пăхăр-ха, ку идиот пире йăнланман пулмалла, – çиллессĕн сурчĕ çĕр çине Атнер, унтан илемсĕр тембрпа каларĕ: – Çавах та йĕрлесе тупнă ман хĕр çуртне.

Сетнер унпа килĕшмесĕр хирĕçлесшĕнччĕ, анчах çăварне уçма та ĕлкĕреймерĕ, сулăмлă чышкă питĕнчен янклаттарчĕ, унăн куçĕнчен хĕлхем сирпĕнчĕ, вара пуçланчĕ тĕркешӳ. Сетнер тĕттĕмре аран-аран сыхланма ĕлкĕрчĕ, хăй те хирĕç тăма пикенчĕ. Анчах ăçта унта, лешсем виççĕн, вăл пĕччен. Кĕçех ăна ураран ӳкерчĕç, вăл йăмра кутĕнче йăваланса выртрĕ.

– Ирсĕр, пирĕн каçа пăсрĕ, ял ачисемпе татах савăккăн ларасшăнччĕ, памарĕ вĕт.

Вĕсем юнлă сурчăкпа сурчĕç, вĕсене те лекрĕ пулмалла Сетнертен.

– Кун пек сăн-питпе ăçта кайăпăр вара?

– Кăмăл çакнашкал пăсăлнă хыççăн сыпни пăсмĕччĕ.

– Апла пулсан, айтăр каяр.

Виççĕш тĕттĕмре çухалчĕç, калаçни çеç ерипен илтĕнми пулчĕ аякран. Çул çине мĕнле майпа тухмалли-ши, киле мĕнле çитсе ӳкмелле-ши, шухăшларĕ Сетнер йăмра çумне çурăмпа сĕвенсе ларнă май. Чĕп-чĕр юнлă пуçĕ çаврăнать, пит-куçĕ шыçăннăран ыратать, ăшĕ пăтранать. Ерипен калинкке уçăлса хупăнчĕ. Калинкке умĕнче шурă мĕлке курăнчĕ, урисемпе асăрхануллă пусса вăл Сетнер патне çывхарчĕ.

– Сывах-и эсĕ унта, Сетнер?

– Халлĕхе сывах-ха, – ыратнипе аран-аран хуравларĕ Сетнер шыçăк тутисемпе.

– Сана асăрхаттарнă вĕт манăн каччă пур тесе, – кукленчĕ вăл ун умĕнче. – Эс вара кутăн така пек сĕкĕнетĕн.

– Эс мана килĕшетĕн, Чечек, саншăн эпĕ тем тӳсме те хатĕр, санпа юнашар пуласчĕ çеç.

– Пулма пултарать-и вăл пĕрремĕш хут курсах юратса пăрахни, çынăн кăмăл-туйăмне пĕлсе çитмелле-çке малтан?

– Сана куриччен кам та пулин ман пек çавнашкал каласан, эпĕ те ĕненмен пулăттăм, тен, питĕнчен сурăттăм-и.

– Çынсем характерĕсемпе çывăхланманни те тĕл пулатьçке.

– Юратсан пурне те каçаратăн.

– Эсир, мужиксем, малтан çавнашкал калатăр, кирлине илсен, çавăнтах – аля-улю.

– Кӳрентеретĕн мана, Чечек, – ассăн сывларĕ Сетнер. Пĕр хушă шăплăх тăчĕ.

– Ыратать-и, Сетнер?

– Паллах, анчах та саншăн, санпа тĕл пулассишĕн кунтан та ытларах тӳсме хатĕр.

Чечек асăрхануллăн Сетнер питне ал лаппипе ачашларĕ.

– Ай, сан питӳ пĕтĕмпех шăйрăклă, мĕн ухмахла ларатăп вара.

Вăл ура çине сиксе тăчĕ те хăвăрт килне кĕрсе кайрĕ. Пӳрте кĕрсен шкапра бодяга ятлă эмел тупрĕ. Ăна амăшĕ хăйне валли илсе килнĕчĕ. Пăру тапнăччĕ те ăна питĕнчен, вăл унпа сипленетчĕ. Халь акă каллех кирлĕ пулчĕ. Чечек эмеле черккере тип çупа хутăштарчĕ, спирт пур-ши тесе холодильнике пăхрĕ, анчах тупмарĕ, амăшĕ суракан ӳт-пӳне сĕрме настой тунă эрехĕн пуçламан кĕленчине курчĕ. Сурансене инфекцирен сыхласа сĕрес тесе ăна та илчĕ хăйĕнпе пĕрле.

Сетнер мелсĕр выртать, темĕн пек тăрса ларасшăн вăл, анчах пĕтĕм ӳт-пӳ чиксе ыратать, çавăнпа-и, лараканскер выртнă. Акă Чечек тухрĕ, аллине Сетнер ĕнси айне чикрĕ, йăмра çумне çурăмпа сĕвенсе ларма пулăшрĕ. Сурансене эрехпе сĕрсе тасатрĕ.

– Пар-ха, пĕр-ик сыпкăм тăвам, унсăрăн ăшра питĕ йывăр, пĕр вăй та çук.

– Ме, тыт, апла пулсан, ку йĕрĕнчĕклĕ шĕвеке, мĕнле вăл сире, мужиксене, килĕшет ку эрех, çĕр çинче вăл пĕр инкек çех кӳрет.

– Нимĕн те тăваймăн, пуринчен ытла вăл çĕнйĕркелĕх вăхăтĕнче Горбачевпа пĕрле килчĕ.

Чечек ăна эрех кĕленчине тыттарчĕ. Сетнер хăйне тытса чараймарĕ, анинченех çур кĕленче ĕмсе ячĕ. Çавăнтах хăйне çăмăлтарах туйса илчĕ, йăмраран тыткаласа ерипен ура çине тăма пултарчĕ. Вăл айккинчен айккинелле сулланчĕ, виçĕ утăм тума ĕлкĕрчĕ, пуçĕ çаврăнса кайрĕ, сулланса кайса вăл каллех çĕр çине ӳкрĕ.

– Ăçта каясшăн вара, Сетнер, кун пек вăй-халпа?

– Эс мĕн сĕнме пултаратăн, Чечек?

– Мĕн тума май пурри пирки шухăшлатăп, ерсе килтĕн кунта, ман пата.

– Шухăшла – ан шухăшла, пĕр вариант кăна пур, сансăр пуçне, пĕр палланă çын та çук манăн ку ялта.

– Эппин кĕрер пирĕн пата.

– Тахçанах çавăн пек тумалла, унсăрăн выртаратăн мана çĕр çинче.

– Эпĕ сана утă аслăкĕнче вырнаçтарăп.

Сетнер савăннипе кулма пикенчĕ, анчах хĕн пулчĕ ăна çакна тума.

– Мĕн йĕлпĕретен май кĕлчечекĕ евĕр?

– Пурте йĕркеллĕ, Чечек, сан патăнта юлассишĕн теппре те тӳсме хатĕр çак асапа.

– Эс ан шутла эп йăкăлти хĕр тесе, сана шелленипе çеç тухрăм кунта, Сетнер.

Чечек Сетнере тăма пулăшрĕ, хăйĕн хулпуççийĕнчен уртăнтарчĕ, хăй ăна пĕр аллипе пилĕкĕнчен ыталарĕ, тепĕр аллипе хăйĕн хулпуççийĕ çинчи унăн аллине тытрĕ, вара вĕсем ерипен утса килкартине кĕчĕç. Чăх вити умĕн иртнĕ чухне чăхсем шавласа илчĕç.

– Вăт тата, пире ку шав çитмерĕ халĕ.

Вĕсем хăвăртрах чăх витинчен иртрĕç те кĕçех пусмана пырса тĕрĕнчĕç. Ун тăрăх Сетнер аран-аран улăхать, Чечек ăна хыçалтан тĕртсе пулăшать. Сетнер питĕркĕче пăрса аслăк алăкне уçрĕ. Шалтан тĕрлĕ курăксемпе чечексен ырă шăрши пите пырса çапрĕ, чыхăнтарсах ячĕ. Ку шăршă хĕвеллĕ çу кунĕсене аса илтерчĕ, пуçĕ каллех çаврăна пуçларĕ Сетнерĕн.

– Тыт ман алăран, атту пуçупа струпила çапăнăн тата.

Чечек ăна çавăтса шалалла илсе кĕрсе кайрĕ. Сасартăк вĕсем иккĕш харăс ӳкрĕç те таçта аялалла кусса анса кайрĕç. Сетнерĕн ӳт-пĕвĕ ыратрĕ, çапах та вăл пĕр сасă та кăлармарĕ, Чечек хыççăн сасăпа кулма тăрăшрĕ тĕттĕмре. Сетнер Чечекпе юнашар выртрĕ, хĕртен ăшă çапни ăна хăюллантарчĕ, вăл хĕр еннелле çаврăнчĕ те тутипе унăн тутине шырарĕ, анчах Чечек ăна хиврен тĕртсе ячĕ:

– Паян питĕ ир, пилĕк сехетрех, тăнă, хĕр тусăма апатçимĕç хатĕрлеме пулăшнă, – ассăн сывласа темиçе хутчен

анасларӗ вӑл. – Халь манӑн сывӑрас ӗмӗт ҫеҫ, ҫавӑнпа ан чӑрмантар.

– Хӑвӑнне ху пӗл, жираф якран курать.

– Шӳтлеме пӑрах, Сетнер, – каларӗ Чечек сывӑрса кайнӑ май. Питех те ырӑ хӗрпе юнашар утӑ ҫинче выртма. Кунта ӑшӑ, ҫулла пӗчӗк ҫаранра ҫулса пӑрахнӑ типнӗ утӑ ҫинче выртнӑ пекех. Сетнер яри уҫӑ алӑкран сенкер тӳпене пӑхса выртрӗ. Унта ҫутӑ ҫӑлтӑрсем мӗлтлетсе выляҫҫӗ. Паянхи пек, кӗркунне пуҫламӑшӗнче уйрӑмах ҫутӑ вӗсем. Чечекпе юнашар пулма пӳрнишӗн Сетнер хӑйӗн ҫӑлтӑрне тав тӑвать. Кун пек пулса тухасси пирки вӑл нихҫан та ӗмӗтленмен. Унӑн та телей кӳрекен ҫӑлтӑр пур иккен.

Эрех хӑйӗннех тӑвать пулмалла, Сетнерӗн те куҫӗ хупӑна пуҫларӗ. Паян кун питӗ вӑрӑм пулчӗ, кун пекки унӑн пурнӑҫӗнче пулманччӗ. Вӑл Чечеке ачашшӑн ыталарӗ те хӑвӑрт сывӑрса кайрӗ. Ирпе вӗсем иккӗш те кил хушшинчи сасӑсемпе вӑранса кайрӗҫ.

– Ӑҫта манӑн ытарайми Чечек, Сухви инке?

– Пӗлместӗп, Атнер, Чечек кӗҫӗр ҫӗрӗпех киле таврӑнман.

– Мӗнле апла пултӑр, ҫӗркаҫ ӑна кил тӗлне ҫитиех ӑсатса хӑвартӑм, ак ҫак хапха умӗнче сывпуллашрӑмӑр.

– Нимӗн те калама пултараймастӑп, Атнер, ку вӑл сирӗн хушӑри ӗҫ-пуҫ, – Сухви Атнере ҫурӑмӗнчен тӗрте пуҫларӗ. – Урама илтмелле кӑшкӑрса ан ҫӳре кунта, хӑлхасӑррисем ҫук пирӗн.

Сухви Атнере калинккерен тӗртсех кӑларса ячӗ, ун хыҫӗнчен кӗле хучӗ. Нихҫан та пулса иртмен унӑн кун пек пӑтӑрмах пулас кӗрӳпе. Пӗрмай тем мӑкӑртатса вӑл пӳрте кӗчӗ, чи малтан Чечек кравачӗ ҫине пӑхрӗ. Ӑна тӗкӗнмен те, ӗнер вырӑна мӗнле тирпейленӗ, халӗ те ҫавӑн пекех. Хӑйӗн хӗр тусӗ Кӳльпи патӗнче пулӗ, шухӑшларӗ вӑл. Килти пысӑк арчана уҫса хӑйӗн шукӑль кӗпине кӑларчӗ. Ӑна вӑл хӗр чухне лармара ҫӗлесе тӗрленӗ ятарлӑ уявсенче тӑхӑнма. Умне уртса яма саппун та ҫӗлесе тӗрленӗ. Икӗ тумӗ пӗр-пӗринпе питӗ килӗшӳллӗ. Сухви стена ҫинче ҫакӑнса тӑракан рамкӑри тӗкӗр ҫине пӑхса илчӗ. Ку тӗкӗр ҫине унӑн амӑшӗ те пӑхнӑ. Чечеке шыраса тупас шухӑшпа вӑл урама тухрӗ. Ӑшӗ вӑркарӗ унӑн, кун пекки ку тарана ҫити пулманччӗ.

Сухви малтан ывӑлсем ҫуратнӑ. Вӗсем ӳссе ҫитсе Раҫҫей хулисене саланнӑ. Упӑшкипе иккӗшех тӑрса юлнӑ. Юлашкинчен Сухви хӗр ҫуратса панӑ. Ҫирӗм ҫултан пуҫласа ҫуратма тытӑннӑ вӑл ывӑлӗсене. Хӗрӗх пиллӗкре хӗрне ҫуратрӗ. Чечек тесе ят пачӗҫ ӑна, вӑл вӑхӑтра улӑхсемпе ҫарансенче чечексем ешеретчӗҫ, ҫынсене илӗртсе савӑнтаратчӗҫ. Упӑшки Чечекшӗн питӗ савӑнатчӗ, пурӑнмалла та пурӑнмаллаччӗ унӑн, анчах аллӑ ҫулта вилчӗ. Вӑрҫӑран упӑшки сурансемпе таврӑнчӗ ҫав, ӳт-пӗвӗ ҫинче чӗрӗ вырӑн ҫук теме пулать. Ялта арҫынсене алӑри пӳрнесемпе шутласа кӑларма пулатчӗ ун чухне.

Иккӗмӗш сыпӑкри аппӑшӗ Узбек ҫӗршывӗнчен таврӑнчӗ. Ташкентра ҫӗр чӗтреннӗ хыҫҫӑн вӑл унта хулана юсаса ҫӗнетме кайнӑччӗ. Вӑт вӑл калать те:

– Унта пур арҫын та тенӗ пекех чӗрӗ те сывӑ, кунта вара, Чӑвашра, пӗтӗм арҫынсене вӑрҫа илсе кайрӗҫ.

– Эпир Мускавпа юнашар пурӑнатпӑр, унта мӗн те пулин сиксе тухсан, пире те пырса тивет. Акӑ, Чечняна илер, пирӗн республикӑран салтака кайнӑ ачасем пурте тенӗ пекех унта лекеҫҫӗ.

Ҫакӑн евӗрлӗ чылайччен калаҫса ларчӗ икӗ хӗрарӑм, хальхи пурнӑҫ пирки те сӑмах пычӗ.

Амӑшӗ урама тухсан, Чечек хӑвӑрт аслӑк ҫинчен анчӗ. Сетнер валли килти сӑра илсе тухрӗ, какай ҫимӗҫӗпе тӗрлӗ ҫыртмалли илме манмарӗ. Бодягӑпа пичӗ ҫинчи шӑйрӑксене сиплерӗ. Сетнер чӑтса лараймарӗ, Чечеке пилӗкӗнчен ыталарӗ.

– Хӑй чирлӗ, ҫавӑнтах сӗкӗнет, эсир, арҫынсем, пурте пӗр шухӑшлӑ.

– Эп ун пекки мар, хӑв куратӑн, урӑхларахххи.

Чечек нимӗн те каламарӗ, илӗртӳллӗн кулчӗ ҫеҫ. Ҫакна курса, Сетнерӗн темпераменчӗ хӗрсе кайрӗ. Вӑл Чечеке ачашшӑн хӑй умне вырттарчӗ. Чечекӗн сӑн-пичӗ хӑйне май илемлӗ, икӗ сарӑ ҫивӗчӗ пилӗкӗ таранах вӑрӑм, куҫӗсем тӗпсӗр пӗлӗт пек кӑн-кӑвак. Юмахри асамҫӑ хӗр-фея теме пулать ун пирки. Тути Чечекӗн кӑшт шыҫӑнчӑклӑ, йӑлтӑркка йӑм-хӗрлӗ, кӗлчечекӗн ҫеҫки пек черчен. Юратупа антӑхса сӗртӗнмелле ку пӗрлӗхен пек тутана. Сетнерӗн пуҫӗ ҫаврӑнса кайрӗ, чунӗпе ӳчӗ илемлӗхе пӗрлешрӗҫ. Хӑйне

кирлине тивĕçтерсен, Сетнер утă çинче юн асăрхарĕ.

– Санăн каччă пур тетĕн, хăвна ав тĕкĕнмен те, айăпсăр чун пулнă.

– Сирĕн унта хулара хăвăрт намăса çухатаççĕ, хĕрлĕхне сыхламаççĕ, çав шутра çула çитменнисем те.

– Ку енчен тĕрĕсне калатăн, Чечек, çук сăмах сана хирĕçлеме.

Чечек вăтанчăклăн та айăплăн куçĕсене тартрĕ, пичĕ хĕрелчĕ.

– Хулара халь çамрăксем çĕнĕлле пурăнаççĕ, – типнĕ тутипе йывăррăн калаçрĕ Сетнер.

– Каласа пар, тархасшăн, мĕн енчен?

– Çамрăксем çырăнмасăр та венчете тăмасăр пĕрлешеççĕ, пĕр-пĕрне килĕштерме пăрахсан, çавăнтах уйрăлаççĕ, суттем тăвасси çук, сăваплăха çухатнăскерсем вĕсем.

– Тĕрĕсне калатăн, Сетнер, ун пек пурнăç хĕрарăма аскăнчăка кăларать. Хĕрарăмăн ĕмĕрĕнче вара пĕр упăшка пулмалла, мĕн виличчен вĕсем пĕрле пурăнмалла.

– Ку чăнах çавнашкал ĕнтĕ, лешĕ вара Хĕвеланăçĕнчен килнĕ культура, лере вăл пăчланса пырать, кунта çĕнĕрен çуралса амаланать.

– Ялта кашни çын куç умĕнче, пурин çинчен те пĕтĕмпех пĕлеççĕ, çавăнпа хĕрсем именеççĕ, тем пулсан, пĕтĕм ял умĕнче намăс.

– Пĕлме кăсăклă, Атнерпе мĕнле паллашнă вара эсĕ?

– Лармана çŷренĕ чухне паллашнă. Пирĕн, хĕрсен, каччăсемпе чипертерех пулмалла, пĕр вĕçĕм улăштармалла мар вĕсене, хăвăртрах качча тухма тăрăшмалла.

– Вара пурнăç тăршшĕпе юратусăр пурăнмалла, сыснанни пек пичĕ çине пăхмалла.

– Каччи япăх мар, ун пирки çавнашкал калама кирлĕ мар.

– Эп мĕн куратăп, çавна калатăп.

– Ватă хĕр пулса юлни аван тетĕн-им? Ун пеккисен кунçулĕ пирки пире пирĕн Улькка каласа паратчĕ, тăшмана та сунмастчĕ ун пек кун-çула.

– Хĕрарăмсене ăнланма йывăр ку пурнăçра.

– Ăнланма кирлĕ те мар, çав Ульккках калать, вăхăт иртсен юратăн е хăнăхăн тет.

– Тем те пĕр каласа пĕтертĕн кунта, Чечек, аванмарланса каятăп сана итлесе.

– Камăн мĕн ыратать, çавăн çинчен калаçать çын.

Чечек Сетнерĕн шыçăк тути çине пăхрĕ, ăна вăл хăй чуптуса шыçăнтарнă. Сетнер каллех ăна ыталарĕ, аллисем айĕнче хĕрĕн пиçĕ ÿт-пĕвне туйрĕ, уйрăмах кăкăрĕсем пиçĕ. Ачашшăн Чечек тутине сĕртĕнчĕ, çĕнĕрен пуçĕ çаврăнса килчĕ. Ку пĕрремĕш хут пулнă пек туйрĕ вăл, анчах вăл тахçанах ача мар ĕнтĕ.

– Çитĕ, Сетнер, чухлатăп малалла мĕн пуласса, ман унта ыратать, чăтаймастăп эп урăх халлĕхе, – вăл сиксе тăчĕ те вăр-вар пусма тăрăх анса кайрĕ.

Сетнерĕн пуçĕнче шухăшсем пăтранчĕç, малалла мĕн тумаллине пĕлмерĕ вăл, Чечеке мĕн каламалла-ши тесе аптăрарĕ. Халлĕхе хăйĕн ÿт-пĕвĕпе киленчĕ, ун çумне Чечек кĕлетки сĕртĕннĕ-çке. Хĕвел тахçанах тÿпене улăхнă, унăн шевлисем аслăк алăкĕнчен кĕреççĕ те Сетнер çине ÿкеççĕ. Сетнерĕн утă çинчи кĕлетки татах та ачашланса кайрĕ. Малтан алăкра Чечекĕн пуçĕ курăнса кайрĕ, унтан пĕтĕм кĕлетки. Çавах та мĕнле илемлĕ Чечек, шухăшларĕ Сетнер. Лотерея выляса илнĕ евĕр выляса илчĕ вăл ăна, телейлĕ билет лекрĕ. Унпа ăсран тухрĕ Сетнер.

– Эс чылай выртас тетĕн-и кунта кăмака çинче кушак пек?

Сетнер кахаллăн пуçне çĕклерĕ, Чечек çине сÿрĕккĕн пăхрĕ. Халь унăн, каçхи пек, хĕрпе юнашар выртас килчĕ, унăн ÿтне туйса выртас кăмăл çĕкленчĕ.

– Кун иртет, хĕвел анăçалла сулăнчĕ.

Ун пичĕ умĕнчех Чечек ун çине чĕркуçленсе пăхса ларать. Мĕнле вăл чиперленсе кайнă, тĕлĕнмелле çуталнă сăнпичĕ. Кахаллăн анасласа, Сетнер тепĕр майлă çаврăнса выртрĕ.

– Эс манпа юнашар чухне ман ăçта васкамалла тет?

– Ыран тунтикун, санăн ĕçе каймалла мар-и вара?

– Сăмах çук, эс тĕрĕсне калатăн.

Сетнерĕн каллех Чечеке пăхăнтарас килчĕ, вăл хатĕрленсе ун еннелле сикрĕ. Хĕр ун аллинчен шуса тухма ĕлкĕрчĕ, ахăлтатса кулса ячĕ, çĕр çине анса кайрĕ, унăн янăравлă кулли унтан та илтĕнчĕ. Ун хыççăн Сетнер те анчĕ, хăйне

тирпее кёртме шутларӗ, унӑн ҫула тухмалла-ҫке. Умывальник кил хушшинчех ҫакӑнса тӑрать. Вӑл питне ҫурӗ те пӳрте кӗчӗ, стена ҫинче ҫакӑнса тӑракан тӗкӗр ҫине пӑхрӗ, хӑйӗн шӑйӑрӑлса пӗтнӗ сӑн-питӗнчен хӑраса ӳкрӗ.

– Сан сӑн-пит, Сетнер, ҫынсене хӑратмалли, – хӑйне хӑй каларӗ Сетнер, чунӗ вӑркаса кайрӗ. – Вӑт мӗнле манӑн ӗҫсем, Елчӗке анне патне ҫитесшӗнччӗ-ҫке. – Чунӗ татах та ытларах вӑркама пуҫларӗ. – Тунтикун вара пӗрремӗш рейспа Шупашкара таврӑнасшӑнччӗ. – Ҫӑваннӑ хыҫҫӑн вӑл хӑпартланнӑ кӑмӑллӑччӗ, хӑй ҫине тӗкӗрте пӑхса илнӗ хыҫҫӑн кӑмӑлӗ пачах пӑсӑлчӗ.

– Ӑҫта кайӑп ӗнтӗ кун пек илемсӗр сӑн-питпе? – Вӑл пуҫне кӳренӳллӗн пӑркаларӗ. – Ҫук, аннен кӑмӑлне хуҫмастӑп кун пек сӑн-питпе.

Чечек айккинче кулса тӑрать.

– Эс мӗн, мана мӑшкӑллатӑн-им?

– Ытла та чиперрӗн курӑнатӑн та.

– Юрӗ-ҫке сана аташма.

Сетнер Чечеке ыталарӗ, хыттӑн чуптурӗ. Хӗр аран-аран каччӑ ытамӗнчен хӑтӑлчӗ, сывлайми пулса, аран каларӗ:

– Сӗтел хатӗр, хаклӑ хӑнам, манӑн хула каччи.

Ял сӗтелӗ вӑл яланах пуян, варринче сӑра кӑкшӑмӗ ларать. Сетнер ӑна илсе тулли курка ячӗ, тӑраничченех ӗҫрӗ, тути ҫумӗнчи кӑпӑка ҫаннипе шӑлса илчӗ.

– Ма ун пек тӑватӑн, шӑлса илме алшӑлли пур вӗт, ав вӑл сан ҫумӑнтах выртать.

– Эп асӑрхаймарӑм, хаклӑ тусӑм, унсӑрах пуҫӑм нимӗн те тавҫӑрмасть.

Сетнер пӳрт ӑшчикне пӑхса ҫаврӑнчӗ. Чӳрече каррисем илемлӗ тӗрленӗскерсем, чӑлан алӑкӗ ҫумӗнче ҫакӑнса тӑракан алшӑлли те тӗрӗллӗ, Чечекӗн тумӗ те ҫавнашкалах. Чечек Сетнере хӑналама тытӑнчӗ, каччӑ хӑвӑрт тӑранчӗ. Калинкке алӑкӗ уҫӑлса хупӑнчӗ, ҫенӗкре ура сасси илтӗнчӗ, ерипен пӳрт алӑкӗ уҫӑлчӗ. Алӑкра Чечек сӑнӗллӗ хӗрарӑм курӑнчӗ, аппӑшӗсем пекех курӑнаҫҫӗ, пӗри аслӑрах ҫеҫ.

– Ай, хӗрӗм, эп сана паян кунӗпех ял тӑрӑх шыраса ҫӳретӗп, ура утми пулчӗ, – вӑл хӗрӗ ҫине ӳпкевлӗн пӑхрӗ. – Туйра пултӑм, парне патӑм, ҫӗнӗ мӑшӑра саламларӑм.

Сухви саппунне майларĕ, вăл алăпа тĕрленĕскер, питĕ илемлĕ, хулара ун пеккине кураймăн та. Хĕрарăм тутăрне салтрĕ, сак çине ларчĕ.

– Сан каччу Атнер килсе кайрĕ, сана шыраса хăшкăлнă, çилĕллĕ çӳрет, – Сухви темиçе хутчен тутипе чаплаттарчĕ. – Эпĕ те кăмăлсăрлантăм, ăçта пулнă эсĕ вара кĕçĕр?

– Мĕн шырамалли пур мана, анне? – Чечек амăшне питĕнчен чуптуса илчĕ. – Эп кунтах, килтех пулнă.

Сухви çавăнтах шиклĕн Сетнере тинкерчĕ, сăн-пичĕ ытла та шиклентерет.

– Паллах, утă аслăкĕнче, ăçта пулма май пур урăх.

– Эс мĕн, хĕрĕм, ăсран тухмарăн пулĕ те? – икĕ аллипе те пуçне тытрĕ Сухви. – Кун çинчен сан Атнеру пĕлсен, мĕн пуласса чухлатăн-и хăть? Шăв-шав пулать вĕт. – Вăл пуçне унталла-кунталла сĕлтсе илчĕ. – Ай, мĕнле намăссăр хĕр иккен эсĕ, мĕн калатăн аннӳне.

– Улталиччен е айккинелле пăрăниччен асаплă чăнлăха каламалла, мĕншĕн иккĕлле вăйă выляс ман?

– Эс хăть тем кала та, эп çавах санпа килĕшместĕп.

– Ав, пăх, мĕн туса хучĕ çынпа сан Атнеру, – Чечек пӳрнипе Сетнер çине кăтартрĕ.

– Мĕнле тулккăсăр хĕр эс манăн? – хавхаланса кайрĕ Сухви, куçĕсем çиçе пуçларĕç. – Ку çынна пĕрремĕш хут куратăп. – Вара кӳренӳллĕн каларĕ: – Мĕнле пултартăн вара çĕр те кун иртерме унпа?

– Мĕнех вара, çынĕ мана килĕшет пулсан!

– Санпа ăсран тухма пулать, Чечек.

– Анне, тархасшăн, лăплан.

Амăшĕ хĕрне çиллессĕн тĕртсе ячĕ.

– Ухмаха ернĕ пулмалла эсĕ, хĕрĕм. – Сухви темĕнле хутланса-пĕчĕкленсе ларчĕ, пуçне сĕтел кĕтессине хучĕ те йĕрсе ячĕ. – Кăвак çӳçе çитрĕм, манăн хĕрĕм çавăн пек пуласса шутламан та, юмламан та.

Ĕçсем çакăн пек килсе тухнине курса, Сетнер ура çине тăчĕ, Чечеке хăлхаран пăшăлтатса каларĕ:

– Куратăп, пирĕн хушăри калаçу кунта малалла тăсăлас çук, айта ăсатса яр мана, тархасшăн, хаклăскерĕм.

– Аванах куратăн вĕт, аннене кун пек халпа пĕччене хăварма пултараймастăп.

– Апла пулсан тух йӑпӑртлӑха, аннӳ умӗнче калаймастӑп мӗн калас тенине.

Сетнер Чечеке аллинчен сӗртӗнсе илчӗ, хӗр пӗр сӑмахсӑрах ун хыҫҫӑн утрӗ. Вӗсем хыҫӗнчен алӑк хупӑннӑ хупӑнман Сетнер Чечеке ыталаса илчӗ те чуп тума пуҫларӗ.

– Ухмаха тухрӑн пулӗ эсӗ, Сетнер, анне тухас пулсан, пӗлсех тӑратӑп, чӗри тапма чарӑнать.

– Ан тив, хӑнӑхтӑр, эп сана ҫав тери хытӑ юрататӑп, никама та памӑп.

– Ку халлӗхе нимех те пӗлтермест, куратӑн вӗт, сана курсан анне кӑмӑлсӑрланчӗ, ун кӑмӑлне хуҫас килмест манӑн, ҫут тӗнчере вӑл манӑн чи ҫывӑх ҫын. – Сывлӑшсӑр пӳлӗнсе, вӑл Сетнере вӑйпах тӗртсе ячӗ.

– Акӑ сумкӑра анне валли тесе илнӗ кучченеҫсем, вӗсене кунта хӑваратӑп.

Чечек пӗр сӑмах та шарламарӗ. Сетнер урама тухрӗ, астуса юлас тесе ҫурт ҫине тимлесе пӑхрӗ. Кӗҫех вӑл автобус чарӑнӑвне ҫитрӗ. Шупашкарти хваттерне ҫитсен вӑл ваннӑйӗнче ҫӑвӑнчӗ, унтан тухсассӑн симӗс этикеткӑллӑ «Букет Чувашии» ятлӑ сӑра пӗр кӗленче ӗҫрӗ, вара вырӑн ӑшне кӗрсе выртрӗ те ирччен тӑмарӗ.

Хӗрарӑмсем иккӗшех ларса юлчӗҫ, вӗсем тавра шӑплӑх хуҫаланчӗ, сехет шаккани ҫеҫ илтӗнсе тӑчӗ. Салхуланса пусӑрӑннӑ амӑшне питӗ шеллерӗ Чечек, хуйхӑллӑ амӑшӗ сасартӑк темӗнле пӗчӗкленсех ларчӗ, ача пекех курӑнать. Ӑна лӑплантарас шутпа Чечек ун патне пычӗ, ҫурӑмӗнчен ачашлама пикенчӗ, анчах амӑшӗ унӑн аллине ҫиллессӗн тӗртсе ячӗ. Хӗрӗ шеллени кирлӗ пулмарӗ ҫак самантра амӑшне. Вара пӗр чӗнмесӗр тута тӑсса ларчӗҫ вӗсем. Пӗрпӗринсӗр пурӑнайманскерсем, халӗ пӗр-пӗринпе ҫурӑмпа ларчӗҫ. Юрать-ха, Чечекӗн хӗр тусӗ Кӳлпи килчӗ. Савӑнӑҫлӑн ахӑлтатса, вӑл Чечеке ыталарӗ.

– Тем, эс ниҫта та курӑнмастӑн, Чечек?

– Ниҫта та тухас килмест, хӗр тусӑм Кӳлпи.

– Ниепле те ӑнланаймастӑп, мӗн пулнӑ сана, Чечек?

– Пурте йӗркеллӗ, хӗр тусӑм Кӳлпи.

– Юрӗ-ҫке, тепринче каласа парӑн, куратӑп, тем пулнӑ, – Кӳлпи ун ҫине тӗлӗнсе пӑхрӗ. – Тен, лармана каяр, хӗр

тантăшсемпе чăваш юррисене юрлар, вара иртсе каять те кичемлĕх.

Чечек килĕшмесĕр пуçне пăркаларĕ.

– Каччăсем пырĕç унта, сан Атнеру та пулĕ.

Чечек пĕр сăмах шарламасăр тăчĕ, куçĕ питĕ салхуллă. Кўлпи ун çине пăхрĕ те урăх нимĕн те каламарĕ, алăка шанлаттарса хупса тухса кайрĕ.

Никампа та калаçас килмерĕ Чечекĕн, çав шутра хăйĕн каччипе Атнерпа та. Кĕртмерĕ ăна Чечек, пĕтĕм алăксене кĕле хурса тухрĕ. Атнер урамра пўрт умĕнче çиллессĕн çўрерĕ, кантăкран кăшкăрчĕ.

– Асту, Чечек, ытлашши мăнкăмăллă ан пул, никамсăрах тăрса юлатăн ак! – Атнер шĕвĕр пўрнипе юнарĕ. – Мана тиркени пысăк йăнăш пулмĕ-и санăн?! – Вăл темиçе хутчен кантăка чышкипе шаккаса илчĕ. – Аван пĕлетĕп, кайран хăвах кулянăн-ха! – Атнер темиçе хутчен çĕре сурчĕ. Айккинче тăракан юлташĕсенчен пĕри каларĕ:

– Эс мĕн ун умĕнче мĕскĕнленетĕн, Атнер?

– Вăл мана килĕшет, шкулта вĕреннĕ чухнех асăрхарăм эпĕ ăна.

– Сур эс çав Чечек çине, ав мĕн чухлĕ хĕр пирĕн ялта, кирек хăшĕ те сан хыçран пырĕ, ав мĕнле кĕрнеклĕ каччă эсĕ.

– Юрĕ-çке сире, атьсемри, мана лăплантарма.

Юлташĕсем Атнера ыталарĕç, юрă юрласа ячĕç те урам тăрăх утса кайрĕç. Çакăн хыççăн Чечек вырăн çине лаплатса ўкрĕ, питне минтерпе хупларĕ те уласа йĕрсе ячĕ, туйăмсене ирĕке ячĕ. Амăшĕ хĕрĕ асапланнине курчĕ. Ывăлĕсен нихçан та ун йышши проблемăсем сиксе тухман. Вăл хĕрĕ çумне вырăн çине пырса ларчĕ, Чечеке çурăмĕнчен ачашлама тытăнчĕ. Унăн кушăрханă ал лаппи айĕнче хĕрĕн кĕпи кăштăртатрĕ.

– Лайăх ăнланатăп сана, хĕрĕм, çавнашкал ĕнтĕ пирĕн хĕрарăм шăпи, – унăн та куçĕ шывланчĕ. – Кама юрататăн, вăл инçетре, ирĕксĕрех юратманнине качча тухма тивет.

Чечек пуçне çĕклерĕ, амăшне ыталаса илчĕ, вара икĕ хĕарăм тăраничченех йĕчĕç, çавăн хыççăн тин чунĕсем лăпланчĕç пулмалла. Тепĕр кунне ним пулман пекех тăчĕç вĕсем. Ирхине пўртре тирпей турĕç, кил-çурт ĕçĕсемпе аппаланчĕç, савăк юрăсем юрларĕç, ĕçĕсем ăнчĕç вĕсен. Кун вĕçĕнче çавах

та хурланчăклă юрăсем юрлама тытăнчĕç, чунĕсене тивтерчĕç, каллех шăппăн йĕчĕç, кашни хăйĕн шухăшĕсемпе асапланчĕ. Чечек çук-çук та кантăкран пăха-пăха илчĕ, хушăран тимлесех тем итлерĕ; Сетнере кĕтрĕ вăл, паллах.

Эрнекун çитессе Сетнер кунсерен чăтăмсăррăн кĕтрĕ, канмалли кунсене Чечекпе ирттерес шанăçпа çунчĕ. Пĕр кунхине вăл ĕçрен таврăнчĕ. Хваттере кĕнĕ-кĕмен телефон шăнкăртаттарчĕ.

– Ало, итлетĕп сире.

– Ку эпĕ-ха, Наташа, санăн ытарайми чунăмçу, – илтĕнчĕ йăнкăрти сасă, кăшт хаярлăх та туйăнчĕ сасăра. – Ăçта çухалса çÿретĕн эсĕ, манăн барсикĕм? Эп манман сан çуралнă кунна, парне туянтăм.

Сетнерĕн çав тери тĕл пулас килмерĕ унпа çак самантра, трубкăна тытса шарламасăр тăчĕ.

– Тем, илтĕнмест савăнăçлăн алă çупни.

– Чирлетĕп-ха кăштах, шăнтăм пулмалла ялта, – пĕрремĕш хут суйрĕ Сетнер хĕре.

– Халех пыратăп, хаклăскерĕм, сывататăп, самант ура çине тăрататăп, ун йышши эмел пур манăн.

– Кирлĕ мар чăрманма, ман чирĕн микробĕсем сана куçма пултараççĕ, ман пек ÿсĕрме те апчхулатма пуçлăн.

– Темех мар, пĕрле апчхулатăпăр та чирлĕпĕр тулли программăпа.

– Татăклăн калатăп, эс кунта килессине хирĕç эпĕ, Наташа.

Сетнер трубкăна пăрахрĕ, алли тарланă та иккен. «Вăл мана текех килĕшменнине тÿрремĕнех каламаллаччĕ пулĕ Наташăна, çыхăнăва пĕр хутăн татмалла. Мĕн вăхăта тăсмалли пур, мĕн ачашланмалла унпа. Наташа, тĕрĕссине пĕлес пулсан, мĕнле шăв-шав кăларĕ, мĕнле харкашу пулĕ. Унпа васкамасăр, ерипентерех уйрăлмалла ĕнтĕ, ытлашши хумхантармасăр, вăл мана тек интереслентерме пăрахнине систермелле».

Сетнер диван çинче выртса телевизор пăхать. Куçĕ хупăна пуçларĕ, çывăрас килсе кайрĕ. Çав вăхăтра коридортан шăнкăрав сасси илтĕнчĕ. Вăл кайса алăка уçрĕ, Наташа килнĕ иккен.

– Уйăр аллуна кнопкăран.

– Куратăп, сывах иккен эсĕ, кăшт шурнă çеç.
– Мĕн кирлĕ сана, кала та кайма пултаратăн.
– Эс ăсран тухман пулĕ те, Сетнер, мĕн пулнă сана? – Наташа Сетнер пуçĕ çине тинкерчĕ. – Тен, санне пуçна амантнă? – Вăл аллипе Сетнер пуçне хыпашларĕ. Сетнер ун аллине хăвăрт тĕртсе ячĕ.
– Манăн пурте йĕркеллех, маншăн ан хумхан.
– Эппин мĕншĕн кĕртместĕн хваттере хăвăн юратăвна? – Наташа хăйĕн хура куçĕпе Сетнере тинкерчĕ. – Эп тунсăхласа çитрĕм çак курман кунсенче, манăн хаклăскерĕм. – Вăл Сетнере мăйĕнчен выççăн ачашларĕ. – Чылай пулать курманни сан çара ўтна, Сетнер.
– Ытла та ясар-çке эсĕ.
– Ун пек ан кала, Сетнер, ман халь сан айра пулас килет, ман ытарайманскерĕм.
– Манăн вара пĕр чĕптĕм те ун пек шухăш çук.
– Чăнах та сўтĕлнĕ-çке эсĕ, – Наташа Сетнерĕн çамкине тытса пăхрĕ. – Эпир санпа калаçса татăлтăмăр-çке, хаклăскерĕм. – Вăл каччă çине чăрсăррăн шăтарасла пăхрĕ. – Сан çуралнă куну хыççăн ЗАГСа заявлени пама каятпăр терĕмĕр-çке, мантăн та-им çавна?
– Шухăшсем ман пачах улшăнчĕç, авланас мар тетĕп халлĕхе, эс, Наташа, хăвна ытла сĕмсĕррĕн тытатăн, авланас-тăвас пулсан, эс мана çисе те ярăн е хăвăн тарçу туса хурăн: ăна пар та куна илсе кил.
– Куратăп, ку ахальтенех мар, урăх хĕрарăм тупрăн пулĕ-ха.
– Ку вара сан ĕç мар, Наташа.
– Мĕнле ман ĕç мар, арăмĕпе упăшки пек пурăнтăмăр вĕт? – Наташа пĕрре шуралса, тепре хĕрелсе кайрĕ. – Çак икĕ канмалли кун мĕн пулчĕ вара санпа? Сана урăх çынпа улăштарнăнах туйăнать.
Питне пĕркелентерсе, Сетнер пуçне ярса тытрĕ.
– Ай, çав тери пуç ыратать, санпа лăпăртатса тăма пĕр вăй та çук манăн.
Куçне тарăхуллăн хĕссе, Наташа кулançилле ыйтрĕ:
– Тен, эсĕ урăх хĕрарăм тупрăн?
– Сана мĕн ĕç, халлĕхе эсĕ ман арăм мар-ха мана тĕрĕслеме.

Наташа хваттере кёресшён пулчё, анчах алăк хашакёнчен тытса Сетнер ăна малалла ямарё.

– Ах, эсё çавăн пек-и?

Наташа шпилька кёлёллё пушмакёпе пёрех пусрё Сетнер ури çине, шăпах пўрнине лектерчё.

– Ай, ыратать вёт, тăнран тухнăскер, зараза.

Наташа алăка шанлаттарса хупрё, пусма тăрăх чупса анса кайрё, урама пуля пек сирпёнсе тухрё. Сетнер ыратнипе кукленсе ларас вёçнех çитрё, куçё шывланчё.

– Вăт хёрарăм, ун майлă мар пулса тухсассăнах тигр ами евёр çавăнтах çурса тăкма хатёр.

Сетнер зала хăрах ура çинче сиксе кёрсе кайрё, стенка шкафёнчен арçын одеколонё кăларчё. Ыратакан вырăна массаж туса одеколон сёрчё, анчах çав вырăн куç умёнчех кăвакарса пычё. Телефон шăнкăртаттарчё, Сетнер ун патне васкарё, хăрах ура çинче тăрса трубкăна тытрё.

– Ало, итлетёп, кам проводра, калăр, пёр чёнмесёр ан тăрăр.

Проводăн тепёр вёçёнче шăплăх тăчё, унта Наташа пулнине Сетнер ăнланчё, ăна тёрёслет пулё-ха. Урăх никам та ан чăрмантартăр тесе, телефон провочён вилкине розеткăран кăларчё.

Хăй те никам патне те шăнкăравлама шутламарё. Тёкёр çине пăхса пит çинчи шăйрăксене бодягăпа сёрчё.

Чечек тем пекех тунсăхларё, пёр вёçём чўречерен пăхрё, урама тăрăхла тинкерчё. Каçсерен вăл кашни чăштăртатнă сасса итлесе выртрё. Сетнер килессе чăтăмсăррăн кётрё. Иккёленўллё шухăшсем те пырса кёреççё пуçа. Чăнахах та Сетнер манчё-ши ăна, пăрахма шутларё-ши? Хăйне кирлине илчё те, хăлхана курайманла тек кураяс та çук-ши ăна? Шырас пулсан, хушаматне те пёлместёп вёт. Анчах хёр курнăçёпе вăл ăна шырас çук, паллах. Çав самантра халсăрланнăшăн Чечек халь хăйнех ятлать, ытлашшипех çемçешке пулчё-ши вăл ун чухне, е юрату çуралчё унăн чунёнче? Чунне лăплантарса, Чечек çавах та ку юратăвах пулё тесе шутларё. Çавăн чухне Сетнерпе ирттернё кун яланлăхах унăн асне кёрсе юлчё.

Эрнекунхи ирпе Чечек савăклă кăмăлпа тăчё вырăн çинчен. Ёç хыççăн каç тёлне Сетнер килсе çитессе шанчё

вăл. Акă каç пулса та çитет. Автобус расписанине пĕлсе Чечек эрне хушшинче пĕрремĕш хут паян урама тухрĕ, Елчĕк çулĕ еннелле автобус чарăнăвĕ патнелле утрĕ. Автобус çитсе чарăнчĕ, Шупашкарта ĕçлесе пурнăнакан хăйсен ялĕн çыннисем кĕпĕрленсе тухса ял еннелле утрĕç. Анчах Сетнер курăнмарĕ. Кăмăлĕ хуçăлнă Чечек килне таврăнчĕ, çурçĕрччене чӳрече умĕнче ларчĕ, Сетнер çитессе кĕтрĕ. Куçĕнчен ирĕксĕрех куççулĕ юхрĕ, чăнах та хĕрарăмăн юратăвĕ çавнашкалах кĕске-ши?

Эрнекун Сетнере ĕç хыççăн тытса тăчĕç. Вăл юратнă Чечекĕ патне кайма шутланăччĕ, анчах акă ĕç тухмарĕ. Хваттерне вăл каçа юлса таврăнчĕ, çитменнине – ывăнса. Çылăхран аяккарах пулас терĕ вăл, çул çинче çĕрле тем пăтăрмах та сиксе тухма пултарать, çул айккинчи канава та чăмма пулать, çавăнпа вăл ирччен кĕтес терĕ. Шăматкун ирхине Сетнер тăраниччен çывăрас тенĕччĕ, яла вара кăшт каярах кайма шутланăччĕ. Апла пулин те вăл пилĕк сехетре ура çинче пулчĕ. Тулта тĕттĕмччĕ-ха, çапах та кĕркунне-çке. Çанталăк çумăрлă пулмалла, чӳрече янахĕнчи шуç çине çумăр тумламĕсем панлаттарса ӳкеççĕ. Хăйĕн машинипе каймалла-ши, е рейсри автобуспа, шутласа тăчĕ вăл пĕр самант, вара хăйĕннипех кайма шутларĕ, унсăрăн чарăнуран çумăр айĕнче йĕпенсе утма тивет. Юратнă Чечекĕ патне хăçан çитессе шутласа тăмарĕ вăл. Инçете çӳрекен автобуссен шоферĕсем ун пирки нихçан та шутламаççĕ, калаçмаççĕ те. Пĕррехинче пĕр шофер çак йăлана пăсрĕ, ун чухне Сетнер автобуспа Мускавран таврăнчĕ. Кăштах апатланма та чей ĕçме Лысковăра чарăнчĕç вĕсем. Столовăйĕнчен пĕрерĕн-икшерĕн тухсан каллех автобуса кĕрсе ларчĕç. Шофер пĕр хĕрарăмпа калаçатчĕ. Пассажиркăсенчен пĕри шофертан ыйтрĕ:

– Шупашкарта хăçан пулатпăр?

– Ахăртнех, çурçĕр тĕлне çитетпĕр.

– Шеф, аван пĕлетĕн вĕт, шоферсен ун пирки калаçас йăла çук.

– Фу, ку хĕрарăмсемпе, мансах кайнă ун пирки.

Автобус кĕçех тапранчĕ вырăнтан. Хăшĕ-пĕрисем тĕлĕрсе ларчĕç. Воротынец патĕнче автобус малта пыракан машинăран иртсе каяс терĕ. Çав вăхăтра автобуса хирĕç ăнсăр-

тран «ГАЗель» сиксе тухрĕ, вара вĕсем çамкапа çамка тенĕлле çапăнчĕç, автобус çул айккинчи канава анса кайрĕ. Сехет хушши кăларчĕç шофера кабинăран. Юрать, пĕр пассажир та сăтăр курмарĕ. Ку аварипе икĕ сехет иртсе кайрĕ. «ГАЗель» шоферĕ автобус шоферĕн тусĕ пулнă иккен. Ак мĕнле пулса тухать тепĕр чухне пурнăçра. Пассажирсене икĕ автобуса лартса малалла илсе кайрĕç. Вăт çавăнпа та шоферсем нихçан та сасăпа каламаççĕ хăçан вырăна çитессе, хăйсен пуçĕсенче çеç тытаççĕ.

Хăйĕн гаражĕ машини патне çитнĕ тĕле Сетнер çапах та кăштах йĕпенчĕ.

Кучченеçсене вăл малтанхи кунсенчех туянса хатĕрлесе хунăччĕ, çавăнпа ниçта та кĕрсе тăмарĕ. Машинине те вăл ытлашши хăвăрт хăваламарĕ. Машина умĕнчи кантăка тасатакан «дворник» пĕр майăн сылтăмалла та сулахаялла сулланчĕ, Сетнер куçĕ умĕнче мĕлтлетсе вĕчĕрхентерчĕ. Кĕçех вăл яла пăрănакан çул тĕлне çитрĕ. Кунта асфальт пылчăклă, çавăнпа машина хыçĕ унталла-кунталла пăрăнкаларĕ. Вăхăт – ирхи тăхăр сехет, çавах та пĕлĕтсем ытла аялта пулнăран япăх курăнать çул. Çумăр айĕнче пур çурт та пĕр пек курăнать. Сетнер аран палласа илчĕ Чечексен çуртне, пÿрт умĕнче ÿсекен йăмрасем пулăшрĕç, яштак хĕрсем пек кĕтсе илчĕç вĕсем ăна. Таврара шăплăх тăрать, пÿрт чÿречисенче çутă çук. Сетнер кил хушшине кĕчĕ. Амăшĕпе хĕрĕ сарайĕнче çĕрулми суйлаççĕ иккен. Вĕтĕреххисене тепĕр çул валли вăрăлăха пĕр вырăна купалаççĕ, касăлса пĕтнисене выльăх валли уйăраççĕ, шултрисене пасарта сутма тепĕр тĕле купалаççĕ, вăтаммисем, чи тутлисем, хăйсене çиме юлаççĕ. Çĕрулмийĕ чылай вĕсен, кăçал вăл аван тухрĕ. Калинккерен кĕрсен çенĕкелле утасшăнччĕ Сетнер, анчах сарайĕнче аппаланакан икĕ хĕрарăма вăхăтра асăрхарĕ, иккĕш те вĕсем фуфайкăпа. Сетнере курсан Чечекименсе пуçне усрĕ, вăтаннипе куçне тартрĕ.

– Аван пурăнаççĕ-и, хĕрсем?

Хирĕç хуравлакан пулмарĕ, лешсем иккĕш те ун çине тĕлĕнсе пăхрĕç, мĕнле майпа килсе тухма пултарчĕ ку çак вăхăтра, тесе шутларĕç пулмалла.

– Эсир мĕн шарламастăр нимĕн те, ку çипуçпа ман умра вăтанатăр-им? Илеме нимĕнпе те хуплаймăн, манăн кăмăллă

хĕрарăмсем. – Сетнер Чечек патне пычĕ, ăна чуптурĕ, лешĕ хĕрелсе кайрĕ. – Ниепле те ăнланаймастăп, эсĕ аннӳ умĕнче именетĕн-им, Чечек? – Сетнер вĕсем çине пăхса хулпуççийĕсене сиктерсе илчĕ. – Эсир аннӳпе иксĕр эрнипех калаçрăр пулĕ-ха, пĕтĕм шăмшака чӳхерĕр ĕнтĕ, çавăнпах-и хулара темиçе хутчен те иклетрĕм.

Чечек халĕ те пĕр сăмах та шарламарĕ-ха, пичĕ татах та ытларах хĕрелчĕ. Амăшĕ сăмах хушрĕ:

– Пăхатăп та сан çине, йĕкĕт, ытла та йăлттам эсĕ.

– Ма ахалех вăхăта тăсас паянхи хăвăрт иртекен пурнăçра? – Сетнер хăй çине те, вĕсем çине те пăхса илчĕ. – Хĕрĕре мана качча пама ыйтатăп.

Сетнер Чечекĕн аллине тытрĕ те вĕсем хĕрĕн амăшĕ патне çывхарчĕç, ун çине ыйтуллăн пăхрĕç. Сухви татăклăн ыйтрĕ хĕрĕнчен:

– Эс хăв мĕнле, килĕшетĕн-и, хĕрĕм?

– Ăхă, анне, ку куна эп тахçанах кĕтнĕ.

Чечекĕн куçĕсем чĕрĕлчĕç, çуталса кайрĕç. Сухви Сетнертен те çавăн пекех татăклăн ыйтрĕ:

– Сан аçупа аннӳ мĕн шутлаççĕ кун пирки?

– Ак халех ларатпăр та машинăпа каятпăр вĕсем патне Чечеке вĕсемпе паллаштарма.

– Аçупа аннӳне хисеплениине нимĕн те çитес çук.

– Эппин пуçтар чăматанна, Чечек, аттепе аннепе паллаштарнă хыççăн тӳрех Шупашкара каятпăр, пĕрле пурăнма пуçлăпăр.

Сухви шартах сикрĕ, сăн-пичĕ улшăнчĕ.

– Çук, капла каймасть, çамрăк çыннăм, ун пек ĕçе çăмăлттайла тумаççĕ. – Сухви тутăрне майларĕ те ӳпкевлĕн каларĕ:

– Пурне те этемле тăвас пулать, йăла-йĕрке ыйтнă пек.

– Пĕр-пĕрне килĕштеретпĕр пулсан, мĕн вăхăта тăсмалли пур, мĕн тума кирлĕ пире текех уйрăлу?

– Тăхта-ха, ан васка, Сетнер, тĕплĕн шухăшламасăр нимĕн те тăвар мар, çамрăк тиха пек, çилхе вĕçтерсе çӳрер мар.

Хăйне сăпса сăхнă пек кансĕрленчĕ Сетнер.

– Туйне йĕркеллĕ тăвар та, кайран хăть тăвата еннелле кайăр, ку хăвăртан килет. – Сухви куççульне тутăрпа шăлса типĕтрĕ. – Манăн ялтах пурăнма юлмалла, мĕнле

куçпа пăхăп эпĕ çынсем çине, уйрăмах тăвансемпе пускилсем çине, мĕнле утса çӳрĕп ял урамĕ тăрăх, калăр мана, мĕнле намăс-симĕспе пурăнас манăн?

Ку таранччен пĕр шарламасăр тăнă Чечек амăшĕн аллине тытса кăкăрĕ çине хучĕ.

– Анне, манăн хаклăран та хаклă çыннăм, эс мĕнле калăн, çавăн пек пулĕ.

Иккĕшĕн те кăмăлĕсем çĕкленчĕç, пичĕсенче кулă палăрчĕ, куçĕсем чĕрĕлчĕç, вĕсем вĕт яланах пĕрле савăннă, пĕрле хурланнă, пĕрле куççулĕ юхтарнă.

– Эпир санпа туссем пекех, пĕр-пĕрне шанатпăр, пирĕн хушăра ултав çук, пулман та.

Сухви хĕрне ыталарĕ, пичĕпе унăн питне сĕртĕнчĕ, вĕсем ансат япалашăн та пĕрле савăннă. Вĕсем сарайĕнчен тухрĕç, унăн алăкне хупса сăлăпа патак тирсе хучĕ Сухви. Хĕрарăмсем пурте кĕчĕç, çенĕкре вĕсем тарăн калушĕсене хыврĕç. Сетнер кил хушшинче пĕчченех тăрса юлчĕ, вăл кил картине сăнавлăн пăхса çаврăнчĕ. Кунта арçын алли çитменни тӳрех куçа курăнать, унта сарай çивиттин хăми хăйпăннă, кунта тăрă пĕрени тайăлнă. Çумăрсем чарăнсан пĕр-пĕр уяр кун килсе пулăшмалла пулать иккĕмĕш амăшне чиперрĕн те юсавлăн хĕле кĕме, шухăшларĕ Сетнер. Çав самантра çенĕк алăкĕ уçăлчĕ те Чечек тухрĕ.

– Эс мĕн, ютшăнакан çынла, пӳрте кĕместĕн?

– Мĕншĕн чăрмантармалла сире, хĕрарăмсене, тумтир улăштарса тăхăнма? Вăтантарас мар терĕм сире.

– Ун пирки пăшăрханма кирлĕ мар, пирĕн те, чипер пурăнкан çынсенни пекех, хĕрарăм пӳлĕмĕ пур, урăхла каласан, çывăрмалли пӳлĕм. – Чечек йăл кулчĕ, куçне кăшт хĕсрĕ. – Унта эпир аннепе пысăк тĕкĕр умĕнче тум улăштарса тăхăнатпăр.

Сетнерĕн чĕри кăртлатса илчĕ, çавах та вăл хирĕçлес шухăшпа тутине уçма тăчĕ, анчах Чечек маларах сăмах хушрĕ.

– Сетнер, тархасшăн, хисепле аннене, вăл хатĕрленĕ апатçимĕçе тутанса пăх.

– Эпир пирĕннисем патне каятпăр вĕт, унта та сăй пулать.

– Юлашкинчен кунта та арçынла тыт хăвна, малалла ку та санăн.

– Çапла пултăр эппин, манăн хаклăскерĕм, килĕшмех тивет.

Сетнер Чечек хыçĕнчен çенĕке кĕчĕ, туфлине хывса калушсемпе пĕр рете лартрĕ.

Пӳртре ăшă, кĕрсессĕнех сылтăм енче вырăсла кăмака, ăна хутса кăларнă, пĕтĕм çурта кукăлĕн тутлă шăрши сарăлнă.

Сетнер малалла иртрĕ. Чăнах та, сĕтел çине противеньтен кăлармасăр сарă питлĕ кукăль лартнă, вăл кăпăшкаланнăн курăнать. Сухви нӳхрепрен сăра ăсса кĕчĕ.

– Иртсе лар, килти пек пул, пирĕн пулас кĕрӳ.

Сăпайлăн та именӳллĕн кĕрсе ларчĕ Сетнер сĕтел хушшине. Кăмăлĕ çĕкленнĕ Сухви çамкине шăлса илчĕ, тутăр айĕнчи çӳçне майларĕ.

– Пĕлнĕ пекех, сăра вĕретрĕм.

Темиçе хутчен сыпса илсе Сетнер куркана сĕтел çине лартрĕ.

– Мĕн тĕппипе ĕçместĕн, çилленчĕкне хăваратăн?

– Сăрашăн тавтапуç, анчах эпĕ руль умĕнче.

– Пĕр куркапах нимĕн те пулас çук килти сăраран.

– Сирĕ хисеплесе çуррине ĕçсе патăм эпĕ.

– Мĕн, япăх турăм-ши сăрана?

– Сăмахăм çук, питĕ аван.

Сăмах-юмах ан пултăр тесе Сетнер сăрана тĕппипех ĕçсе ячĕ. Сухви кунпа кăмăллă юлчĕ.

– Эп сана пысăк савăта ярса парăп, Шупашкара илсе кайăн.

– Куна хирĕç мар эпĕ, тархасшăн.

– Халь ĕнтĕ ман кукăле çисе пăх, анчах кăмакаран кăлартăм.

– Мĕнпе-ши кукăлĕ?

– Чăвашсен тахçанганхи йăлипе пĕçертĕм, асаннесенченех вĕренсе юлнă, çĕрулмипе те ашпа пĕçернĕ хуплу.

– Мĕн ачаранпах çисе ӳснĕ эп хуплăва, çав тери кăмăллатăп ăна, чи тутлă çимĕç тесе шутлатăп.

Сухви васкавлăн кукăле темиçе касăка вакларĕ, çурри алшăлли айĕнчех юлчĕ, алшăлли вĕçĕсене чăвашсен илемлĕ тĕррипе тĕрленĕ. Кукăль татăкĕсенчен пăс тухать, ырă шăршă кĕрет, сăмсана кăтăклать. Сетнер тек

чăтса лараймарĕ, турилккене хăй çывăхнерех туртрĕ.

– Сыпса çиме мĕн парас сана, Сетнер, сĕт е уйран?

– Уйран ярса пар, вăл уçăрах, килти апат-çимĕçе тахçанах тутанман.

Сухви чăмран тулли курка уйран ячĕ, Сетнер умне лартрĕ. Каччă тутлăхлă апатпа киленнĕ хушăра Чечек тумне улăштарчĕ. Ку хутĕнче чăваш кĕпи, çиелтен чăваш тĕрриллĕ свитер тăхăннă. Питĕ шукăллĕн курăнать, сăн-пичĕ татах та илемленнĕ, пĕлĕтрен çĕр çине аннă таса чун тейĕн. Тĕлĕнсе хытнипе Сетнер çиме пăрахрĕ, çăварне карса ура çине тăчĕ.

– Анне, эпир кайрăмăр, пирĕншĕн, тархасшăн, ан пăшăрхан, каç енне тем тесен те килте пулатăп, юлашки автобуспа çитĕп.

– Эп хамăн пурнăçа пурăнса ирттернĕ темелле, хĕрĕм, темĕн те пулнă пурнăçра. – Сухви аллапписемпе чĕрçиттине шăлса якатса илчĕ. – Чи кирли, телейлĕ пулăр пĕрлехи пурнăçра. – Сухвин куççулĕ юхса анчĕ, вăл кăмака хыçне кĕчĕ.

– Кăмăла ан пăс, анне!

– Урăх тек пăсмăп, хĕрĕм, эс хăвăн юратăвна вăхăтра тупнишĕн савăннипе эпĕ.

Чечек амăшĕ патне пычĕ, ăна питĕнчен чуп турĕ, тутине çулласа илчĕ, вăл куççультен тăварлăччĕ.

– Ай, мĕнле йывăр пулчĕ юратман çынпа пурăнма.

Чечек пуçне амăшĕн кăкăрĕ çине хучĕ.

– Мана ялта Юлташ килĕшетчĕ, вăл хуткупăспа питĕ чаплă вылятчĕ, анчах килтисем мана унпа çÿреме ирĕк памарĕç, вăл çара уралла чухăн, çителĕклĕ пурăнма унăн нимĕн те çук терĕç. – Сухви ассăн сывласа илчĕ, аллине Чечек пуçĕ çине хучĕ.

– Мана аттепе анне качча пачĕç, килĕштеретпĕр-и пĕрпĕрне – пирĕнтен ыйтса тăмарĕç, вара сан аçупа ĕмĕре ирттертĕмĕр пĕрле, ман алă çинчех вилсе кайрĕ.

– Пулма пултарать-и вара пурнăçра çавнашкал?

– Ун чухне, хĕрĕм, пĕтĕмпех пулма пултарнă, аттепе аннене хирĕçлесе мĕн те пулин каласа пăх-ха, хăть пĕр сăмах та пулин, питĕ çирĕп тытнă пире. – Сухви тĕтреллĕ куçĕпе иккĕшĕн çине ырă кăмăлпа, ăшшăн пăхрĕ. – Турă пулăшса тăтăр сире, çамрăксене, чипер те телейлĕ пурăн-

ма, мана, ватăскере, ан манăр кăна, сире яланах хаваспа кĕтсе илĕп.

– Анне, мĕн калаçатăн эсĕ, кам патне каййăп тата сан патна килсе çӳремесĕр, санран çывăх çын çук ман тĕнчере.

Виççĕш те кăмăллăн йăл кулчĕç, алăк патĕнче çамрăксем карчăкпа сывпуллашрĕç. Çумăр пĕр чарăнмасăр çăвать, вĕçĕ-хĕрри курăнмасть, тӳпене калăпăшпе хура пĕлĕтсем карса илнĕ, вĕсем аялтанах шăваççĕ. Талккишпех шыв кӳленчĕкĕсем, ку тата çителĕксĕр-мĕн, пĕтĕм çĕре хупласшăн шывпа. Нумай пулмасть сап-саррăн курăннă тавралăх тĕссĕрленнĕ, витĕрех йĕпеннĕскер, шупкаланнă. Чечек лупас айĕнчен çумăр айнелле аллине тăсрĕ.

– Ай, Сетнер, эп пачах маннă, каялла кĕрсе сунчăк илсе тухам-ха.

– Каялла таврăнасси аван мар паллă, ăнăçу пулас çук теççĕ ваттисем, çавах та манăн аттепе анне патне каятпăр вĕт.

– Мĕн калатăн эс, Сетнер, автобус чарăнăвне çитнĕ тĕле эпир витĕрех лачкам йĕпе пулатпăр-çке, шутлатăн-и эсĕ çавăн пирки?

– Ма йĕпенмелле тет пирĕн хапха умĕнче машина тăрать пулсан?

– Вăт мĕнле иккен, пуян кĕрӳ каччи-çке эсĕ.

– Тăрăхлама кирлĕ мар, Чечек.

Сетнер Чечеке аллисем çине çĕклесе илчĕ.

Фарфор чашăка тытса пынă пек, асăрханулăн хапха еннелле утрĕ.

Ăнсăртран ури айне пылчăк чашăкки лекрĕ, шуçса ӳкесрен вăл хӳме çумне сĕвенме ĕлкĕрчĕ. Чечек ун аллисенчен шуса тухрĕ те ахăлтатса кулса урамалла чупрĕ. Уншăн ку кĕрхи çумăр нимех те мар пулчĕ. Машинăра Чечек малти вырăна Сетнерпе юнашар вырнаçса ларчĕ. Аслă çул çине ялтан тухакан асфальтлă çулпа чиперех тухрĕç теме пулать, çавах та пĕр чăрмав пулчĕ. Укăлчаран тухсан çула урлă пĕрене выртнине асăрхарĕ Сетнер, инçех те мар ял каччисен ушкăнĕ курăнчĕ, чи малта Атнер тăрать, сăн-пичĕ сĕмсĕр. Вăл машина патнелле хăвăрттăн утса пычĕ.

– Эй, хула фрайĕрĕ, ну-ка, тух хăвăртрах машинăран, сан пурпĕрех малалла кайма çул çуккă.

– Ку паллă мар-ха халлĕхе, – Сетнер унталла-кунталла пăхрĕ: малта çеç мар, хыçалта та пĕрене выртать иккен. Хăçан хума ĕлкĕрчĕç вара? – Курăпăр-ха, кам кама çĕнтерĕ.

Сетнер газ педальне вĕçне çити пусса айккинчи тăпраллă çул хĕррине тухрĕ. Машина хыттăн чĕтренет.

Пĕренерен иртсен вăл машинăна каллех асфальт çине кăларчĕ, машина кунта икĕ-виçĕ хутчен пĕр вырăнта çаврăнса илчĕ. Чечекĕн куçĕсем чарăлса кайрĕç.

– Ай, мĕнле сехре хăппи!

Çав самантра Атнер юлташĕсемпе чупса çитрĕ машина патне. Сетнер каллех газ пачĕ, машина кустăрмисем каччăсем çине пылчăк сирпĕтрĕç, лешсем вара урараи пуçласа пуç таранах вараланса пĕтрĕç.

– Чарăн, çĕлен, унсăрăн япăх пулĕ, çавах тытатпăр вĕт!

Каччăсем машина хыççăн чупрĕç, анчах вĕсемпе машина хушши вăрăмлансах пычĕ, кĕçех машина Елчĕк çулĕ çине тухса куçран çухалчĕ. Ял ачисем çиллессĕн сурчĕç çĕр çине, Сетнере усал сăмахсемпе ятларĕç. Уйрăмах Атнер пуринчен ытларах шавларĕ, машина еннелле чышкипе хăмсарчĕ.

– Çавах хăçан та пулин лекĕн-ха пирĕн алла, ăçта кайса çухалăн-ши? – Хăшкăлса чупнă хыççăн аран сывлăш çавăрса илчĕ Атнер, пĕшкĕнсе аллипе хырăмне тытрĕ.

Çумăр çуса тасатнă яка çулпа машина аналла пĕр тикĕссĕн чупрĕ, ытлашши газ пама кирлĕ те пулмарĕ, мотор шавĕ илтĕнменпе пĕрех. Кĕçех Елчĕке çитрĕç вĕсем.

Сухви çуртра тирпей турĕ, кукăле тĕплĕн витсе хучĕ, кун пек тусан ырă тути сыхланать. Урăх нимĕн те тăвас килмерĕ унăн, ӳт-пĕвĕ хавшакланнăн туйăнчĕ, ăмăр çанталăкпа çумăр пусаççĕ пулĕ кĕлеткене. Кăштах выртса канма шутларĕ вăл, тен, пĕр кана тĕлĕрсе те илĕ-и. Выртма та ĕлкĕреймерĕ, пуçне тĕрлĕ канăçсăр шухăш пырса кĕчĕ. Çамрăксем ăçта пурăнасси пĕр иккĕленмесĕрех паллă: хулара ĕнтĕ. Виçĕ ывăл çуратса ӳстерчĕ Сухви, хĕрне вара кая юлса çуратрĕ вăл. Ватлăхра пулăшакан, шыв та пулин пырса паракан ӳсет тесе савăннăччĕ хĕрарăм. Ав, пачах урăхла пулса тухать, ку та ăна пĕччене тăратса хăварать. Аслă ывăлĕ хăйĕн çемйипе Мускавра

пуранать. Ватамми – Новосибирскри академи хулинче. Кĕçĕнни – Шупашкарта, университет преподавателĕ.

Ял пурнăçĕ япăхлансах пырать, путлĕ çемьесем сахалланаççĕ. Ĕлĕксенерех эрех ĕçекен çын çине тарăхса пӳрнипе тĕллесе кăтартнă пулсан, халĕ вара пачах урăхла, ĕçмен çын çине пӳрнепе тĕллесе кăтартаççĕ. Вăт мĕнле паянхи пурнăç кутăнла-пуçăнла çаврăнса кайрĕ. Пĕтĕмпех арканать, пурте вăрлаççĕ май килнĕ таран, хăйсене аван пултăр, вĕсем хыççăн хăть шыв илтĕр, хăть курăк ан шăттăр. Колхозсене малалла аталантарас тесе нимĕн те тумаççĕ. Тĕрлĕ енлĕ шухăшлать Сухви, уйрăмах мăнукĕсене шеллет вăл, пирĕн хыççăн мĕн юлĕ-ши вĕсене валли тесе кулянать. Яланлăхах юлас çук кун пек пурнăç, улшăнмаллах вăл хăçан та пулин лайăх еннелле. Çакăн пек канăçсăрланса чылайччен выртрĕ Сухви, ашшĕпе амăшне аса илчĕ. Вĕсем те ял пурнăçĕпе тертленнĕ, пире те çав шăпах пырса тивет.

... Акă çамрăксем Сетнерĕн тăван килĕ тĕлне çитрĕç, каччă машинăна хапха умне лартрĕ.

– Эс мĕн, Сетнер, Елчĕкре çуралса ӳснĕ-им?

– Çапла, манăн хаклăскерĕм, мĕн каласшăн вара?

– Эп пачах урăхла шутланă, эс хула ачи пулĕ тенĕ. – Чечек ун çине тĕлĕнсе, çавах та илемлĕ кулăпа пăхрĕ.

– Пуçларăн пулсан, вĕçне çитиех кала, Чечек. – Сетнер ун çине кăсăкланса пăхрĕ.

– Ытла та шукăль тумлă эсĕ, Елчĕк ачисем пек мар.

– Ку çыннăн пурнăç йĕркинчен тата вăл ăçта пуранинчен килет.

– Пăхма эсĕ интеллигентлă çыннăн курăнатăн, хăв вара ав мĕнле хастар, тăван Елчĕк маттурĕсем пекех. – Чечек ăна питĕнчен чуптурĕ, Сетнер ирĕлсех кайрĕ, йăл кулчĕ. – Çавăнпа çакнашкалскерне юратса пăрахрăм та сана, Сетнер.

– Кала, тата мĕншĕн юратса пăрахрăн, манăн тĕппипех пĕлес килет

– Тата илĕртӳллĕ куçусемшĕн те чăтăмсăр тутусемшĕн.

Машина çумĕнче тăраканскерсем, иккĕш те ахăлтатса кулса ячĕç.

– Эпир, Елчĕк ачисем, çакнашкал хастар пулман пулсан, тутарсем пире тахçанах хăйсен айне тунă пулĕччĕç.

– Тĕрĕссине калатăн эсĕ, юратнă Сетнерĕм. – Чечек пуҫне Сетнер хулпуҫҫийĕ ҫине хучĕ, хăйне вăл питĕ ырă туйрĕ, ниҫта та тапранас килмерĕ унăн ҫак вырăнтан.

Ҫумăртан сунчăкпа витĕнсе, Сетнер амăшĕ Укахви вас-каса тухрĕ.

– Эсир мĕн киле кĕместĕр, ют ҫынсем пек, чĕнессе кĕтсе хапха умĕнче тăратăр?

– Ниепле те пĕр-пĕринпе калаҫса пĕтерейместпĕр.

Каллех шалкăм ҫумăр тăкса ячĕ, алăран алă тытса иккĕшĕ ҫенĕке чупса кĕчĕҫ. Амăшĕ пӳрте кĕме ĕлкĕрей-мен-ха. Сетнер унăн питне икĕ енчен те чуптуса илчĕ.

– Пĕлесчĕ сан, Сетнерĕм, мĕнле тунсăхласа ҫитрĕм эпĕ сирĕнсĕр.

– Анне, пиччесем килсех тăраҫҫĕ-ҫке киле.

– Эп сире пурне те юрататăп, анчах сана, чи кĕҫĕнни-не, пуринчен те ытларах, хăть эсĕ ҫăмăлттай пулин те.

Сетнер амăшĕ ҫумне кушак пек сĕртĕнчĕ, ачашшăн ыта-ларĕ. Пӳртре вĕсене шухăшлă сăн-питлĕ арҫын кĕтсе илчĕ, хаяр куҫхаршисене темшĕн пĕркеленĕ.

– Атте, кĕтсе ил хăнасене, паллаш пулас кинӳпе.

Арҫын сăн-питĕнчи хаярлăх самантрах ҫухалчĕ, вăл ҫăмăлланса хаш сывласа илчĕ.

– Турра шĕкĕр, пирĕн юлашки тăхăм та авланма шут тытнă. – Ашшĕн кăмăлĕ палăрмаллах ҫемҫелчĕ. – Атту эпир шанăҫа ҫухата пуҫланăччĕ эсĕ хăҫан та пулин авланасси пирки.

Сетнерĕн ашшĕпе амăшĕ ҫамрăксемшĕн хыпăнса ӳкрĕҫ, апат-ҫимĕҫ хатĕрлеме тытăнчĕҫ. Чечек амăшĕ патне пычĕ, унăн аллине сĕртĕнсе илчĕ.

– Анне, пулăшас мар-и сана, кала, ан именсе тăр.

Укахви чунĕ ҫавăнтах канлĕленчĕ, ку таринччен пĕр кинĕ те ăна тӳрех анне тесе чĕнмен, ку вара пĕрремĕш хут паллашнă кунах килти ҫын пек туйăнать.

– Юрĕ-ҫке, хаклă хăнамăрсем, эсир канăр, ирĕк парăр сире ырă кăмăлпа сăйлама, ҫийĕр тăраниччен.

Чысласа йышăнчĕҫ Чечеке ку тараватлă ҫуртра. Сĕтел хушшинчен тухма васкамарĕҫ, чылайччен шăкăл-шăкăл ка-лаҫса ларчĕҫ. Туя мĕнле хатĕрленесси пирки пычĕ сăмах тĕпрен илсен. Ҫынсенчен япăх тăвас марччĕ, тен, вĕсен-

чен авантарах тăвасчĕ терĕç вĕсем. Чÿречесене каç сĕмĕ çапрĕ, кĕр кунĕ кĕскелсех пырать çав. Çакна асăрханă Чечек шартах сикрĕ, васкавлăн ура çине тăчĕ.

– Кур-ха, Сетнер, тулта, ав, тĕттĕмленчĕ, вăхăт мар-и киле кайма?

– Мĕн пăшăрханмалли пур санăн, Чечек, машина пирĕн кут айĕнчех.

– Анне пăшăрханма пултарать, эпир унпа нихçан та нумайлăха уйрăлса курман.

Чечек айăплăн урая тинкерчĕ.

– Паянтан асра тыт, Чечек, иккĕмĕш кил санăн ак çакăнта, – Укахви ăна амăшĕлле çурăмĕнчен лăпкарĕ.

– Ăхă, ăхă, ăхă, – арăмĕпе килĕшсе пуçĕпе сĕлтрĕ кил хуçи.

Вĕсем алăк умне юр-вар хатĕрлесе хума пуçларĕç.

– Анне, кирлĕ мар тем те пĕр хатĕрлеме, манăн хваттерте мĕн кирли пурте пур, укçа та çителĕклĕ.

– Мана евĕклĕ, ывăлăм, саншăн мĕн пуррине хатĕрлеме. – Укахви упăшки çине ачашшăн пăхрĕ. Лешĕ пуçĕпе сĕлтрĕ çеç. – Пирĕн юр-вар пĕтĕмпех пахчаран, пурте çутçанталăкран, сире унта, хулара, сойăпа улталаççĕ, кăлпассире те аш вырăнне соя.

– Тĕрĕсне калатăн, анне.

Илес теменччĕ килĕнчен юр-вара Сетнер, анчах ашшĕпе амăшне хĕрхенчĕ, вĕсем вĕт мĕн чухлĕ вăй хунă кунĕнçĕрĕн çăвĕпе, чунтан-вартан хатĕрлерĕç юр-вара вĕсем умĕнче.

– Тархасшăн, ывăлăм, ан кÿрентер пире, ватăсене, эпир сирĕншĕн тăрăшатпăр вĕт.

Сетнер багажника уçрĕ, ашшĕ пĕр михĕ çĕрулми йăтса килчĕ, амăшĕ пахчаçимĕçпе улма-çырла илсе тухрĕ, çиелтен самаях пысăк хур тушкине хучĕç. Чечек айккинче савăнăçлăн кулса тăчĕ.

– Ав мĕнле юратать сана аçу-аннÿ.

– Атте-анне пиччемĕрсене те пĕрпекех юратать.

– Аплах-ши, сана пуринчен те ытларах юратнăн туйăнать.

Çамрăксем машинăна кĕрсе ларчĕç.

Сетнер машинăна каялла чакарма пуçларĕ, хăй çул çине пăхрĕ. Ашшĕ-амăшĕ хапха умĕнче алă сулчĕ, ытла

та салхуллӑн тӑнӑн туйӑнчӗ ашшӗпе амӑшӗ, вӗсене шелленипе чӗри ыратса кайрӗ Сетнерӗн. Шупашкара каяс кӑмӑл сӳне пуҫларӗ. Мӗн тума пултарӑп-ши вӗсен кӑмӑлне хӑпартма, шутларӗ вӑл, лешсем хӑйсемех тупсӑмне пӗлтерчӗҫ.

– Ывӑлӑм, час-часах килсе ҫӳре, пирӗн хаклӑскерӗм!

Машина алӑкӗн кантӑкне антарса, Сетнер хирӗҫ кӑшкӑрчӗ:

– Юрать, аттепе анне, тархасшӑн, шӑнса ан тӑрӑр сивӗре, кӗрӗр киле!

Ҫул тӑрӑх хӑвӑрт кӗрсе кайрӗҫ вӗсем машинӑпа кӗрхи каҫ сӗмне. Каҫ енне ҫумӑр ҫума чарӑнчӗ, ун вырӑнне сивӗтрӗ, ҫурҫӗр енчен, Атӑл ҫинчен, ҫил вӗре пуҫларӗ. Тӳпене йӑлтӑркка ҫӑлтӑрсем тухрӗҫ. Машинӑра ӑшӑ, Сетнер магнитофон ячӗ, чӑваш кӗвви янӑраса кайрӗ: Сергей Павлов юрлать. Юрӑ кӑмӑла ҫӗклерӗ, чун хавасланчӗ. Чечексен ялне пӑрӑнса кӗрекен ҫул тӗлне ҫитрӗҫ, машинӑна ҫавӑнта тытмалла ӗнтӗ. Сетнер ҫавах та Чечекрен ыйтрӗ:

– Хаклӑ Чечекӗм, тен, тӳрех ман пата Шупашкара кайӑпӑр, малалла пӗрле пурӑнас хваттерпе паллашӑн.

– Ҫук, Сетнер, эп аннене каҫ тӗлне таврӑнатӑп тесе сӑмах панӑ.

– Аннӳне лӑплантарса хӑварӑпӑр та Шупашкара ман пата кайӑпӑр, – вӑл аллине ун хулпуҫҫийӗ ҫине хучӗ, куҫӗнчен пӑхса куҫ хӗссе илчӗ, уҫҫӑн йӑл кулчӗ. – Ыран каҫ тӗлне вара каллех кунта таврӑнӑпӑр.

Чечек шарламасӑр ларчӗ, ун ҫине пӑхса илчӗ. Сӑхӑлла йӑлтӑртатан куҫпа Сетнер Чечекрен хурав кӗтрӗ. Вӑл чӑтса лараймарӗ, аллине ун хулпуҫҫийӗ ҫинчен кӗлетки тӑрӑх шутарса антарса пиҫӗ пӗҫҫинчен тытрӗ.

– Эс мана тӗрӗс ӑнлан, Чечек, эпӗ питӗ-питӗ тунсӑхласа ҫитрӗм сансӑр.

Чечек кӑмӑллӑн кулчӗ те шӑппӑн каларӗ:

– Эп килӗшетӗп, манӑн хаклӑскерӗм, майӗпе курӑп, мӗнле пурӑнатӑн унта, хусахла хваттерте.

Ял ҫурчӗсен чӳречисенче ҫутӑ ҫунать. Вӗсенчен пӗринче музыка янӑрать, чӳречерен шалта ҫынсен кӗлеткисем мӗлтлетни курӑнать, ҫамрӑксем савӑнаҫҫӗ пулмалла, ҫурт чӗтренсе ларать.

– Интереснă, мĕн праçникне уявлаççĕ-ши кусем çавнашкалах хĕрÿллĕн?

– Ку çурт Атнерсен, ял ачисемпе ĕçсе-çисе савăнаççĕ ĕнтĕ.

– Куратăп-ха, мĕнле сулмаклă ĕçсе-çиеççĕ вĕсем.

Иккĕшĕ те кулса ячĕç, Чечек пуçне Сетнер хулпуççийĕ çине хучĕ. Пушă урампа вĕсем кĕрхи шăплăхра малалла кайрĕç. Тавралăх пĕр сассăр, йытă вĕрни те илтĕнмест. Вĕсем Чечексен çурчĕ умĕнче чарăнчĕç. Кĕтесри пĕр чÿречере çеç çутă курăнать. Сетнер мотора сÿнтерчĕ, саркаланса ларчĕ.

– Эс мĕн, Сетнер, кĕрес теместĕн-им?

– Ăхă, мĕншĕн тесен пĕлетĕп, каллех сĕтел хушшине кĕртсе лартаççĕ, каллех хăналама пуçлаççĕ, вара хăвăрт хăтăлса тухаймăн.

– Ав мĕнле иккен, пĕтĕмпех ăнланмалла, – Чечек куçхаршине пĕрсе илчĕ.

– Эсĕ те унта чылайччен тытăнса ан тăр.

– Халлĕхе авланман-ха, çавах та хушусем пама хăятăн.

– Çитĕ-çке сана харкашма, Чечек, ывăннă эпĕ паян.

Сетнер Чечеке питçăмартинчен ачашшăн чуптурĕ, тутипе унăн пĕрлĕхен пек тутине сĕртĕнчĕ. Чечек килне кĕчĕ, машинăра шăплăх тăчĕ. Сетнерĕн машинăран тухас килмерĕ. Çанталăкĕ нÿрĕ те сивĕ, тулта ирех тĕттĕмленет. Сетнерĕн çан-çурăмĕ çÿçенсе илчĕ, ку ĕнтĕ машина тулашĕнчи çанталăк çинчен шутланăран пулĕ. Халĕ унăн пĕртенпĕр илĕртÿллĕ ĕмĕт: хăвăртах Чечекпе ăшă вырăн ăшне кĕрсе выртасси те кăмăлне Чечекĕн ÿчĕпе тăраничченкилентересси. Музыка кассети тахçанах вĕçленнĕ, Чечекпе калаçнă чухнех. Вăл ăна тепринпе улăштарчĕ. Ку хутĕнче Шадриков юрлакан чăваш юррисем пулчĕç. Сетнер хăйне аванрах туйрĕ, вăл ларкăчран кăштах шуса анчĕ, пуçне ларкăч хыçĕ çине хучĕ, куçне хупрĕ те кĕвĕпе киленчĕ. Пĕр юрăна вĕçне çити итлесе пĕтерме ĕлкĕреймерĕ Сетнер, машина алăкĕ яриех уçăлчĕ те Чечек курăнса кайрĕ.

– Мĕн çавнашкалах хăвăрт?

– Сана ăнланса çитме йывăр, Сетнер, эпĕ пÿрте кĕнĕ чухне васкаттартăн, халĕ вара...

– Çакăн пек хăвăрт тухасса кĕтменччĕ те...

– Нумай калаçса лармарăм, аннене ăçта каяссине ăнлантартăм. Вăл нимĕн те каламарĕ.

– Ку аван, эксцесс пирĕншĕн халĕ ытлашши.

Чечек кофтин çӳлти тӳмине вĕçертрĕ.

– Фу, тарласах кайрăм, хама аннепе нихçан та кун пек тытманччĕ, – вăл сывлăшне çавăрса илчĕ, кăштах тунсăхланчĕ. – Пĕтĕмпех сан пирки пулса тухрĕ кун пек, Сетнер, пурнăçриваскавçă.

– Эп сире, хĕрарăмсене, пĕлсе çитрĕм, малтан ачашланатăр, кайран куççулĕ юхтаратăр, – Сетнер аллипе сулчĕ. – Сире вăйпа та уйăраймăн пĕр-пĕринчен.

– Пĕр енчен эс тĕрĕсне калатăн пулĕ, Сетнер.

– Кăштахран çĕр каçма юлма сĕнме пултаратъ аннӳ. Çак кунсенче ман пĕр санпа кăна пулас килет, тăраниччен киленесчĕ санпа.

– Ав мĕнлескер эсĕ манăн, Сетнер.

– Эс ан кӳрен, Чечек, пирĕн умра хамăрăн пурнăç, аннӳне йăлăхтарса та çитерĕпĕр-ха.

Чечек пĕр сăмах та шарламарĕ, ăна ыталаса илчĕ çех, Сетнерте ирĕлсе каяс килчĕ унăн. Иванпа Вячеслав Христофоровсен юррисене итлесе пычĕç вĕсем. Сетнер умри çул çине тимлĕн пăхса пычĕ, ăçта машинăна хăвăртрах чуптарчĕ, ăçта – ерипентерех, Шупашкар çулĕ çинче кашни тĕлтех кирлĕ вариант тупма пултарчĕ. Девятка «Жигули» хăвăрт та тикĕссĕн кусрĕ, грузовиксем пĕр вырăнта тăнă пек юлса пычĕç. Чечек пуçĕнче хăйĕн шухăшĕсем явăçрĕç; мĕнле кайĕ-ши унăн пурнăçĕ малалла? Халлĕхе вăл ăна татса пама пултараймĕ, паллах. Ку йывăр саманара мĕнле пурăнса кайĕç вĕсем, мĕнле пăтăрмахсем кĕтеççĕ вĕсен çамрăк пурнăçĕнче? Ку патшалăхра хаксем çĕпрепе йӳçетнĕ пек ӳссе пыраççĕ. Ахаль халăхăн ним ыррине те кĕтмелли çук. Нимĕнле усă пуласса шанма çук паянхи тӳре-чиновниксенчен. Çамрăксем ача çуратма шикленеççĕ, чухăна тăрса юласран хăраççĕ. Патшалăх ку проблема çине пӳрне витĕр пăхатъ. Аслă чиновниксемпе пысăк пуçлăхсем хăйсен ачисене ют çĕршывсенче вĕрентеççĕ, арăмĕсене чикĕ леш енче усраççĕ, халăх пурлăхĕпе укçине пĕр шелсĕр çаратаççĕ.

Тимӗрпе бетонлӑ плитасенчен хӑпартнӑ тӑхӑр хутлӑ ҫурт тӗлне ҫитрӗҫ. Сетнер машинӑна хӑйӗн подъезчӗ умӗнче чарчӗ, турттарса килнӗ юр-вара багажникрен пушатрӗ, машинине ятарлӑ вырӑна лартрӗ, унтан юр-вара хваттер алӑкӗ умӗнчи ещӗке йӑтрӗ, вара тин Чечекпе иккӗшӗ хваттере кӗчӗҫ. Чечек тӗлӗннипе урай варринче шаках хытса тӑчӗ.

– Мӗн пулчӗ сана, манӑн ытарайми ачаш Чечекӗм?

– Ай, Сетнер, мӗн чухлӗ тӗлӗнтертӗн ӗнтӗ эсӗ мана. Ҫакнашкал пысӑк хваттер ҫавӑрса илме пултарнӑ!

– Уншӑн пиччемсене тав тумалла, вӗсем вӑхӑтра укҫа пухса пачӗҫ кооперативлӑ ҫурт лартнӑ чухне малтанхи взнос хывма.

– Чӑнах та ӑслӑ иккен санӑн пиччӳсем, паянхи кун пикенсе пӑх-ха кун йышши хваттер туянма.

– Паллах, хальхи саманара ниепле те хал ҫитерейменӗн.

Кашни утӑмра тӗлӗнсе, Чечек хваттере пӑхса ҫӳрерӗ, унпа тӗплӗнрех паллашрӗ, курман-пӗлмен япалана асӑрхасан, пуҫне пӑркаларӗ.

– Кама мӗнле те, мана пиччемсем йӑлӑхтарсах ҫитерчӗҫ.

– Мӗнле майпа, Сетнер?

– Кашни утӑмрах вӗрентме пикенеҫҫӗ, ӑна апла ту та куна капла тесе йӑлӑхтараҫҫӗ, ку мана килӗшмест, мӗнле пурӑнас тетӗп, ҫавнашкал тӑватӑп.

– Ахалех кӳренетӗн, вӗсем сана лайӑххине вӗрентеҫҫӗ, тӗрӗс ҫултан ан пӑрӑнса кайтӑр теҫҫӗ, – Чечек ун ҫине сӑнасарах пӑхрӗ. – Вӗсем пулман пулсан, тен, эсӗ паян кун та общежитире пурӑннӑ пулӑттӑн-и?

– Тен, тӗрӗснех калатӑн пулӗ эсӗ, ман хаклӑскерӗм.

Сетнер Чечеке хыттӑн ыталарӗ, ачаш та пиҫӗ тутинчен антӑхса чуптурӗ, унӑн вӗри ӳт-пӗвне хӑйӗн кӗлеткипе туйрӗ. Ӑнсӑртран тупӑннӑ телейӗн вӗҫне-хӗрне пӗлмерӗҫ вӗсем, ҫӗрӗпе тата вырсарнинче кунӗпе вырӑн ҫинчен анмасӑр киленчӗҫ пӗр-пӗринпе. Вырсарникун каҫ тӗлне Сетнер Чечеке килне ӑсатса ячӗ.

Ҫавӑн хыҫҫӑн тепӗр виҫӗ кунтан Сетнер ӗҫрен ыйтса Чечек патне кайрӗ, вара вӗсем ЗАГса ҫитсе заявлени пачӗҫ, унта хӑҫан ҫырӑнассин кунне пӗлтерчӗҫ. Чечек юлашки вӑхӑтра пӗр Сетнер ҫинчен ҫеҫ шухӑшласа пурӑнчӗ, амӑшӗпе те пӗр ун ҫинчен калаҫрӗҫ. Канмалли кунсене чӑтӑм-

сăрран кĕтрĕ хĕр, вĕсене Сетнерпе ирттерме питĕ килĕшрĕ ăна. Сетнер пурин пек мар хăйне евĕрлĕ çын, кулăш кăмăлласкер. Унпа тĕлпулнăран Чечек хăйне телейлĕ тесе шутлать, пĕрле чухне хăй те Сетнерпе киленет.

Канмалли кунсем вĕсен сисмелле мар хăвăрт иртеççĕ. Чечек патне унăн хĕр тусĕ Кӳлепи килчĕ, тумĕ чаплă, ун çинчен вăл юр пĕрчисене силлерĕ.

– Фу, ав мĕнле лапка-лапка çăвать юр, пĕрчисем çерçи пысăкăш.

Чечек чӳречерен урамалла пăхрĕ, тĕттĕмре нимĕн те курăнмасть, вăл çутă çутрĕ. Кĕске кĕрĕкне хывмасăрах Чечек тавра явăнать Кӳлепи. Кĕске кĕрĕкĕ чаплă вара унăн, хĕррисене çĕленĕ çинçе шурă хăю ăна илемлĕрех тăвать, кăкăр умĕнче чăвашсен хитре тĕрри.

– Ăçта çаклатма пултартăн ку кĕске кĕрĕке?

– Елчĕкре ятарлă заказпа çĕлесе пачĕç. Ĕнтĕ районта та хуларисенчен юлмаççĕ, тен, иртсе те каяççĕ-и.

– Ку çипуçпа ялти кашни каччă санăн пулать, Кӳлепи.

– Сăмаха юри аяккалла пăрса ан яр, хĕр-тусăм.

– Мĕнех каларăм вара, хĕр-тусăмçăм Кӳлепи?

– Эпир санпа мĕн ачаран пĕр-пĕринчен нимĕн те пытарман, кала тӳрремĕн, ăçта çухалса çӳретĕн эсĕ, Чечек?

– Хамăн Сетнер савни патĕнче, свидетель пулса манпа ЗАГСа пыратăн-и?

– Паллах, мĕн калаçмалли пур, – Кӳлепи çăмăллăн сывласа ячĕ. – Ай, мĕнле аван пулса тухать.

– Ăнланма пултараймастăп сана, Кӳлепи. Мĕн сăлтавпа çавнашкалах тарăннăн сывлатăн?

– Атнер ман çума пĕрмай çыпçăнать, эп унран пăрăнма тăрăшатăп.

– Хăй вăл сана килĕшет-и? – Чечек ун çине чеен пăхрĕ. Кӳлпи именчĕклĕн куçне тартрĕ.

– Вăл санăн каччă вĕт, çавăнпа эпĕ ăна çывăха ямастăп. – Кӳлепи темиçе хутчен ассăн сывларĕ. – Тĕрĕссипе, Атнер мана питĕ килĕшет, ялта вăл пирĕн курăмлă каччă, хĕрсенчен кашниех унпа туслашма хатĕр.

– Мана вăл пачах килĕшмест, халь ĕнтĕ вăл ирĕклĕ.

– Кунашкал килсе тухнишĕн, хĕр-тусăм, эпĕ чунтан савăнатăп, – Кӳлепи Чечеке темиçе хутчен чуптуса илчĕ. –

Татапуç сана Атнершĕн, хĕр-тусăм, чуна пусса тăнă йывăр чултан хăтартăн.

Иккĕшĕ те кулса ячĕç, ыталашрĕç, кайран чылайччен туй пирки калаçса ларчĕç.

Çав вăхăталлах Наташа Сетнер патне шăнкăравларĕ, провод тепĕр вĕçĕнче трубка тытакан пулмарĕ, пи-ик, пи-ик пиклетни çеç илтĕнчĕ. Ăшĕнче Наташа тулашса кайрĕ. Мĕн пулса тухать капла, Сетнер пуçĕпех унăн пулнă-çке хăй вăхăтĕнче? Кĕске вăхăтрах ютшăна пуçларĕ, тĕл пуласран пăрăнма тăрăшать. Тĕкĕр çине пăхса хăйĕнпе киленчĕ Наташа. Вăл хăйне май шухăшларĕ: чипер, ăслă, ӳт-пĕвĕнчен çутçанталăк кӳрентермен. Ашшĕ Шупашкарти вунă чи пысăк заводсем шутланакансенчен пĕрин генеральнăй директорĕ. Наташа тек тунсăхласа ларма пултараймарĕ, чăтăмсăррăн Сетнер патне васкарĕ. Вăл алăк çăрине ăна шанса панă уçăпа уçма пикенчĕ, шел пулин те, çăрана çĕннипе улăштарнă.

– Ах, йĕксĕк, çĕнĕ çăра лартма ĕлкĕрнĕ. Шăкărав кнопкине темиçе хутчен те пусрĕ, анчах алăка уçакан пулмарĕ. Наташа ăшĕнче ятлаçса илчĕ.

– Ку вăхăтра вăл килтех пулмалла.

Вăл тĕрлĕ усал сăмахсемпе ятлаçма тытăнчĕ, хăй мĕн пĕлнине пĕтĕмпех асăнса илчĕ. Подъездран тухса малалла-каялла утса çӳрерĕ, нервисене лăплантарма пикенчĕ.

Анчах вĕчĕхӳ ăшне ытларах çунтарма тытăнчĕ, минутсерен вăйланса пычĕ. Сасартăк подъезд алăкĕ шанлаттарчĕ, урама Сетнер тухрĕ. Вăл кĕрхи пальтопа, ун çинче тумĕ хăтлăн курăнать. Шурă шарфĕ килĕшӳллĕ каччăна. Наташăн юнĕ вĕресе кайрĕ, вăл чупса тенĕ пек Сетнер хыççăн васкарĕ. Хăваласа çитсен çурăмĕнчен çилессĕн пĕтĕм вăйпа тĕртрĕ. Сетнер чутах пичĕпе пăрлă асфальт çине ӳкмерĕ, аран тытăнса тăчĕ ура çинче, юрать, юнашарах йывăç пулчĕ, Сетнер ăна ярса тытма ĕлкĕрчĕ.

– Мĕн хăтланатăн çак эсĕ, ăссăр хĕрарăм?

– Хăв эсĕ ман çинчен, мана мĕнле йывăр пулни пирки шутларăн-и, йĕксĕк?

Çиллес сăн-питĕнчен курăнсах тăрать: Наташа ăна çак самантра татăккăн-татăккăн çурса тăкма хатĕр.

– Эс мĕн, Наташа, урмарăн пулĕ те?

– Эсĕ вĕт мана çавăн патне илсе çитертĕн, сансăр ăса çухатма пуçларăм пулĕ.

– Ăнланса ил эсĕ пĕр япалана, Наташа: пирĕн çулсем икĕ еннелле уйрăлса кайрĕç. Эппин мĕншĕн пĕр-пĕрин чĕрине ыраттарас пирĕн иксĕмĕрĕн?

Наташа Сетнер çине шăтарасла пăхрĕ, çухалса кайнăн пĕрмай кусхаршине вылятрĕ, тем каласшăн пулчĕ, анчах Сетнер çăвар уçма памарĕ, хăйĕн шухăшне вĕçлеме васкарĕ.

– Сан патна каялла таврăнма тек çул çук манăн, Наташа.

Наташа куç-пуçне чарса пăрахрĕ.

– Мĕншĕн, Сетнер, пире питĕ кăмăллăччĕ-çке пĕрле пулма?

– Тен, сана çавăн пек туйăннă, Наташа, эп санпа кичемрен çеç ахаль вăхăта ирттернĕ.

Наташа, юнтармăш ача пек, лăпланма пĕлмерĕ.

– Эп сана пурпĕр никама та памастăп, çитменнине тата темĕнле хĕр пĕрчине.

– Тăну кĕтĕк пулсан, астуса юл е çамку çине картса хур, – Сетнер те тарăха пуçларĕ, кĕç-вĕç картран тухасси патне çитрĕ. – Ăнлан, пирĕн çулсем яланлăхах уйрăлса кайрĕç.

Кун хыççăн та Наташа лăпланма пултараймарĕ, ытлашши хумханулăскерне çак самантра нимĕнле сăмах та витерейместь пулмалла. Сетнер мĕн каланине итлесшĕн те мар, ăнкарасшăн та мар вăл, ăстăнне тахçанах витернĕ пăсăк шухăш-кăмăлпа унăн халь Сетнере каялла хваттере илсе кĕрсе унпа çĕр каçас килет, çак ĕмĕт унăн хăлхине пăкăланă, ăстăнне сисĕмсĕрлентернĕ.

– Тархасшăн, Наташа, тек ан çӳре кунта, эпир Чечекпе ЗАГСа заявлени панă, кĕçех туй пулать.

Çак сăмахсене илтсен, Наташа тăруках чĕлхесĕрленчĕ. Сетнер васкавлăн çаврăнса утрĕ, унăн ĕçĕсем хутшăнчĕç, туя хатĕрленмелле. Тарăннăн кӳреннĕ кăмăлпа Наташа хăйсен хваттерне таврăнчĕ. Хваттерĕ пысăк, икĕ хутлă, анчах пуш-пушах, килте никам та пулмарĕ. Наташа çиелти тумне хывса тĕрлĕ еннелле печĕ, хăвăртрах бар-шкаф патне васкарĕ, унтан алла лекнĕ пĕрремĕш кĕленчине илчĕ, те-

мĕнле хаклă коньяк пулчĕ ку. Ăна вăл анкă-минкĕлле çуррине яхăн пĕр сывламасăр тенĕ пек анинченех ĕçсе ячĕ. Çакăн хыççăн Наташăн истерика пуçланчĕ, вăл ниçта кайса кĕме пĕлмерĕ. Ара, Сетнере куç умĕнчех сăмса айĕнчен илсе кайрĕç вĕт. Хăй те чее, хур аçи.

Ĕç хыççăн ашшĕ киле таврăнать, вăл чӳречесем çине пăхрĕ. Хваттерте çутă çунать, эппин хĕрĕ килтех, чылай пулманччĕ кун пекки. Унăн кăмăлĕ хăпартланчĕ. Яка тумлă кĕрнеклĕ арçын хавхалануллăн хваттер умне чупса çитрĕ. Алăка уçса кĕрсен тӳрех хĕрĕн пӳлĕмневаскарĕ те тĕлĕннипе шак хытса тăчĕ. Унăн пĕртен пĕр юн пĕрчийĕ Наташа кравать çинче хутланса выртать, пĕр çитарĕ çине пуçне хунă, тепĕр çитарне икĕ аллипе ыталанă. Тем пулман-ши тесе хумханнипе коньяк юлашкине сыпса ячĕ. Хĕрĕ пĕр чарăнми иклетсе выртать. Куç хăрпăкĕнчи тушь куççульпе питне вараласа пĕтернĕ, тута писевĕнчен те пит çăмартисем хĕп-хĕрлех, çавăнпа сăнпичĕ тирпейсĕр, юмахри вупăр карчăк тейĕн. Наташа аран-аран ерипен калаçрĕ.

– Папа, манăн каччă мана пăрахрĕ, пĕлетĕн-и мĕнле йывăр мана халĕ?

– Наташа, манăн хаклă хĕрĕм, тупнă кулянмалли, – вăл хавхаланчĕ. – Шăхăр кăна, ун йышшисем вуннăн та тупăнĕç.

– Мана ун чухлĕ кирлĕ мар, папа, пĕртен пĕррескер çеç пултăр.

– Мĕнре ĕçĕ, хĕрĕм, мĕнле проблема?

– Вĕсем нумаях пулмасть ЗАГСа заявлени панă.

Ашшĕ тунсăхлăн пуçне усрĕ.

– Да, ку кăткăс япала, хĕрĕм.

Наташа куççульне шăлса типĕтрĕ, вырăн çинчен тăчĕ те каллех бар-шкафа кайса уçрĕ, унтан «Атăл» ятлă эрехлĕ тăваткал кĕленче кăларчĕ, çур стакан тултарса пĕр сывламасăр ĕçсе ячĕ, чыхăнмарĕ те, куçĕпе те мăчлатмарĕ.

– Папа, эс ăна ĕмĕрлĕхе наказани пар, тек çĕр çинче ан пурăнтăр вăл, никама та ан лектĕр.

– Тăхта-ха, мĕн калаçатăн эсĕ, хĕрĕм? – Вăл хĕрне кăшт хăйĕнчен уйăрчĕ. – Пĕрремĕшĕнчен, ку уголовнăй ĕç, иккĕмĕшĕнчен, юрамасть-çке ахальтенех хĕнесе пĕтерме.

Наташа хурлăхлă куçĕпе ашшĕ çине пăхрĕ. Ашшĕ лайăхмарланчĕ, çанçурăмĕ çÿçенсе илчĕ унăн.

– Тархасшăн, папа, ман хаклăскерĕм, кам хÿтĕлĕ сан кÿрентернĕ хĕрне, маншăн ту эп ыйтнине.

Ашшĕ пĕр шухăшламасăр персе ячĕ:

– Мĕн кăна тумăн хăвăн хĕрÿшĕн пурăнан пурнăçра.

Çак сăмахсене илтнĕ хыççăн чунне канлĕлетнĕ Наташа ашшĕ чĕркуççийĕ çинчех çывăрса кайрĕ. Ашшĕ хĕрне кĕске çÿçлĕ пуçĕнчен асăрхануллăн ачашларĕ, ăна кÿрентернĕ пархатарсăр каччăна тавăрма мĕнле май пурри пирки шутларĕ.

Эрнекун Сетнер Чечек патне килмеллеччĕ.

Хĕр кĕтрĕ, кĕтрĕ, анчах каччă çук та çук. Чечек тÿсĕмсĕррĕн пĕрмай чÿречерен пăхрĕ. Вăл сехет çине пăхса илчĕ, ун тăрăх иртерех-ха Сетнер килесси. Апла пулин те, Чечекĕн темшĕн чунĕ ыратрĕ. Вăл çивитти тĕрлесе ларать, кĕç-вĕç вĕçлемелле ĕçне. Ку туй парниййĕ пулмалласкер. Темшĕн-çке Чечекĕн ĕç каймарĕ, пĕр виçĕ хутчен пÿрнине ыраттармаллах йĕппе тирсе илчĕ вăл. Амăшĕ хăйĕн аппăшĕ патне ялăн тепĕр вĕçне кайрĕ.

Пĕччен юлнăскере, Чечеке, кичем пулчĕ, вăл пĕр Сетнер çинчен çеç шутларĕ. Çакнашкал пĕччен ларса тертленме хал çитереймерĕ вăл, хăвăрт пуçтарăнчĕ те çула тухрĕ. Калаçса татăлнă пекех, Шупашкара каякан автобуса вăхăтра çитрĕ вăл. Шупашкар автовокзалĕнчен троллейбуспа Сетнер пурăнакан çурт еннелле кайрĕ. Çав çурт патне çывхарнă чухне пĕр чÿречерен икĕ арçын сиксе тухнине асăрхарĕ, лешсем унталла-кунталла асăрхануллăн пăхса айккинелле чупса кайрĕç. Чечек вĕсем пирки ним шухăшламасăр Сетнер чÿречисене шырарĕ. Ара, кусем шăп та лăп Сетнер чÿречинчен сиксе тухрĕç-çке! Вара Чечек вĕсем хыççăн чупрĕ.

– Эй, атьсемри, мĕн вăрласа тухрăр эсир унтан?

– Çухал куç умĕнчен, ăссăрскер, ан çыпçăн милĕк çулçи пек.

– Эсир манпа çавнашкал калаçатăр-и, кăтартăп-ха эп сире мĕнле хĕрарăм пулнине! – Чечек хăйĕнчен инçех мар выртакан кирпĕч катăкне асăрхарĕ, ăна пĕшкĕнсе илчĕ те арçынсем чупса кайнă еннелле печĕ, вĕсенчен пĕрне уринчен тивертрĕ пулмалла.

Лешӗ ун патне хаяр сӑн-питпе утрӗ.

– Милици, хваттер ҫаратрӗҫ! – кӑшкӑрса ячӗ Чечек. Лешсем, ҫакна илтсе, хӑвӑртрах сывӑх ҫурт хыҫне тарса ҫухалчӗҫ, унтан машина сасси илтӗнчӗ. Ҫавах та Чечек унталла чупса кайса машина номерне астуса юлма ӗлкӗрчӗ. Вара хӑвӑртрах Сетнер хваттерневаскарӗ. Алӑкран кӗрсен чутах кайса ӳкмерӗ: Сетнер вӗрен ҫинче ҫакӑнса тӑрать! Чечек ҫухалса каймарӗ, кухньӑна чупса кайса ҫӗҫӗ тупрӗ те Сетнер ҫакӑнса тӑракан вӗрене ҫавӑнтах касса татрӗ, Сетнер урайне шаплатса ӳкрӗ. Чечек ӑна кӑкӑрӗнчен пусса сывлама пулӑшрӗ, лешӗ ассӑн сывласа ярсан, ӑна вӑйпа сыпкӑм эрех ӗҫтерчӗ, вара васкавлӑ пулӑшу машинине чӗнчӗ. Лешсем нумай кӗттермерӗҫ, хӑвӑрт ҫитрӗҫ. Мӗн пулса иртнине, хӑй мӗн пӗлнине каласа пачӗ вӗсене Чечек.

– Кӑшт каярах юлнӑ пулсан, эпир ӑна чӗртеймен пулӑттӑмӑр. – Тухтӑр Сетнере укол турӗ, пульсне тӗрӗслерӗ.

– Вӑт пӗлес килет, сынна вӗлереҫҫӗ е ҫакса вӗлереҫҫӗ пулсан, пӗлме пулать-и вӑл хӑйне мӗнле туйнине?

– Паллах, малтан вӗлерсе кайран ҫаксан, ҫын чӗлхине сыртать.

– Ак куртӑмӑр та, Сетнере чӗрӗлле ҫакнӑ, вӑл хӑй ҫакӑннӑ тесе ӗнентересшӗн пулнӑ ӗнтӗ.

– Пирӗн ӗҫре темӗн те курма пулать.

– Ҫавӑнпа ӗнтӗ вӗсем чӳречене тӑрӑшсах хупса хӑварчӗҫ.

Ҫав вӑхӑтра вӗсем патне милиционер пычӗ.

– Тархасшӑн, ыйтатӑп, паян мар, паян нимӗн те ан тӗпчӗр. – Чечек милиционера Сетнер патне ямарӗ. – Куратӑр вӗт ҫынӗ халь мӗнлине.

– Юрӗ-ҫке, эсӗ каланӑ пек пултӑр, хӗрупраҫ. Ҫынсем пӗрерӗн-пӗрерӗн салана пуҫларӗҫ. Милиционер хут татӑкӗ тӑсса пачӗ:

– Тем сиксе тухас пулсассӑн, ҫак номерпе шӑнкӑравлӑр.

Чечек пӗр сӑмахсӑр пуҫӗпе сӗлтрӗ. Пурте кайса пӗтсен, алӑка ҫӑрапа питӗрчӗ, унтан балкона тӗрӗслерӗ, пурте йӗркеллех-ши унта терӗ. Хӑйне лӑплантарас тесе Ҫӗрпӳ бальзамне кӑштах тутанчӗ, Сетнере ҫӗр грамм ярса пачӗ. Сетнер диван ҫинче куҫне мӗлтлеттерсе выртрӗ, вӗсне ҫитиех тӑна кӗрсе ҫитеймен пулмалла. Ирпе Сетнерӗн ҫыру

кĕнекине тĕрĕслерĕ, юлашки вăхăтра кам ун патне ытларах шăнкăравланипе кăсăкланчĕ. Наташа иккен, определитель ытларах унăн номерне кăтартать. Вара вăл справочнăй урлă унăн адресне пĕлчĕ. Çакăн хыççăн пĕр тăхтамасăр Наташа патне васкарĕ. Хваттер алăкĕ патне çитсен темиçе хутчен кнопкăна пусрĕ. Алăка ерипен Наташа уçрĕ, пичĕ-куçĕ шыçăнса кайнă, те макăрнăран ĕнтĕ, те эрех ĕçнĕрен.

– Сире кам кирлĕ, хĕрача? – çилленчĕклĕн ыйтрĕ Наташа.

– Эсир кирлĕ те мана, сăнӳкерчĕкрен палласа илтĕм сире.

– Эп сире палламастăп, ăçтан тупăнтăр çакăн пек тимлĕскер?

– Тĕрмене ларсан пĕлĕр эп кам пулнине.

– Мĕн кирлĕ мара лăпăртататан, хĕрача? – Наташа пуçне ярса тытрĕ, куç шăрçийĕсем пысăкланчĕç. – Ай, пуç ыратать, калăр хăвăртрах, мĕн кирлĕ сире? Çук ман вăхăт сирĕнпе калаçса тăма. – Вăл тăрăшсах тăнлавне сăтăрчĕ. Çӳçĕ арпашнă унăн, куçĕ тăнă çĕртех хупăнать.

– Сетнере вĕлерме эсĕ паңă-и заказ?

Наташа çавăнтах тăнлавне сăтăрма чарăнчĕ, шăпланчĕ, çилĕлĕхĕ сӳнчĕ.

– Кала, санăн ĕçӳ-и ку?

Наташа каллех шарламарĕ, нимĕн калама пĕлмерĕ, кăшт вăхăтран çеç шăппăн ыйтрĕ:

– Хăçан пытараççĕ Сетнере?

– Кĕтсе илеймĕн çакна, качака, вăхăтра хăтарса хăвартăм эпĕ ăна.

Наташăн куç шăрçисем пысăкланчĕç, вăл Чечек çине шăтарасла пăхрĕ.

– Кала куç умĕн Сетнер патне пынă вăкăрусене, тухса шăвăнччĕр хăвăртрах хуларан. Унсăрăн тĕрмене лекĕç вĕсем.

Хăрах аллаппипе çамкине тытса алăк суллинчен сĕвеннĕ Наташа коридорта ларакан кресло çине шуса анчĕ.

– Пире хирĕç татах тем шутласа хуратăр пулсан, çавăнтах милицине пĕлтеретĕп сирĕн хătланăвăрсем çинчен, эпир пĕтĕмпех çырса пынă, – Наташа хăйĕн сумкине çапса илчĕ.

Ун хыçĕнчен алăк шаклатса хупăнчĕ.

Пĕр вăхăт хваттерте шăплăх хуçаланчĕ. Наташăн çиллес кăмăлĕ сĕвĕрĕлчĕ, чунĕ пушанса юлчĕ. Тăраниччен макăрнăран пĕр вăй та юлмарĕ. Ашшĕ ĕçрен иртерех таврăнчĕ, Наташăна чылайччен пĕччене хăварма шикленчĕ вăл. Хĕрĕ ашшĕне Чечек килсе кайни пирки тĕппипе каласа пачĕ. Ашшĕ чăтаймасăр урайне сурчĕ.

– Мĕнле халăх кайрĕ, ансат ĕçе вĕçне çитерейменн?

Наташа ашшĕ патне пычĕ, ача чухнехи пек ыталарĕ.

– Лешсене асăрхаттар, тек ан тĕкĕнччĕр Сетнере. Халь ĕнтĕ çылăхран аяккарах пулмалла пирĕн.

– Хăв мĕн сĕнме пултаратăн, Наташа?

– Айта чикĕ леш енне каяр. Эп пĕлнĕ тăрăх, эсĕ чылай укçа вăрлама ĕлкĕрнĕ хăвăр заводран.

– Вăрланă тесе ан кала, хĕрĕм, япăх выртнине илнĕ те.

Çавнашкал турĕç те вĕсем, чикĕ леш енне каймалли паспортсене тахçанах хатĕрленĕччĕ ĕнтĕ. Тепĕр эрнерен Кипра тухса кайрĕç иккĕш.

Чечек çыру кĕнекине кăларчĕ. Унта вăл Сетнер пиччĕшĕсен телефон номерĕсене çырса хунăччĕ. Çавăнтах Сетнерĕн Юман, Юхма, Агивер, Сементер ятлă пиччĕшĕсем патне шăнкăравларĕ. Нумай кĕттермерĕç лешсем, тăваттăшĕ те пĕр харăс тенĕ пек çитрĕç. Вĕсем пурте хастар кăмăллă, Сетнере кӳрентерекене тавăрма халь тесен халь хатĕр. Пырĕ ыратма чарăнманран Сетнер хăрăлтатса калаçрĕ:

– Ним тума та кирлĕ мар, эпĕ хам ăйăплă кунта.

Аслă пиччĕшĕ Юман ниепле те пĕр вырăнта лăпкăн лараймарĕ, ăшĕ çилĕпе вăркарĕ.

– Сан çăмăлттайла пурнăçу лайăххи патне илсе çитерес çук тесе пĕрмай асăрхаттарнă эпĕ сана, çавнашкалах пулса тухрĕ те акă.

Ăна хирĕç ларакан Юхма, Агивер, Сементер шăллĕсем Юмана куç хĕсме пикенчĕç, лăпланма пĕл тесе систерчĕç.

– Хăвах куратăн, Юман пиччем, пурте йĕркеллĕ.

– Сана, çăмăлттая, яланах ăнать, Сетнер, – шăллĕ çине пăхса пуçĕпе сĕлтрĕ Юман. – Чечек вăхăтра çитмен пулсан, каюк пулатчĕ сана, Сетнер. Мĕнле пурăннă пулăттăмăр сансăр эпир тата аттепе анне? – Вăл Сетнер çине тепре пăхрĕ, вара ăна ыталаса илчĕ. Юхма, Агивер, Сементер вĕсене çавăрса илчĕç, кашниех Сетнере ыталарĕ, хулпуççийĕнчен лăпкарĕ.

– Тепӗр хут калатӑп, Сетнер, ӑнать сана пурнӑҫра, ав мӗнле чиперкке хӗре тупма пултарнӑ эсӗ, ҫитменнине Елчӗк енчискерех.

Чечек именчӗклӗн куҫхаршине антарчӗ.

– Эп хам тупрӑм ӑна.

– Эппин айтӑр ӗҫер сирӗншӗн, ҫамрӑксемшӗн, тепӗр май каласан, пирӗн ҫемьере ҫӗнӗ ҫын хутшӑннишӗн.

– Эп унта, кухньӑра, пӗтӗмпех хатӗрлесе лартнӑ сӗтел ҫине.

– Куратӑр-и, мӗнле ӑслӑ пирӗн пулас кин, хула хӗрӗ пулас-тӑк, тӗкӗр умӗнче ҫеҫ капӑрланса ларнӑ пулӗччӗ, – Сементер Сетнере хулпуҫҫийӗнчен тӑванла хуллен шаплаттарчӗ.

– Тӗрӗс тунӑ хамӑр енчи ял хӗрне суйласа илсе.

Пиччӗшсем пӗр харӑссӑн тӑчӗҫ те кухня еннелле утса кайрӗҫ. Чечек телевизора ячӗ те кресло ӑшне кӗрсе ларчӗ. Ҫак ӑнсӑртла пӑтӑрмах хыҫҫӑн Чечек Сетнертен пӗр утӑм та уйрӑлмарӗ.

Вырсарникун пиччӗшсем – Юман, Юхма, Агивер, Сементер тата Сетнер хӑй кашни хӑйӗн машинипе хӗр ҫураҫма кайрӗҫ, пилӗк ҫӑмӑл машина ҫил вӗҫтерсе чупрӗ Елчӗк еннелле. Чечексен ялне кӗриччен вӗсем тӑван килӗнчен ашшӗпе амӑшне лартса тухрӗҫ. Кӗҫех машинӑсем ушкӑнпа Чечексен хапхи умӗнче чарӑнчӗҫ. Ҫураҫу йӗркеллех иртрӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн ҫӑмӑлттайӑн хусах пурнӑҫӗ вӗҫленчӗ темелле. Ноябрь уйӑхӗнче туйне ирттерчӗҫ. Халӑх чылай пухӑнчӗ, туй курма пынисем пӗр-пӗрин хушшинче тӗлӗнсе калаҫрӗҫ:

– Кун пек чаплӑ туй чылай хушши пулманччӗ, ку япӑхланнӑ пурнӑҫ вӑхӑтӗнче кусем вӑйхал ҫитернӗ туя чӑвашлах ирттерме.

Туй хыҫҫӑн шӑкӑл-шӑкӑл килӗштерсе пурӑна пуҫларӗҫ Сетнерпе Чечек. Ҫулла вӗсен хӗр ҫуралчӗ. Чечекӗн хӗртусне чысласа ачине Кӳлепи ят пачӗҫ.

# Ю. Карпов парнисемшĕн

Тулта ăшă çанталăк тăрать, çулсем çинче юр нӳрĕ. Асфальтлă тротуарсемпе çӳреме кансĕр, мĕншĕн тесен пур çĕрте те шыв кӳлленчĕксене пухăннă. Шутласан, крещен сиввисем пуçланмалла ĕнтĕ, ĕлĕкхилле шартлама сивĕ тăмалла урамра. Ун вырăнне ăшă кунсем тăраççĕ. Кăçалхи хĕл пĕлтĕрхи хĕле аса илтерет, кăçал та вăл сивĕсемсĕр. Телевизорпа каланă тăрăх, кăçалхи ăшă температури унчченхи пур рекорда та çĕнтернĕ. Трактор тăвакансен культура керменĕ патĕнче çĕнĕ çул умĕн пăр хули туса лартрĕç. Вăл икĕ эрне чиперех ларчĕ, виççĕмĕш эрнинче ирĕлме пуçларĕ. Ишĕлсе анса ачасене ан чăлахлантарччĕр тесе, пăртан тунă çуртсене ватса çылăхран аяккарах хула тулашне турттарса кайрĕç. Микулай çакăнтан тĕлĕнчĕ. Акă вăл пăр стена пулнă вырăнпа иртсе пырать. Чарăну тĕлĕнче урам урлă каçрĕ те Юрий Михайлович Карпова тĕл пулчĕ.

– О, салам! Чылай пулать пĕр-пĕрне курманни.

– Çапла, – кăмăллă кулăпа Микулай чунне уçса çирĕппĕн чăмăртарĕ унăн аллине. – Çывхарса килекен крещен уявĕ ячĕпе саламлатăп.

– Тавтапуç, сана та çав вĕçпех пĕтем кăмăлран ырлăхсывлăх сунса, – вăл тути-çăварне хăлхисем таран тенĕ пек сарса кулчĕ.

– Пурте чиперех, анчах пĕр япала кӳрентерет: кĕсье пушши.

– Мĕн тăвăн ĕнтĕ, çĕнĕлле пурăнатпăр вĕт, Коля.

– Ăçта кайма пуçтарăнса тухнă, Юрий Михайлович?

– Хамăн машина патне каятăп, вăл «Шупашкар» магазин патĕнче.

– Ăнланмалла, уяв шухăшĕ мар пулмалла санăн, пĕрмай ĕçре те тĕрлĕ тăрăшура эсĕ.

– Тĕрĕс асăрханă эсĕ, ялан ĕç-пуçра эпĕ, – вăл канăçсăррăн пуçне усрĕ. – Январĕн çирĕм иккĕмĕшĕнче Елчĕк районне кайма пуçтарăнатпăр, унта кире пуканĕсем йăтассипе йăлана кĕнĕ турнир пулса иртмелле. Шухăшласа пăх, ăмăртусем Патреккелте пулаççĕ.

– Ку аван, асанне çуралнă сала вăл, апла пыратăпах.

– Вăт лайăх, эппин калаçса татăлтăмăр.

Алă тытса уйрăлчĕ Микулай Карповпа. Вĕсем пĕр вăрăм çуртрах пурăнаççĕ, подьезчĕсем çеç расна. Кунсем хăвăрт иртрĕç. Микулай Юра Карпов патне шăнкăравларĕ. Трубкăна арăмĕ тытрĕ.

– Ырă кун пултăр, иртнĕ уявсемпе саламлатăп.

– Сире те çавăн пекех, палларăм, халех чĕнетĕп...

– Миçере каятăр?

– Яланхиллех, пĕлтĕрхи пекех, çиччĕ çурăра ман подъезд патне пыр.

– Апла, тĕл пуличчен.

Тепĕр кунхине Микулай кунĕпе канăça пĕлмерĕ, пĕрмай шухăшласа çӳрерĕ. Çывăрма та кая юлса выртрĕ, пĕр виçĕ сехетре çеç çывăрса кайрĕ пулмалла. Юри тенĕ пекех, арăмĕ çак кунсенче сехете урайне ӳкернĕ, лешĕ ĕçлеме чарăннă, китай сехечĕ пулнăран ăна юсама май çук иккен. Тĕлĕнмелле тенĕ пек, Микулай ултă сехетрех ура çинче пулчĕ. Тухса утасси унăн тепĕр сехет çурăран çеç, вăл васкамасăр пуçтарăнчĕ. Арăмĕ тăчĕ те ирхи апат хатĕрлерĕ. Вăхăт хăвăрт иртет. «Тăван Атăл» номерĕсемпе ытти кĕнекесене хатĕрлесе чикме ĕлкĕрнĕ хушăра вăхăт саккăрмĕш сехете кайрĕ. Микулай çула тухрĕ, алăк умĕнче арăмĕ ăна чуптума ĕлкĕрчĕ.

– Асту, асăрханулла пул унта.

– Юрĕ-çке сана, ĕмĕрĕпех вĕрентетĕн, хама хам мĕнле тытмаллине тахçанах вĕренсе çитрĕм пулĕ, – вăл арăмĕ еннелле аллипе сулса илчĕ.

Юрий Михайлович пурăнакан подьезд патне кайрĕ, анчах унта никам та çукчĕ. Тĕлĕнмелле, шухăшларĕ Микулай çиччĕмĕш хут еннелле пуçне каçăртса пăхса. Лешĕн залра çутă çунать. Вăл подьезд алăкне туртрĕ, анчах ăна питĕрнĕ иккен, алăкĕ çĕнĕскер. Инçех мар уборщица пысăк кĕреçепе юр тасатать.

– А-а, ку алăка икĕ кун каялла лартрĕç, – пĕлтерчĕ вăл.

– Эпĕ çав тери васкатăп, мĕнле майпа кĕме пулать-ши унта?

– Мĕнле çӳренĕ эсир вара хваттер номерне астуса юлмасăр?

– Хăнăхнă йăлапа, юлташ хăш хутра пурăннине тата алăкне пĕлетĕп.

Урăх пĕр сăмах та чĕнмерĕ уборщица, хăйĕн ĕçне ма-

лалла турĕ, асфальт тăрăх кĕрт çине юр тĕртрĕ. Микулай подъезд умĕнче чăтăмсăррăн тăпăртатса тăчĕ, пĕрре чӳрече çине, тепре çул çине пăхрĕ, ăнсăртран машина çитсе тăмĕши тесе шухăшларĕ, е подъездран кам та пулин тухасса шанчĕ, вăхăчĕ вара пĕр шелсĕр шурĕ, васкатрĕ. Сасартăк алăк уçăлчĕ, шалтан пĕр вунă çулсенчи ача тухрĕ, çурăмĕ хыçĕнче шкул ранецĕ.

– Э –э –э, ан хуп, тархасшăн, алăка!

Вăл хăвăртрах шалалла чăмрĕ, ун хыçĕнчен алăк хăй тĕллĕнех хупăнчĕ.

Микулай лифтпа çиччĕмĕш хута улăхрĕ, пусма площадкине тухрĕ. Кунта йăмăх çутă çунать. Вăл алăк патне çывхарса ерипен кнопка çине пусрĕ те хăвăрт пӳрнине илчĕ, çынсене ир– ирех хускатас темерĕ, тен, çывăракансем те пур. Алăк уçăлчĕ те унта кил хуçин кĕрӳшĕ, çамрăк арçын курăнчĕ.

– Сире кам кирлĕччĕ?

– Юрий Карпов килтех-и?

Кĕрӳшĕ хыçĕнчен хĕрарăм пуçĕ курăнчĕ. Ку Юрий Карпов арăмĕ пулчĕ.

– Вăл автомобильне лартнă çĕре кайрĕ-ха, вĕсем унта пуçтарăнаççĕ.

– Пĕтĕмпех ăнланмалла.

Микулай стена çинче çакăнса тăракан сехет çине пăхса илчĕ, вăл çичĕ сехет çурă кăтартать. Микулай хăвăртрах лифта кĕрсе тăчĕ те аялалла васкарĕ, кĕçех урама тухрĕ, чупса тенĕ пек «Шупашкар» магазин еннелле утрĕ. Кунта «Фольсфаген пассат» машина умĕнче çынсем тăраççĕ. Юрий Карпов щеткăпа машин умĕнчи кантăкне юртан тасатать, моторĕ ĕçлет, анчах сасси илтĕнменпе пĕрех, глушительтен çеç тĕтĕм йăсăрланни курăнать.

– Фу, чуттах кая юлаттăм.

– Эпир вара кунтах-ха.

Микулай пурне те алă парса тухрĕ. Вĕсем хушшинче Ласточкин Владимир Иванович пур, вăл Раççей Федерацийĕ шайĕнчи судья. Кунтах Зинон Пантелеймонович, спорт мастерĕ. Тата пĕр вăтăрсенчи çамрăк йĕкĕт. Юрий Карпов щеткине хурса унăн аллине чăмăртарĕ. Вăл пулас ăмăртусен сăлтавĕ, ун ячĕпе панă приза Карпов парни теççĕ.

– Пирĕн кăмăлсăр япала сиксе тухрĕ, ĕнер каçхине пиллĕк сехетре Володя Миллинпа калаçса татăлтăм, вăл пирĕнпе пĕрле хăйĕн машинипе пыма килĕшрĕ, – Юрий Карпов темиçе хутчен салхуллăн тутипе чаплаттарса илчĕ. – Паян ирпе вара пыраймастăп тесе шăнкăравлать, унăн температура хăпарнă имĕш. – Вăл кӳренчĕклĕн пуçне пăркаларĕ, – Кун пек пулса тухасса пĕлнĕ пулсан, маларах машина заказ панă пулăттăм, е пиччен ывăлне ГАЗельпе килме каланă пулăттăм. – Юрий Карпов шанăçсăррăн аллипе сулчĕ, çамрăк каччă патне пычĕ те тем каларĕ, юлашки сăмахĕсем çеç илтĕнсе юлчĕç. – Çакнашкал килсе тухнăшăн каçар.

– Пурне те аван ăнлантăм, – машинăсене тӳллевлĕ лартакан вырăнтан тухса утрĕ вăл.

– Хăш чухне çынсене вăт çакăн пек кăмăлĕсене хуçса кăларса яма тивет.

Юрий Карпов хăй те пăсăлнă кăмăлпа кĕрсе ларчĕ машинăна. Ун хыçĕнчен эпир виçĕ арçын хыçала лартăмăр. Юрий Карповпа юнашар малти вырăна Иванов Зинон Пантелеймонович ларчĕ, вĕсен курткисем те пĕр йышшисем. Ăна темшĕн пур те Зинон тесе чĕнеççĕ, ашшĕн ячĕ вăрăмран пулĕ. Общежитисемпе гастроном умĕпе машинăна васкатмасăр тытса пычĕ Юрий Карпов. Шумилов урамĕпе иртсе пĕр кил картине кĕчĕç вĕсем. Кунта машинăна хирĕç икĕ арçын утса пыратчĕ, машина вĕсем тĕлĕнче чарăнчĕ. Юрий Карпов вĕсем патне тухрĕ, темиçе минут арçынсемпе калаçрĕ, унтан каялла кĕрсе ларчĕ. Икĕ арçынтан пĕри чăваш кĕрешĕвĕн федерацийĕн председателĕ Васильев Виталий Петрович пулчĕ. Машина тапранса кайсан Юрий Карпов пичĕ курăнмастчĕ, анчах сасси салхуччĕ.

– Вăт çакăн пек тĕл пулма тивет, анчах пĕрле илсе кайма май çук, хама аван мар.

– Мĕн тăвăн, сан айăпу мар вĕт, – калаçăва чарăнма памарĕ Владимир Иванович, пуçне ун еннелле тайса. – Ăçта вара пирĕн Сидоров Петр Петрович, кире спорчĕн экс-президенчĕ?

– Паян кайма пултараймасть вăл, ĕçре пулмалла терĕ.

– Унсăр кичем пулать ĕнтĕ.

– Унсăрах йӳнеçтерĕпĕр, – аллипе сулчĕ Зинон Пантелеймонович хыçалалла çаврăнса пăхмасăрах.

Эгер урамĕпе кайрĕç вĕсем, Альгешевăна пăрăнса кĕчĕç. Кăшт кайсан сотовăй телефон шăнкăртаттарчĕ, Юрий Михайлович кĕсйинчен телефонне кăларчĕ.

– Ăçта кĕтетĕн эсĕ унта пире?

– Тин çеç ман умран иртсе кайрăр.

– Тем, асăрхамарăм.

Машинăна каялла çавăрма лекрĕ. Пĕр çĕр метр кайсан паллана силуэта куртăмăр, ку вăл Глинкин Борис Николаевич, Европа чемпионĕ. Пĕрремĕш вырăн йышăннăшăн мăшăрĕпе иккĕшĕ ют çĕршывра, Кипр утравĕ çинче, каннă. Халĕ ĕнтĕ хыçалти ларкăчра тăваттăн аран вырнаçрăмăр, тăватсăмăр та кĕрнеклĕ арçынсем-çке. Микулай алăка хупма аллине тăсрĕ, анчах хупаймарĕ. Вара вĕсене пулăшас шухăшпа малти ларкăчран Зинон Пантелеймонович тухрĕ, анчах çак вăхăтра аллине хăвăрт тăсса Борис Глинкин алăка çăмăллăн хупрĕ.

– Тен, атьсемри, курткăсене хывмалла сирĕн, вара ун пекех тăвăр пулмĕ-и?

– Сивĕ пулмĕ-и тетпĕр-çке.

– Эппин хăвăрăнне хăвăр пĕлĕр, сире мĕнле меллĕрех, çавăн пек пултăр.

ГАИ постĕнчен чиперех иртсе кайрĕç вĕсем, хыçалти ларкăчра тăваттăн ларса пынине асăрхамарĕç пулмалла унтисем. Çапла вара машинăра улттăн ларса пычĕç. Кăмăлĕсем çĕкленнĕрен анекдотсем каласа пама пуçларĕç. Çавăнпа-и вăхăт хăвăрт иртрĕ, сисмесĕрех акă Чурачăка çитрĕç. Юрий Карпов заправкăна пăрăнса кĕчĕ. Хыçалта ларакансем тăваттăшĕ те машинăран сиксе тухрĕç, урисене çемçетсе илчĕç. Зинон Пантелеймонович çеç машинăран тухмарĕ.

Юрий Карпов машина бакне аллă литр бензин ячĕ. Ку хутĕнче Микулай алăка çăмăллăнах хупрĕ. Юрий Карпов машинăна тăнăçлă тытса пычĕ, хăвăртлăха сехетре çĕр çухрăмран ытла тытмарĕ, хăть ытларах та тытма май пурччĕ, машини çĕнĕ, çитменнине, ют çĕршыв марки. Çапла майпа Канаша çитрĕç, вăрăм кĕперпе чукун çул урлă каçрĕç. Çак вăхăтра çил-тăман пуçланчĕ, машинăна хирĕç йăсăрка юхма тытăнчĕ. Юрий Карпов кăмăлсăрланчĕ.

– Радиопа каларĕç-ха çанталăк улшăнмалла тесе, ав, çавăн пек пулса тухрĕ те.

Нихăшĕ те шарламарĕ, нихăшне те çанталăк пăсăлни килĕшмерĕ.

– Февральти çанталăк пекех ку, – пăшăрхануллăн каларĕ Микулай.

– Эп асăрханă тăрăх, кунта яланах çакăн пек çанталăк.

Юрий Карпов фарăсене çутрĕ, машинăна тытса пыма йывăрлансах пычĕ, вăл хăвăртлăха чакарчĕ. Комсомольские çывхарнăçемен çил-тăман вăйланчĕ. Акă Комсомольски тĕлне çитрĕç, курăнаслăх пачах япăхланчĕ. Васкамасăр вĕсем Елчĕк еннелле пăрăнса кĕрекен çул тĕлне çитрĕç. Кунта çулăн икĕ енĕпе те ГАИ çыннисем тăраççĕ. Ульяновскран Шупашкара çӳрекен маршрут машини ГАЗель тепĕр машинăпа çапăннă, сулахай енчен бамперĕ лапчăннă, сылтăм енче тепĕр машина ларать.

– Пуçна пытар, Виталий Петрович, – кăшкăрчĕ Зинон Пантелеймонович аллипе сулса, – ГАИ çыннисем асăрхасан, часах хăтăлса пĕтеймĕн вĕсенчен.

Лешĕ малти ларкăч хыçне пуçне чикрĕ. Машина тĕп çултан ерипен пăрăнса кĕчĕ. Елчĕк çулĕ кунта анаталла. Елчĕке çитнĕçемĕн çил-тăман лăпланса пычĕ. Пĕр тĕлте Юрий Карпов сасă сигналне пусрĕ, юпа çумне çирĕплетнĕ шуç çинче Тип Тимеш тесе çырнă.

– Ку манăн тăван ял, эп кунта çуралса ӳснĕ,– савăккăн пĕлтерчĕ Юрий Карпов.

– Унта машинăпа кĕме пулать-и?

– Куратăн вĕт çанталăкĕ мĕнле, Владимир Иванович, çулсене юр хĕвнĕ.

– Пĕрремĕш хут килетĕп эпĕ кунталла, пĕлсе каймастăп çулсене.

– Темех мар, çулла килĕпĕр-ха ак пĕр ик кунлăх канма.

– Пурнăç кăтартĕ унта.

Елчĕке çитрĕç вĕсем, çил-тăман пачах лăпланчĕ, çил кăна вĕрме чарăнмарĕ. Елчĕк çумĕпе Пăла шывĕ урлă хывнă кĕперпе Пăва çулĕ çине тухрĕç, кăштах кайсан сулахаялла пăрăнчĕç. Акчел ялĕ витĕр тухса, Патреккел салине пырса тĕрĕнчĕç. Салана кĕричченех темиçе çурт ларать, вĕсене шурă силикат кирпĕчĕпе хăпартаççĕ. Кăшт айккинерех пăрăнса вĕсем Патреккелĕн тĕп урамне кĕчĕç. Кунта кивĕ çуртсем

те, ҫӗннисем те пур, вӗсем пӗри теприншне килӗшӳллӗн лараҫҫӗ. Хӑтлӑ та ҫирӗп ҫуртсем куҫа савӑнтараҫҫӗ. Урам сарлака та анлӑ, пӗтӗм ял куҫ умӗнче, пӗтӗмпех уҫӑ та ӑнланмалла, йӗри-тавра кӑмӑла хӑпартакан сӑнсем. Ак мӗнле кӗтсе илчӗ сала, шухӑшларӗ Микулай, ҫак илемлӗ вырӑнта унӑн асламӑшӗ Марье ҫуралнӑ.

Вӗсем шкул тӗлне ҫитсе чарӑнчӗҫ, вӗрентӳ класӗсен ҫурчӗ икӗ хутлӑ. Спорт залӗн ҫурчӗ темиҫе метрта уйрӑм ларать. Машинӑна ҫурт умне лартрӗҫ, лаптӑкӗ унта таса та меллӗ. Спорт залӗнче халӑх чылай пухӑннӑ, музыка вылять. Вӗсене тахҫантанпа паллакан ҫын Клементьев Борис Демьянович, шкул завучӗ. Вӑл физкультурӑпа спортӑн тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗпе Убасев Анатолий Петровичпа пӗрре кӑна мар Шупашкарта пулнӑ, иккӗшӗ те тӗрлӗ ӑмӑртусене хутшӑннӑ. Кунта та Шупашкартан килсе ҫитнӗ хӑнасене иккӗшӗ кӗтсе илчӗҫ, черетле алӑ парса тухрӗҫ. Вӗсем патне шкул директорӗ Марков Виталий Петрович, Елчӗкри спорт шкулӗн директорӗ Кудряшов Вениамин Васильевич, кире спорчӗн федерацийӗн председателӗ Федоров Олег Николаевич, физкультурӑпа спортӑн тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ Адюков Николай Филиппович пычӗҫ. Ӑмӑртӑва лайӑх хатӗрленнӗ, ӑмӑртма ултӑ вырӑн тунӑ, ку вӗсен аван енне кӑтартать. Чылай ӑмӑртуҫӑ пуласса пӗлсе, мӗн кирлине пурне те класлӑ тунӑ, сӗтелсем, пукансем тата ыттисене те илсе килнӗ. Шупашкар хӑнисем лару-тӑрупа тӗплӗн паллашрӗҫ. Микулай Борис Клементьев патне пычӗ.

– Эсӗ ку ялта пурӑнатӑн-и?

– Ӑхӑ, мӗн хама астӑвасса, яланах юратнӑ тавралӑхра пурӑнатӑп.

– Кала-ха, тархасшӑн, ӑҫта пурӑнаҫҫӗ Добронравовсем?

– Эсир машина лартнӑ тӗлте вӗсен ҫурчӗ.

– Пысӑк тав сана пӗлтернӗшӗн.

– Каламӑн-ши, мӗншӗн сирӗнпе Петр Петрович Сидоров килмен?

– Унӑн васкавлӑ тумалли ӗҫсем тупӑнчӗҫ ӗҫ вырӑнӗнче.

– Эппин, ӑнланмалла.

Борис Клементьев патне ҫынсем пычӗҫ, вӑл вӗсемпе калаҫса кайрӗ. Микулай зала тепӗр хут пӑхса ҫаврӑнчӗ,

халлӗхе пурте лӑпкӑ. Йӑпӑртлӑх тухса кӗме те юрать, шухӑшларӗ вӑл, вара васкавлӑн урама тухрӗ. Клементьев кӑтартнӑ ҫурт пысӑк, чаплӑ, хитре, хуҫи патвар та пултаруллӑ ҫын пулни тӳрех курӑнать. Микулай калинкке уҫса килхушшине кӗчӗ. Ҫав самантра йытӑ хаяррӑн вӗрсе ячӗ. Микулай ҫавӑнтах тӑпах чарӑнса тӑчӗ, сӑнчӑр вӑрӑмӑшне пӑхрӗ, вара чӳречерен шаккарӗ. Вӑл кӗтнӗ пек, ҫенӗк алӑкӗнчен мар, пачах урӑх енчен, вите алӑкӗнчен тухрӗ пӗр ҫамрӑк арҫын, ҫийӗнче кил таврашӗнче ӗҫлемелли куртка.

– Кам кирлӗччӗ сире?

– Борис Клементьев пӗлтернӗ тӑрӑх, яла килсен манӑн шичче Володя Добронравов, е унӑн амӑшӗ сирӗн патра чарӑнаҫҫӗ имӗш.

– Тӗрӗсне каланӑ вӑл, вӗсем пирӗнтен кӑшт ҫӳлерех пурӑнатчӗҫ ҫак урамра, ҫуртне сутса тухса кайрӗҫ ялтан.

– Манӑн асанне Мария Добронравова хӑш ҫуртра ҫуралнине пӗлес тенӗччӗ.

– Вӑл ку салара пурӑннӑ-им?

– Ҫитӗнсе хӗр пуличчен, вара Исемпеле качча тухнӑ.

– Ку урӑх сӑмах, эп ӑна палламастӑп, ав ман пускилсем те Добронравовсемех, вӗсем пӗрмаях Исемпеле ҫӳреҫҫӗ.

– Юрӗ, тав сире уншӑн.

Микулай васкамасӑр урама тухрӗ, пускиле утрӗ. Ҫурчӗ пысӑках мар. Ку хутӗнче калинккерен кӗрсен йӗри-тавра пӑхса ҫаврӑнчӗ, йытӑ ҫук-ши терӗ. Шӑплӑха ҫеҫ туйрӗ вӑл, килхушши таса, пӗтӗм юра тасатнӑ, ҫенӗк алӑкӗ умӗнче пӗчӗк тӑхар выртать. Микулай пӳрте кӗчӗ, шалта ҫутӑ, таса, хӑтлӑ, кашни япала хӑй вырӑнӗнче. Кӗтесре икӗ хӗрарӑм ларать, пӗри ҫамрӑк, тепри ватӑ. Вӗсем кӗнӗ ҫын ҫине тӗлӗнерех пӑхрӗҫ. Микулай иккӗлене пуҫларӗ, шухӑшӗсем арпашрӗҫ, чӗлхи ҫухалчӗ. Ҫавах та пӗтӗм хӑюлӑхне пухса вӑл сӑмахне пуҫларӗ.

– Эпӗ манӑн асанне Мария Добронравова ҫуралнӑ ҫурта шыратӑп.

Ҫамрӑк хӗрарӑмӗ ватти ҫине ыйтуллӑн пӑхрӗ.

– Анне, эс ӑна пӗлетӗн-и?

– Тем, аса илейместӗп ун пек Марьене.

Микулай асламӑшӗ ҫинчен хӑй мӗн пӑлнине тӗпӗ-йӗрӗпе каласа пачӗ. Хӗрӗ асламӑшӗнчен тепӗр хут ыйтрӗ. Малтанхи хуравах пулчӗ.

– Тăхта-ха, тĕп урамра тăкăрлăкпа юнашар пирĕн тăвансем пурăнаççĕ, шăнкăравласа ыйтам-ха вĕсенчен.

Темиçе хутчен шăнкăравларĕ, анчах леш вĕçĕнче трубка тытан пулмарĕ.

– Соня инке апшăшĕпе пиччĕшне пăхса пурăнать, вĕсем пач ватă çынсем, килти ĕçсемпе тухнă пулĕ.

Хăй пÿлĕм тăрăх утса çÿрерĕ, каллех телефон патне пычĕ. Ку хутĕнче такам тытрĕ пулмалла трубкăна. Хĕрĕ хăй каччăран мĕн илтнине телефонпа лешсене пĕлтерчĕ, лерен ăнлантарса хуравларĕç. Хĕр трубкăна хучĕ те каччă патне кăмăллă кулăпа утса пычĕ:

– Санăн аннÿ Униççе хăйĕн çамрăк хĕрĕпе Йĕпреçре пурăнать иккен.

– Ăхă, ăхă, юлашкинчен пĕтĕмпех паллă пулать.

Асаннÿ çуралнă çуртра халĕ икĕ аппăшĕпе пиччĕшĕ пурăнаççĕ.

– Тавах сире куншăн.

Хăйĕн карттусне илсе Микулай диван çинчен тăчĕ.

– Ăçта васкатăр?

– Сирĕн яла эпир кире пуканне йăтассипе шкул ачисем хушшинче ăмăрту ирттерме килнĕ, çĕнтерÿçĕсене Карпов Юрий Михайловичăн призне параççĕ, сăмах май, вăл хăй те килнĕ.

– Тархасшăн, тăхтăр ĕнтĕ кăштах.

– Ыттисем умĕнче аван мар, мĕн калĕç кайран?

Хĕр зала тухса тăваткăл хитре графин илсе килчĕ те сĕтел çине лартрĕ. Унтан холодильникрен тĕтĕмленĕ сысна пĕççине кăларчĕ, ăна илемлĕ татăкласа касрĕ, сĕтел çине савăтпа лартрĕ. Çакăн хыççăн çенĕкри чăланран тĕтĕмленĕ рулет илсе кĕчĕ, ăна та татăксем çине касрĕ, каллех сĕтел çине лартрĕ. Микула çурта пăхса çаврăнчĕ. Кухня пысăк, зал аслă, вĕсем ларакан пулĕм те пĕчĕкех мар. Тул енчен ниепле те ку çурт шалта çавăн пек анлă тесе калас çук.

– Курткуна хывса çак та сĕтел хушшине лар.

Курткине хывсан кĕлетки çăмăлланнине туйрĕ, каллех диван çине ларчĕ, ку хутĕнче сĕтел çывăхнерех вырнаçрĕ. Хĕр черккене эрех ярса ĕçрĕ, унтан амăшне ярса пачĕ. Микулай вара çур черкке сыпса парса сĕтел çине лартрĕ. Ку чаплă сăмакун пулчĕ, пĕр шăршăсăрскер, хаярскер,

коньяк тĕслĕскер. Хĕр ун çине кăмăлсăррăн пăхрĕ

– Пĕр черкке те пулин ĕçмĕн-им вара?

– Юрĕ эппин, сирĕн сывлăхăрсемпе телейĕрсемшĕн ĕçсе парăп, сĕтел çинче яланах çăкăрпа тăвар, паянхи пек пуян апат-çимĕç пултăр.

– Кунтан та чаплăраххи пулĕ-и, тен, – кăллăн кулчĕ çамрăк хĕрарăм.

Микула черккене тепĕр хут çĕклерĕ, тĕппипех ĕçсе ячĕ. тĕтĕмленĕ какая тутанчĕ, вăл питĕ тутлă, çăварта ирĕлет, лавккара туяннине танлаштараймăн кун пек сипетлĕ çимĕçпе.

– Пулчĕ, тавтапуç, кайрăм эпĕ, ахаль те тытăнса тăтăм сирĕн патăрта. – Микулай хăйĕн телефонĕн номерне çырса пачĕ. – Пăхатăп та, хулари пек пурăнатăр халĕ, ăшă та хăтлă.

– Текех проблемăсем çук, хутатпăр та пĕçеретпĕр газпа, ĕлĕкхилле вут-шанкăпа асапланмастпăр.

– Тепĕр хут тавтапуç сире, Добронравовсем.

Микулай хăвăрт тăхăнчĕ те васкавлăн пӳртрен тухрĕ, вара çул урлă каçрĕ те спорт залне кĕчĕ. Шупашкартан килнĕ делегаци хывăнма ĕлкĕрнĕ, галстукпа та костюмпа çӳреççĕ. Зинон Пантелеймонович кăмăлсăр.

– Ăçта çĕтсе çӳретĕн эсĕ?

– Ниçта та çухалман, тăвансене кайса куртăм, – урăх нимĕн те шарламарĕ вăл, унтан Юрий Михайлович патне пычĕ.

– Ăçта хывăнса çакрăр çиелти çипуça?

Юрий Карповпа Владимир Иванович пĕр харăс хуравларĕç.

– Иккĕмĕш хутра, çăра уççи Борис Клементьевра.

– Ăнлантăм.

– Халлĕхе кунтах хывăнма пултаран, – вăл аллипе пакетсем çине кăтартрĕ, унта пĕр куртка выртать. Вăл хывăннă вăхăтра Борис Демьянович микрофонпа пĕлтерчĕ:

– Ăмăртăва хисеплĕн уçма пурне те строя тăма ыйтатăп.

Карпов Юрий Михайлович парнисемшĕн ăмăртма çĕр вăтăр çына яхăн килнĕ, хĕрсем сахалтарах, арçын ачасен çуррине яхăн. Микрофон патĕнче Клементьев Борис Демьянович, Карпов Юрий Михайлович, Глинкин Борис Нико-

лаевич, Иванов Зинон Пантелеймонович, Васильев Виталий Петрович, Жирнов Николай Трофимович пулчĕç.

– Смирно, равняйсь, налево! – каларĕ Борис Клементьев пĕр утăм малалла пусса. – Чăваш Республикинчи кире спорчĕн федерацийĕн президенчĕн Карпов Юрий Михайлович призĕшĕн ăмăртакансене строя тăратнă. Çĕклĕр Чăваш Республикин ялавне!

Чăваш Респувликин патшалăх гимнĕ выляса ячĕ, пурте ура çине тăчĕç. Çакăн хыççăн кире спорчĕн федерацийĕн президенчĕ Карпов Юрий Михайлович хăй сăмах каларĕ:

– Кун йышши ăмăртăва иккĕмĕш хут ирттеретпĕр, çакăн чухлĕ спортсмен пуçтараннăшăн эпир питĕ кăмăллă, вĕсене ертсе пыракансене пирĕнтен пысăк тав!

Вăл хăй çинчен, Раççей чемпионатĕнче çĕнтерни çинчен каласа пачĕ. Ыттисем ăмăрту пирки ырă сăмахсем каларĕç. Зала чаплă илемлетнĕ. Халăх чылай пухăннă, паллах, чылайрах арçынсем.

Строя тăнă ăмăртуçăсене Борис Клементьев команда пачĕ:

– Саланăр, кире пуканне йăтма хатĕрленĕр!

Ăмăртуçăсем хушшинче хĕрсем те пулни Микулайшăн интереслĕ пулчĕ. Вăл хăйĕн курткине çакма кайрĕ, хываннă юлташĕсенчен уйрăлса тăрас темерĕ. Хăй илсе килнĕ «Тăван Атăл» журналпа кĕнекесен пакетне Борис Клементьева пачĕ, вĕсене вăл шкул библиотеки валли хатĕрленĕччĕ.

– Ай-ай-ай, тавтапуçах сана кун йышши парнешĕн, Микулай.

– Хамăр енчисем вĕт эпир.

Çав вăхăтра ăмăртусем пуçланчĕç. Микулай çине никам та пăхакан пулмарĕ. Вăл кунта пурăнакан асламăшĕ пирки шухăшларĕ, анчах кунтан каясси пирки юлташĕсем умĕнче аван мар пулчĕ. Вăл ăмăртăва пăхса тăчĕ. Унпа юнашар пĕр хĕрарăм тăратчĕ. Вăл кунта чĕннĕ медсестра иккен, тем пулса тухасран чĕннĕ имĕш ăна. Микулай унпа калаçса илчĕ, пĕрле ăмăрту иртнине пăхрĕç. Шурă футболка тăхăннă хĕрача кирене чылайччен йăтрĕ, ку Микулая çав тери килĕшрĕ, ыттисене те кăмăла кайнă иккен. Вăл пĕр чарăнмасăр кирене йăтрĕ те йăтрĕ.

– Вăт маттур хĕрача, тăххăрмĕш класра анчах вĕренет, результачĕ вара ав мĕнле, – каларĕ судьясенчен тахăшĕ.

Хĕрача кирене йатма пăрахнă хыççăн ун патне темиçе çын пычĕç.

– Ай, маттур-та эсĕ, кандидат нормине пурнăçлама пултартăн.

Ăна ыталаса юнашарти пӳлĕме илсе кайрĕç. Залра пурте йĕркеллĕ пычĕ, çынсем кире йатрĕç, судьясем кам мĕн чухлĕ йатнине шутларĕç. Ăмăртусем вĕçленнĕ хыççăн пурте сĕтел тавра пуçтарăнчĕç, хут çине çырса пынă результатсене пĕрле пухса пачĕç, унтан «Пăла» кафене апата кайрĕç. Микулай пуçĕнче пĕр шухăш çаврăнчĕ: асламăшĕ çурчĕ патне каймалли вăхăт çитрĕ пулмалла, кайран ун пек самант пулас çук.

– Юрий Карпов, эсир апатланнă вăхăтра эпĕ асанне çурчĕ патне кайса килем-ха.

– Кайса кил, тархасшăн, сана никам та чарас çук.

Çав самантрах Зинон Пантелеймонович сăмах хушрĕ:

– Асту, Микулай, сана кунтах хăварма пултаратпăр.

– Мансăр ăçта кайăр-ши, совĕç çитес çук сирĕн ун пек тума.

Кăмăллăн кулса вĕсем тĕрлĕ еннелле кайрĕç: Микулай – ял еннелле, лешсем, машинăпа ларса, – Елчĕке. Микулайпа юлнă медсестра каларĕ:

– Сире кăтартам-ха Добронравовсем ăçта пурăннине, – вĕсем кăштах урампа иртрĕç. – Ав, куратăр-и çурт умĕнчи сарă сарая?

– Аванах куратăп.

– Вăт, вĕсен çурчĕ вăл, тăкăрлăк вĕсен çурчĕпе юнашар.

– Тавтапуç, хĕрача, Турă сывлăх патăр сана.

– Эпĕ çакăнта, лавккана хирĕç пурăнатăп.

– Тепĕр хут тав сана ырă кăмăлшăн.

Микулай хĕрача кăтартнă çурт еннелле савăнăçлăн утрĕ. Чунĕ хăпартлануллă пулчĕ унăн. Тӳпе те таса, пĕр пĕлĕтсĕр, кунĕ те çутă, хĕвеллĕ. Ялта çуртсене пĕренерен е кирпĕчрен лартаççĕ, кунта вара тулашĕнчен рейка çапса илемлетнĕ. Çурчĕ пысăках мар, вăтам, хăйне май сăрланăран урамри ытти çуртсенчен уйрăлса тăрать. Калинкке алăкне уçса Микулай килхушшине кĕчĕ. Ăна йытă вăрсе кĕтсе илчĕ. Микулай сăнчăр вăрăмăшне пăхрĕ-те пĕр шиксĕр кĕрсе кайрĕ пӳрте. Пӳрт алăкне уçсан питне ăшă çапрĕ.

– Салам сире, манăн хаклă çынсем, эпĕ Униççе ывăлĕ пулатăп, асанне çуралнă çурта курма килтĕм.

Соня инкĕшĕ ăна урараи пуç таран сăнавлăн пăхрĕ, вара тин сăмах хушрĕ.

– Хывăн та çакăнта сĕтел хушшине ирт.

Микулай курткине ăçта çакмаллине пăхрĕ.

– Сирĕн пата Йĕпреçе пынине астăватăп-ха, эсир ун чухне пĕчĕккĕччĕ.

– Кăштах астăватăп эсир пирĕн Йĕпреçри хваттере пынине.

Пўртре мунчари пек ăшă, çавăнпа Микулай курткине кăна мар, пиншакне те хыврĕ, кĕпепе çеç юлчĕ. Тепĕр пысăк пўлĕмрен шурă сухаллă старик тухрĕ. Карчăк ăна хăлхинчен кăшкăрса кам килнине ăнлантарчĕ.

– Ку манăн пичче, вăл тăхăрвунпĕр çулта, вырăн çинче выртаканĕ манăн аппа, вăл тăхăрвунтăватă çулта, эпĕ вара сакăрвун тăваттăра. – Вăл малалла ăшшăн каларĕ: – Вăт вĕсене пăхса пурăнма тивет, уйрăмах аппана, вăл сайра тăна кĕрет.

– Сирĕн йăхрисем чылай пурăннишĕн савăнатăп эпĕ, анне те манăн сакăрвун тăхăр çулта.

– Çавнашкал çынсем çав эпир, йăх пуçĕсем çирĕп çынсем пулнă пирĕн.

Кашни кĕтесре Турă амăшĕн турăшĕ. Асламăшĕ те вĕсене кĕлтуса пурăннă пулĕ тесе шутларĕ Микулай.

– Манăн асанне Марье çакăнта çуралнă пулса тухать-и ĕнтĕ?

– Çурчĕ кивĕччĕ вăл, ун вырăнне куна лартни вăтăр çул иртрĕ.

Микулай çурта пăхса хăйне май хакларĕ.

– Ку çурт пĕренерен мар тесе ан сивле эсĕ, Куля, ăна хăмаран çапса тунă пулин те вĕсем хушшине ăшă тытмаллине çителĕклех янă.

– Туятăп-ха пўртре мĕнле ăшшине. Мĕншĕн газ кĕртместĕр вара?

– Куратăн вĕт мĕнле ватă çынсем пурăнаççĕ кунта, ăнсăртран хăшĕ те пулин кранне уçсан, пĕтетпĕр пурте, вĕсем хыççăн сыхласа çитерейместĕн.

– Халĕ ăнлантăм ĕнтĕ, Соня инке.

– Ай-яй, темшĕн пуç ыратать манăн паян, – вăл аллипе çамкине сăтăрчĕ, – ăнланмастăп, мĕн пулчĕ-ши мана? – Вăл амăшĕлле ăшшăн пăхрĕ Микулай çине. – Ăçта кăмăллатăн, çавăнта иртсе лар, Куля.

Микулай турăш кĕтессине сĕтел çывăхнерех ларчĕ, пӳлĕмре ăшă пулнăран тарлакан литне пĕрмай тутăрпа шăлчĕ.

Ăна хирĕç ватă старик ларчĕ, унăн шурă сухалĕ питĕ вăрăм ӳссе кайнă.

– Астăватăп Йĕпреçе вăрман патне пынине, эсир ун чухне пĕчĕккĕччĕ.

– Эпĕ вара ăна пачах астумастăп, тете.

– Япăх илтетĕп, тархасшăн, хытăрах калаç.

Вĕсем кăштах калаçса ларчĕç. Çав вăхăтра Соня инкĕшĕ иртсе пыратчĕ.

– Манăн спорт залне кайма вăхăт.

– Сана хăналамасăр, Коля, ниçта та кăларса ямастăп, – вăл Микулай çине ăшшăн пăхрĕ. – Пире ватăсене ан кӳрентер ĕнтĕ.

Вăл васкавлăн çенĕке тухрĕ те пакетпа çăкăр илсе кĕчĕ, шурă çăкăрпа хура çăкăра çатмапа кăмакана лартрĕ, хăй каллех çенĕке тухрĕ, унтан сысна какайне илсе кĕчĕ, ăна та чашăкпа кăмакана лартрĕ. Пӳлĕмре питĕ шăрăх пулнăран Микулай пысăк пӳлĕме кĕчĕ, кунта уçăрах, чăтма пулать. Алăк çывăхĕнчи кĕтесре аслă инкĕшĕ выртать, имшерскерĕн шăмми-шакки çеç палăрать, пăхма аван та мар. Микулай малалла иртрĕ, пӳлĕме сăнарĕ. Ав, стена çинче сăнӳкерчĕксен пысăк рамки çакăнса тăрать.

Çурăм хыçĕнче Соня инкĕшĕн сасси илтĕнчĕ.

– Варринче пĕртен-пĕр ывăлăм Юра, унпа юнашар унăн арăмĕ.

– Ку вара Нина Абрамова инке, вăл ман патра темиçе те пулнă.

– Юратать вăл хăнана çӳреме, эпĕ ăна темиçе те ыйтнă мана Мускава Лисук йăмăкăм патне хăнана илсе кайма, вăл темиçе хутчен те сăмах пачĕ, анчах пĕрре те илсе креймарĕ. Тăпри çăмăл пултăр ĕнтĕ.

Инкĕшĕ аллине сулчĕ те нӳхрепе кĕчĕ, унтан варени кăларчĕ, унпа пĕрлех хĕрлĕ эрех кĕленчи кăларса ăна графина ячĕ. Çав хушăрах таçтан шурă эрех кĕленчине те тупрĕ.

Кĕленчи темшĕн чăвашра кăларни пулмарĕ, Ульяновск облаçĕнчи пулчĕ. Вăл хăвăрт сĕтел хатĕрлерĕ, сĕтел варрине пысăк чашăкпа какай лартрĕ. Унтан хăйĕн пиччĕшне чĕнме кайрĕ.

– Сана шурă эрех ĕçме юрамасть, ытла хăвăрт ӳсĕрлетĕн, çавăнпа вăл Куля валли пултăр, – инкĕшĕ чашăка Микулай сывăхнерех тĕртрĕ, – ан ютшăн, эпир тăвансем вĕт. – Вăл хăйне тата тетĕшĕ валли эрех ячĕ. Микулай эрехе тĕппипе ĕçсе какай çиме тытăнчĕ. Соня инке иккĕмĕш черкке ячĕ. – Халĕ ĕнтĕ сăмахăма калам. Асаннен тăпри çăмăл пултăр, асатттенĕн те çавăн пекех пултăр, леш тĕнчене кайнисен пурин те çавăн пекех пултăр.

Вĕсене асăнса вĕсем черккисене пушатрĕç. Микулай ура çине тăчĕ.

– Тавтапуç сире, çĕр çинче чылай пурнакансене, çакăн пек тараватлă йышăннăшăн, сирĕн сĕтел хăнасемшĕн яланах тулли пултăр.

– Тавтапуç сана, Куля, ырă сăмахсемшĕн, – ватă карчăк çамрăк каччăн аллине чăмăртарĕ. Микулай урама тухрĕ, Соня инкĕшĕ ăна ăсатса ячĕ. Аван иккен тăван урамсемпе утса иртме. Кунта, Патреккелте, çамрăк çулсем иртнĕ-çке, кунтах асламăшĕ утса çӳренĕ вĕт, халĕ ĕнтĕ çак Елчĕк районĕнче.

Спорт залĕнче ăмăртусем пуçланнă ĕнтĕ, куракансенчен кашниех хăйсем кăмăлланисене хавхалантарса кăшкăраççĕ, алă çупаççĕ, спортсменсем патне ăнтăлаççĕ. Çакна курса, Борис Клементьев иккĕмĕш хутран хĕрлĕ хăюсемпе палăртнă вĕрен илсе анчĕ, унпа куракансенчен уйăрса тăсса лартрĕ, судьясене куракансем ан чăрмантарччăр терĕ. Зал тĕлĕнмелле тулли куракансемпе, вĕсем пĕрмай кăшкăрса хавхалантараççĕ кире пуканне йăтакансене, алă çупаççĕ. Кун пеккине Микулай ниçта та курманччĕ. Судьясен сĕтелĕ хушшинче Карпов Юрий Михайлович, Глинкин Борис Николаевич, Иванов Зинон Пантелеймонович лараççĕ. Умĕсенче выртакан хут çине пăхса тем сӳтсе яваççĕ. Çырса пынă результатсене пăхаççĕ ĕнтĕ. Ăмăрту хăйне май малалла пырать. Акă пĕр хĕрача кире пуканне йăтать, хăй йăтмалли техникăна пĕлсех каймасть пулмалла, çавах та тăрăшсах йăтать. Сасартăк кире пуканĕ ӳкрĕ ун аллинчен.

– Ай, ыратать!

Ун патне медсестра чупса пычĕ, хулне хыпашларĕ.

– Айта, тăхăн хăвăртрах, больницăна каймалла пулать, аллуна мăкăлтанă пек.

– Халех тăхăнатăп.

Хĕрача хăвăрт тăхăнса тухрĕ.

– Елчĕке кайиччен асанне патне каяр, вăл ун пеккине тӳрлетме пĕлет.

Вĕсем машинăна ларса карчăк патне кайрĕç. Лешĕ алла хыпашларĕ, хыттăн туртса илчĕ.

– Шăнăр тăсăлнă кăна.

– Тавтапуç сире, асанне.

– Мĕн мана тав тумалли, эп нимĕнпе те пулăшмарăм, пăхрăм çеç.

– Çавах та манпа вăхăт ирттертĕр.

– Аллу хăвăртрах тӳрлентĕр тесен Елчĕк пульницине кайăр, бинтпа туртса çыхчăр.

Лешсем каллех машинăна ларса Елчĕке васкарĕç. Урăх залра кире пуканне ун пек йăнăçсăр çĕклени пулмарĕ. Микулай сĕтел хушшине пырса ларчĕ, протокол çырма пулăшрĕ. Ĕç-пуçа кунта Иванов Зинон ертсе пырать, вăхăтăн-вăхăтăн командăсем парать. Йăна Борис Клементьев пулăшса пырать. Микулай унпа юнашар ларакан Борис Глинкинăн сехечĕ çине пăхса илчĕ.

– Ăмăртусем тепĕр икĕ сехете тăсăлаççĕ пулмалла.

– Нумайран та – тепĕр сехете, – хуравларĕ Юрий Карпов лару-тăрăва пĕлнĕ майăн. Кайран вăхăта сĕре ирттерес мар тесе, вăл умĕнче купаланса выртакан грамотăсем çине алă пусма тытăнчĕ. Ăмăртусем вĕçленмен-ха, малалла пыраççĕ. Куракансем кăшкăрса та алă çупса хавхалантараççĕ ăмăртуçăсене. Юрий Карпов призĕ çавах та хисеплĕçке. Сĕтел патне Петя Попов пычĕ, унпа районта пĕрремĕш вырăн йышăнса тăнă Анатолий Горшкова аса илчĕç вĕсем.

– Ăхă, астăватăп çамрăк вăхăта.

– Лекçее астумастăн-и, вăл манăн аякри тăван, пĕрмай Толя Бориспа ăмăртатчĕ.

– Тем, астумастăп ăна.

– Вăл кайран Çĕпĕре кайрĕ, унта самолетпа вĕçрĕ.

– Лекçейĕн шăллĕ Толя Казаков Камчаткăра службăра

тăратчĕ, полковник, вертолетчиксен полкне ертсе пыратчĕ.

– Çавăн пек кала та, халĕ аса илтĕм, вăл Раççейре чăвашсен пĕрремĕш генерал-майорĕ.

Вĕсем татах темĕн те пĕр аса илсе калаçрĕç. Юра Карпов каланă пекех, ăмăртусем тепĕр сехетрен вĕçленчĕç, чи савăнăçлă самант пуçланчĕ. Каллех пурне те строя тăратрĕç, хĕрсене – уйрăм, йĕкĕтсене – уйрăм. Борис Клементьев микрофонпа кам мĕнле вырăн йышăннине пĕлтерчĕ. Асăннă ăмăртуçăсем мала тухрĕç, мĕнле вырăн йышăннине кура, тумбăсем çине хăпарса тăчĕç. Юрий Карпов вĕсем патне пырса медальсем çакрĕ. Медальсем хитре, эмальпе витнĕскерсем, лентисем виçĕ йĕрлĕ, кăвак, шурă, хĕрлĕ йĕрсемлĕ. Пĕрремĕшпе иккĕмĕш вырăн йышăннисене Виталий Васильев хутпа тĕркесе çыхнă парнесем пачĕ, виççĕмĕш вырăн йышăннине – пакет тыттарчĕ. Пурте кăмăллă юлчĕç, никам та кӳренмерĕ. Ку процесс çур сехетрен ытлараха пычĕ. Юлашкинчен командăпа ăмăртакансене кубоксем пачĕç. Кĕçĕн Таяпа шкулĕн ăмăртуçисене пĕрремĕш вырăн йышăннăшăн ылтăн кубок пачĕç. Кĕмĕл кубок Çуткӳль шкулĕн спортсменĕсене лекрĕ. Кун хыççăн Борис Клементьев микрофонпа команда пачĕ:

– Чăваш Республикин патшалăх ялавне антарăр!

Чăваш Республикин патшалăх гимнĕ янраса кайрĕ, пурте ура çине тăчĕç. гимн вĕçленсен çамрăк ăмăртуçăсем хăвăртрах саланасшăнччĕ, вĕсене Юрий Карпов тытса чарчĕ.

– Айтăр, пĕрле тăрса сăн ӳкерер.

Пурте хаваспах килĕшрĕç, пухăнса тăчĕç, Шупашкартан килнисене мала пукансем çине лартрĕç. Кун хыççăн Юра Карпов приз илнĕ ачасенчен ыйтрĕ:

– Калăр-ха, кăçал шкул пĕтерекенсенчен кам ăçта вĕренме каясшăн. Эпир сире унта кĕме пулăшăпăр, паллах, май килнĕ таран.

Вăл çыру кĕнекине вĕренме кĕрес текенсен хушамачĕсене çырса хучĕ. Кĕпĕрленсе тăракан ачасем патне Виталий Васильев пычĕ.

– Сирĕнтен камăн та пулин кăмăл пур-и çар училищине кайма? Унта сирĕн йышши спортсменсем кирлĕ.

Ачасем иккĕленӳллĕн хулпуççийĕсене хĕсрĕç, никам та пĕр сăмах та шарламарĕ.

– Хамăр ентеш генерал тăватă ача илме пултаратăп терĕ.

Кун хыççăн ачасен куçĕсем çуталчĕç, интереслĕн çиçрĕç. Чылай ыйтусем пачĕç арçын ачасем Юрий Карповпа Виталий Васильева. Кашнин ыйтăвĕ çинех хуравлама тиврĕ вĕсен. Пурте саланса пĕтсен тин машина патне утрĕç. Ку хутĕнче Виталий Васильев шурă ГАЗеле ларчĕ, çăмăл машинăна эпир пилĕкĕн лартăмăр, ирĕклĕ пулчĕ пире машинăра. Юра Карпов аллипе сулчĕ, пуçне пăркаласа илчĕ.

– Чутах пăтăрмах сиксе тухатчĕ: Шупашкара кунтан шăнкăравласа пĕлтернĕ тăрăх, кăнтăр апачĕ вуникĕ тенкĕне ларать терĕç, – кун хыççăн сассине хăпартрĕ Юрий Карпов. – Апачĕ вара çирĕм пилĕк тенкĕне ларчĕ. Маларах пĕлтернĕ пулсан, сăмах та пулас çукчĕ.

– Мĕнле тухрăр вара ку пăтăрмахран?

Калаçăва Владимир Ласточкин хутшăнчĕ.

– Укçа çитменрен пичче патне кайса кивçен ыйтма тиврĕ.

– Эп шутламан та ун пек пулса тухасса, çавăнпа ытлашши укçа илмерĕм.

– Турра шĕкĕр, пурте йĕркеллех иртрĕ.

Пирĕн кăмăлсем çĕкленчĕç, çуртсем çуталнăн курăна пуçларĕç, таса юртан пулĕ ку. Çапах та хитре Патреккел сали, кашнин чунĕнче ырă йĕр хăварчĕ пулмалла Патреккел. «Пăла» ятлă кафе патне çитрĕç вĕсем, вăл кĕперпе юнашарах вырнаçнă. Пурте машинăрах хывăнчĕç, тулта сивĕ пулнăран чупсах кĕчĕç вĕсем кафене. Шалта кафе хăтлă курăнать, кĕтесре Николай Чудотворецăн турăшĕ çакăнса тăрать. Сĕтелсем пĕр-пĕринчен уйрăммăн лараççĕ, айккинче тата икĕ пÿлĕм, ушкăнпа килнисем валли пулĕ ĕнтĕ. Вĕсем патне официантка пычĕ те Юрий Карповран ыйтрĕ:

– Эсир миçен пулатăр?

– Вунпилĕк çын пулать пек. – Унтан кăштшухăшланă хыççăн аллине сулчĕ, – Юрĕ-çке, çирĕм çын валлиех хатĕрлĕр.

Официантка кĕсье кĕнеки çине çырса хучĕ. Юрий Карпов зала пăхса çаврĕнчĕ.

– Так-так, ку пире килĕшмест. – Вăл официатка патне пычĕ. – Сĕтелсене юнашар пĕрлештерсе лартма юрать-и?

– Паллах, сăмах-юмах пулас çук, клиентсен кăмăлĕсене тивĕçтермелле пирĕн. – Вара вăл виçĕ сĕтеле пĕрлештерсе пĕр рете лартрĕ, вĕсене шăлса тасатрĕ. Кафене кĕнисем

сётелсем хушшине ларма тытăнчĕç. Пĕр арçын Микулай çумне ларасшăнччĕ, анчах ăна Анатолий Убасьев аллипе тытса чарчĕ те евĕклĕн ыйтрĕ:

– Ирĕк парăр салтакра пĕрле пулнă çынпа юнашар ларма, чылай пулать пĕр-пĕрне курманни.

– Тархасшăн, эп хирĕç мар, – çул пачĕ вăл пире, хăй сĕтелĕн тепĕр хĕррине кайса ларчĕ. Вĕсемпе юнашар Борис Клементьев вырнаçрĕ. Юрий Карпов сĕтел варрине чи малтан кĕрсе ларнă. Официантка подноспа темиçе порци купăста салачĕ илсе пычĕ. Çынсем апатланма пуçларĕç. Официантка çăкăр илсе пынă тĕле хăшĕ-пĕри салата çисе яма ĕлкĕрнĕ. Юрий Карпов ура çине тăчĕ те аллине официантка еннелле тăсрĕ.

– Хама валли пĕр порци винегрет ыйтрăм вĕт.

– Халех пулатъ, ирĕк парăр тытăннă ĕçе вĕçлеме.

– Икĕ турилкке ак çакăнта юнашар лартăр, пиччепе ывăлĕ килмелле, машина лартма кайрĕç-ха.

– Пĕтĕмпех ăнлантăм, мĕнле ыйтатăр, çавăн пек пулĕ.

– Халех пилĕк кĕленче шурă эрех илсе килĕр.

– Халех калатăп.

Пирĕн официантка таçта çухалчĕ, çук та çук. Юрий Карпов сĕтел хĕрринче лараканпа калаçса илчĕ.

– Тем, ытла мĕшĕлти пулмалла официантка, кайса калаха, Борис, хăвăртрах эрех илсе килтĕр. Лешĕ вырăнтан тăрса хăех кĕленчесем йăтса килчĕ, эрехĕ «Федеральная» ятлă. Кĕçех сĕтекпе минерал шывĕ пулчĕ сĕтел çинче. Эрехе черккесене ярсан Юрий Карпов ура çине тăчĕ.

– Турра шĕкĕр, Елчĕк районĕнче иккĕмĕш хут ирттеретпĕр çамрăксем хушшинчи ăмăртăва. – Хăй вăл аллинче минерал шывĕллĕ стакан тытнă. – Турă пулăшнипе, юлашки хут ан пултăр ку ăмăрту çамрăк ăру хушшинче.

Ун хыççăн спорт шкулĕн директорĕ Вениамин Кудряшов сăмах каларĕ.

– Астăватăп, сакăрвуннăмĕш çулсенче пирĕн çинчен хаçатра çыратчĕç те, эпир савăннипе тарласах вулаттăмăр, – вăл Николай Адюков еннелле пуçĕпе сĕлтрĕ. Лешĕ кăмăллăн кулса унпа килĕшÿллĕн хирĕç пуçĕпе сĕлтрĕ.

– Пулнă ун пекки, нимĕн те калаймăн ăна хирĕçлесе.

Вениамин Кудряшов сăмаха малалла тăсрĕ:

– Турă сывлăх патăр Юрий Карпова, унпа пĕрлех ăнăçусем тутартăр ĕçĕнче, савăнтартăр пирĕн районти Тип Тимеш çыннисене.

Черккисене тытса пурте ура çине тăчĕç. Эрех ĕçсе салат çиме пуçларĕç. Çав вăхăтра официантка тухрĕ.

– Яшка хатĕр-и сирĕн унта?

– Халлехе хатĕр мар-ха.

– Унта кухньăра сирĕн винегрет пур-и татах?

– Вăл тупра çителĕклех пирĕн.

– Эппин илсе килĕр кашнин валли пĕрер порци.

Çав вăхăтра Юрий Карповăн пиччĕшпе унăн ывăлĕ кĕчĕç, пиччĕшĕ унпа юнашар ларчĕ, ывăлне сĕтел вĕçĕнче вырăн пачĕç, кунпа вĕсем кăмăллă юлчĕç.

– Халĕ пирĕнтен чи аслине сăмах парар, Зинон Иванов тахçанах сутьере.

– Вăл хăйне çирĕп тытатакан çын, тĕрĕс мар тăвакансене ялан ятлать.

– Юрий Карповпа эпир тахçантанпах пĕр туртана кӳленнĕ, – вăл сĕтел хушшинче ларакансене пăхса çаврăнчĕ, кăмăллăн юлса пуçĕпе сĕлтрĕ.

– Чăвашра пирĕн икĕ чемпион пурччĕ, кире пуканне сахал йăтнă вĕсем, ячĕшĕн анчах чемпионсем пулнă вĕсем...

Официантка винегретсем илсе килчĕ, кашнин умне лартса пачĕ. Пурте тепрер черкке ĕçрĕç, винегрет çирĕç. Борис Клементьев аллине çĕклерĕ, çакна асăрхаса Юрий Карпов сăмах хушрĕ:

– Кала сăмахна, Борис.

– Ав, Зинон калană тăрăх, чемпионсем пулнă, япăхскерсемпе лайăхскерсем-и вĕсем, анчах хăй вăхăтĕнче пулнăçке вĕсем, çавăнпа кирлех-ши хурлама.

– Хм, хм, – сиктерчĕ куçне Зинон Иванов, кăмăлсăр пулса.

– Ку сăмахсем пире, кире пуканĕ йăтакансене, пырса тивеççĕ, пирĕн мухтанмалла хамăр çынсемпе.

Çакăн хыççăн пĕр хушă шăплăх тăчĕ сĕтел хушшинче. Ăнсăртран сиксе тухнă пăтăрмаха çăмăллатас шухăшпа Микулай тăсрĕ калаçăва:

– Айтăр-ха пирĕн Елчĕк енчи тымарсемшĕн ĕçер.

Борис Глинкин чалăшшăнрах пăхса илчĕ, вăл Патăрьел районĕнчи Туçирен.

– Кире пуканне йӑтас техникӑна лайӑхлатма мӗнле май пур-ши? – пӑшӑрханullӑн ыйтрӗ Юрий Карпов.
Борис Клеметьев ура ҫине тӑчӗ.
– Шкул ачисем пирӗн квалификацине пысӑклатма Шупашкара ҫӳреҫҫӗ, мӗншӗн вӗсем валли йӗркелемелле мар хамӑр патра вӗрентӳ сехечӗсем?
– Тӗрӗс калать Борис Клементьев, эпӗ те ҫавнашкалах шутлатӑп, – хавхалантарчӗ ӑна Зинон Иванов, – Вӗрентӳ мнистерствине ҫыру ҫырса ямалла.
Виталий Васильев та хутшӑнчӗ калаҫӑва.
– Ку ыйтӑва татса парӑпӑр тейӗпӗр. Республика кунӗнче кире пуканне йӑтнӑ ветерансене чӗнмелле мар-ши кунта хамӑр пата, ытла илемлӗ вырӑнсем Елчӗк таврашӗнче.
– Ку санӑн паха шухӑш, Юрий Карпов, – хавхалантарчӗ ӑна Вениамин Кудряшов. – Чаплӑ шашлыксем хатӗрлеме тивет.
– Эпир, чӑвашсем, яланах пысӑк хуранпа шӳрпе пӗҫернӗ пӗр такаран.
– Пурте кӑмӑллӑ юлччӑр тесен, ӑна та, куна та хатӗрлемелле пулӗ.
Кашниех Юрий Карповӑн шухӑшне ырларӗ.
Сӗтел хушшинчен чи малтан Юрий Карповӑн пиччӗшӗн ывӑлӗ тухрӗ. Вӑл яшка ҫинӗ чухне тӗлӗнчӗ: унта пиҫнӗ кӑлпасана теркӑпа вӗтетсе янӑ, ытларах шывӗ тарелкӑра. Ялсем ҫывӑхӗнчи столовӑйсенче яланах шӳрпе яшки пулмалла пек, какай татӑкӗсем ҫителӗклӗ пулмалла унта. Иккӗмӗшӗ килӗшрӗ ачана, ҫӗрулми нимӗрӗпе чӑх пӗҫҫине пачӗҫ, кӑштах салат та хунӑ. Пурте мӗн панине ҫисе янӑ хыҫҫӑн Юрий Карпов ыйтрӗ:
– Кам тата ҫиес тет, апатне те, шурӑ эрехне те тепӗр хут ыйтса илме пулать.
– Ҫисе ҫитет пулӗ, тавах сана, Юрий Карпов, ытларах тӑсӑлччӑр сан ҫулусем ҫак ҫӗр ҫинче, Турри пулӑшсах тӑтӑр.
Пурте пӗр харӑс тенӗ пек сӗтелсем хушшинчен тухрӗҫ, пӗр-пӗринпе сывпуллашма пуҫларӗҫ. Виталий Васильев тусӗ патӗнче Елчӗкре юлчӗ. Пиллӗкӗн вӗсем Птӑрьел витӗр кайрӗҫ. Кавал тӗлне ҫитсен Микулай хавхаланчӗ:
– Пӗррехинче ҫак ҫулпа ҫуран утма тӳр килнӗччӗ ҫакӑнта ҫити. Ун чухне ку ҫулпа автбуссем ҫӳремен, Елчӗкпе Ка-

наш хушшинче çеç çӳренĕ, – вăл аллипе ял çине тĕллесе кăтартрĕ. – Çул çинче кашкăра тĕл пултăмăр, вăл пире тапăнмарĕ, тутă пулнă пулĕ.

– Пурнăçра пулать ун пекки, – каларĕ арçынсенчен пĕри.

– Вăл вăхăтра хăрушăччĕ çуран çӳреме, – сăмах хушрĕ тепри.

Çапла калаçса пырса вĕсем Кавалтан иртсе кайрĕç. Кĕçех машина Исемпел еннелле пăрăнчĕ. Борис Глинкин сăхсăхса илчĕ.

– Çак вырăнта чутах вилеттĕмччĕ вĕт хамăн «девятка» машинăпа пынă чухне, – унăн сăнĕ тĕксĕмленчĕ. – Темле майпа-çке сывах юлтăм, иккĕмĕш хут çуралнăн туйăнчĕ çавăн чухне.

Машинăра каллех шăплăх хуçаланчĕ. Пурте чĕмсĕррĕн малалла тинкерчĕç. Тавралăха кас тĕксĕмĕ çапнă ĕнтĕ, çавах та шурă юр кăштах çутатать. Акă вĕсем Исемпеле кĕчĕç, Микулай шутласа пиллĕкмĕш çурт çине кăтартрĕ.

– Çав çуртра манăн анне çуралнă, тен, йăпăртлăх чарăнатпăр?

– Пур çĕрте те чарăнса тăрсан, ирччен те çитеймĕпĕр киле.

Ял витĕр хăвăрт тухрĕç, чӳречесенчи çутăсем мĕлтлетсе юлчĕç. Кĕçех Аслă Тимеше кĕчĕç. Шăплăха чăтаймасăр, Зинон Иванов сăмах хушрĕ:

– Кĕркунне килсен, ку карта çуккăччĕ.

Тавран кайма тиврĕ. Зинон Иванов малалла тимлесех пăхрĕ, иртсе каясран хăрарĕ.

– Акă аппасен çурчĕ.

Чӳречере çутă çунать, калинкке уçă, килхушши çапçутах. Çитсе чарăнсан йытă вĕрсе ячĕ. Кил картине Зинон Иванов пĕччενех кĕчĕ, кĕçех какай йăтса та тухрĕ, ăна багажнике вырнаçтарчĕ. Аппăшĕ Зоя вĕсене ӳкĕтлерĕ:

– Кĕрсе тухăр ĕнтĕ пӳрте, мĕн сивĕре шăнса тăратăр?

Те вăтаннăран, те аван мартан арçынсем пĕр вырăнта тăпăртатса тăчĕç. Зоя темиçе хутчен ӳкĕтлерĕ, унтан хăй урама тухрĕ. Çавăн хыççăн тин арçынсем пӳрте кĕчĕç. Кунта çутă, ăшă, хăтлă. Сĕтел çинче ăшаланă пӳре пăсланса ларать. Тулли кĕленче шурă эрех сĕтел варринче. Пĕрер черкке ĕçнĕ хыççăн урăх нихăшĕ те ĕçесшĕн пулмарĕ. Пылпа чее кăмăлларĕç, питĕ юратсах ĕçрĕç. Микулай кил хуçипе, Ни-

колай Тарасовпа, калаҫса кайрӗ. Лешӗ унӑн тӑванӗсене пурне те паллать-мӗн. Вӑл Микулайӑн тетӗшне, Евтихеев Сантӑра, аса илчӗ.

– Вӑл кашни килмессерен ман пата ханана кӗрсе тухать.

– Ку аван, вӑл ҫынпа хутшӑнма кӑмӑллакан тараватлӑ ҫын.

Арҫынсем тӑчӗҫ те хуҫана тав туса тула тухрӗҫ.

– Курма тӳр килсен Авдюк тетене салам кала манран.

– Эсӗ те Сашӑна курсан манран салам кала, ӑнӑҫу сун.

– Ан иккӗлен, ыранах шӑнкӑравласа пӗлтерӗп.

Машинӑна кӗрсе ларса вӗсем Кушкӑ еннелле вӗҫтерчӗҫ, унтан Туҫи витӗр тухрӗҫ.

– Акӑ Надя аппан ҫурчӗ умӗн иртетпӗр, тем ҫутӑ ҫук.

Кӗҫех вӗсем иккӗмӗш Туҫие ҫитрӗҫ, кунта Глинки Борис чарӑнма ыйтрӗ.

– Чар-ха машинуна, Юра, ав пирӗн кил, эпӗ юлатӑп, ыран ҫавах вырсарникун.

Малалла вӗсем тӑваттӑн кайрӗҫ. Владимир Ласточкин хӑйӗн ялӗпе килӗ ҫинчен сӑмах пуҫарчӗ, Комсомольски районӗнчи Ҫӗрпӳлтен вӑл.

Урӑх пӗртте калаҫмасӑр вӗсем Шупашкара ҫитрӗҫ. Вӑхӑт тӑхӑр сехет ҫурӑ. Пурте кун-каҫа ывӑннӑ.

– Ҫак чарӑнура хӑвар, тархасшӑн.

Владимир Ласточкин Микулайран ыйтрӗ:

– Эсӗ ӑҫта пурӑнатӑн, Николай?

– Юрий Карповпа пӗр ҫуртра, подъездсем ҫеҫ расна пирӗн.

Владимир Ласточкин ҫӗлӗкӗпе перчеткисене илсе машинӑран тухрӗ.

– Тавах сана, Юрий Карпов, ҫавӑн пек тараватлӑ та ырӑ ҫын пулнӑшӑн, яланах Турӑ пулӑшсах пытӑр сана татах та ырӑ ӗҫсем тума, ман пеккисене пулӑшма,

Парнесем, призсем, кучченеҫсем пӗтӗмпех Юрий Карпов кӗсйинчи укҫапа илнӗскерсем пулчӗҫ.

# Çухалнă укçа

Хăйĕн сиввисемпе раштав уйăхĕ çитрĕ, анчах темшĕн юр çук та çук. Ĕмĕртенпе кунта пурăнакан Çĕпĕр çыннисем тĕлĕнмеллипех тĕлĕнеççĕ, аптранипе пуçĕсене суллаççĕ.

– Кун пеккине хамăр пурнăçра астумастпăр, çитменнине тата кунта, Çĕпĕрте, – теççĕ ĕçри кану пӳлĕмĕнче пухăнса ларнă пурнăçра темĕн те курса ирттернĕ ватăрах çынсем.

Урама уçă сывлăша тухакан çынсем çурçĕртен вĕрекен сивĕ çилтен пичĕсене шарфпа хупласа хӳтĕленеççĕ. Апла пулин те самолетсене вăхăтра рейса кăларса яраççĕ, вĕсене черетлĕ вĕçеве яма вăхăтра хатĕрлесе çитереççĕ. Гайка пăркăчĕпе ку е тепĕр болта хытарнă чухне Олегăн аллăри пӳрнисем шăнаççĕ. Ĕçлеме çăмăлтарах пултăр тесе, вăл пир перчетке тăхăннă, çавăнпа час-часах аллисене кĕсйисене чикет, унта унăн мамăк тиртен тунă алса тӳлĕсем. Вĕсенче шăннă пӳрнисем хăвăрт ăшăнаççĕ, вăл вара каллех ĕçе пуçăнать. Кун каçа пĕр самолет та кая юлса вĕçеве тухман.

Кăнтăрла хыççăн тӳпе тĕксĕмленчĕ, каç тĕлне юка пуçланчĕ, çавăнпа куçа хĕссе пăхма, е алăпа хуплама тивет. Груз турттаракан самолет анса ларсан, пурте çăмăллăн сывласа ячĕç.

– Шĕкĕр Турра пурте йĕркеллех пулнипĕн.

Самолет анса ларма ĕлкĕрчĕ çеç – вăйлă çил тухрĕ, вăл çынна та вĕçтерсе кайма пултарĕ. Самолета çил силлесе чĕтретет, ун патне çывхарма хăрушă. Вăл халь тесен халь çаврăнса ӳкме пултарать тесе шухăшларĕ Олег. Самолета тӳрех хуралçăсем çавăрса илчĕç. Ун тавра мĕлтлетекен машинăсем çаврăнса тăчĕç, никама та çывăха ямарĕç. Ĕç укçи илсе килсен яланах çапла пулаканччĕ, шухăшларĕ Олег. Çĕнĕ çул умĕн маларах валеçсе парасшăн пулмалла, уяв умĕн нимĕн те сиксе ан тухтăр теççĕ ĕнтĕ, çитменнине кĕçех суйлав пулса иртмелле. Çынсем кăмăлсăр пуласран шикленеççĕ пуçлăхсем, хăйсен çыннине суйлаттарасшăн. Кайран вара укçана тытса тăрсан та юрать, суйлав хыçăн хăть курăк ан ӳстĕр. Тӳрĕ çынсене мăшкăллама та юрать вара, шухăшлаççĕ вĕсем.

Тепĕр кунне çил чарăнчĕ, шултра юр йăтăннăн çăва пуçларĕ, тӳпе шăтнă тейĕн. Техника вĕçсе хăпармалли çула тасатса ĕлкĕреймест, бетонлă çул çинче пĕр унталла-кунталла кусаççĕ юр тасатакан машинăсем. Бульдозерсем юра таса уя

тёксе кăлараççĕ. Çанталăк юсаниччен самолетсене рейса яма чарчĕç. Самолетсене вĕçеве хатĕрлекен рабочисем кану пӳлĕмĕнче лараççĕ, вăхăта картла выляса ирттереççĕ.

Пӳлĕме вĕсен пуçлăхĕ Иван Петрович пырса кĕчĕ. Çамрăк чухне вăл пĕтĕм Çĕпĕре самолетпа вĕçсе тухнă. Халĕ ĕнтĕ вăл самаях çулсенче, çӳçĕ кăвакарнă. Ун пеккисем çинчен ку çын хăйĕн пурнăçĕнче темĕн те тӳссе курнă теççĕ. Тӳрĕ кăмăллă та ырă çын пулнăшăн ăна пурте хисеплеççĕ. Ăна асăрхасан пурте ун еннелле пуçĕсене çавăрчĕç. Рабочисенчен чи вăр-вартараххи Борис ура çине тăчĕ те пуçлăхран ыйтрĕ:

– Ирĕк парăр пире килсене кайма, çавах ĕççĕр ларатпăр вĕт.

– Ăнсăртран кăнтăр хыççăн юр çума чарăнчĕ-тĕк, эсир мана çылăха кĕртетĕр.

– Куратăр вĕт, пĕлĕтре пĕр уçă вырăн çук: кунĕпе çăвать ĕнтĕ ку юр.

– Ларăр, йĕрки çавăн пек, ĕç вăл малти вырăнта пулмалла.

Иван Петрович тухса кайрĕ, рабочисем каллех тухса ӳкмелле картла выляма тытăнчĕç, хавхаланса шавларĕç.

Ура, выляса илтĕмĕр, кам выляса ячĕ, карт турттăр, миçе тухать, çавăн чухлĕ куклентĕр!

Çапла сигарет туртса та картла выляса кун иртрĕ. Олег чӳречерен пăхса ларчĕ, пӳлĕмрен тухас килмерĕ унăн, йĕпе юр питне çапассинчен шикленчĕ, шухăшланипех çанçурăм çӳçенет. Вăл икĕ хутлă йывăç суртра пурăнать. Унăн пӳлĕмĕ коридорăн чи аякри вĕçĕнче çурт кĕтессинче вырнаçнă. Коридорти стенасем çинче велосипедсемпе çунашкасем çакăнса тăраççĕ, кашни алăк умĕнче ещĕксем лараççĕ. Иртсе çӳреме питĕ кансĕр, пĕр-пĕр япалана çаклатасран асăрхама тивет. Мăшăрĕпе, Лизăпа, вĕсем кунта вун пилĕк çул пурăнаççĕ ĕнтĕ.

Ахăртнех, Горбачева çеç кирлĕ пулнă çĕнетӳ тапхăрĕнче пурăнма килчĕç вĕсем кунта. Çĕнетӳ пĕтĕм ĕмĕтсене, ĕçре тăрăшнине пăслантарчĕ, кунтинчен лайăхрах пурăнас тенĕччĕ вĕсем. Çав çĕнетĕве пулах япăхланчĕ вĕсен пурнăçĕ.

Хăтлă хваттерте пурăнма ĕмĕтленнĕччĕ вĕсем, чăннипе вара çак пĕр пӳлĕмрех пурăнма тивет. Çĕршыва ертсе пыма тытăнсан Ельцин патшалăха капитализма илсе çитерчĕ, хĕрĕпе иккĕшĕ кĕсйисене миллиард тенкĕсем чикрĕç. Патшалăхшăн

ĕçлесе, пĕчĕк ĕç укçи илсе, халăх чухăна тухрĕ. Хĕрĕ, Дьяченко, хушса тăнипе Ельцинсен çемйи патшалăха хăйсен аллине илчĕ. Чухăнланнă халăх шăналла виле пуçларĕ. Ахаль рабоччисене кăнтăр кунĕнчех çаратрĕç вĕт. Халĕ ĕнтĕ çак тăвăр пӳлĕмрех чухăнла ĕмĕрирттерме тивет пулĕ, малта пĕр шанăç та курăнмасть.

Училищĕ пĕтернĕ хыççăн, малашлăха шанса, Олег Çĕпĕре кайрĕ. Çавăнтан вара вăл çак хулара лайăх çынсен коллективĕнче ĕçлет. Ăна кунти илемлĕ те ирĕклĕ вырăнсем килĕшрĕç. Черетлĕ отпуска тухсан вăл тăван ялĕнче авланчĕ те мăшăрне кунта илсе килчĕ. Юлашки вăхăтра мăшăрĕ çак пӳлĕмри çитменлӗ пурнăç пирки мăкăртатма пуçларĕ.

– Çак тăвăр пӳлĕм йăлăхтарса çитерчĕ, хăçан хваттер илетĕн?

– Манса кай ун çинчен, хăлхана курма пултарайман пек, нихçан та хваттер кураяс çук эпир.

– Тав Ельцина, ăна пула ĕмĕре çак тăвăр пӳлĕмре ирттерме тивет.

– Нимĕн те тăваймăн, Горбачевпа Ельцина тав сăмахĕ калама тивет, вĕсем патшалăха ишĕлтерчĕç, темĕн те пĕр тăваççĕ, пĕлсе те çитеймĕн, ниçта та йĕркелĕх çук, пирĕн патшалăхра тĕрĕслĕхе тупаймăн. Тĕп вырăнсенче вăрă-хурахсем хуçаланаççĕ.

Пукан çине юнашар ларса Лиза Олега ыталарĕ, лăпкăн чуп турĕ, Олег вара сăмахне малалла тăсрĕ:

– Эх, мĕнле çĕршыв пулнă пирĕн, ăслă çынсемпе, институтсемпе, производствăсен хăватлăхĕсемпе пуян пулнă. Пĕтĕмпех ишĕлтерчĕç, вĕçне-хĕрне тупаймăн.

– Лăплан-ха, юратнă çыннăм.

– Хăв тапратрăн вĕт, халь лăплантаран.

Вăл çиллессĕн шултра шăллă самукне туртса мамăк тиртен çĕленĕ ăшă курткине хыврĕ.

– Эсĕ ĕçе çӳретĕн хăть, эпĕ вара кунта ухмаха тухатăп, икĕ ачана мĕн çитерес пирки аптăратăп.

– Çут тĕнчере кашнин хăйĕн.

– Тепĕр чухне пуçа укçа пухас шухăш пырса кĕрет.

– Мĕн лапăртататăн, ку пӳлĕмри пĕчченлĕхре хăв та пĕлместĕн мĕн тăвассине.

– Пурнăçа лайăхлатас килет-çке.

– Хăв пĕлетĕн вĕт: апат-çимĕç халь хаклă, укçа пĕтĕмпе

тенĕ пек çиме каять, ăна туянма та аран-аран çитет, çитменлĕхе мĕнпе саплamallине те пĕлме çук. – Олег ура çине тăчĕ, хăйĕн тумĕсене кăтартма пуçларĕ. – Эпĕ, ав, юлашки тумсене тăхăнса çӳретĕп, куртка-спецовка пурри аван хăть, вун пилĕк çул тăхăнса çӳретĕп, вăл вара паян кун та çĕнĕ пекех.

– Сан мана ĕç тупса парасчĕ, Олег, хĕрĕмĕре садике ямалла тăвасчĕ.

– Пĕтĕм ĕç вырăнĕсене чылай çулти сынсем йышăнаççĕ, çамрăксем вара ĕççĕр çӳреççĕ, нумай производствăсем хупăнса пĕтнĕ.

– Шанăç сукран мĕн тумаллине те пĕлме йывăр. Пирĕн ĕçре маларах самолетсем виçĕ хут ытларах вĕçетчĕç, халĕ вара тĕплĕ ĕçле пĕлекен ватăсенчен хăтăлчĕç, пенсие ярса пĕтерчĕç. Кам вăр-вартарах, çавсем пĕчĕк предприятисене куçрĕç е суту-илĕве вырнаçрĕç.

– Эсĕ вара мĕншĕн каймастăн?

– Пĕлетĕн-и, Лиза, эпĕ пĕр вырăнта ĕçлеме хăнăхнă, вăрлама вĕренмен, çынсене куç умĕнчех суйма тытăнсан, мĕнле намăс-симĕспе пурăнмалла тет пирĕн пек таса чунлă çынсен çак çутă тĕнчере? Тек ĕнтĕ мана улăштараймăн. – Олег таса куçĕпе мăшăрĕ çине пăхрĕ. – Пирĕн пек чыса çухатман çынсем çинче тытăнса тăрать те Раççей çĕрĕ.

– Мĕншĕн çуратрăм-ши иккĕмĕш ачана, татах та чухăнрах пулма-и, тен

– Урăх нихăçан та ун пек ан калană пултăр, Лиза, вăл вĕт пирĕн савăнăç.

Халĕ ĕнтĕ Олег мăшăрне çурăмĕнчен лăпкарĕ. Лиза чăтаймасăр йĕрсе ячĕ.

– Ун пекех ан кулян-ха, юратăвăм, тен, лайăхланĕ-ха пирĕн пурнăç, шанăç юлашкинчен вилет, теççĕ. Вĕсем пĕр-пĕрин çине пăхрĕç, Олег пӳрнипе Лиза пичĕ çинчи куççуле шăлса илчĕ.

– Пăрах ман чуна тăлпалама, эп унсăрах йĕкленетĕп.

– Юрĕ-çке, урăх тăлпаламăп, – вăл пуçне унăн кăкăрĕ çине хучĕ. – Эпир, общежитинче хĕрарăмсем, кунта калаçса илтĕмĕр.

– Пĕлессĕм килет, мĕн çинчен-ши?

– Пирĕн пурнăç нихçан та лайăхланас çук, мĕншĕн тесен пуçлăхсем хăйсен кĕсйисене тултарасси пирки çеç тăрăшаççĕ, ытлашши çăткăн пулнипе мĕнле чыхăнса лармаççĕ-ши, ăçта пăхать-ши прокуратура, мĕншĕн судра ĕç пуçармаççĕ-ши?

– Вӗсем пӗр урапа ҫинче ларса ҫӳреҫҫӗ, пӗр-пӗрне хӳтӗлеҫҫӗ.

– Ачасене, ав, пӗр банкӑ хӑяршӑн, е пӗр пачка сыршӑн тӗрмене лартма, е колоние яма пултараҫҫӗ.

– Мӗн калас тетӗн, вӗсем пӗҫертеҫҫӗ, пӗр-пӗринпе пайлаҫҫӗ ɥысӑк взяткӑсене, ҫавӑнпа вӗсен пурте йӗркеллӗ, нимӗн те паллӑ мар.

Вӗсем ҫакӑн пек калаҫса пӗр-пӗрин умӗнче чунӗсене уҫрӗҫ.

– Йывӑр пурнӑҫа улӑштарасси пирӗнтен килмест ҫав.

Вӑл ҫулсерен япӑхланса пынине кӗтме ҫеҫ тивет пирӗн.

Олег халӗ лӑпкӑн каларӗ:

– Хӑйсемпе пӗрле ҫавах илсе каяймӗҫ, халӑх ылханӗ тиветех вӗсене, тамӑкра ҫунччӑр вӗсем леш тӗнчере.

Ҫакӑн майлӑрах калаҫса кӗскетеҫҫӗ вӗсем Ҫӗпӗрти хӗллехи вӑрӑм каҫсене.

Ирпе Олег яланхи пекех ӗҫе тухса кайрӗ. Ку хутӗнче ӗҫсӗр лартмарӗҫ вӗсене, урӑх ӗҫе тутарчӗҫ. Вӑл виҫӗ куна тӑсӑлчӗ. Тӑваттӑмӗш кунне тин самолетсем рейса тухма пуҫларӗҫ. Аэродром чӗрӗлчӗ, вӗҫсе хӑпармалли ҫул тап-таса. Шартлама сивӗре ӗҫе пуҫӑнчӗҫ, ларса канма вӑхӑт ҫук. Темиҫе ҫул пӗрле ӗҫленӗ тӑван коллективра тӗлӗнтермӗш япаласем пулса ирте пуҫларӗҫ. Кун пекки нихҫан та пулман рабочисем хушшинче, унта яланах туслӑхпа пӗрлӗх хуҫаланнӑ. Пурте шарламасӑр ҫӳрерӗҫ, пӗр-пӗрин ҫине шанмасӑртарах пӑхрӗҫ. Рабочисене пӗрерӗн-пӗрерӗн пуҫлӑх пӳлӗмне чӗнчӗҫ. Кӗҫех Олег патне те черет ҫитрӗ, вӑл нимӗн те ӑнланмасӑр аптӑраса Иван Петрович пӳлӗмне кӗчӗ. Сӗтел хушшинче кӗске ҫӳҫлӗ, хура костюмне тирпейлӗ тӑхӑннӑ, йӑрӑс пӳллӗ палламан арҫын ларать. Эппин ку ятарлӑ органран килнӗ ҫын, шухӑшларӗ Олег.

– Так, ӑҫта пулнӑ эсир виҫӗ кун каялла?

– Мӗнле ӑҫта, кунтах, ӗҫре самолетсене вӗҫеве хатӗрленӗ.

– Груз турттаракан самолет хӑҫан вӗҫсе килнине астӑватӑр-и?

– Паллах, каҫ умӗн, ҫил-тӑман пуҫланиччен.

– Ӑҫта анса ларнине тата ӑна миҫе ҫын ҫавӑрса илнине курнӑ-и?

– Паллах, вӗсен машинисем мӗлтлетнӗрен куҫ шарса кайрӗ.

Олег лӑпкӑн калаҫрӗ. Лешӗ, ятарлӑ отделти, ӑна куҫран тӳрремӗн шӑтарасла пӑхрӗ. Олег аванмарланчӗ, куҫ харшисене кӑшт антарчӗ.

– Иван Петрович пире команда пачĕ те, эпир çавăнтах канмалли пӳлĕме кайрăмăр.

– Шанчăксăртарах çынсене курмарăр-и эсир, е темĕн яланхи пек маррине асăрхамарăр-и?

– Çук, пурте яланхилле пулса пычĕ, хамăр рабочисем çеç çӳрерĕç.

– Мĕн те пулин аса илетĕр пулсан, çак телефон номерĕпе шăнкăравлăр.

Визитка евĕрлĕ пĕчĕк хут татăкки тыттарчĕ, çав çын, шурă хут çинче телефон номерĕ лайăххăн палăрать.

– Мĕн пулнă вара, ăнлантарăр, тархасшăн, ытла ытарла калаçатăр та, ниепле те чухласа илейместĕп.

– Банкран укçа çухалнă, пурне те ура çине тăратрĕç, – вăл Олег çине тӳррĕн пăхма пăрахрĕ. – Укçасене пушатнă йĕрпе çӳретпĕр, ăçта çухалма пултарнине никам та пĕлмест, халлĕхе нихăшĕн пуçне те ăслă шухăш кĕмест.

Олег пӳлĕмрен тухрĕ, çавах та чунĕнче лайăхмарланни иртсе каймарĕ-ха. Вăл хăйсен кану пӳлĕмне кайрĕ. Рабочисем сĕтел хушшинче чей ĕçсе лараççĕ, пĕр-пĕрин çине пăхма шикленсе, пĕр сăмах та калаçмаççĕ. Ăнсăртран вĕсенчен хăшĕ те пулин ку укçасемпе, тен, ырă мар историе лекĕ.

– Атьсем, эсир ун çинчен пĕлнĕ-и?

– Пĕлнĕ, анчах пĕр-пĕрин чунне ахалех хускатас мар тесе шарламан.

– Каламалла пулнă, унсăрăн пĕр-пĕрин çине кашкăрла пăхман пулăттăмăр.

– Паллах, пурне те чĕнчĕç, кашнин патĕнчех обыск турĕç.

– Кăлăхах, пулмалла, çавăнпа шыраççĕ те.

Миша калаçа пуçларĕ, коллективра ăна пурте хисеплеççĕ, çавăнпа шăпланчĕç.

– Пирĕн рабочи коллективра стукачсем çук тесе шутлатăп эпĕ.

Пурте шăп ларчĕç, эппин вăл тĕрĕссине калать.

– Енчен те çав укçасем пирĕн пек рабочи аллине лекес пулсан ырламалла çеç.

– Вĕсем япăх çын, е вăрă аллине лекме пултарнă.

– Ун пек пулсан, ку вара япăх.

Йывăр шухăшсемпе килĕсене саланчĕç.

Пурне те уйăх хушши туртрĕç пуçлăх пӳлĕмне, хăсас пат-

нех çитрĕç рабочисем, кашнинчех эсĕ ăçта пулнă çавăн чухне тесе ыйтса йăлăхтарчĕç. Чылай сынăн нервисене хавшатрĕç. Кабинета кĕрес килми пулчĕ вĕсен. Вĕççĕр-хĕррисĕр туййăннă сивĕ каçсемлĕ те кичем кунсемлĕ хĕл иртсе кайрĕ. Чылай кĕтнĕ çуркунне çитрĕ. Çынсен кăмăлĕсем çĕкленчĕç, пичĕсенче хĕвел пек кулă çиçрĕ, тÿперен тепĕр хĕвелĕ çутатрĕ, пысăкскер, сарăскер, ăшăскер. Ерипен юр ирĕлсе пычĕ, вăл кунсерен пусăрăнса сахалланчĕ. Кун вăрăмлансах пычĕ. Ăшă çумăр çуса иртрĕ, çил кăнтăртан вĕрчĕ. Çавăн хыççăн уçă вырăнсенчи юр çухалчĕ. Ăшă çил сивĕ çилпе кĕрешрĕ. Хĕвел пулăшрĕ, кунсерен вăйлăрах та чылайрах ăшăтрĕ. Çемьене апат-çимĕçпе çăмăллатас шутпа канмалли кунсенче ирех юханшыв хĕрне пулла çÿрерĕ Олег. Кашнинчех тулли рюкзакпа таврăнчĕ. Малтан Лиза пулла ăшаларĕ, пулă яшки пĕçерчĕ. Пулă нумайлансан, вĕсем ăна тăварлама пуçларĕç, пуласлăх валли саппас хатĕрлерĕç. Çĕпĕр юханшывĕнче пулă айкашсах кĕчĕ.

Кану пÿлĕмĕнче пăчă. Çитменнине, пÿлĕмрех чей вĕретеççĕ, плита çинче килтен илсе килнĕ кăнтăр апатне ăшăтаççĕ. Тума улăштармалли шкафсенчен шăршă кĕрет. Çаксем пурте Олега кăмăлсăрлатаççĕ. Хăйне вăл юханшыв хĕрринче кăна ирĕклĕ туять. Унта, çил çинче, уçă та ырă. Уçă сывлăшра симĕс çеремпе утса çÿреме шутларĕ Олег, çĕр илемĕпе киленес килчĕ унăн. Пĕр тарăн мар путăкра вăл тĕссĕр чăмăрккана асăрхарĕ, ку брезентран çĕленĕ михĕ пулчĕ, тем тултарнă ун ăшне. Кун пек михĕне вăл пĕрремĕш хут курать хăйĕн пурнăçĕнче. Унта мĕн пуррипе кăсăкланса кайрĕ вăл, хăвăртрах михĕ çыххине салтрĕ. Унта пăхрĕ те хăйне хăй ĕненмерĕ, çывăрмастăп-и тесе аллине чĕпĕтсе илчĕ, тĕлĕкре мар иккен вăл. Михĕре пилĕкçĕр тенкĕллĕ тĕркесем выртаççĕ, вĕсене шпагатпа туртса çыхнă. Олег тĕлĕнсе те киленсе пăхрĕ вĕсем çине. Сасартăк вăл аса илчĕ те хăраса ÿкрĕ: ку укçасемшĕн мĕн чухлĕ канăç памарĕç вĕсене, пуçлăх пÿлĕмне сĕтĕрчĕç. Халĕ вăл хăйне тĕлĕкри пек туйрĕ. Ку михĕ мĕнле майпа кунта лекме пултарни çинчен шутларĕ. Самолета çил-тăман пуçлансан пушатрĕç. Юр куçа хуплатчĕ. Пушатакансенчен пĕри ăнăççăр пенĕ пулĕ михĕне, вăл юр ăшне путса çухалма пултарнă. Кайран ăна юр тасатакан машина юрпа пĕрле тĕртсе килнĕ. Олег михĕне çыхса хучĕ те малтанхи вырăнах пăрахрĕ, йĕри-тавра пăхса илчĕ, никам та курăнмасть, пурте кăнтăр апатĕнче. Ку аван, шу-

хăшларĕ вăл. Пуçлăхсем патне илсе каяс, хăвна пĕр пус та лекес çук. Шутлас-тăк тарăнрах, укçа çинчен тахçанах маннă, патшалăх шутран кăларнă вĕсене. Пурнăçра кунашкал ăнăçу пĕрре кăна пулма пултарать, телей ун еннелле пичĕпе çаврăнчĕ. Тен, кĕл туса ыйтнăшăн Турă пачĕ ăна? Мĕн, ĕмĕрĕпех чухăнра çăрăлмалла-им? Пуçлăхсем хăйсене кӳрентермеççĕ, ытлăх-çитлĕхре пурăнаççĕ, темиçе хваттер, темиçе машина, темиçе гараж пур вĕсен. Леш тĕнчере те çав пурлăхпа киленсе пурăнасшăн. Хăйсем çителĕкре пурăнаççĕ, тата ытти сене пурăнма вĕрентесшĕн, вăрлаççĕ, çилĕ çитмест вĕсем çине. Ĕлĕкрех пĕр шутласа тăмасăр кайса панă пулĕччĕ банка. Халĕ вара, çӳлтисем иртĕхнĕ вăхăтра, çынсене намăссăррăн çаратнă чухне, укçана кайса парас пирки калаçу пулма та пултараймасть. Кун пек анализ хыççăн кайса парас шухăш пуçран тухса ӳкрĕ. Никам та курмасть–ши тесе Олег каллех йĕри-тавра пăхса илчĕ, вара ерипен уйрăлса утрĕ çав вырăнтан, михĕне илмерĕ хăйпе пĕрле. Канупа хывăнмалли пӳлĕме кĕчĕ те хăйĕн ĕçĕпе аппаланчĕ, хăйне малтанхиллех тытма тăрăшрĕ. Ачасем асăрхамарĕç те ăна, картла çаптарчĕç апат вăхăтне шавлă ирттерсе. Кĕтесре тĕрлĕ кирлĕ мара тултарнă михĕ выртать. Олег ăна силлесе пушатрĕ те михĕне илсе паçăрхи вырăна кайрĕ. Ăна никам та асăрхаманни уншăн лайăх пулчĕ, михĕне те никам та курмарĕ. Ĕç вĕçленсен пурте килĕсене кайрĕç. Олег пурте тухса каясса кĕтрĕ, михĕпе проходная çитрĕ. Хуралçă телевизор пăхса тăратчĕ.

– Олег, мĕн унта сан михĕре!

Ним пулман пекех Олег лăпкăн хуравларĕ:

– Хĕллехи çипуç, киле илсе каймалла, мăшăрăм çуса тасаттăр тетĕп.

– Тĕрĕс тăватăн, пурне те вăхăтра тумалла, типтерлĕ пулмалла.

Хуралçă вырăнтан тапранмарĕ те. Олег проходной витĕр тухрĕ те çăмăллăн сывласа ячĕ.

– Турра шĕкĕр, пурте йĕркеллĕ пулчĕ.

Вăл хăвăрт кил еннелле утрĕ. Мăшăрĕ ăна сиввĕн кĕтсе илчĕ, упăшки каллех çак пĕчĕк пӳлĕме кирлĕ мар ăпăр–тапăр илсе килчĕ тесе шутларĕ ĕнтĕ.

– Мĕн илсе килтĕн ку хутĕнче, каллех пĕр–пĕр кирлĕ мар япала пулĕ!

– Ăхă, мĕн те пулин!

– Ухмаха тухмарăн пулĕ те, хамăр çаврăнаймастпăр кунта, вăл пур... ыранах каялла илсе кай, унсăрăн кăларса перетĕп, е, кирлех пулсан коридора тухса хур.

– Эп каларăм сана, пÿлĕмрех вырттăр вăл.

Лиза михĕне тĕртрĕ, вăл урайне ӳкрĕ.

– Эсĕ мĕн, барахольщике тухрăн-им, айта эпшин бомжсем пек кивĕ çипуç пуçтарса çÿрер, вара çав çĕтĕк-çатăка тăхăнар.

– Шăплан, хĕрарăм! – Олег михĕне кравать айне чикрĕ. – Кăшкăриччен лартса пар вĕри апат.

– Эс укçа илсе килтĕн-и апат ыйтма!

– Тепĕр эрнере пама шантарчĕç.

Лиза тапранмасăр пĕр вырăнтах тăчĕ. Олег ун çине куç шуррипе пăхса илчĕ, мăшăрĕ йĕркерен тухнине туйрĕ.

– Эс мĕн иртĕхен, эп сана яланах пĕтĕм укçана илсе килсе паратăп вĕт.

– Халех хатĕрлетĕп.

– Мĕнле хĕрарăм эс манăн, лайăххăн калатăн – ăнланмастăн, кăшкăрмах тивет.

– Ырă упăшкам, çителĕксĕр пурнăç хистет пире çакнашкал çиллес те мăкăрти пулма.

– Эсĕ çавах та мĕн чухлĕ йывăр, çавăн чухлĕ çывăхрах пулма тăрăш манпа, иккĕн пĕрле çăмăлтарах пулĕ пурнăç хуйхи-суйхине чăтса ирттерме.

Лиза тулли чашăк вĕри яшка лартрĕ сĕтел çине, яшкаран пăс тухать. Тăраниччен çисе, Олег диван çине выртрĕ те шăрпăкпа шăл хушшисене чавалама тытăнчĕ, çав хушăрах телевизорпа интереслĕ программа пăхрĕ. Вăл ачисем çывăрма выртасса чăтăмсăррăн кĕтрĕ, анчах лешсем паян темшĕн час выртасшăн пулмарĕç. Юлашкинчен пÿлĕм шăпланчĕ. Вара вăл алăка çăрапа лайăххрах питĕрчĕ, чÿрече каррине тултан нимĕн те курăнмалла мар карчĕ. Унтан михĕне туртса кăларчĕ те унта мĕн пуррине урай варрине сиплерĕ. Урайĕнче укçа çыххисем выртаççĕ, пурте пилĕкçĕршер тенкĕллисем, хăшĕ-пĕрисем нÿрелнĕ, шыв витернĕ пулмалла. Лиза арпашнă çÿç-пуçпа вырăн çинчен сиксе тăчĕ.

– Ай, ăçтан кун чухлĕ укçа! – вăл ĕсĕклесе илчĕ, аплисемпе питне хупларĕ.

– Эс кунта ан шавла, тулккăсăрскер, – вăл алă лаппипе Лизăн тутине хупларĕ. – Çынсем чупса килччĕр тетĕн-им!

– Çук, паллах.

– Пĕлетĕн–и, çĕрле кашни чăшăлттатнă сасă илтĕнет.

– Ăнлантăм, пулă пекех чĕмсĕр пулăн.

Тăрать Лиза пĕр вырăнта тĕлĕнсе, ниепле те ăнланаймасть, ăçтан тупăнчĕ кун чухлĕ пуянлăх вĕсем валли! Олег ăна лăплантарма шутларĕ.

– Астăватăн–и, хĕлле пире ку укçасемшĕн мĕн чухлĕ сĕтĕрчĕç пуçлăх пӳлĕмне! Паян эп вĕсене, ак, тупрăм.

– Тен, тӳрех кайса памалла вĕсене банка! Лăпкă пурăннă пулăттăмăр.

– Пуçупа шутласа пăх лайăхрах, ĕмĕрĕпех чухăнлăхра çăрăлмалла-им пирĕн! Хăв вĕт пачăр çеç укçа çитмест тесе каларăн.

Лиза ăса илчĕ пулмалла урăшки мĕн каланине, урăх нимĕн те шарламарĕ. Олег укçа çыххисенчи шпагатсене касса тата–тата нӳррисене кантра çине çакса типĕтме тытăнчĕ. Лиза ăна пулăшса тăчĕ. Пурĕ вунсакăр çыхă пулчĕ, ку вăл тăхăр миллион тенкĕ.

– Мĕн тăвăпăр, Олег!

– Çынсем тем ан шутлаччăр тесе, ывăлпа тăван яла каясшăн, ĕçре вара атте–аннерен çыру илтĕм, вĕсене йывăр, ватăсене пулăшу кирлĕ тесе ăнлантарăп.

– Интереслĕ калатăн эс, Олег, тен, пĕчченех каятăн, унсăрăн пире хĕрĕмпе иксĕмĕре нимĕнсĕр тăратса хăваратăн.

– Эс ытлашши ан лăпăртат, çапах та чĕлхӳне тытма пĕл, никама та пĕр сăмах та ан шарла.

– Юрĕ, эс каланă пек пултăр, чĕлхесĕр пулăп.

– Ятарлă отделтисем ку укçасем çинчен аса илме пултараççĕ, ун чухне сыхлан вара, çавăнпа шавсăр тухса каятăн кунтан вăхăтлăха.

Çĕрĕпех майларĕç вĕсем укçасене, нӳррисене типĕтрĕç. Вĕсем пĕтĕм урайĕпе сапаланса выртрĕç. Ир енне тирпейлесе пуçтарма тытăнчĕç вĕсене. Велосипед камерине илсе, Олег ункăн–ункăн касрĕ. Çав ункăсене çĕршер купюра хучĕ вăл. Лиза шифоньертан пысăк сумка кăларчĕ, унти япаласене пушатрĕ. Укçасене сумкăна майласа чикрĕç, анчах пĕр сумкăна вырнаçмарĕç, çавăнпа икĕ сумкăна чикме тиврĕ.

Çĕрĕпех куç хупмарĕ Олег, ирпе çывăрманскер ĕçе тухса кайрĕ. Унта пурте йĕркеллех пулчĕ, ăна пĕр сăмахсăрах ячĕç, административлă отпуск пачĕç. Мускава çити билет илчĕ те паллана ачасенчен ыйтрĕ:

– Кучченеçе хаклă пулă илтĕм, анне валли темиçе мамăк тир илтĕм. Сумкăсене тĕрĕслемеççĕ-ши кĕнĕ чухне!

– Калаçу та пулас çук.

– Тавтапуç сире, атьсемĕр.

– Эс мĕн, Олег, эпир кунта пурте хамăр çынсем.

Ывăлĕпе иккĕш вĕсем Мускава çитрĕç. Хăйĕн хулинче Олег укçасен пĕр çыххине те тĕкĕнмен, çынсем тем шутласран асăрханчĕ.

Мускавра вара пĕр çыххине кăларчĕ те пилĕкçĕрлĕ укçисене вакклатарса çӳрерĕ. Каç енне тепĕр пуйăса ларчĕç. Ирпе Канашра пулчĕç. Вокзал умĕнче нумай машина тăрать, хăш таксийĕ килĕшет, çавна суйла. Ытларах кунта уйрăм çын машинисем. вĕсен патне пĕр йĕкĕт пычĕ, вăл тӳрех килĕшрĕ Олега. Пĕр сăмахсăрах Елчĕк районĕнчи тăван ялне вĕçтерчĕç. Олег çуралнă кил тĕлнех илсе çитерчĕ такси. Ялта Олег тахçантанпах пулман, йывăççемпе курăксем çеçкере, вĕсенчен ырă шăршă кĕрет. Ĕлĕкрех ĕçре виçĕ çулта пĕрре упăшкипе арăмне тӳлевсĕр ăçта та пулин кайса килме ирĕк паратчĕç. Тискер капитализм реформипе ку çăмăллăха пĕтерчĕç.

Çулсерен ял япăхланса пырать, çынсем чухăна тухаççĕ, хуçалăхсем ишĕлеççĕ. Пĕтĕмпех çӳлтисен йышăнăвĕсем тăваççĕ çавна. Патшалăх яла укçа пама пăрахрĕ. Тĕнче практикинче ялхуçалăхсене дотаци панă тĕслĕхсем сахал мар. Тĕнчери пĕр çĕршывра, Голландире, çеç патшалăх пĕр пус та хывмасть. Апла пулин те унта ялхуçалăх вăйлă аталаннă. Вăл хăйĕн продукцийĕпе çур Европăна тăрантарать.

Олегăн ялĕ те япăхланнă. Виççĕр суртран çурринче никам та пурăнмасть. Пушă тăраççĕ суртсем, ерипен ишĕлеççĕ. Килти хуçалăхсем пуш-пушах. Çынсем Çĕпĕре нефть кăларакансен поселокĕсене каяççĕ, е – Мускава, пысăк хуласене. Юлнисем виçесĕр эрех ĕçеççĕ, сăмакунĕ çăвара шыв пек юхать. Чылайăшĕ хĕрĕх çула çитичченех вилеççĕ. Хăшĕсем арăмĕсемпе пĕрле ĕçеççĕ, çамрăксем ялта çукпа пĕрех. Ĕçченнисем хăйсен килĕнче вăй хураççĕ, анчах вĕсене пӳрне шутласа тухма пулать. Çемье пурнăçне лайăхлатас тесе, вĕсем иртен пуçласа каçчен

хайсен хуҫалăхĕнче аппаланаҫҫĕ. Кăштах укҫа пухма пултараҫҫĕ пулин те, инфляци пĕтĕмпех ҫăтать. Чылай чухне вĕсем тăрăшни ахалех пулать, нимĕнпе те хӳтĕленеймест этем.

Олегпа ывăлĕ кил хушшине кĕчĕҫ. Мĕнле тараватлă тăван кил! Ашшĕпе амăшĕ сывах пурăнаҫҫĕ. Амăшĕ пахчара тăрмашать, ашшĕ сарайĕнче катмак хăйрать. Ывăлне курсан ашшĕ ĕҫлеме пăрахрĕ, наждакне чарчĕ, пахча алăкне уҫса мăшăрне чĕнчĕ.

– Настя, кил кунта хăвăртрах!

Ашшĕпе ывăлĕ ыталашса илчĕҫ. Амăшĕ куҫҫулĕ кăларса ҫывхарчĕ, ывăлне ачашшăн чуптурĕ, кинне шыраса йĕри-тавра пăхрĕ.

– Ăҫта вара пирĕн кин?

– Хĕрĕмпе килтех юлчĕҫ, ун вырăнне эпир, икĕ арҫын, килтĕмĕр, хĕрарăмсем пирĕнсĕрех унта, ҫавăн пек кирлĕ, анне.

– Эсир тулли ҫемьепе килсен, эпĕ ытараймастăп.

Ашшĕпе амăшĕ ҫав тери савăк, икĕ ватăн пичĕсенче кулă ҫиҫет. Олег парнесем кăларчĕ. Амăшĕн хулпуҫҫийĕчен пысăк тутăр уртса ячĕ. Амăшĕ темиҫе ҫул ҫамрăкланнăн туйăнчĕ, савăк куллине пытараймарĕ вăл.

– Ай, тахҫанах кун пирки ĕмĕтленнĕччĕ, мĕнле чухлавлă эсĕ, ывăлăм?

Ашшĕне пĕр тĕслĕ ҫутă кĕпе парнелерĕ, вăл унăн пичĕпе тата кăвак ҫӳҫĕпе килĕшӳллĕ.

– Уявсенче тăхăнмалли кĕпе ку, кĕҫех Елчĕкре ярмарка пулать, вăт ҫав кун тăхăнатăп та.

– Ывăлăм, эпир питĕ хавас сана курма.

Ывăлĕ ҫине пăхса ытараймарĕ амăшĕ. Вăл кăмака умĕнче кăштăртатрĕ, тем хатĕрлерĕ.

– Миҫе ҫул курнăҫман эпир санпа, ывăлăм.

– Миҫе ҫул Ельцин ҫĕршыв пуҫĕнче, ҫавăн чухлĕ курнăҫман.

Амăшĕ каллех куҫҫуль кăларчĕ, ăна саппунпа шăлса типĕтрĕ. Сĕтел хатĕрленĕ хушăра Олег икĕ сумкипе тула тухрĕ, сарайра урайĕнчи виҫĕ хăмана хăйпăтрĕ, унта шăтăк чаврĕ, ҫĕрне айккинелле сирчĕ. Шăтăка икĕ сумкине вырнаҫтарчĕ, тирпейлĕн ҫĕрпе витсе хучĕ. Халĕ ĕнтĕ никам та пĕлес ҫук унта мĕн выртнине. Йытă патне пычĕ, ăна темиҫе хутчен ачашларĕ, сăнчăрне сарай алăкĕ патне ҫитмелле пушатрĕ.

Каç тӗлне пӳрт тулли халӑх пухӑнчӗ. Вӗсен кӑмӑлӗсенчен вӗсем кун пек кӗтмен-туман уявсӑр кичемленсе çитни палӑрать. Ку ӗнтӗ иртнӗ вӑхӑтсен ностальгийӗ. Çакӑн пек пӗрле сӗтел хушшинче тахçанах ларман тӑвансем, палланисем, ял çыннисем. Хаваслӑ кулӑ тӑчӗ вӗсен пичӗсенче. Темӗнле йывӑр пулсан та, ял халӑхӗ тытӑнса тӑрать-ха, шухӑшларӗ Олег. Чӑнах та, пурте тенӗ пек Олег çулӗнче, анчах чылайӑшӗ самаях ватӑлнӑн курӑнаççӗ. Çамрӑксем вара пачах çук. Пӗр çулсенчи халӑх пухӑннӑ. Ытларах хӗрарӑмсем, вӗсен упӑшкисем çут тӗнчепе сывпуллашнӑ пулмалла. Çак пӗччен хӗрарӑмсен куçӗсенчен салхулӑх кайма пӗлмест. Килте тунӑ чӑваш сӑрине ӗçнӗ хыççӑн пухӑннисем юрӑ юрлама тытӑнчӗç, ун хыççӑн ташӑ ташларӗç. Хӑшӗ-пӗри çурӑмне пилӗк тӗлӗнче тытрӗ пулин те, çынсенчен юлмарӗ, çапрӗ ташша. Хӑнасем çурçӗр иртсен тин саланчӗç килӗсене.

Ирпе Олег ывӑлӗпе юнашар çенӗкре тутлӑ ыйхӑпа çывӑрнӑ чухне такам ӑна çурӑмӗнчен тӗртсе тӑрӑшсах вӑратнине туйрӗ. Вӑл йывӑррӑн куçне уçрӗ. Кравать çумӗнче унӑн çывӑх тусӗ Шурик тӑрать. Вӑл муталанчӑк сӑн-питлӗ, куçӗ шыçнӑ, куç шӑрçисем аран-аран курӑнаççӗ.

– Эс мӗн çав териех чылай çывӑратӑн, хула çынни, аçуаннӳ, ав, тахçанах пахчара ӗçлеççӗ?

– Сана хӑвна мӗн кирлӗ ир-ирех кунта, çынсем ӗçре тетӗн пулсан?

– Пуç ыратать, çӗркаç хӑв ӗçтертӗн, халӗ мухмӑр чӗрт.

– Пӑх çавӑнта пӳртре, сӗтел çинче пулмалла пек.

Шурик пӳрте кӗчӗ, чашӑк-тирӗке шакӑртаттарчӗ.

– Çӗркаç пӗтӗмпех ӗçсе янӑ пулмалла, нимӗн те çук санӑн унта.

– Тӗслӗх ил ватӑсенчен, вӗсем мухмӑр чӗртмесӗрех ӗçре.

– Эс мана тӑн парса ан вырт кунта, манӑн килте хамӑнах прокурор пур, иртенпех канӑç памасть, тухса тарма тиврӗ.

Çакна илтсен Олег кулса ячӗ.

– Олег, укçа пур-и санӑн?

– Паллах, унсӑрӑн мӗнле пурнас.

– Эпӗ вара юлашки вӑхӑтра укçасӑр пурӑнма хӑнӑхрӑм.

– Шурик, пар-ха мана шӑлавар, тем, тӑрас килмест.

Олег аллине шӑлавар кӗсйине чикрӗ, унта пилӗкçӗр тенкӗллисем кӑна иккен. Вӑл пӗрне Шурика тыттарчӗ. Лешӗ

çавӑнтах хавхаланчӗ, кӑмӑлӗ хӑпартланчӗ, вӑл сарлакан кулса ячӗ.

– Кала, миçе илмелле?

– Хӑвӑнне хӑв пӗл.

Шурик ялӑн тепӗр вӗçӗнчи лавккана васкарӗ. Олег тӑруках ӑнкарса илеймерӗ: унӑн пакетра ваклана укçа та чылайçке, вӗсене вӑл Мускавра лавккасем, пасарсем тӑрӑх çӳресе ятарлӑ ваклаттарнӑччӗ, çакна вӑл пӗлесшӗн çунакан куçсенчен сыхланса тунӑччӗ. Теприпче шултра укçасемпе асӑрханулларах пуласчӗ. Çур çул иртрӗ пулин те укçа çухални, пӗр тепӗр ултӑ уйӑх чӑтма тивет.

Шурик пӗччен килмерӗ, хӑйпе пӗрле компани илсе килчӗ, шурӑ эрехне вара тулли пакет илнӗ. Хӑй кӑмӑллӑ, хӑйне ӗçлӗ çын пек тытать.

– Так, атьсемӗр, паян ӗçетпӗр, ыран нимӗнле ӗçкӗ те пулмасть. Ӑнлантӑр-и мана?

– Ӑнланмалла, унтан та уçӑ калаймӑн.

– Ӗçсем мӑй таран, мӑшӑрӑм Çӗпӗрте кӗтет, çавӑнпа вӑхӑта ахалех иртерес теместӗп.

– Юрать, ӑнлантӑмӑр, кунта пурте хамӑр çынсем.

– Вӑхӑчӗ пулӗ-ха, пӗрре кӑна мар ларӑпӑр пӗрле сӗтел хушшинче.

– Ку сӑмахсем килӗшмеççӗ мана, Олег.

Шурик ӑна тусла ыталарӗ.

– Эппин ӗçер сан юлашки сӑмахусемшӗн.

Вӗсем черккесемпе шаклатрӗç те эрехне ӗçрӗç. Кун хыççӑн калаçу шавлӑрах кайрӗ. Пӗтӗм эрехе ӗçсе янӑ хыççӑн тин арçынсем килӗсене саланчӗç.

Ирхине, аппӗпе амӑшӗ сӗтел хушшинче ларнӑ чухне, Олег вӗсемпе калаçу пуçарчӗ, хӑй пӗтӗм çемйипе кунта таврӑнасси пирки пӗлтерчӗ. Амӑшӗ çавӑнтах кӑмӑлсӑрланчӗ, ывӑлӗ çине ӳпкевлӗн пӑхрӗ, сассинче ывӑлӗн шухӑшне хурлани палӑрчӗ.

– Мӗн, ывӑлӑм, эс кунта пӗтесшӗн-им, пылчӑкра та тислӗкре? Пӑх пирӗн алӑсем çине, ал лапписем ав мӗнле хӑмпӑланса хытса ларнӑ, пӑхма хӑрушӑ. – Вӑл хӑйӗн аллисене тӑсса кӑтартрӗ. Вӗсем лаптӑкӑшпе çурӑлса пӗтнӗ. – Иртен пуçласа каçчен ӗçлетпӗр çӗр çинче, пурлӑхӗ çавах хутшӑнмасть, çулран çул аран майлашса пыратпӑр, ячӗшӗн кӑна пурӑнатпӑр темелле.

– Эппин мĕнле майпа пиччене «Жигули» машина илсе пама пултартăр?

– Танлаштаратăн та, ку маларах пулнă, ытлă-çитлĕ пурăнма пуçланă чухне. Ельцин килчĕ те халăха пĕтере пуçларĕ, вăй хурса, тарпа ĕçлесе пухнă укçасене пус хакне тăратса хăварчĕ.

– Анне, лăплан-ха, пар мана каласа пĕтерме.

– Пĕлетĕн-и, ывăлăм, алăсем пĕрмай ыратаççĕ, çурăм шăмми ыратнăран пĕшкĕнме питĕ йывăр, радикулит аптратать, каçсерен урасем сураççĕ. Ак мĕнле вăл паянхи ял пурнăçĕ. Ялта пĕр лайăх техника та çук, ăçта килнĕ унта юрăхсăр тимĕр-тăмăр тутăхса выртать, фермăсем ишеççĕ, çĕннине нимĕн те лартмаççĕ, иртнĕ вунă çул хушшинче влаçрисем вăрлама хăнăхрĕç.

– Ана эпĕ, анне, пĕтĕмпех ăнланатăп, анчах юлашки вăхăтра ăш вăркама пуçларĕ, чуна çуралса ÿснĕ вырăн туртать, юратнă тăван çĕртен хакли çук пулĕ çут тĕнчере.

– Эс, ывăлăм, хулара сакăр сехет ĕçлетĕн те выртатăн канса. Кунта вара хуçалăха тытса тăмалла, колхозра ĕçлемелле.

Ашшĕ калаçăва хутшăнмарĕ, эхлетсе, вĕсем çине пăхса ларчĕ.

– Ан та шутла кунта таврăнма, пурăн лăпкăн хулара, пуçна ан ыраттар.

– Анне, эпĕ çавах та таврăнатăп.

– Эп сире пÿрт уратинчен ирттерместĕп.

Кăмăлсăррăн вĕçлерĕç вĕсем калаçăва. Олег илтнĕччĕ-ха: юнашарти кил-çурт икĕ çул ĕнтĕ хуçисемсĕр пушă ларать, ерипен çĕрет. Олег ял Канашне кайрĕ, çурт пирки ыйтса пĕлчĕ. Юлашки вăхăтра унта стариккипе карчăкĕ иккĕшех пурăннă. Вĕсен пĕртен-пĕр ывăлĕ Чечняра пуçне хунă-мĕн. Хуйхăна тÿсеймесĕр кусем те пĕр-пĕрин хыççăн леш тĕнчене ăсаннă. Кил-çурт тĕпчĕкĕсем тупăнман, çапла вара вăл колхоз пурлăхне куçнă. Олег çав çурта илме шутларĕ. Ĕç-пуç кун пек килсе тухнипе ашшĕ кăмăллă юлчĕ.

Ывăлĕ мăнукне кунта хăварма шутласан, ашшĕ питĕ савăнчĕ. Çула тухас умĕн амăшĕ ывăлĕн сумкине кукăль-пÿремеч, аш-пăш хурса пачĕ, пуçĕнчен ачашласа илчĕ.

– Эсĕ, ывăлăм, ĕнтĕ çулсенче, ăçта тĕпленесси санăн ирĕк, сана çăмăл пултăр тесе пуçа вататăп эпĕ, ывăлĕ юнашар пулнишĕн мĕнле амăшĕ савăнмĕ, ку пысăк телей уншăн, пиллĕк ывăлтан хăть пĕри таврăнать.

Пўрт урати патӗнче амӑшӗ куççуль кӑларчӗ, ӑна вӑл илемлӗ саппунӗн кӗтесӗпе шӑлса илчӗ. Саппунӗ унӑн чӑваш тӗррипе чиперлетнӗскер, çавӑнпа илӗртӳллӗ.

Ку хутӗнче Олег Канашран пуйӑспа кайрӗ, кун пек меллӗрех, вӑхӑтне те çухатмасть. Хулана çитсен вӑл япаласем турттармалли контейнершӗн мӗн чухлӗ тулемеллине ыйтса пӗлчӗ, ытла хакла ларать иккен. Вара вӑл çур хакпах телевизорӗпе холодильникне сутрӗ, çавах кивелнӗччӗ вӗсем. Урӑх ун пек хаклӑ япаласем çук вӗсен, вунпилӗк çул хушшинче пухайман пурлӑх. Тата хӑш-пӗр япаласене сутма пултарчӗ вӑл. Ытти юлнӑ япаласемпе чашӑк-тирӗке пускилӗсемпе юлташӗсене валеçсе пачӗ, çавах та чылайӑшӗпе пӗр вӑхӑтра пурӑнма пуçланӑ-çке кунта. Аслӑраххисем Раççейри социализм тапхӑрӗнче хваттер илме ӗлкӗрнӗ. Горбачевӑн çӗнӗлӗхӗнче рабочи халӑх ытларах çакӑн евӗрлӗ общежитисенче пурӑнма пуçланӑ. Çамрӑксем вара кунта ӗçлесшӗнех пулман.

Юлашки кунӗнче Олег ӗçкӗ турӗ. Пурте тенӗ пек тантӑшсем пухӑнчӗç. Пурте пӗр харӑс тенӗлле çакна ырларӗç.

– Ку çуртра тахçанах кун пек савӑклӑ пухӑнни пулманччӗ.

– Япаласем сутнӑ пӗтӗм укçа тухса кайрӗ пулӗ çак ӗçкӗне? – кӑсӑкланса ыйтрӗ юнашар пӳлӗмре пурӑнакан Варвари.

– Ку тӗрӗсех ӗнтӗ, эсир мана яланлӑха астуса юлӑр тесе йӗркелерӗм ӑна.

Çапла сывпуллашрӗ Олег вунпиллӗк çул пӗрле пурӑннӑ пускилӗсемпе. Вӗсем кунтан кӑнтӑрла тухса кайнӑран, вӗсене ӑсатма хӗрарӑмсем кӑна пычӗç, мӗншӗн тесен вӑл вӑхӑтра упӑшкисем ӗçре пулчӗç.

Чӑваш енӗн Елчӗк районӗнчи тӑван ялне çитсен Олег çӗнӗрен çуралчӗ тейӗн, чунӗ унӑн пӗлӗте хӑпарчӗ. Ашшӗпе амӑшӗ тата ывӑлӗ Олегпа çемйине савӑнăçлӑн кӗтсе илчӗç. Асламӑшне уйрӑмах ывӑлӗн пӗчӗк хӗрӗ килӗшрӗ, лешӗ те асламӑшне кӑмӑлларӗ, унран уйрӑлма пӗлмерӗ.

Кунта пурӑнма тытӑнсан, Олег ялти ытлӑ-çитлӗ пурӑнакан çынсене сӑнарӗ. Ял халӑхӗ вӗсене пуян çынсем тет. Хӑйсен вара нихӑшӗн те машина çук. Чухӑннисенчен кӑшт тулӑхрах пурӑнаççӗ çеç. Çурчӗсем ытти çынсенчен кӑшт чипертерех ӗнтӗ, çавах та нихӑшӗ те вӗсенчен Олег кӑмӑлне каймарӗ. Вӑл вара Елчӗке, Канаша, Шупашкара çитрӗ, харпӑр хӑй çынсен çӗнӗ çурчӗсене пӑхса çӳрерӗ, хӑйне кирлине суйласа илчӗ. Хӑйӗн

тусĕпе Шурикпа калаçса пăхрĕ ку ыйтупа. Лешĕ пĕтĕмпех ăнкарать, такама та çурт лартса панă республикăра, ĕç çук чухне юнашар республикăсемпе облаçсене те тухса çÿренĕ, котеджсем лартнă.

Хăйĕн ĕçхĕлне çăмăллатма Олег Горькие кайса килчĕ. Унта йÿнĕ хакпа пĕр рабочирен «ГАЗель» туянчĕ, хуçалăхра вăл пысăк усă парĕ терĕ. Чи малтан Олег кивĕ çуртне иштерчĕ, тусан вĕçсе тăчĕ ишнĕ чухне. Унтан машинăпа юнашар ялти чиркĕве кайса пачăшкăна илсе килчĕ те пулас çурт вырăнне сăваплă шыв саптарчĕ. Кайран хĕрÿ ĕç пуçланчĕ, Шупашкартан «КамАЗсем» строительство материалĕсем турттарса тăчĕç.

Ĕлĕксенче ун пек чухне пĕтĕм ялĕпе ниме тăватчĕç. Строительсем ялтанах нумай тупăнчĕç, анчах укçалла ĕçлеме кăна килĕшрĕç. Юлашки вунă çул хушшинче демократилле саманара ĕç–пуçсем тĕппипех улшăнчĕç. Олег шкула çÿренĕ чухне никамăн алăкĕ çинче те çăра çакăнса тăман, килте никам та çуккине пĕлтерсе патак çеç чиксе хăварнă, е сăлăп хунă. Пĕр-пĕрин чыслăхне ĕненнĕ çынсем, пĕр–пĕрне шаннă. Халĕ кашнин алăкĕ çинче пысăк çăра çакăнса тăрать, кил хушшинче хаяр йытă вĕрет. Ют çын, е палланнисемех мĕн те пулин вăрласа каясран хăраççĕ çынсем.

Ял халăхне тĕлĕнмелле икĕ хутлă пысăк çурт ларттарать Олег. Ĕç вĕресе тăрать, строительство материалĕсем пĕр тытăнса тăмасăр килеççĕ. Елчĕкре Олег пĕр автокрановщикпа калаçса татăлчĕ. Лешĕ ир-ирех ĕç вĕçленĕ хыççăн килсех тăрать.

Олегсен çуртне хирĕç урам урлă Юра пурăнатчĕ. Арăмĕпе иккĕшĕ эрех ĕçсе хĕлле юр çинче шăнса вилнĕ, хăйсен килне кăшт кăна çитеймен. Çуртра вĕсен пĕртен–пĕр ывăлĕ Владик хăйĕн асламăшĕпе юлнă. Ачи шурă çÿçлĕ те кăвак куçлă, ашшĕнех хывнă. Пĕртен-пĕр Владик Олега тÿлевсĕр пулăшать. Олег ăна темиçе хутчен те укçа сĕнсе пăхнă. Лешĕн вара кашнинчех пĕр хурав:

– Эсир мĕн, Олег тете, эпир пускилсем вĕт, пĕр-пĕрне тÿлевсĕрех пулăшма тивĕç.

Олег вара ним калама та аптăраса тăрать. Ача унăн чунне хускатрĕ, унăн та ăна мĕнпе те пулин пулăшас килчĕ. Ял çыннисенчен Владик интернатра пурăннине пĕлчĕ вăл, яла асламăшĕ патне каникулсенче çеç килет иккен. Пĕррехинче ĕç

хыҫҫӑн Олег Владика хулӗнчен тытса чарчӗ, яланлӑхах асламӑшӗ патне куҫма сӗнчӗ, пулӑшса тӑрӑп терӗ.

– Темиҫе ҫул пурӑнса, эп унта хӑнӑхнӑ, ачасемпе паллашса ҫитнӗ, вӗсемпе вӑхӑт интереслӗрех иртет.

– Хӑвӑннне хӑв пӗл эппин, эп сана пулӑшас тенӗччӗ.

– Мана ырӑ тӑвас тетӗр пулсан, ирӗклӗ вӑхӑтра пырса килӗр манпа интерната.

– Шутласа пӑхӑпӑр ун пирки.

– Эпир мӗнле условисенче пурӑннине курнӑ пулӑттӑр.

– Апла пулсан, мӗн вӑхӑта тӑсмаллли пур, кайрӑмӑр.

Вӗсем «ГАЗельпе» интерната кайрӗҫ. Владик Олега хӑй пурӑннӑ вырӑна кӑтартса ҫӳрерӗ. Чаплах мар иккен вӗсен пурнӑҫ условийӗсем, телевизорсем кивӗ, аран-аран тӗксӗмӗн кӑтартаҫҫӗ. Вара вӗсем директор пӳлӗмне кӗчӗҫ.

– Интерната мӗн-мӗн кирлине ҫырса парӑр мана хут ҫине, – ыйтрӗ Олег директортан.

Директор вată хӗрарӑм пулчӗ. Вӑл мӗн кирлине аса илсе пӗрмай мачаналла пӑхрӗ, унтан хут ҫине ҫырса пычӗ, чи кирлине манса хӑварас марччӗ терӗ ӗнтӗ. Тепӗр вунпилӗк минутран вӑл списока Олега тыттарчӗ. Списокри япаласенчен ҫуррине те илес ҫук тесе, пысӑк мар список турӗ вӑл, Олега куҫран пӑхма именчӗ, аван марла туйрӗ хӑйне. Олег Владикпа Шупашкара вӗҫтерчӗҫ, списокра кӑтартнӑ япаласене пӗтӗмпех туянчӗҫ.

– Сана хӑвна мӗн кирлӗччӗ, Владик?

– Мана Ҫӗнӗ Шупашкар туса кӑларакан макарон пӗр икӗ михӗ чармӗччӗ, эпӗ ӑна питӗ юрататӑп, асанне те килӗштерет.

– Турӑ виҫҫӗне юратать, виҫӗ михӗ илӗпӗр тата пӗр ещӗк томат соусне.

– Эсир ман чуна витӗрех куратӑр пулмалла, томат соусне те юрататӑп эпӗ.

Списокри япаласемсӗр пуҫне, Олег телевизорпа компьютер туянчӗ, «УАЗик» туянма укҫа уйӑрса пачӗ. Пурте кӑмӑллӑ юлчӗҫ. Юлашкинчен Олег директора айкинелле чӗнсе илчӗ:

– Эпӗ сире пулӑшнине, тархасшӑн, никама та ан калӑр.

– Ма вара эсир ҫав териех сӑпайлӑ пуласшӑн? – тӗлӗнчӗ директор. – Ҫынсем пӗлме тивӗҫ ун пек пулӑшакансене.

– Турăшăн ыйтатăп, унсăрăн налог инспекцийĕ аптратса çитерет.

– Ку сирĕн ирĕк, юрĕ, пĕлтермĕпĕр. Пысăк тав сире пулăшнăшăн, Турă çăмăллатса пытăр сирĕн кунçулăра. Пирĕн пата сирĕн пек çынна янăшăн.

Куççуль юхтарсах ăсатса ячĕç вĕсене интернатра ĕçлекенсем, ачасем хапхана çитиех чупрĕç машина хыççăн. Яла çитсен, Владиксен килĕ тĕлĕнче чарăнчĕç. Владик макарон миххисемпе соус ещĕкне чăлана кĕртсе лартрĕ. Асламăшĕ питĕ кăмăллă юлчĕ.

Икĕ хутлă пысăк çурт илемлĕн курăнса ларать тул енчен. Шалта хулари пек туласчĕ те. Ваннăйĕ те, кухни те пур. Путвалта котельнăй вырнаçнă, вăл пăрăхсем тăрăх çурта ăшăтать. Шыв та кĕртнĕ киле. Çурт хыçĕнче пысăк шăтăк чавтарчĕ Олег, унта çуртри тĕрлĕ каяш юхса тухать. Анкарти хыçĕнче çăл чавтарчĕ. Унтан насус маччари пысăк бака шыв уçлать, насусĕ хăех ĕçлет. Выльăх-чĕрлĕх сарайĕсене çĕнетнĕ, кирпĕчрен купаласа хăпартнă, урам хапхине улăштарнă, юписем кирпĕчрен, хапхи шуçран. Пӳртри стенасене плитка çыпăçтарнă, урайне паркет сарнă. Плиткăсене Шурикпа хăйсен ялĕнчи йĕкĕт Максим çыпăçтарчĕç, урай паркетне вара Олег хăй ашшĕпе пĕрле сарчĕ. Илемлĕ те паха пултăр тесе, Олег ĕçсене васкаттармарĕ, пурте йĕркеллĕ пултăр терĕ.

Пĕррехинче кăнтăр апачĕ хыççăн Олег канма ларчĕ, ашшĕне кĕтрĕ. Ял урамĕпе утса пыракан Николай пачăшкă, Олегпа пĕр класра вĕреннĕскер, ун çумне пырса ларчĕ, хăйĕн хуйхăсуйхăллă шухăшне пĕлтĕрчĕ.

– Пирĕн ялăн чи çӳллĕ вырăнĕнче чиркӳ ларттарасшăн.

– Кунта нихçан та чиркӳ пулман-çке.

– Ял хăватне çĕнĕрен чĕртесшĕн эпĕ.

– Темле ĕнтĕ, Николай, ăнăçĕ-ши, халĕ вĕт питĕ кăткăс самана.

Николайăн куçĕсем чĕрĕлчĕç, шанăç курăнчĕ вĕсенче.

– Турра ĕненмелле, çынсене шантармалла, йăнăш çул çинчи чунсене тĕрĕс çул çине кăлармалла.

– Кунта мана мар, çӳлтисене каламалла, вĕсем çĕршыва ертсе пыраççĕ, вĕсем халăха нишлетрĕç.

– Чунпа та совеçпе килĕшӳллĕ пулма пĕрлĕхлĕ çурт – чиркӳ лартмалла, Турă патне çывăхланмалла.

– Мĕн чухлĕ те пулин пухрăн-и хăть?

– Карчăксем пачĕç кăштах, анчах хăйсем те нишлĕхре пурăнаççĕ.

– Хăв вара чиркÿ лартасшăн, капăр калаçнипех ĕç каймĕ.

– Эсĕ, ав, мĕнле чаплă çурт лартрăн, ялта урăх çук ун пекки.

– Пултарнă таран тăрăшатăп, тахçантанпах ĕмĕтленнĕ ун пирки.

– Паллах, ĕмĕтленни çителĕксĕр, укçасăр нимĕн те тăвайман хальхи саманара.

– Тĕрĕс калатăн, Николай пичăшкă.

– Ман шутпа, санăн татах укçа пур, юлашки укçапа лартман ĕнтĕ.

– Пĕлетĕн-и, Николай, мĕн чухлĕ тертленсе çăрăннă эпĕ Çĕпĕрти пĕчĕк те тăвăр пÿлĕмре, – Олег ура çине тăрса инçетелле пăхрĕ, унтан лăпкăн каларĕ, – Халĕ хăть авантарах пурăнасчĕ ку çут тĕнчере.

– Чылай пулать санпа курнăçманни, Олег.

– Вунă çул хушши, Ельцин çĕршыв пуçлăхĕ пулса тăнăранпа.

– Тек нишлĕхре пулмăн, Олег, халĕ санăн хăвăн çурт, икĕ хутлă.

– Айта-ха луччĕ ĕçер пĕрех хут шурă эрех, килти сăмакунне, вăл лавккаринчен çавах та тасарах.

– Мана юрамасть, çынсем умĕнче аван мар, мĕн калĕç кайран ман çинчен?

– Ан шиклен, пачăшкă, никам та курас-пĕлес çук, атту тем, пирĕн калаçу çыпăççах каймасть, пĕр класра вĕреннĕ вĕт эпир, пур аса илмелли, – Олег тепĕр хут çутă та таса кăвак куç çине пăхрĕ. – Кĕр ĕнтĕ ман пата, чуна уçса калаçар.

Унăн сăмахĕсем пачăшкăн чунне витерчĕç пулмалла, ку хутĕнче вăл килĕшрĕ Олегпа. Вĕсем кил хушшине кĕчĕç. Олег хăвăрт тутлă апат-çимĕç кăларса лартрĕ. Урăх нимрен те пăрăнмарĕ Николай атте, мĕн сĕннине пĕтĕмпех ăша ячĕ. Вăл Олег çывăхнерех ларчĕ, ăна куçран пăхрĕ, каллех чун ыратăвĕ пирки сăмахне тăсрĕ.

– Паракаңăн алли юрлăланмасть.

– Лăплан, тархасшăн, юрĕ-çке, пултарнă таран пулăшăп сана.

Олег ура çине тăчĕ, пĕлĕтелле пăхрĕ, тавралăх халлĕхе çутă-

ха. Тӳпе тап-таса та кăн-кăвак. Ку сăмахсем хыççăн чунĕ тасалса çуталнăн туйăнчĕ Олега.

– Сăваплă ĕçшĕн шел мар, çитменнине, хамăр ялшăн.

Çакна илтсен Николай аттен куçĕсем чĕрĕлчĕç.

– Чăтăмсăррăн пĕлес килет, хăçан пама пултарăн-ши?

Йĕри-тавра пăхса илсе, Олег ăна хăлхинчен пăшăлтатрĕ:

– Ыран ирпе килсен паратăп, халăхра каланă тăрăх, каçа хирĕç укça памаççĕ. Ку япăх паллă, кĕсье укçаран татăлма пултарать теççĕ.

– Турă ячĕ пулĕ мана сан пата, чунпа туйрăм эсĕ укça пама пултарасса.

Чылайччен ларчĕç вĕсем сĕтел хушшинче, иртнине аса илсе калаçрĕç, çавах та чипер çамрăклăх, пур мĕн аса илмелли. Юратса пăрахнă хĕрсене шкулта, вĕсем хыççăн сахал мар чупнă.

Николай атте ирпе килчĕ, анчах хапхаран кĕмесĕр урамра кĕтсе тăчĕ. Олег пӳртре хăйĕн ĕçĕпе аппаланатчĕ. Мăшăрĕ хашкаса чупса кĕчĕ, упăшкине ĕçрен уйăрчĕ.

– Унта хапха умĕнче пачăшкă кĕтет, – Лиза Олег çине ӳпкевлĕн пăхрĕ. – Мĕн кирлĕ ăна пирĕнтен?

Олег нимĕн те шарламасăр тула тухрĕ те ашшĕ-амăшĕн кил хушшине кайса сарайне кĕчĕ. Лиза ун хыççăн утрĕ, Олег вăрттăн вырăнтан укça илнине курчĕ. Вăл лайăхмарланса кайрĕ, алăк умĕнче упăшкин çулне пӳлчĕ.

– Тăна кĕр, ăçта илсе каятăн укçана?

– Пирĕн ялăн пулас чиркĕвĕ валли.

– Укçана кун пек сыптăмалла та сулахаялла салатсан, хамăр мĕнпе пурăнăпăр кайран?

– Эс шутласа пăх пуçупа, ку укçана пире Турă пачĕ, – Олег аллипе пĕлĕтелле кăтартрĕ. – Эпир ăна халлĕхе нимĕнпе те тав туман-ха.

Лиза урăх нимĕн те каламарĕ, айккинелле пăрăнса, айăплăн çĕрелле пăхрĕ. Олег пачăшкăна сывлăх сунчĕ, киле кĕме чĕнчĕ. Николай пачăшкă кил хушшине кĕчĕ, анчах пӳрте кĕме килĕшмерĕ. Вара Олег ăна хул хушшинчех пилĕкçĕршер тенкĕллĕ виçĕ çыхă тыттарчĕ.

– Тавтапуç сана, Олег, ырă чунушăн, вăл санăн таса. Турă пулăшса пытăр сана укça çине укça хушма.

Николай пачăшкăн кăвак куçĕсем чĕрĕлсе çăлтăрла çиçрĕç.

Укҫасене хӑйӗн сумкине чиксе вӑл хӑйӗн ӗҫӗсемпе урам тӑрӑх васкарӗ. Ӗҫе пуҫӑнсан Николай Йӗпреҫрен ҫурт валли хатӗр пура тата пӗр КамАЗ хӑма-чус таврашӗ турттарса килчӗ. Чиркӳ лартакансене апатланма тата канма меллӗ пултӑр тесе, пулас чиркӳ ҫывӑхӗнче ҫурт ларттарчӗ. Проектсемпе чертежсене тахҫанах хатӗрлеттернӗ вӑл, вӗсем ятарла папкӑра выртаҫҫӗ. Варнава епископ машинӑпа килсе чиркӳ вырӑнне сӑваплӑ шывпа сапрӗ. Кун хыҫҫӑн ӗҫ вӗресе кайрӗ. Малтан никӗс валли ҫӗр чаврӗҫ, бетон шӗвекӗ ячӗҫ. Анчах, Николай пачӑшкӑ ӗмӗтленнӗ пек, ӗҫ хӑвӑрт каяймарӗ.

Тыр-пулсемпе пахча ҫимӗҫӗсене пухса кӗртсен те ҫанталӑк ятарласа тенӗ пек уяр Елчӗк ҫӗрӗнче, ӑна хӗвел ҫутатса та ӑшӑтса тӑчӗ. Ял ҫыннисем, ватти-вӗтти, чиркӳ лартнӑ ҫӗре туртӑнчӗҫ, кам мӗнпе пултарать, ҫавӑнпа пулӑшрӗ – кам ӗҫлесе парса, кам укҫапа. Кунсерен пулӑшакансем хутшӑнсах пычӗҫ. Карчӑксемпе ачасем те пулӑшрӗҫ. Ачасем шкул хыҫҫӑн тӳрех кунта чупаҫҫӗ.

Сивӗсем ҫитиччен чиркӗве кирпӗчрен купаласа хӑпартрӗҫ, кӑвак пӗлӗт тӗслӗ сӑрланӑ ҫавра тӑррисене те вырнаҫтарса лартма ӗлкӗрчӗҫ. Ҫакӑн пек тӳлевсӗр пулӑшма ҫынсен ырӑ чунӗсем мӑкланман-ха, ырӑлӑх пур-ха вӗсенче. Юлашки вӑхӑтри пурнӑҫри йывӑрлӑхсем хавшатса нимлетмен–ха вӗсене. Ҫӳлти пуҫлӑхсем халӑха хавшатма тӑрӑшаҫҫӗ, пӗр-пӗрин ҫине кашкӑрла пӑхчӑр теҫҫӗ. Ҫӗршыва, халӑха ҫаратма никам та чармасть вӗсене ҫак арпашуллӑ саманара. Чиркӳ вара халӑха пӗрлештерет, пӗрлешӳре халӑхӑн вӑйӗ, ҫавӑнпа халӑх сӑваплӑ, ӗҫрен пӑрӑнмасть, май килнӗ таран пӗтӗм ялпа чиркӳ лартнӑ ҫӗре хутшӑнать, пур-ҫук укҫине хывать кунта. Хӑнана е отпуска килнисем те хываҫҫӗ укҫа. Никам та айккинче юласшӑн мар. Ҫавах та ӗҫ ерипен пырать, ку Николай пачӑшкӑна пӑшӑрхантарать, пилпе пуҫланӑ пысӑк ӗҫе унӑн хӑвӑртрах вӗҫлес килет. Вӑл каллех Олегран укҫа ыйтрӗ, лешӗ ӑна малтанхи пекех виҫӗ ҫыхӑ тыттарчӗ. Сурхурире татах пачӗ. Ҫапла вара чиркӳ лартма ҫулталӑк хушшинче пӗтӗмпе миллион тенкӗ укҫа пачӗ вӑл Николай пачӑшкӑна.

Икӗ ҫул хушшинче ҫуртӑн шалти ӗҫӗсене вӗҫлерӗ Олег, чунӗ тинех лӑпланчӗ. Чиркӳ те Ҫимӗке уҫӑлчӗ, прихут халӑха йышӑнма пуҫларӗ. Ял халӑхӗшӗн икӗ уяв пулчӗ.

Олег ҫӗнӗ ҫурт ӗҫки турӗ, кил хушшинче вӑрӑм сӗтел лартрӗ, хӗрарӑмсем ӗҫмелли-ҫимеллипе тултарчӗҫ ӑна. Кунтах пӗр пичке сӑра ларать. Камӑн ӑш хыпнӑ, ҫавӑ хӑех пырса ӗҫме пултарать. Хуласемпе ялсенчен хӑнасем пухӑнчӗҫ, тӑвансемпе ҫывӑх ҫынсем ачисемпех килнӗ. Малтан Ҫимӗкре ҫӑва ҫине кайса килчӗҫ, кайран хӑйсене ирӗке ячӗҫ. Ял халӑхӗ валли ӗҫкӗ эрнене тӑсӑлчӗ. Кун пекки пӗр вунӑ ҫул пулманччӗ-ха.

Ҫурҫӗрте ӗҫлесе пурӑннӑ ҫынсем яла таврӑнса паха ҫуртсем лартма пуҫларӗҫ, ватлӑх канӑҫлӑ пултӑр теҫҫӗ ӗнтӗ тӑван Елчӗк районӗнче тӗпленсе. Республика хулисенче пурӑнакансем те юлмарӗҫ вӗсенчен, дача вырӑнне хӑйсен ялӗсенче ҫуртсем лартма тытӑнчӗҫ. Вӗсем хушшинче ҫывӑх облаҫсенче ӗҫлесе пурӑнакан ентешсем те пур.

Ҫынсем выльӑх-чӗрлӗх тытма пуҫларӗҫ. Ӗне тытакансен сӗте ништа чиксе пӗтерме ҫук, вара вӗсем ӑна сутма автобуспа Елчӗке каяҫҫӗ, тӳлевсӗр ҫӳрекенсем Канашах ҫитеҫҫӗ, унта вара тӑпӑрчӑ, ҫу, сӗт сутаҫҫӗ. Хӑшӗ-пӗри чӑкӑт та сутать. Унта вӗсен хушшинче конкуренци, чӑвашла каласан, тавлашу пырать, мӗншӗн тесен сутуҫӑсем туллиех. Хӑшӗ–пӗрисен сӗт ахалех пӗтет. Тухса пӑрахас мар тесе, вӗсем сӗте сыснисене параҫҫӗ.

Олег ял пурнӑҫӗнче ҫу завочӗ лартма шутларӗ, унта сыр туса кӑларасшӑн вӑл. Юнашарах кӑлпасси цехӗ лартасшӑн. Унсӑрӑн тутарсем машинсемпе килеҫҫӗ те выльӑх-чӗрлӗхе е аш-пӑша йӳнӗ хакпа илсе каяҫҫӗ. Олег укҫине шутласа пӑхрӗ, ҫурри ытла юлнӑ. Юлнинчен ҫуррине ҫемьене усрама уйӑрса хучӗ, ӑна тӗкӗнес темерӗ. Шутласа пӑхрӗ те унӑн укҫи строительство, оборудовани валли, рабочисене тӳлеме те ҫитмелле пек, кӑштах юлмалла та. Заводпа цех лартнӑ ҫӗре уйӑрнӑ укҫаран ытларах та тухса кайрӗ. Вӗсене ӗҫе ярсан тин ерипен Олег кӗсйине тупӑш кӗре пуҫларӗ. Завочӗ унӑн ял пуҫӗнчи ҫул хӗрринче меллӗ вырӑнта ларать. Вӑл пӗвене хӑй аллине илсе унпа хуҫаланнӑшӑн ачи-пӑчи те, аслисем те ӑна ӳпкелерӗҫ, мӗншӗн тесен ниҫта та урӑх шыва кӗмелли пӗве ҫук. Ку пӗви вара ахалех хумханса выртать. Олег аллипе ҫеҫ сулать, вӑхӑт ҫук унӑн. Ывӑлӗпе хӗрӗ кӗчӗҫ урамран, ашшӗне сыпӑҫрӗҫ.

– Атте, пирӗн канас килет кӑштах.

– Мӗнле кану пултӑр ҫуллахи вӑхӑтра?

– Кун пек шăрăхра ниçта шыва кĕмелли çук.

Олег иккĕшне те пуçран ачашларĕ.

– Ăнлантăм ĕçĕ мĕнрине, кайăрах, ашкăнчăксем.

– Ура! – савăнăçлăн чупса тухрĕç ачисем урама.

Çав кунах Олег техника шырама тухса утрĕ. Бульдозерпа экскаватор тата темиçе машина тара тытса, юшкăна пĕр тĕле пухтарчĕ. Ăна вăл хăйсен ял çыннисене ахалех пачĕ, ют ял çыннисене вара укçалла сутрĕ, япăх мар удобрени-çке вăл. Юшкăн айĕнчен çĕр тухрĕ, ăна вăл çырмана, çынсене çÿреме кансĕр вырăна тăктарчĕ, çиелтен юшкăн сартарчĕ, кун пек курăк лайăх шăтать. Шăтăк-путăк вырăнсене пĕве пуçĕнчен пуçласах çĕрпе тултарттарчĕ. Çакна курсан, ял çыннисен лайăх çул тутарттарас килчĕ. Ушкăнпа канашласа вĕсем Олег патне ялти чи хисеплĕ шур сухаллă ватă çынна ячĕç. Олег кил хушшинче ĕçпе аппаланатчĕ. Чылай çулсенче те, хăйне маттурла тытать ватă çын.

– Мĕнле кун-çул илсе килчĕ сире ман пата? Маншăн ку пысăк хисеп.

– Олег, эп сан пата йăлăнупа килтĕм.

Олег унăн тарăн та ăслă куçĕсенчен ыйтуллăн пăхрĕ.

– Калăр, мĕн илсе килчĕ сире ман пата?

Ватă çын васкамарĕ, сухалне лăпкăн шăлса илчĕ.

– Çумăрта та йĕпе-сапара пылчăкра çăрăлас мар тесе, халăх ял урамĕнче асфальтлă çул тăвасшăн.

– Аван шухăш, анчах та эпĕ хăш енчен пырса тиветĕп кунта?

– Эпир пĕлнĕ тăрăх, эсĕ чылай çынна пулăшрăн ялта, уншăн пысăк тав сана.

– Ку ĕçре пысăк укçа кирлĕ пулать.

– Ял халăхĕн мĕн тумалла-ши ку йывăр ыйтăва ăнăçлă татса пама?

– Патшалăх пулăшма тивĕç.

– Таçта та çитнĕ, пурте килĕшеççĕ пек пулăшма, сăмах та параççĕ, анчах ĕçĕ вырăнтан тапранмасть, вĕсенчен пĕр усă та çук.

– Ку кирлĕрен те кирлĕ ĕç пирки лайăхрах шухăшласа пăхмалла.

Олег çÿлелле пăхса пĕр вăхăт шухăшласа тăчĕ, унтан хăвăрт пуçне пĕкрĕ.

– Урам çулне тума кашнинчен укçа пухмалла, хăть хăйсен килĕ тĕлĕнчи хака.

– Анчах хăшĕ-пĕрисен ытла та пĕчĕк пенси, вĕсен мĕнле пулмалла тет?

– Вĕсенчен çур хакне илмелле, мĕн çитменнине эп парса пулăшатăп.

– Куншăн та пысăк тав сана, Олег, пар-ха эп сана чунтан ыталам, пур ĕçре те ăнăçу сунам.

Хăйĕн тăхăр вун виçĕ çулне пăхмасăр çирĕппĕн утса кайрĕ аксакал. Пĕвери çĕре турттарса урам варрине тӳрлетсе якатрĕç, унтан хăйăр турттарма пуçларĕç. Ял халăхĕ хăйăр сапалама тухрĕ, машина тепре хăйăр тиесе киличчен хăйăр купине салатса та пĕтерессĕ. Асфальт сарасси енчен пулăшма Олег çул çинче ĕçлекенсемпе калаçса татăлчĕ. Пĕтĕм халăх пулăшрĕ урам çулне тăвас ĕçре. Ăна виçĕ эрне хушшинче вĕçлерĕç. Халăх кăмăллă юлчĕ, асфальтлă урампа çӳреме пуçларĕ.

Пĕвене пăхса тăма тахçанах пăрахнăччĕ, çавăнпа пĕтĕм çĕре унтан илчĕç, вара пĕве виçĕ хут сарлакаланчĕ, вăрăмланчĕ, тарăнланчĕ. Чăнкă ан пултăр тесе, хĕррисене якатрĕç. Тĕпне тикĕссĕн хăйăр сапрĕç. Ку ĕçе каллех пĕтĕм ял халăхĕ тухрĕ. Пилĕк эрнере пĕвене тасатса майларĕç. Çавна кĕтнĕ пекех, ун хыççăнах çумăрсем çума пуçларĕç, анчах вĕсем пĕвен пĕрре виççĕмĕш пайне çеç тултарма пултарчĕç. Кĕрхи çумăрсем кунĕнçĕрĕн çума тытăнсан тин пĕве тулса çитрĕ. Пĕве çине пăхса Олег тем çитменни çинчен шутларĕ. Çурăм хыçĕнчен Макçăм сасси илтĕнчĕ:

– Вăт ку пĕвене пулă ярасчĕ.

– Кам чарать вара ăна тума?

– Пуçанапа эпир Пăлана пулла çӳретпĕр, тетелпе сĕретпĕр.

– Ăнăçусем мĕнле вара?

– Пĕтĕм пулă Атăла кайнă, хĕл çывхарнине туяççĕ вĕсем.

– Ăнланмалла.

– Çур витре вĕт пулă ятăм-ха пĕвене, анчах кун пек пысăк пĕвешĕн сахал ку, хăçан ĕрчейĕ, паллă та мар.

Макçăмпа калаçнă хыççăн Олег пуçĕнчен пулă шухăшĕ тухмарĕ. Вара вăл тăван ялĕшĕн ырă ĕç тума шутларĕ. Куславккана кайса пысăк савăтпа пулă илсе килчĕ, унта çутă карассем, çутă карпсемпе хупăсăр карпсем пулчĕç. Вĕсене вăл пĕвене ячĕ, чылайăшĕсем çавăнтах тĕпне чăмрĕç, хăшĕ-

пĕрисем пĕр кана çиелте ишсе çӳрерĕç, кăштахран вĕсем те çухалчĕç. Олегăн ача-пăчана савăнтарас килчĕ, тепĕр çуленче килччĕр те ларччăр вăлтасемпе, киленччĕр пулă тытса, вăхăта аван ирттерччĕр. Килĕсенче яланах чĕрĕ пулă пултăр.

Сивĕ хĕл хыççăн нумай кĕтнĕ çуркунне çитрĕ. Пулă вăлча сапма тытăнчĕ. Пĕве вĕçĕ вĕресе тăчĕ, пулăсем выляса вĕлтлетрĕç. Ку ял халăхне пурне те савăнтарчĕ. Тăм урă Шурик килчĕ, ку Олега тĕлĕнтерчĕ, кун пеккине вăл юлашки вăхăтра асăрхаманччĕ-ха.

– Тĕлĕнтерен эс мана, Шурик, кун пек урă сăн-питпе пăхма кăмăллă сан çине.

– Айккинчен тупса параканнисĕрех пĕр çынна çурт лартса патăмăр, – хăйпе хăй çав тери сапăр Шурик. – Ытти чухне хăтăлса пĕтейместĕн ун пек шакалсенчен.

– Камсем çинчен калатăн?

– Посредниксем çинчен, ĕçлекенсене копейка тенĕ пек парать, укçана вара ытларах хăй кĕсйине чикет.

Посредниксене аса илсе Шурик йĕрĕнчĕклĕн сура-сура илчĕ, ылханлă сăмахсем каларĕ.

– Вĕсем пană укçа аран-аран çитет пурăнма. – Вăл витререн куркапа шыв ăсса ĕçрĕ, лăпланнă хыççăн пуçланă сăмахне малалла тăсрĕ. – Сана тав, Олег, сан патра ĕçлесе укçаллă пултăм, эс тĕппипех тӳлерĕн, ун пекки пĕрремĕш хут пулчĕ.

– Мана тав тума кирлех мар, хăв ĕçлесе илтĕн ăна, хăвăн тарна тăкса.

– Тĕрлĕ тĕслĕ кăтартакан телевизор илтĕм, килтисем питĕ кăмăллă пулчĕç. – Шурик савăнăçне пытараймасăр кулчĕ. – Мăшăрăма кăштах тумлантартăм, ачасем валли шкула çӳреме пĕтĕмпех илсе патăм.

– Çакăн пек тыт хăвна, Шурик, тытма тăрăш хăвна яланах урă.

– Сан çăмăл аллу хыççăн ĕçе айккинчен тупса паракан кирлĕ пулмарĕ, хамăрах ырă хуçа тĕлне пултăмăр, ентешпе иксĕмĕр çурт лартса патăмăр, вăл пире татăклăнах тӳлерĕ.

– Сан ăнăçăву мана савăнтарать çеç.

– Олег, санăн ĕç тупăнĕ-ши?

– Халлĕхе çук, атте хуçалăхра пурне те ĕлкĕрсе пырать.

– Санăн заводунта тата?

– Унта штата тултарнӑ, хӑв шарламарӑн та, Шурик. Унсӑрӑн сана валли вырӑн хӑварнӑ пулӑттӑм.

– Пурнӑҫра кам малараххине пӗлӗ-ши,– Шурик Олег ҫине темиҫе хутчен пӑхса илчӗ.– Машина туянсан аванччӗ те, атту хуларисем машинисемпе килеҫҫӗ те алли-пӑллипе пахча ҫимӗҫне ҫур хакпа илсе каяҫҫӗ. Халь эпӗ аш-какайпа та сӗт–ҫупа аппаланса пурӑнатӑп. Унсӑр пуҫне, ав, ҫӗрулми, купӑста, кишӗр туллиех.

– Мӗн каласшӑн эс, Шурик?

– Ӗҫлесе илнӗ укҫа машинӑн пӗрре виҫҫӗмӗш пайӗ валли ҫеҫ ҫитет.

– Мӗнле машина туянасшӑн вара?

– Тӗслӗхрен, ЗИЛ-130, пысӑк будкӑллӑ пултӑр вӑл.

– Пуҫтарӑн, хулана машина туянма каятпӑр.

– Пӗлесчӗ, кам валли–ши?

– Паллах, сан валли, манӑн ГАЗель пур.

– Ӑҫтан укҫа илӗпӗр, манӑн ҫитес ҫук вӗт, каларӑм-ҫке, пӗрре виҫҫӗмӗш пайӗ валли ҫеҫ ҫитет.

– Тусла эп парӑп сана кивҫен, сан ӗҫӳсем ӑнӑҫуллӑ пулчӑр тесе.

Шурик ура ҫине сиксе тӑчӗ те пӗр вырӑнта юпа пек хытрӗ.

– Вӑран, Шурик.

– Ку тӗлӗнмелле япала, Олег, эсӗ пӗртен пӗр ун пек ҫын ялта.

Олег Шурика машина туянса пачӗ, лешӗ хӑйӗн куҫӗсене ӗненмерӗ; шанмасӑр, машина тавра темиҫе хутчен чупса ҫаврӑнчӗ. Руль умне ларсан ҫеҫ ку машина хӑйӗн пулнине ӑнланчӗ. Олег еннелле хӑйӗн укҫине тӑсрӗ Шурик.

– Халлӗхе кирлӗ мар.

– Ма ун пек калатӑн, Олег?

– Пуш алӑпа мӗнл ҫӳрес тетӗне машинӑпа, хапха умӗнче усӑсӑр тӑтӑр тетӗн-им?

– Тӗрӗсне калатӑн, Олег,– вӑл Олега туслан хыттӑн ыталарӗ.

Мурманск еннелле ҫӳрерӗ машинипе Шурик, унталла ҫӗрулми, купӑста, кишӗр, панулми (ытларах штрефенпа антоновка) турттарчӗ. Унтан паха пулӑ, ҫурнӑ йывӑҫ турттара-турттара килчӗ. Эрех ӗҫме пӑрахрӗ вӑл. Сайра–хутра, ытлашши ывӑнсан, е хӑйсен мунчине кӗнӗ хыҫҫӑн, килте тунӑ чӑваш

сăрине ĕçрĕ, шăмми-шаккине çемçетрĕ. Ĕçлĕ çын пулса тăчĕ Шурик. Хăйпе яланах кейс пур, унта вăл сотовăй телефон тытать.

Тепĕр çур çултан Шурик Олега парăмне илсе пырса пачĕ, укçине хутпа тирпейлĕ чĕркенĕ вăл.

– Эсĕ пирĕн ялти хăтаруçă.

– Çывăх çынсене пулăшас çук-тăк мĕншĕн пурăнмалла çĕр çинче.

– Пуян çынсенчен нумайăшĕсем хăйсен укçисене Швейцари банкĕсене хывма тăрăшаççĕ.

– Мана мĕн тума кирлĕ вăл? Халăха çаратса укçа пухаççĕ те чикĕ леш енче усăсăр вырттараççĕ. Эпĕ вĕт кунта, Чăваш çĕршывĕнче, пурăнатăп, манăн таврари çынсем телейлĕ пурăнччăр, ытлă-çитлĕ пулччăр тетĕп, хăйсен ĕçĕсемпе сапăр пулччăр вĕсем.

– Тĕрĕс калатăн, Олег, пирĕн асаттесен сăмахĕсем вĕсем, эсĕ чăн-чăн чăваш.

Вĕсем пĕр-пĕрин çине ырă куçпа пăхрĕç.

– Анчах мĕншĕн эсĕ, Олег, хăвăн продукцие ман пек çурçĕрти хуласене турттармастăн?

– Ун пирки пĕрре те шутласа пăхман.

– Унашкал темиçе хут ытларах тупăш илме пултаратăн.

– Ку аван шухăш, анчах мĕнле машина туянас?

– Мĕн тытăнса тăмалли пур. Туян КамАЗ, Куславккара заказпа хăвăрт пысăк фургон туса параççĕ.

– Ма мана будка кирлĕ?

– Кирек мĕнле çанталăкра та продукцие йĕпетмесĕр, е шăнтмасăр турттарса çӳреме.

– Санăн пуç ăслă иккен, Шурик.

– Пурнăç вĕрентет ăса.

Олег Шурика итлерĕ, вĕсем иккĕш Кама хĕрринчи Чуллăна кайрĕç, унта йӳнĕ хакпа машина туянчĕç. Ăна Олег Куславкка заводне парса хăварчĕ. Тепĕр уйăхран КамАЗа вăл киле илсе килчĕ. Çак кунтан вăл çурçĕрти хуласене çӳреме пуçларĕ, унпа пĕрле Шурик та çӳрерĕ. Ялта КамАЗпа çӳреме кăмăллакан çамрăксем тупăнчĕç. Кун пирки Олег мăшăрĕпе канашласа илчĕ.

– Çӳреччĕрех, вĕсем çамрăксем, сан унсăрах килте ĕç сахал мар.

– Тĕрĕсне калатăн, Лиза.

– Вĕсене укҫа тӳле ҫеҫ, вĕсем хаваспах килĕшĕҫ.

Ҫакăн хыҫҫăн ҫамрăксем кашни эрнере КамАЗпа Ҫурҫĕре продукци турттарма пуҫларĕҫ, лерен те нихҫан пушă килмен. Ухтаран заказпа хут та турттарнă.

Олег ял халăхне май килнĕ таран пулăшса тăчĕ. Вăл таврăннăранпа ял халăхĕ майлăрах пурăнма пуҫларĕ. Ял чĕрĕлсе пынăшан Олегăн ашшĕпе амăшĕ питĕ савăнчĕҫ. Кивĕ йывăҫ ҫуртсем вырăнне урамсенче чул ҫуртсем ӳсеӳсе ларчĕҫ. Урампа харпăр хăй машинисем чупма пуҫларĕҫ. Олег тулли кил карти выльăх-чĕрлĕх усрать, лаша та туянса ячĕ. Ашшĕ ăна кӳлет те кил ĕҫĕсемпе ҫӳрет. Вăл тĕрлĕ техника туянчĕ, машинăран пуҫласа трактор таранах. Ял ҫыннисем пĕрмай ҫӳреме пуҫларĕҫ ун патне.

– Хăҫан Елчĕке, Канаша, е Шупашкара каятăн?– кăсăкланаҫҫĕ вĕсем, хăйсене валли япаласен списокне тыттараҫҫĕ.– Ҫаксене туян-ха, тархасшăн,– теҫҫĕ.

Хулана каяс-тăвас пулсан, Олег тулли кузов тенĕ пекех тĕрлĕ япала турттарса килет. Олег пуҫне ялта лавкка лартас шухăш пырса кĕчĕ. Кивĕ лавкки хупăнса тăрать, кĕҫ-вĕҫ ишĕлсе анмалласкер вал. Сутуҫи чирлĕ пулнипе, райпо лавккана никама та сутас ҫуккине ыйтса пĕлчĕ вăл, вара колхоз председателĕ патне кайрĕ, вăл хăйсен ялĕн ҫынниех. Олег унпа канашларĕ.

– Эпĕ хирĕҫ мар, аван шухăш тытнă эсĕ, Олег. Ял халăхĕ район центрне е хуласене нушаланса каясран хăтăлать, ҫăмăлланать вĕсен хуйхи-суйхи.

Кивĕ лавкка ҫывăхĕнче пушă ҫĕр ҫителĕклех, Олег ăна колхозран туянчĕ. Витĕрех ҫĕрсе пĕтнĕ кивĕ ҫуртне ишрĕҫ, ун вырăнне ял арҫынĕсемпе ҫĕннине хăпартса лартрĕҫ. Ял халăхне савăнтарчĕ ку ҫурт, унта бильярдла вылямалли пӳлĕм те пур. Арҫынсем пĕр-пĕринпе чуна уҫса калаҫма пухăнаҫҫĕ, "Букет Чувашии" сăрапа ăшĕсене лăплантараҫҫĕ. Ытларах хĕллехи каҫсенче, хуҫалăхра ĕҫ сахалланнă чухне ҫӳреҫҫĕ кунта арҫынсем. Ку енчен ял пурнăҫĕ лайăхланчĕ. Ял халăхĕ хăйсен нушисемпе Олег патне ҫӳреме пуҫларĕ. Аслисемшĕн пĕтĕмпех йĕркелесе ҫитерчĕ вăл, ҫынсем кăмăллă юлчĕҫ ҫĕнĕ суту-илӳ ҫурчĕпе.

Елчӗкрен делегаци килсе ҫитрӗ, вӗсемпе милиционер та пур. Олегӑн ӗҫне-хӗлне тӗрӗслеҫҫӗ.

– Мӗншӗн лавкка тупӑшӗ пирки хут ҫырса пӗлтерместӗр?

– Ӑна тин кӑна уҫнӑ вӗт, таварне те халь ҫеҫ турттарса килнӗ.

– Сан пирки кунта, Олег, вырӑнти миллионер тесе калаҫаҫҫӗ, ялта ҫул туса пачӗ, теҫҫӗ, тата ытти пирки те тем те пӗр калаҫаҫҫӗ.

– Ку пӗтӗмпех суя, ял ҫыннисем ун пек калама пултарайман.

Ҫак вӑхӑтра ялти пӗр ҫын Олега хӑлхаран пӑшӑлтатса каларӗ:

– Хуларан пӗрисем хунямӑшӗ патне хӑнана килнӗ, ҫавсем кунти ӗҫ-пуҫпа кӑсӑкланнӑ,– вӑл кулса илчӗ те сӑмахне малалла тӑсрӗ,– Темӗнле пуҫлӑха ял халӑхӗ аван пурӑнма пуҫлани килӗшмен, вара вӑл ҫӳлерех сан пирки ҫӑхав ҫырса панӑ.

– Мӗн пӑшӑлтататӑр эсир унта?

– Пирӗн хамӑрӑн сӑмах-юмах.

– Малтанлӑха виҫӗ шалуллӑ штраф тӳлеттеретӗп.

– Мӗншӗн кун йышши наказани тӳсмелле манӑн?

– Мӗншӗнӗ паллӑ пулсан, пӗтӗм пурлӑхна патшалӑх валли туртса илнӗ пулӑттӑмӑр.

Ҫакӑн хыҫҫӑн Олегӑн аллисем усӑнчӗҫ. Чылай хушӑ салхуллӑн ҫӳрерӗ вӑл ялта. Ачисен кӑмӑлӗсем те пӑсӑлчӗҫ, ывӑлӗ кунсерен ӳпкелешрӗ. Вара вӑл пӗве хӗрринче ачисем валли ҫурт лартса пачӗ, ӑна мӑшӑрӗ ҫине ҫыртарчӗ. Ҫулла пӗвере ярӑнма ял ачисем валли кимӗсем туянчӗ, хӗлле валли тӑркӑчсем ҫителӗклӗ хатӗрлерӗ, каток туа ярӑнччӑр терӗ, ӑна валли ятарлӑ музыка центрӗ туянчӗ, хоккей ӑпӑр-тапӑрне туянма та манмарӗ. Ҫуртӑн иккӗмӗш хутӗнче ҫамрӑксем валли компьютер пӳлӗмӗсем йӗркелерӗ.

Тупамалли

Кирпĕчсем ---------------------------------------------------------- 3
Намăс ------------------------------------------------------------ 10
Авса хуçаймарĕ ------------------------------------------------- 16
Çимĕк ------------------------------------------------------------ 21
Çăмăлттай -------------------------------------------------------- 79
Юрий Карпов парнисемшĕн --------------------------------- 139
Çухалнă укçа -------------------------------------------------- 162

Жирнов Николай Трофимович

Çимĕк

Художник В.И.Агеев

Подписано в печать 08.07.05. Формат 60x84/16.
Бумага газетная. Печать офсетная.
Усл.п.л. 12,25. Уч.-изд.л. 11,0.
Тираж 1000 экз. Заказ № 57.

Отпечатано в типографии «Новое время»
г. Чебоксары, ул. Ломоносова, д. 2.